К И(нем)
Г44
2.2840-4ув

# И. В. ГЕТЕ



# Фауст

Национальная библиотека ЧР
4-022840

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Красноармейская типография заказ № 753—40000





## И. В. ГЕТЕ

# Фауст

### Трагеди

республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1979

84,3 Нем.
Г44

22840 - ЧУВ

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Н. А. Андреев-Урхи куçарнă

А. С. Артемьев редакциленĕ

ПРОВЕРЕНО
20 10 2 8 АВГ 2017

**Гете И. В.**

Г 44 Фауст. Трагеди. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1979. 256 с. **1 т. 15 п.**

Нимĕçсен гениллĕ поэчĕ Иоганн Вольфганг Гете çырнă «Фауст» трагедие тĕнчери чылай чĕлхепе куçарнă, вăл тĕрлĕ халăхсен культурăллă пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Чăвашла ăна Н. А. Андреев-Урхи куçарнă, вăлах умсăмахĕпе ăнлантарусене çырнă.

84,3 Нем

Г $\frac{0744 - 106}{М\ 136(03) - 79}$ 49 — 79

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1979 ç.

## «ФАУСТ» — ГЕТЕН ПЫСĂК ТА ЧАПЛА ПРОИЗВЕДЕНИЙĔ

Нимĕҫсен чаплă поэчĕ, ученăйĕ Иоганн Вольфганг Гете (1749—1832 ҫҫ.) Германире Майн ҫинчи Франкфурт хулинче ҫуралнă.

Гете поэт, прозаик, философ, искусствовед, ученăй, министр пулнă.

Гете пин те ултҫĕре яхăн сăвă ҫырнă, вĕсенчен нумайăшĕ халăх юрри пулса кайнă. Тĕнчери чи лайăх композиторсем: Бетховен, Шуберт, Лист т. ыт. унăн сăввисем тăрăх юрăсем хывнă. Гетен лирики хавасла: вăл пурнăҫа, ҫутҫанталăка юратма, савăнса пурăнма чĕнет.

Гете хăйĕн сăввисене яланах пурнăҫра пулнă пĕр-пĕр событипе ҫыхăнтарса ҫырнă. Унăн генийĕ пурнăҫа ҫивĕч куҫпа пăхса сăнанă, ăна ăслăн тĕпчесе пĕлсе, туллин те илемлĕн сăнарланă.

Гете сăвăсемсĕр пуҫне пысăк произведенисем те: драмăсем, трагедисем, романсем ҫырнă, сăмахран: «Прометей», «Гец фон Берлихинген», «Эгмонт», «Торквато Тассо», «Ифигени Тавридăра», «Ҫамрăк Вертер асапĕсем», «Вильгельм Мейстер», «Фауст» т. ыт. те. Ку произведенисенче вăл пусмăрлăха, чуралăха, тĕне хирĕҫ кĕрешет.

Гете XIX ĕмĕрте тĕнчери поэтсенчен чи чапли шутланнă. Ун патне Европăран таҫтан-таҫтан паллă ҫынсем пынă: Жуковский, Кюхельбекер, А. К. Толстой, Гейне, Мицкевич, Теккерей, Стендаль т. ыт. писательсем, ученăйсем, художниксем.

Гете Пушкинпа Байрона пысӑка хунӑ. Аслӑ вырӑс поэтне вӑл хӑйӗн ылтӑн перине ярса панӑ, Байрон вӑхӑтсӑр вилнишӗн хуйхӑрнӑ. Вӑл Грецишӗн кӗрешсе вилнине ырласа, «Фауст» трагедире ӑна Эвфорион сӑнарӗ урлӑ кӑтартнӑ.

Гете ҫутҫанталӑка, унӑн нумай енлӗ ҫыхӑнӑвне пӗтӗмӗшпе тӗпчеме тӑрӑшнӑ. Ботаникӑра, зоологире, анатомире тунӑ тӗпчевӗсенче, Ф. Энгельс каланӑ тӑрӑх, вӑл эволюци теорийӗ тӗлӗшпе Чарльз Дарвинран маларах хӑйӗн генийлӗ шухӑшне пӗлтернӗ. Гете хӑйӗн «Ҫутҫанталӑк» ятлӑ прозӑлла сӑввинче пирӗн ума ҫутҫанталӑк сӑнавҫи пек, поэт пек, философ пек тухса тӑрать.

Гете ҫырнӑ произведенисенчен чи палли — «Фауст».

«Фауѕтра» пурнӑҫӑн, философин тата искусствӑн чи пысӑк ыйтӑвне лартнӑ: ку ыйту — этемӗн ҫӗр ҫинчи пурнӑҫӗн пӗлтерӗшӗ. Вакларах каласан, вӑл ҫапла: этем Ҫӗр ҫинче мӗншӗн пурӑнать, чӑнах та этем пулас тесен ҫынна мӗн тумалла, унӑн епле пулмалла? Гете ҫак ыйтӑва просветитель пек, прогресс этеме ырӑланма пулӑшассине шанса, унӑн хӑватлӑ ӑс-хакӑлне шанса татса парать.

Чӑнлӑх шыракан Фауст ун патне ҫывхарать, этемлӗхӗн пуласлӑхне курма ӑнтӑлать, анчах аслӑ чӑнлӑх унӑн ӑстӑнӗ умне пӗтӗмӗшпе тухса тӑраймасть. Фауст тупма ӑнтӑлнӑ чӑнлӑх социализмла революци тунӑ халӑхсем умӗнче тин уҫҫӑн курӑнать.

Трагедире художествӑпа философи задачи мӗн тери пысӑкки, кӑткӑсси унӑн пӗтӗм тытӑмӗнче палӑрать.

Гете хӑйӗн меточӗпе (ӗҫлемелли меслечӗпе) реалист. Вӑл нимӗҫсен лирикине реализм ҫулӗ ҫине кӑларнӑ: ӑна халӑх поэзийӗ патне ҫывхартнӑ. «Ҫамрӑк Вертерӑн асапӗсем» ятлӑ романӗпе вӑл нимӗҫ прозин историйӗнче ҫӗнӗ эпоха пуҫарса янӑ. Вӑлах халӑхӑн реализмлӑ драматургин никӗсне хума тытӑннӑ.

Гете хӑйӗн творчествин чи ҫӳлти пусӑмӗнче — «Фауѕтра» та реалист халлӗнех юлать. Унӑн шыравӗсем, тӗрлӗ йышши литературӑсенче вӑл тунӑ ҫӗнтерӳсем пурте пӗрлешсе каяҫҫӗ те, унӑн ҫутта кӑларакан реализмӗн хӑйне евӗрлӗхӗ уйрӑмах уҫҫӑн палӑрать.

Гетен философиллӗ трагедийӗ ҫакӑн йышши жанрӑн чиккисене сарса ярать. Эпика анлӑшӗ енчен, пӗр-пӗринпе ҫыхланса пӗтнӗ темӑсем нумайӑшӗ енчен, пурнӑҫ материалӗ, действисем ирӗклӗн аталанни енчен пӑхсан, «Фауст» чи анлӑ та ирӗклӗ жанрпа — романпа ӑмӑртма пултарать.

Поэзи формисем нумаййипе, сăвă ăсталăхĕпе «Фауст» нимĕçсен тата тĕнчери ытти халăхсен поэзийĕн чи пысăк çитĕнĕвĕсен шутне кĕрет. Кунта философи лирики те, юрату лирики те, çутçанталăк поэзийĕ те, сатира та пур. Кунтах юрăсем те, балладăсем те, афоризмсем те, драма монологĕсем те, сăвăлла диалогсем те пур.

Поэзи тытăмĕ ирĕклĕ, нумай тĕслĕ тата кăткăс пулсан та, «Фаустра» драмăллă произведенин тĕп уйрăмлăхĕсем: действисен пĕрлĕхĕ, конфликтсем çивĕччи тата хирĕçӳлли — сыхланса юлнă.

Трагедире хускатнă философипе истори проблемисене татса пама улăп-герой, Прометейпа юнашар тăма пултараканни, кирлĕ пулнă. Пурнăçра Гете кун пек героя нимĕçсем хушшинче тупайман, çавăн пирки унăн хăй геройне халăхăн легендинче шыраса тупмалла пулнă.

Легендăри Фауст ку трагедире ӳссе кайса улăпла сăнар пулса тăрать. Вăл этем йăхĕнчи шухăшлакан, кĕрешекен çынсене палăртса кăтартакан сăнар. Çав вăхăтрах Гете ăна нимĕçсен шухăшлавçă ученăйĕн чăнчăн паллисене парса ӳтлентернĕ, вăл паллăсене хăй чăтса курнисенчен илнĕ. Фауст юлташĕн — Мефистофелĕн — сăнарне те çавăн пекех пурнăçра тĕл пулаканнинине ытарлипе (символлипе) пĕрлештерсе тунă. Трагедире ĕçсем пулса иртекен вырăн — «пысăк тĕнче»— Гете вăхăтĕнчи Германи, хăйĕн шалти йĕркесĕрлĕхĕсемпе, хăйсем хушшинчи тавлашу-хирĕçӳсемпе, хăравçă бюргерĕсемпе тата Вагнер йышши педант ученăйĕсемпе палăрнă Германи. Кунта ӳкерсе кăтартмалли икĕ план пĕрлешнĕ: философипе аллегорилли тата пурнăçра тĕл пулаканни.

«Фауст» трагедин пĕлтерĕшĕ тĕнчери литературăсемшĕн пит пысăк пулнă.

«Фауст» романтикăллă поэмăсем çыракан Байрона хавхалантарнă. Унăн поэмисен геройĕсем те «Фаустра» кăтартнă хуйхă-суйха чăтса ирттереççĕ, ку пурнăçпа килĕшмеççĕ, пысăк ĕçсем тума ăнтăлаççĕ. Фаустăн кĕввисем Бальзакăн философиллĕ новеллисенче те янраса кайнă. Гете трагедийĕ XIX ĕмĕрте Европăра шухăш, литературăпа искусство малалла аталанассине витĕмленĕ.

Тĕрлĕ халăхсен художникĕсемпе композиторĕсем

Гете трагедийĕнчен илнĕ сюжетсем тăрăх картинăсемпе гравюрăсем тунă, оперăсем çырнă.

Трагеди геройĕ новатор-шухăшлавçăсене, чăнлăх шыравçисене çывăх: кам пĕр канăçсăр шырать, кам малалла ăнтăлать, хăйĕн теветкеллĕ ырă ĕçĕсем пурнăçа кĕрессе шанать, кам ĕç-хĕл, ăстăн аслине, вилĕмсĕррине шанать — çавсене пурне те çывăх.

Гете «Фаусчĕ» — нимĕç литературинчи чи паллă произведенисенчен пĕри. Унта аслă поэтăн хăйне евĕрлĕ пултарулăхĕ те, нимĕç халăхĕн хăй вăхăтĕнчи истори самани те пит вăйлăн та туллин палăрнă. Хальхи вăвăхтри нимĕç писатель-коммунисчĕ А. Абуш çапла калать: «Гете «Фаустне»... Германири виççĕр çул хушшинчи историллĕ кĕрешĕвĕн, çутă, прогрессивлă вăйсем пĕлĕве аталантарасшăн тĕттĕм, мистикăллă, реакциллĕ вăйĕсемпе кĕрешнин куçкĕскийĕ тесе шутлама пулать».

Ку кĕрешӳ Германире халĕ те пырать-ха. Гете произведенийĕ тухни çĕр аллă çул иртнĕ пулин те, унăн пĕлтерĕшĕ халĕ те чĕрĕ. «Фауст» пĕтĕм тĕнчери чи паха произведенисенчен пĕри шутланать. Ахальтен мар ку произведение Европăри пур чĕлхене те, ытти чылай халăхсен чĕлхине те куçарнă, вăл тĕрлĕ халăхсен культурăллă пурнăçĕнче чыслă вырăн йышăннă.

Гете хăйĕн «Фауст» трагедине пĕтĕм пурнăçĕнче сăнаса пынине (опытне), ученăйăн пĕтĕм ăслăлăхне, художникăн ăсталăхне, чăнлăх шыравçин сӳнми вут-хĕлхемне хывнă. Аслă чăнлăх шыравçин сăнарĕ Гетене çамрăкранпах пăлхантарма пуçланă та, вăл ун çинчен виличченех тенĕ пек шухăшланă. Гете Страсбургра университетра вĕреннĕ вăхăтрах Фаустăн улăпла сăнарне хайласси çинчен шухăшлама тытăннă.

Асамçă Фауст доктор çинчен калакан легенда XVI ĕмĕртех халăх хушшинче çӳренĕ. Вăл легендăра Фауст темĕн те пĕр тума пултарни çинчен каланă. XVII—XVIII ĕмĕрсенче Германире Фауст доктор çинчен калакан кĕнекесем чылай тухнă. Гете çак халăх легендине илнĕ те, философи енчен пăхса, питĕ пысăк поэма тунă. Ку произведение трагеди формипе çырнă.

«Фауст» — драмăллă произведени, анчах вăл театр валли çырнă пьеса мар. Çапах та унăн уйрăм эпизочĕсене сцена çинче кăтартма пулать. «Фауст» пĕр вăхăтрах трагеди те, нимĕç халăхĕн ученăйĕсем пĕр эпоха тăршшĕнчи шыравне палăртнă пит катмар философиллĕ поэма та.

«Фауст» трагеди «Халалпа» тата икӗ прологпа пуҫланать.

«Театрти пролог» — Гетен эстетикăллă шухăшӗ. Ку прологра поэт, актер (мыскараҫă) тата директор сцена ҫинче мӗн кăтартас тӗлӗшпе калаҫаҫҫӗ. Кунта Гете вулавҫăсене искусствăна, унăн тӗллевне хăй мӗнле ăнланнине ытарлăн уҫса парать. Поэт ырă тӗллевсем ҫинчен шухăшлать. Вăл «ҫырашкасен начар вараланчăкне» кăмăлламасть, нумай ҫул ӗҫленипе пулса ҫитнӗ чăнчăн илеме кăна ырлать. Унăн хăй ҫырса тунă ӗҫӗпе «Этемлӗхӗн поэтра пурăнакан вăй-хăватне» уҫса кăтартмалла. Актер ҫынсен чӗрине ҫавăрмашкăн мӗн кирлине пурнăҫран хăюллăн илме сӗнет. Директор — ҫаксене пурнăҫа кӗртекен енӗ. Вăл япаласене пӗр хитрелетмесӗр курать, ҫавăнпа хитрелетнӗ ултавҫа пăхăнасшăн мар. Вăл ытлашши сăмахланассине пăрахса, поэтăн ырă шухăшӗсене сцена ҫинче часрах пурнăҫа кӗртме чӗнет. Прологра поэт хăйӗн произведенийӗн анлă программине ӳкерсе панă. Вăл, директор пек пулса, сцена ҫинче этем, чӗрчунсен, ҫутҫанталăк пурнăҫне кăтартма сӗнет:

Ҫак сценăна мӗнпур тӗнче вырнаҫтăр,
Этем, чӗрчун кӗрсе тăрайтăр —
Ҫӳл пӗлӗтрен ҫӗр витӗр тамăка
Кӗрнеклӗн аннине кăтартăр халăха!

«Пӗлӗт ҫинчи пролог» — произведенин темипе тӗп идейи. Ку прологра поэт хăй суйласа илнӗ темăпа паллаштарать. Кунта проблема лартнă. Ăна мӗнле татса панине пӗлес пулсан, пирӗн Фаустпа, Мефистофельпе пӗрле нумай ҫӳресе курма тивет. Кунта пурте ансат та уҫăмлă тесе калама ҫук. Вулакана нумай шухăшлама, ăстăна чылай ӗҫлеттерме тивет.

Пирӗн умра турă, архангелсем тата Мефистофель. Архангелсем: Рафаил, Гавриил, Михаил — Христос тӗнӗн мифологийӗ тăрăх турă ҫывăхӗнчи аслă ангелсем. Поэт вӗсем ҫут тӗнче ҫинчен мухтав юрри юрланă пек тунă. Анчах ку тӗнче тытăмӗн пит чаплă та хăватлă картини чиркӳ тӗнӗ вӗрентнинчен пит аякра тăрать. Кунта турри хăй те — ҫутҫанталăкпа этемӗн пурнăҫне тăваканӗ, ăна тӗреклетекен вăйӗ кăна. Гете ытарлă меслетпе ӗмӗртен ӗмӗре пыракан матери тӗнчине — аслă матери-аннене — гимн юрласа мухтать. Тӗнче килӗшӳллӗ майпа тытăнса тăрать, матери пурнăҫӗн ӗмӗрхи законӗсем арканми ҫирӗп тăраҫҫӗ:

Хĕвел çутăсемпе çурацлăн
Куçать авал йĕрленĕ çулĕпе.

Нимĕн те канăçлă тăмасть, мĕнпурĕ улшăнать: ылмашăççĕ тĕттĕм çĕрпе çап-çутă кун, шавлаççĕ тинĕс хумĕсем, тăвăл тапписем, çӳлте хăрушă çиçĕм çиçет, аçа çапать, анчах çаксем пурте çутçанталăкăн кисренми законĕсене пăхăнаççĕ. Пурте пĕр тĕреклĕ сăнчăрпа тăнтăн çыхăннă. Пит илемлĕ те хитре ку тĕнче!

Поэт тĕнчене пăхса тĕлĕннĕ хыççăн этем çине çаврăнса пăхать. Тĕнчен хăрушă вăй-хăвачĕсем умĕнче мĕскер вăл? Вăл мĕскĕн, телейсĕр, ĕмĕрĕпех асапланать. Ăна çутçанталăк ăстăн паман пулсан, вăл авантарах пурăннă пулĕччĕ. Çапла шухăшласа калаçать Мефистофель. Анчах Гете ун пек шухăшламасть. Вăл этемĕн вăй-халне шанать, унăн ăстăнне, вăл яланах чăнлăх патне туртăннине ырласа мухтать:

Вăл ăсĕпе халь тĕттĕмре çĕтсе çӳрет,
Анчах кайран ӳкет тĕп-тĕрĕс çул çине,—

тет Турă этем çинчен. Этем чăнлăха ĕмĕрех шырани ăна аслăлатать. Турăпа Мефистофель хушшинче ĕмĕрĕпе канăçсăр, пĕрмаях шыракан генилле Фауст пирки калаçу пуçланать. Турă Фауста шанать, вăл чăнлăх тупасса пĕлет.

Мефистофель çакна ĕненмест: этеме шанмасть. Этем — мĕскĕн чура, вăл тусан çинче, пылчăк ăшĕнче йăваланма кăна пултарать. Мефистофель этем хăйĕн кăлтăкĕсене, усал туртăмĕсене чарайман, çĕнтереймен пирки ĕмĕрех асапланма, йăнăшма çеç пултарать тесе шутлать.

Пирĕн умра икĕ философи. Пĕрне Турă каласа пĕлтерет, урăхла каласан, автор хăй. Ку вăл — гуманизм философийĕ, этеме оптимизмла шанни, пурнăçа юратма вĕрентни. Иккĕмĕшĕ — Мефистофель философийĕ. Ку вăл — пессимизм, этеме шанманни, курайманни.

Çак тава кĕрешӳ çеç татса пама пултарать. Этем чăнлăха шыратăр, иккĕленӳпе асап витĕр чăнлăх патне куçса пытăр. Çавăнпа Турă Фауста çул юлташĕ вырăнне Мефистофеле парать:

Шуйттан шав хĕтĕртсе тутартăр ун ĕçне!

«Ч ĕ р е н е  к ă ш л а к а н  х у й х ă». Пĕлĕт çинчен эпир Çĕр çине анатпăр. Çĕрле. Çӳллĕ маччаллă тĕксĕм

пӳлӗмре, тусанлӑ кӗнекесем, ретортӑсем, кӗленчесем хушшинче шурӑ ҫӳҫлӗ ватӑ доктор Фауст ларать. Вӑл йывӑр шухӑша кайнӑ: ун чӗрине пит пысӑк хуйхӑ кӑшлать. Ҫак тӗттӗм пӳлӗмре вӑл кӗнекесем вуласа, тӗрлӗ сӑнавсем туса темиҫе пин кун та ҫӗр ирттернӗ. Вӑл тӗрлӗ наукӑсем вӗреннӗ, чаплӑ ученӑй степенӗсене илнӗ. Юлашкинчен мӗн пулса тухрӗ? Вӑл тӗплӗ шухӑшласа илет те ӗмӗт татӑлнипе анраса каять, мӗншӗн тесен вӑл чӑнлӑх патне пӗр утӑм та ҫывхарман, ҫав ҫулсем хушшинче чӑн-чӑн пурнӑҫа пӗлессинчен тата ытларах аякалла кайнӑ иккен:

Ҫак ҫут тӗнче — хитре чечек,—
Этем хавасӗн чӑн хысми,—
Пулайрӗ саншӑн тӗп инкек,
Харам тусан, виле шӑмми!..

тет вӑл хуйхӑрнипе.

Фауст наукӑсем пулӑшасса шанми пулнипе асам ӗҫне тытӑнать. Тӗрлӗ асам тухатӑвӗсем пулӑшнипе Фауст Тӗнчепе Ҫӗрӗн аслӑ ыррисене курать. Вӗсем Фауста этем мӗн тери хӑватсӑрине кӑтартаҫҫӗ.

Фауст чӗрӗ туйӑмсем, ӗҫсемпе савӑнӑҫсем патне ӑнтӑлать.

Вӑл Ҫӗр ыррине чӗнсе кӑларать. Вут-ҫулӑмлӑ ырӑ ун умӗнче. Қаллех прологӑн чаплӑ теми янрать:

Эп — ҫуралу, эп вилӗм,
Кӗрлен мӑн тинӗс,
Ылмашлӑ куҫӑм,
Хӗрӳллӗ пурнӑҫ...

Пурнӑҫ Фауста хӑй патне чӗнет, анчах вӑл пурнӑҫран аякра. Вӑл пурнӑҫ патӗнчен катаран иртсе кайрӗ: кирлӗ пек пурӑнман. Ун умӗнче мӗлкесем кӑна. Вутлӑхӗмлӗ курӑну куҫран ҫухалчӗ, алӑка шаккани ӑна хӑратса тартрӗ. Пӳлӗме Фаустӑн шакӑрчи Вагнер тӗксӗм лампипе пырса кӗрет, ҫывӑрмалли халатпа, калпакпа.

Хӑйпе хӑй кӑмӑллӑ, тӗнчерен сарӑхнӑ пергамент куписемпе уйрӑлнӑ педант — Вагнер — Фауст асапӗсене сисмест-туймасть.

Вагнерпа каласнӑ хыҫҫӑн Фауст хӑй мӗн тери пӗчченнине, тӑлӑххине, хӑйпе те, тӗнчепе те кӑмӑлсӑррине туйса илет:

Ман мӗн тӑвас? Қамран пӗлес?
Аҫта каяс? Мӗнрен писес?

Хурав çук. Ҫĕтесре выртакан пуç купташки, шăлне йĕрсе, Фаустран кулнă пек туйăнать. Фауст тĕрлĕ инструментсем, приборсем пулăшнипе тĕрĕслĕхе тупма ĕмĕтленнĕччĕ, халь вĕсем çентресем çинчен кулса пăхаççĕ:

Пире ним усă паманни йывăр çĕклем.

Фауст алли наркăмăшлă кĕленче патне туртăнать. Ак ирĕке кăлараканни!

Вăл вĕлерекен эмеле тути патне илсе пычĕ, сасартăк аякран чансем çапни, юрлани илтĕнчĕ. Мункун касĕ. Ҫак саспа пĕрле унăн асне яш чухнехи çутă кунсем килсе кĕчĕç, çутă таса асаилӳсем:

Эй çук! Тумастăп халĕ йăнăш пусăм:
Аса килни ман асапа халь кунĕлетрĕ.

Фауст вилĕм çинчен шухăшланине сирсе ячĕ. Фаустăн тусанлă кабинетĕнчи пĕр кас çес хайĕнче темĕн те пĕр шăнăçтарать: Фауст кунта нумай çул хушши ĕçленисем, суя илĕртӳсем, вырăна килмен ăнланусем т. ыт. Ҫусем вĕсем Фауст-Гетен, унпа тантăшшисен, ун умĕнхи нумай сыпăксен шăпи пулнă. Унăн тантăшĕсем — вертерсем, ерузалемсем те вăй çитменнипе çавăн пекех наркăмăш патне, пистолет патне туртăннă. Гете те Страсбургра, Франкфуртра, Веймарта ирĕклĕн ĕçлеме çул уçас тесе асапланнă. Анчах Фауст-Гете ĕмĕтне татман, чун-чĕри хăватлă пулнă: çăлăнăç вилĕмре шыраман.

«Х у л а  х а п х и  т у л а ш ĕ н ч е». Ҫĕнĕ çурхи кун ялкăшать. Ҫабинет шăплăхĕнчен Фауст Вагнерпа уçăлса çӳреме уявлă урама тухать. Хула хапхи патĕнче халăх уява пухăннă. Чăпар эшкер: маçтăрсен шакăрчисемпе студентсем, ыйткалакансемпе хĕрарăм тарçăсем, хулари сумлă çынсемпе хресченсем. Тĕрлĕ саслă шав, калаçнă сăмахсем илтĕнеççĕ, пĕр-пĕрине юратни çинчен пĕлтереççĕ. Салтаксен мухтанчăк юрри, ватăлма пуçланă çынсен сăпайлă калаçăвĕ. Мăраннăн пуплеççĕ вĕсем тĕрлĕ хыпарсем çинчен. Вĕсем таçти инçетри тĕрĕк çĕрĕнче халăхсем çапăçни-чикĕшни çинчен каланине итлеме юратаççĕ, килте, хăйсем патĕнче, бюргерсем пурнăç лăпкă пулнине юратаççĕ:

Ҫут тĕнчене ӳпĕнтерсе пăрахтăр,
Ҫунта кăна кивви пек пултăр яланах.

Анчах çурхи сывлăшра, яш-кĕрĕм сассисенче темскер пуçтаххи, ирĕкли, çиçекенни, чĕнекенни илтĕне пуçлать:

Ķирек ăçта чĕрри васкарĕ çуралма,—

сасă çутçанталăкра та, уявлакан савăнăçлă халăхра та, Фауст чĕринче те сисĕнет. Лере, хулан кив хапхи тулашĕнче, ĕмĕрех çамрăк тăракан Çĕр ешерет. Çăка айĕнчи çерем çинче сĕрме купăссем ташă кĕвви шăрантараççĕ, хресченсем ташша тĕвеççĕ. Вĕсем вată тухтăра Фауста палларĕç, ăна йĕри-тавра хупăрласа илеççĕ, халăх ăна мухтать, чыслать. Вăл хăй те, ашшĕ те касу чирĕ (мур) тăнă хăрушă кунсенче хăйсене ним шеллемесĕр, муртан хăрамасăр халăха чиртен сыватма тăрăшрĕç. Фауст хресченсемпе кăмăллăн калаçать. Вагнер аяккарахра пит-куçне пĕркелесе пăхса тăрать, «хура халăхран» йĕрĕнет.

Фауст именет, хуйха ӳкнĕ. Вăл çак юмарт халăх ырласа мухтанине йышăнма тивĕçлĕ мар пек туять: сынсене эмеллесе сыватма вăл пит сахал пĕлет, унăн пĕлӳ çитмест имĕш.

Суя пĕлӳ ултавĕнчен тухма
Ķам шанчăк çухатман — телейлĕ!—

тет вăл, хăйĕн пĕлĕвне хакласа.

Çунат пулсан, Фауст çӳле, каçхи пĕлĕтсем патне вĕçсе кайĕччĕ. Анчах ăна Çĕр хăйĕн ĕçĕсемпе, чăрмавĕ-мĕнĕсемпе кирлĕ.

Ман чирлĕ кăкăрта ик чун пурнать...
Пĕри хавас çĕр çинчине...
Тепри — çут пĕлĕт тавра шне.

Вагнер кун пек ăнтăлу хăйне тертлентернине туйса курман. Ăна çунатсем кирлĕ мар, унăн пачах та вĕçсе курас килмест. «Эп кайăк çунатне нихçан та ăмсанман»,— тет вăл.

Том хыççăн том, листа пĕтсен листа
Вуланине мĕн çитĕ, тупата,—

тет вăл, хăй тивĕçне ырласа.

Хĕвел анать. Ķиле кайма вăхăт. Темле хура лиска йытă Фаустпа Вагнер патне ункăн-ункăн çаврăнса чупса пырать, вĕсем хыççăнах çурта кĕрсе каять.

Ф а у с т п а   М е ф и с т о ф е л ь. Фауст каллех хăйĕн кабинетĕнче. Вăл библи кĕнекине нимĕç чĕлхипе куçарма пуçлать те малтанхи йĕркесем пирки шухăша каять.

Сăмах чăн малтанах пулнă.

Ҫапла-ши? Сăмаха ку тери пысăка хума пулать-ши, ăна пулăм (бытие) никĕсĕ теме пулать-ши? Чылай шухăшланă хыççăн Фауст татăклăн çырса хурать:

Малтан Ĕçлев пулнă.

Гете-Фауст религи догмисене пăханмасăр, нимĕçсен идеализмла философине хирĕçлесе, пулăм никĕсĕ ĕçлев тесе çирĕплетсе хурать.

Анчах куçару ĕçĕ чарăнса ларать. Лиска улать, кускаласа çӳрет, найкăшать, тĕплĕн шухăшлама кансĕрлет. Ак вăл пысăкланса пырать, çăварне карать, шăлне йĕрет... Фауст тухатусем тăвать те, йытă тирĕ ăшĕнчен Мефистофель вăтам ĕмĕрти схоласт тумтирĕпе тухса тăрать.

Малтанах палăртнă курнăçу пулса иртрĕ. Мефистофель, ĕçлеме хавхалантаракан (хистекен) иккĕленӳ сывлăшĕ, Фауст патне вăхăтра пырса çитет. Ҫĕре асапланса ирттернĕ хыççăн, халăх хушшинче пулса чĕрĕ пурнăçăн сассине итлесе пăхнă хыççăн Фауст ăстăна вĕлерекен догмăна пăрахать, çĕнĕ çулпа кайма хатĕр пулать. Гетен Мефистофелĕ — ытарлă символлă сăнар, çапах та автор ăна чĕрĕ çыннăнни пек характер панă. Мефистофель усал кăмăллă илĕртӳçĕ: вăл этеме кураймасть, унăн вăй-халне шанмасть, çак енчен вăл героя (Фауста) тăшманлă. Анчах Мефистофель япаласен, çынсен тӳнтер енне пит çивĕч курма пултарать. Вăл пит те ăслă тăрăхлавçă-критик, ниме шанман-ĕненмен философ. Вăл Фаустăн пит кирлĕ енĕ пек, унăн çурма енĕ пек пулса тăрать.

Автор хăйĕн ăслă шухăшĕсене, чăнлăхсене чылайăшне Мефистофель чĕлхи-çăварĕпе каланă. Фаустпа иккĕмĕш хут курнăçсан, Мефистофель университет профессорĕн тумтирне тăхăнать те Фауст патне ăс ыйтма пынă вĕренекенпе калаçать. Ҫакăн чухне вăл ученăйсем хушшинче сăмаха ытла та пысăка хунинчен тăрăхлать, нимĕç ученăйĕсен пултарулăх çуккине, вĕсем суя çулпа пынине питлет. Ҫак ученăйсем вĕрентнĕ тăрăх, ăнăçлă вĕренмелли çул çине тухас пулсан, пĕрре çирĕпленсе

çитнĕ сăмах çавранăшĕсене вĕсенче пĕр чĕрĕ шухăш пулмасан та, ученикăн хăй вĕрентекенĕ хыççăн ним шухăшламасăр каласа памалла иккен.

Вара тин шанăç чиркĕвне чăн çул-йĕрпе
Сире кĕме ансат пулать-тĕр.

«Анчах сăмахсенче ăнлав пурах-тăр?» — тесе имĕнсе ыйтать вĕренекен.

Чăн та çапла! Анчах та ан кулянăр!
Анлавсенче çитменлĕх пур чухне
Сăмахпала ылмаштарма юрать ун пеккине.
Сăмахсенчен системăсем пулаççĕ,
Этемсене ĕнентереççĕ сăмахпах:
Сăмахсенче ним те улăштарма çуках,—

тет Мефистофель, хаяррăн тăрăхласа кулса.

Мефистофель нимĕç наукинчи ученăйсен пултарулăх çуккине, вĕсем суя çулпа пынине тăрăхласа кулнипе Гете хăйĕн шухăшĕсене палăртать, анчах вăл çакна витĕмлĕрех калать.

Гете Мефистофель чĕлхипе çак нумай ĕмĕр тăршшĕнче кивелмесĕр тăракан çунатлă сăмаха та калать:

Теори, тусăм, пур çĕрте те типĕ,
Чĕм йывăççи кăна ялан сип-симĕс.

Мефистофель Фауста кабинетĕнчен уçă тĕнчене илĕртсе илсе каять, ăна асăхтарма, пăсса яма тăрăшать.

Фауст Мефистофеле тĕл пулни, ĕлĕкхи пурнăçа пăрахса, тĕттĕм шăтăкран «пурнăç ялкăшакан тĕнчене» кайма тытнă шухăша пурнăçа кĕртессине хăвăртлатать. Мефистофель ăна пулăшу сĕнет те, Фауст унпа договор тума («пăлчав татма») килĕшет:

...Ну, ал çапар!
 Иртсе пыран шух вăхăта:
«Самант, илемлĕ эсĕ, чарăнсам, тăхта»!—
Тесе эп кăшкăрсан, эс хатĕрле
Мана илмешкĕн тыткăн сăнчăрне.
Хам пĕтессе кĕтетĕп эп айшатăн.

Фауст хăй «артак екки тӳшекĕ çинче» мăкланса выртас çуккине лайăх шанать. Вăл ахаль йăпанусем шырамасть, чи аслă пĕлӳсем шырать. Вăл этем йăхĕн пур хуйхине, пур савнăçне: усаллине те, ыррине те — хăй

тўссе сăнаса пăхасшăн, Çĕр çинчи пурнăçан чи аслă пĕлтерĕшне пĕлесшĕн — çакă унăн Прометейăнни пек ĕмĕчĕ.

Яланхи шыравçă çула тухма хатĕр. Фауст умĕнчен тĕрлĕрен тĕнче уçăлса пырать. Ак вăл Мефистофельпе пĕрле Лейпциг хулинчи Ауэрбах хупахĕнче ларать. Кунта Гете — «Фауст» авторĕ — çамрăк чухне хăйĕн юлташĕсемпе темиçе хут та пулнă. Эрех ĕçеççĕ, тăкаççĕ, ўсĕррипе вăрçă-çапăçу час-часах тапранать. Чарăна пĕлми иртĕхсе ĕçет, ашкăнать чарусăр яш ушкăн. Нимле тăрăшу çук унăн, кашни кунах вĕсене савăк уяв.

> ...Кивçен парсан
> Хупах хуçи, пуç мухмăрла ыратмасан,
> Вара вĕсемшĕн тикĕс çут тĕнче.

Ўсĕр тĕтĕмĕ-сĕрĕмĕ Фауста йĕрĕнтерет. «Часах каяр кунтан тухса»,— тет вăл Мефистофеле сасартăк.

«Т у х а т м ă ш к а р ч ă к к у х н и» — идеализмпа религие критиклени. Ку сценăн пĕлтерĕшĕ — Фауст çамрăкланнине, вăл юратупа илĕртĕнсе кайнине кăтартса, ăнлантарса парасси. Кунта, иртнĕ сценăри пекех, Мефистофель Фауста, тĕрĕс çултан пăрса ярас тесе, пурнăçри астаракан тĕрлĕ илĕртўсене кăтартать. Мефистофель шучĕпе Фауст пурнăçан тĕрлĕ йĕрĕнчĕк япалисене курнă хыççăн юратупа асса кайса пĕтмелле пулнă.

Мефистофель Фауста çамрăклатмашкăн тухатмăш карчăк патне çĕр хăвăлне илсе пырать. Кунта Фауст тухатмăш карчăк тĕрлĕ йĕрĕнчĕк чĕрчунсем, сăмахран, шапасем, качака такисем, сыснасем, упăтесем пулăшнипе хăйĕн тĕттĕм ĕçне мĕнле тунипе паллашать. Сценăра тĕрлĕ аллегорисем, сатирăллă ўкерчĕксем нумай. Вĕсем урлă Гете хăй вăхăтĕнчи пурнăçан ирсĕрлĕхĕсенчен мăшкăлласа кулнă.

Этемлĕх çамрăклăха иксĕлми тăвассишĕн ĕмĕртенпе ĕмĕтленнĕ.

> Çут тĕнчене хăватлă ăс параймĕ-ши
> Пире яшлатакан бальзам пекки?—

тесе кăшкăрса ыйтать этем йăхĕшĕн хуйхăракан ырă кăмăллă Фауст.

Тухатмăш карчăкпа ăна пулăшакан маймăлсем ăсхакăла сивлеççĕ. Ахальтен мар тухатмăш карчăк хăйĕн тухату сăмахĕнче шухăшлакан çынсем чăн-чăн пĕлў

тупма пултараймасси ҫинчен, шухӑшлама пултарайманнисене ҫеҫ пӗлӳ уҫӑлассн ҫинчен пакӑлтатать:

Пӗлӳ ҫутин
Чӑн-чӑн уҫҫи
Пуриншӗн те пытанчӑк!
Ӑссӑр кӑна
Уҫма ӑна,
Тивлет пекрех, пур шанчӑк.

Тухатмӑш карчӑк, кӗнекине уҫса, ун тӑрӑх арӑш-пирӗш тухату сӑмахне вулать. Фауста ҫак арӑш-пирӗш сӑмах тарӑхтарать. Мефистофель тӑрӑхласа ҫапла калать:

Юлташӑм, ку пуҫламӑшӗ кӑна,
Ун пӗтӗм кӗнеки калать ҫапла!
Ӑна пӗлме ан тӑрӑш — вӑл харам;
Урлӑ-пирли пит нумайран
Ӑсли те час-часах каять ӑсран.

Гете аллегорилле каланипе хӑй Христос тӗнне ӑстӑна хирӗҫ тӗн тесе критикленине пит аван пытарнӑ. Ҫапах та ҫивӗч ӑслӑ вулавҫӑ поэт мӗн ҫинчен каланине сиснӗ. Тӗне критиклени Мефистофель малалла каланисенче тата вӑйлӑрах палӑрать:

Истори кӗнеки ҫине пӑхсам,
Аса ил: яланах ҫапла пулнӑ ара:
Виҫҫе пӗрре, пӗррене виҫҫӗ тенипе
Ӗмӗртенпе ҫынна минретнӗ.
Ҫапла сӳпӗлтетме юри вӗрентнӗ —
Никам та тавлашас темест ухмахсемпе.
Ҫынсем пӑхаҫҫӗ сӑмахне анчах:
Пӗлтерӗшне вӗсем чухласшӑн мар пачах.

Мефистофель чӗлхипе пит аван каланӑ ҫак сарказм мӗне пӗлтернине ӑнланма ҫӑмӑл. Ҫам ҫапла «сӳпӗлтетме ӗмӗртенех вӗрентнӗ»? Пуп таврашӗсемпе чиркӳ ҫыннисем. Ҫам «виҫҫе пӗрре тесе, пӗррене виҫҫӗ тесе» шутлать? «Виҫҫӗллӗ пӗр турӑ» ҫинчен вӗрентекенсем — пуп таврашсем.

Гете хӑйӗн произведенине асамҫӑ тухтӑр ҫак майпа ҫынна ҫамрӑклатма пултарни ҫинчен калакан халӑх хушшинчи легендӑна кӗртнӗ. Анчах ку ҫамрӑклану асам мелӗпе пулман. Ҫынна асам мар, этемӗн хӗрӳллӗ юрату хӑвачӗ ҫамрӑклантарнӑ. Фауст куҫкӗски ҫинче илемлӗ хӗрарӑм сӑнне курсан: «Эй, юрату, мана ху ҫунатна парсам!» — тесе кӑшкӑрса ярать.



22840-443
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

Çапла Гете трагединче ăстăн темипе пĕрлех юрату теми пуçланса каять. «Фаустăн» пĕрремĕш пайĕнчи чи илемлĕ страницăсем — тухтăрпа Маргарита тĕл пулса паллашни, айăпсăр хĕр инкеклĕн пĕтни çинчен калаканнисем. Каярахпа (1858), Гетен săввисене кĕвĕлесе, француз композиторĕ Гуно «Фауст» опера çырнă.

Ф а у с т п а  М а р г а р и т а. Юрату Фауст пурнăçне пырса кĕрет. Вăл урамра çамрăк, никам тĕкĕнмен хĕре тĕл пулать. Унпа кăштах сăмах хушса илет: хĕр Фаустăн кăмăлне каять.

Мефистофель ăна Маргаритăсем патне ертсе каять. Маргаритăна, унăн ахаль те таса пурнăç тавралăхне çывăхрах пĕлсе çитсен, Фауст юратса пăрахать.

Вăл, таса чĕреллĕ, сăпайлă, юмарт хĕр, Фауста — палламан илемлĕ çынна — ялти уявра ăнсăртран тĕл пулнипех юратса пăрахать, пĕтĕмпех шанать. Çак çын унăн пĕтĕм шанчăкĕ, шухăшĕ-ĕмĕчĕ пулса тăрать. Маргаритăн тĕнчи анлă мар. Кил-çуртри чухăн сават-сапа, ялти урам, хурăн вăрманĕ, чиркӳ, чан сасси — ак çаксене вăл хăнăхса кăмăллана ачаранпа. Амăшпе ялти пуп ăна тĕн йĕркисене çирĕп пăхăнса пурăнма вĕрентнĕ, çаксем унăн пурнăçĕн законĕсем пулса тăнă. Маргарита иртен пуçласа хĕвел анса лариччен тăрăшса ĕçлет, хăйсен чухăн пурнăçне йывăрлăх тесе шутламасть. Вăл тĕнче мĕнле, çавăн пекех пулмалла пулĕ тесе шутлать, мĕн те пулин начар пек туйăнсан, ун пирки турра çеç кĕлтăвать: усала пĕтересси турăн тивĕçĕ, тесе шутлать.

Фауст ăна хăйĕн ăс-хакăлĕпе çĕнтерсе пăхăнтарнă. Вăл калаçнинчен Маргарита (Гретхен) хăйĕн ăнланăвĕсенчен уйрăм, вăл пĕлмен анлă тĕнче, шухăш тĕнчи, пуррине туйса илнĕ. «Ку çын тем те пĕлет! Тĕлĕнмелле!» — тет вăл, Фауст нумай пĕлнинчен тĕлĕнсе.

Маргарита хытă юратма, çитменлĕхсене каçарма, йăвашланма пултарать. Унăн иккĕленес, тавлашас, хирĕçес йăла çук.

Маргарита Фауста шанать, ăна вĕçĕмсĕр юратать.

Вăл çук çĕрте
Виле пурте,
Телей хура,
Тĕнче çара.

Анчах унăн ăшчикки лăпкă мар. Фауст пĕртте Маргарита таврашĕнчи ĕлĕкренпе пĕлекен çынсем пек мар. Турра ĕненет-ши вăл? Мĕншĕн пĕрмаях хăйĕн темле



Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО
22840 - Ч313

юлташӗнчен уйрӑлма пӗлмест вӑл? Мефистофель сивӗн, мӑшкӑллӑ пӑхни ӑна хӑратса пӑрахать. Гретхен Мефистофель Ҫӗр ҫинче никама та юратманнине туять. Гретхеншӗн вара — пӗтӗм пурнӑҫ юратура.

Маргарита Фауста юратни ҫак пӗчӗк тӗнчен законӗсене майлӑ мар. Лӑпкӑ пурнӑҫ арканса каять. Маргарита амӑшӗ Мефистофель панӑ ҫывратакан имҫама ӗҫнипе вилсе каять, Фаустпа ҫапӑҫнӑ чухне Маргарита пиччӗшӗ те вилет.

Гретхен хӑйӗн пысӑк хуйхи-суйхипе пӗчченех юлать, вӑл нимӗн те тума пӗлмест. Фауст (унӑн Генрихӗ) унпа юнашар ҫук, вӑл таҫта кайса пытаннӑ. Гретхен ҫуралса ӳснӗ тӗнче ӑна хирӗҫ тӑрать. Чиркӳри орган сассисем ӑна юнаса хӑратнӑ пек, турӑшсем ҫинчи ҫветтуйсем те хӑйсен пит-куҫне аяккалла пӑрнӑ пек туйӑнать. Ӑна, ӗлӗкрех тӗл пулсан, ырӑ кӑмӑллӑн калаҫакан ҫынсем халӗ ун ҫине кураймасӑр тискеррӗн пӑхаҫҫӗ е куҫ хыҫӗнче пӳрнипе тӗллесе хурлаҫҫӗ: ҫылӑхлӑскер, путсӗрскер! — теҫҫӗ.

Ӗлӗкхи тӗрексем ишӗлчӗҫ, урӑх нимле тӗрек те ҫук. Хӑраса ӑсран тухнӑ Гретхен упӑшкисӗр ҫуралнӑ хӗрне ҫуралсанах вӗлерет.

Фауст Гретхена аса илнӗ вӑхӑтра ун савнийӗ тӗрмере пуҫ касасса кӗтет. Фауст хӑраса ӳкет. Вӑл капла пуласса, Маргарита мӗн тери хуйхӑллине пӗлмен. Фауст Валентинпа ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн Мефистофель ӑна Брокен тӑвӗ ҫине илсе кайнӑ. Акӑш-макӑш аскӑнура Фауст Гретхена манать. Вӑл айӑплӑ. Ҫирек мӗн пулсан та, унӑн Гретхена ҫӑлмалла. Часах Мефистофелӗн ӑна тӗрмене Маргарита патне ҫитермелле.

Вӑл анчах мар кун пекки,—

хуравлать Мефистофель, мӑшкӑлласа. Фауст тарӑхнипе кӑшкӑрса ылханма тытӑнать: «Ҫак пӗрин хуйхине курни те ман пуҫ мимипе чуна чӑтма ҫук асаплантарать. Эсӗ пур, ним те пулман пек, шӑлна йӗрсе, темиҫе пин ҫыннӑн елчелӗ ҫаван пек тесе, ӑшра кулса тӑратӑн!»

Вӑл анчах мар! Кун пек нумай телейсӗр пӗчченҫӗ хӗрсем, улталаннипе, хӑйсен пуҫӗсене палач пуртти айне хунӑ. Тен, Гете трагеди ҫырнӑ чухне хӑйӗн тӑван хулинче, Франкфуртра, гостиницӑра ӗҫлекен ҫамрӑк хӗре упӑшкасӑр ҫуратнӑ ачине вӗлернӗшӗн халӑх куҫӗ умӗнче пуҫне касса вӗлернине аса илнӗ.

Ыран вӗлерес тенӗ каҫ Фауст ҫӗрле тӗрмене Маргарита патне пырса кӗрет. Ку тӗрмери сцена трагедире чи вӑйли, тӗнче литературинче чи лайӑх поэзи страници.

Фауст, тимӗр алӑк патӗнче кӑнт хытса кайса, Маргарита юрланине итлесе тӑрать. Юрӑ шӑпланать. Фауст алӑка уҫать те пӑхать:

Савнийӗ ун кунтах, ҫапах та вӑл туймасть;
Айне пӑрахнӑ улӑмӗ чӑштӑртатать,
Тӑлланӑ сӑнчӑрӗ чӑнкӑртатать.

Маргарита Фауста палач пулӗ тесе шутлать. Унӑн калаҫни йӗркеллӗ мар, хӑй пӗрре суйланать, тепре каллех тӑна кӗрет. Ун куҫне урӑм-сурӑм сӑнсем курӑнаҫҫӗ. Акӑ, Маргарита хӑй савнине палласа илет:

Кунта эс! Эс кунта! Ман асапсем ӑҫта?
Мана ҫӑлма кунта халь килтӗн эсӗ!

Анчах каллех хӑраса ӳкет. Йӗри-тавра тискер сӑнсем: вӗсем ун патнелле аллисене тӑсаҫҫӗ, вӗсем ӑна ярса тытаҫҫӗ, ӑна ямаҫҫӗ. Сӑнчӑрсенчен ытларах хӑрушлӑх, чун асапӗ.

Фауст ытла кая юлса ҫитрӗ. Маргарита аптраса ӳкет. Вӑл унпа пӗрле пыма килӗшмест:

Ах, Генрих, пит хӑрушӑ-ҫке мана!

Мефистофель Фауста васкатать.

Вӑл пӗтрӗ!—

тет шуйттан, Маргарита ҫине кӑтартса.

Ҫук, ҫӑлӑнчӗ!—

тет сасӑ ҫӳлтен.

Совеҫӗн аслӑ сучӗпе Гете хӑйӗн героинине тӳрре кӑларать. Гретхен юратнӑ, никама та усал тӑвасшӑн пулман. Вӑл чӑтса ирттернӗ асап унӑн айӑпӗнчен пысӑкрах. Хуйхӑпа асап чухне те хӑй юратӑвне ҫухатмарӗ хӗр. Тӗрме стени витӗр Маргарита юлашки хут: «Генрих! Генрих!»— тесе чӗнни илтӗнет.

Т р а г е д и н и к к ӗ м ӗ ш п а й ӗ. «Фаустӑн» пӗрремӗш пайӗ 1808 ҫулта пичетленсе тухнӑ. Ун ҫинчен Европӑри пур патшалӑхсенче те калаҫма тытӑннӑ. Гете трагедин ҫак пайӗ XIX ӗмӗрти малтанхи вӑтӑр ҫулӗ хушшинчи литература юхӑмне питех витӗмлетнӗ.

«Фаустăн» иккĕмĕш пайĕ 23 çултан тин тухнă. Фаустăн шыравĕсене малалла тăсса, Гете тĕнчен пит пысăк карттине тăвасшăн пулнă: этемлĕхĕн иртнĕ, хальхи тата малашнехи пурнăçне çыхăнтарма шутланă, çав хушăрах ун чухнехи пурнăç çинчен хăй мĕн шухăшланине пĕлтересшĕн пулнă.

Вăл ку тĕлĕшпе нумайăшне тунă. Анчах ку ĕмĕт ытла пысăк пулнă, вăл вăхăтри пурнăç аталанăвĕсене татасси уçăмлă пулман, кунсăр пуçне вăл çак асăннисем тĕлĕшпе хăйĕн шухăшĕсене пат татса калама шикленнĕ. Çавăнпа трагедин иккĕмĕш пайĕ ытарлăрах пулса тухнă.

Çапах трагедин иккĕмĕш пайĕнче те çивĕч ăстăн палăрать.

Маргаритăн пурнăç шăпи ытла та хăрушă пулнă пирки асапланса пĕтнĕ, вăй-халран супнă Фауст сиплĕ вăрăм ыйха кайса çывăрать. Çывăрнă чухне çутçанталăк хăех ăна çĕнĕ шыравсем тума, асап-савнăç курса чăтма çĕнĕ вăй-хал кĕртет.

Ĕмĕт пурнăçа ак килĕ,
Хĕвелтухăç тап-тасах!—

юрлаççĕ çывăракан Фауст çинче вĕçсе эльфсен хорĕсем (вăрмансемпе уйсен ыррисем). Фауст хĕвел тухнă чухне вăранать те пурнăçа, çутта, ĕмĕрех илемлĕ Çĕре, унăн вăй-хăватне саламлать.

Фауст çĕнĕрен вăй илет те «пысăк тĕнчене» кĕрсе каять.

Мефистофель Фауста патша çуртне илсе пырсан, вăл патша таврашĕнче ĕçлеме тытăнать. Кунта Фауст умĕнче патшалăх ĕçĕн шалти вăрттăн енĕ уçăлса каять. Патшалăх арканас патне çитнĕ. Унта ним йĕрки çук, хирĕçÿ, йĕркесĕрлĕх, ултав.

Саккунсăрлăх, саккунлă пек пулса,
Усал ĕçсем тăвать патшалăхра.

Патшалăх хысни пуш-пушах. Пĕтĕмпех саклата хывнă. Патшалăх парăма кĕрсе пĕтнĕ. Çакăн тымарĕ — кашни хăй çинчен çеç шухăшлани: аслă пуçлăхсем ĕçсе алхасасси пирки, бюргерсем хăйсен укçа хутаççине тултарасси çинчен ĕмĕтленеççĕ.

Мефистофель патшалăхăн çĕрнĕ тĕрекĕсене тата ытларах хавшатать. Вăл унăн çĕр айĕнчи пуянлăхĕсене саклата хурса хут укçасем кăлармалли проект тăвать.

Çак ултав пирки хăрушă ажиотаж тухса каять. Ниме тăман хутсем пирки çынсем пĕр-пĕрин пырне кăшласа татма хатĕр. Çĕршывра хирĕçӳ-тавлашу пуçланать.

Ватти-вĕтти пĕр-пĕринпе шав тавлашать.
Вăрçă. Халăх хушшинче асар-писер инкек.

Çак инкекпе усă курса, пăтранчăк шывра пулă тытма ăста çынсем: ултавçăсем, пусахçăсем, вăрă-хурахсем — пуянлăх пуçтарса купалаççĕ.

Йĕрки çапла: кам вăйлă, çав тӳрри,
Кĕсъе çеç пултăр тăп-тулли.
Мĕн тытрăн?—теççĕ, мĕн майпа, темеççĕ.
Суту-илӳ е вăрçă-хурахлу —
Вĕсем пурте — пĕр пусахлу.

Фауст Чăнлăха илем тĕнчинчен — авалхи грексен тĕнчинчен — чĕнсе кăларать.

Фауст çĕр айĕнчи тĕнчене ним шикленмесĕр анса каять. Вăл, Троя вăрçине пуçласа янишĕн айăпа кĕнĕ ылтăн кăтраллă Еленăна шыраса тупса, ăна качча илессшĕн. Фауступа Елена мăшăрланни ытарлă япала (символлă). Ҫунта юрату тавраш, Маргаритăна юратнă йышши юрату, пачах та çук. Елена идеал, ĕмĕт кăна.

Ку эпизодра илеме авалхи грексен тĕнчинче шыранине кăтартнă. Кун пек илеме Гете, Шиллер тата вĕсен тантăшĕсем нумайăшĕ ыйранă.

Фауступа Еленăран ывăл ача Эвфорион çуралать. Ку гĕлĕнмелле ача кунсерен мар, сехетсерен ӳсет. Вăл патгăр ĕçсем тăвасшăн çунать. Ашшĕпе амăшĕ Эвфориона ытла теветкел ĕçсем тăвасшăн ан çун, вилме пултаратăн, чипер хăтлан тесе йăлăнаççĕ. Анчах ăна тытса чарма çук.

Лăпкă тĕлĕк тĕлленетĕр?
Вăл ултав — çавна пĕлсемĕр,—

гет Эвфорион çапла йăлăннине хирĕç. Вăл вăрçă кĕрленĕ çĕре, пусмăрçăсене хирĕç вăрçăпа тăнă грек халăхне пулăшма каять.

Эп тăрам-и аякран пăхса?
Çук! Пуçа хурам хăюллă вăрçăра!
. . . . . . . . . .
Эп вăрçа каятăп!
Асапа чăматăп!

Гете ку романтикăлла сăнара акăлчансен чаплă поэчĕ Байрон çинчен шухăшласа хайланă. Байрон,

хӑйӗн никама пӑхӑнманлӑхӗ пирки ҫапӑҫакан Греције пулӑшас тесе вӑрҫа кӗрсе, паттӑррӑн ҫапӑҫса вилнӗ.

Тӑвӑл та ҫапӑҫу поэчӗ Эвфорион хӑюллӑ вӗҫсе хӑпарса кайса вилнӗ. Ҫӗр айӗнчи тӗнчерен Фаустпа Елена патне унӑн сасси:

Ан хӑвар мана, аннем, пӗччен
Мӗлкесен тӗнчийӗнче,—

тесе кӑшкӑрни ҫитет. Елена Фаустпа сывпуллашать те, ун ӳчӗ куҫран ҫухалать. Фауст аллинче унӑн тумӗпе пӗркенчӗкӗ анчах юлать.

Нумая пыман телей сӳрӗлсе кайрӗ. Авалхи илем хальхи (ку чухнехи) тӗнчере тӗрек пулма пултараймасть.

Ф а у с т ч ӑ н л ӑ х а ш ы р а т ь. Фауст каллех чӑнлӑх шырама тытӑнать. Вӑл чӑнлӑха илемлӗхре тупма шутланӑ. Анчах ҫакӑ тӗрӗс маррине пурнӑҫ хӑй кӑтартса панӑ.

Мефистофель ӑна пуянлӑхпа та чаппа илӗртсе улталасшӑн. Вӑл ӑна патшасен чаплӑ, пурлӑха ним шеллемесӗр салатса пӗтерекен иртӗхӳллӗ пурнӑҫӗ ҫинчен Франци королӗсен Версальти пурнӑҫӗнчен тӗслӗх илсе каласа парать. Мефистофель ӑна шалти хӑрушӑ кӗрешӳ пирки саланса кайнӑ патшалӑх ҫинчен (ку Германие пӗлтернӗ), халӑха улталаса ҫаратса пурнакан пуп таврашӗсем ҫинчен каласа парать. Фауст патшалӑха пӗтес патне илсе пыракансем ҫинчен сивлесе калать. Ҫапах та Мефистофель Фауста илӗртсе вӑрҫа хутшӑнтарать. Фаустӑн куҫӗ часах уҫӑлса каять. «Вӑрҫа! Ҫунта ӑстӑншӑн савӑнӑҫ начар!»— тет вӑл.

Фауст нумай пурӑнать. Ватӑлнипе ун ҫӳҫӗ кӑвакарса каять, унӑн асаплӑ кунӗсенчи яланхи юлташӗ — Чӑрмав — ӑна суккӑрлатса хӑварать.

Гете, Чӑрмав каланӑ пек туса (238 стр.), этеме пурнӑҫа активлӑ хутшӑнса лайӑхлатма чӗннӗ, хӑй ҫырнисенче хастар ӗҫченсене мухтанӑ, пурнӑҫра ялан тӗрлӗрен инкек кӗтекен хӑравҫӑ, мӗшӗлти, мӑран ҫынсене питленӗ.

Фауст Чӑрмава хӑваласа ярать. Унӑн тӑвӑлсенчен, хӑрушлӑхсенчен, теветкелсенчен хӑрасси-тӑвасси ҫук. Вӑл яланах кӗрешӳ-ҫапӑҫава ӑнтӑлнӑ, ҫӳресе такӑрлатман ҫӗртен ҫӳреме тӑрӑшнӑ, шыранӑ, хӑюллӑн тупнӑ. Фауст ку тӗнчене шута хумасӑр ҫӳлти ӗмӗтсемшӗн ҫунакансене, пурнӑҫри фактсене шута хумасӑр усӑсӑр япаласемпе айланакансене питленӗ. Фауст тимлӗ, ӗҫчен;

хăйĕн вăй-хăватне усаллă, пурнăçра кирлĕ ĕçе кăна ярать.

Кунтах тĕреклĕ тăр, йĕри-тавралла
Мĕн пулнине хыт асăрха ăсупала.
Чĕлхесĕр мар ĕçчен этемшĕн çак тĕнче,—

тет вăл. Этем хăй кăмăлне пĕтĕмпех канăçтарма пултарать-и? «Пултараймасть!» — тет Фауст, мĕншĕн тесен этем ăнтăлăвĕсен чикки çук, мĕншĕн тесен кирек мĕнле чикĕ те малалла каяссине чарса тăрать, этем — яланах малалла кайма тивĕçлĕ.

Фауст чăнлăха тупать. Фауст çутçанталăк вăйĕпе кĕрешет. Вăл рабочисен çарне ертсе пырса пысăк пĕве тутарать. Вăл тинĕсрен пит катмар çĕр лаптăкĕ туртса илет те унта темĕн чухлĕ халăха вырнаçтарать. Вăл ĕçлет, пултарнăçем пултарать. Вăл халăхсене телейлĕ, ирĕклĕ, илпек пурăнакан тăвасшăн. Халĕ ĕнтĕ вăл пурнăç тĕллевне тавçăрса илчĕ: çав тĕллев — этемлĕхе ырлăх паракан ĕçе тунинче, этемлĕхĕн чи лайăх идеалĕсемшĕн кĕрешнинче. Çакăнта Фауст хăйĕн телейне тупать. Вăл канас пурнăçăн телейĕ мар, канлĕхсĕр телей. Ку телей чăнлăх пекех илемлĕ. Фауст хăйĕн пурнăçĕнче чи юлашкинчен çак çутă, телейлĕ саманта пурăнса курать.

Ман кунçул пушах иртмерĕ...

. . . . . . . . . . . .

Ман ирĕклĕ çĕршывăм, ирĕк халăхçăм
Хăватлă çиçнине курайтăр куçăмçăм!..

. . . . . . . . . . . .

Ытарайми çак аслă телее туйса,
Эп киленетĕп халь чăн чаплă самантпа.

Çак шухăшпа Фауст вилсе каять. Мефистофельпе усал-тĕселсем ăсчах Фаустăн вилли çинче унран мăшкăлласа кулаççĕ, унăн пурнăçĕнчи ĕçлев йĕркисенчен тăрăхласа, вĕсене пăрахăçлама, ун вырăнне пессимизм принципĕсене никĕслесшĕн тăрăшаççĕ. «Пурте, веçех пырать пĕтес патне!» — тесе пĕлтерет Мефистофель, ун хыççăн лемурсен (вилĕм усал-тĕселĕсен) хорĕ те çавнах калать. Анчах ку харам! Фауст шухăшĕ чĕрĕ, вăл пурнăç пекех вилĕмсĕр. Ĕмĕрех вилĕмсĕр пурнăçа сăнарлакан пирĕштисен хорĕ телей гимнĕ юрлать, çуркуннене, çутçанталăкăн капăр та илемлĕ тумне мухтать. Пархатарлă гуманист Гете хăйĕн чаплă та аслă пултарăмне этемĕн пурне те çĕнтерекен ăс-хакăлĕпе юратăвне мухтаса юрланипе вĕçлет.

*Н. А. Андреев-Урхи*

# ФАУСТ

## ТРАГЕДИ

### ХАЛАЛ

*Ҫаллех, тӗтре сӑнсем [1], асра вӑрантӑр,*
*Мана яш чух кӑшт ҫеҫ курӑннисем...*
*Манас ҫӗртен ума тухса каплантӑр.*
*Сире мӗнле сӑнлам-ши, мӗлкесем?*
*Чакма май ҫук, эсир мана хушатӑр.*
*Сӑнарлама ҫитейӗҫ-ши халсем?*
*Ман кӑкӑр яшлӑхри пекех пӑлханчӗ,*
*Хавалӑм сирӗн асампа вутланчӗ.*

*Эсир халь куҫ умне кӳрсе тӑратрӑр*
*Ыр кунсене, саван тусӑмсене;*
*Яш туслӑха, юратӑва вӑратрӑр —*
*Юмахӑн иртнӗ ыр туйӑмсене,*
*Чи малтанхи асапсене хускатрӑр —*
*Ҫунҫул ултавӗн инкекӗсене;*
*Яш пурнӑҫран улмаш телей катертнӗ*
*Туссен сӑнарӗсем асра кӗретӗн.*

*Сире тахҫан чӗрем хавас юрлатчӗ,*
*Ҫӗн юррӑма илтеймӗр, савнисем!*
*Туссенӗн ушкӑнӗ йӑлтах саланчӗ,*
*Сасси шӑпланчӗ, иртрӗҫ вӑхӑтсем.*
*Пӗлмен ҫынсем мана ютла юрлаҫҫӗ:*
*Сӑваплӑ хуйхӑма туймаҫ вӗсем;*
*Ман лирӑпа киленнисем ӑсаннӑ,*
*Чӗррийӗсем тӗнче тӑрӑх саланнӑ.*

*Ӑпланнӑ ӑнтӑлу каллех хӗмленчӗ.*
*Туртать мана ырсен шӑп тӗнчине;*
*Хуллен именчӗк юрӑ кӗвӗленчӗ.*
*Вӑл чӗтретет Эолӑн [3] хӗлӗхне.*
*Тӳрккес чӗрем хуллен-хуллен ҫемҫелчӗ.*
*Куҫран куҫҫуль тумлать ҫине-ҫине:*
*Умра пурри йӑлтах таҫта пытанчӗ,*
*Иртсе кайни — вӑранчӗ, сӑнарланчӗ.*

## ТЕАТРТИ ПРОЛОГ

Директор, поэт тата мыскараçă

Директор

Туссем, мана нуша-инкек чухне
Чылай ыр турăр хамăн ĕçсенче;
Мĕнле шутлатăр: пирĕн халĕ
Ĕç нимĕç çĕрĕнче епле-ши кайĕ?
Ман халăха питех юрас килет:
Вăл хăй те пурăнать, пире пайта кӳрет.
Театрĕ хатĕр, тунă сценине,
Хавха эшкер пиртен хавас уяв ыйтать.
Ķашни хăй мыскара курма çунать:
Лараççĕ шăпăрт, чарнă куçпуçне.
Эп халăх кăмăлне пĕлеп кăнăçтарма,
Çапах та паянхи пек пач та пăлханман.
Чăн илеме вĕсем, паллах, ăнланаймаççĕ,
Вулас тесен вара йĕпхĕртиччен вулаççĕ.
Çак халăха пĕр илĕртӳллĕ, кăсăкрах
Çĕн пьеса кăтартасчĕ ку хутра!
Театр тавра, мăн лаптăкра, таçта çити
Пуçтарăннă эшкер пăхса та курăнми;
Тытса чарми хумпа вăл тăвăр алăкран
Кĕрет васкавлăн, пĕр-пĕрне хĕссех.
Тăваттă та çитмен, каç пуласси инçе,
Çынсем тĕрткелешеç, пуш вырăн пач юлман,
Выç халăх, çăкăр лапкинчи пекех,

Билет илесшĕн хĕсĕрлеççĕ касса патĕнче.
Кун пек хăват тума пĕлет поэт кăна.
Кăтарт халь ĕнтĕ, тусăм, хăвăн хăватна!

Поэт

Кун пек эшкер çинчен эс ан шарла —
Хавхалану вутне вăл сÿнтерет;
Çав шавлă ушкăнран хăтар мана:
Вăл хăйĕн авăрне пире тĕртсе кĕртет.
Эп лăпкăлăх ырап шухăшлама —
Поэтшăн савăнăç унта кăна,
Унта çеç туслăх, юрату пире
Илсе пыраççĕ чăн телей патне.
Чĕремĕр тĕпĕнчи таса туйăмсене
Пĕлтер кăна пушанкă çынсене,
Сăмахĕ çăвартан тухнă-тухман
Тăвать ăна тĕнче кулли тăшман.
Çук, шухăш çулсерен пиçсе вăйлантăр,
Илем пулса çити юсантăр!
Ултавлă йăлтăркка пулать самантлăх,
Чăн-чăн илем юлать йăх асăнмалăх!

Мыскараçă

Йăх! Кун çинчен сăмах ан пултăр!
Тÿр халăха эпир култармасассăн, шутлăр,
Вара камах йăпаттăр савнăçлă шÿтпе,
Хальхи йăха хăйне чăн кирлипе?
Эп урăхла шутлатăп: мыскараçă
Пурри вăл пăсăк мар, шÿт те кирлех пăртакçă,
Кам халăха йăпантарать хаваслăн,
Вăл калаçать унпа хастарлăн:
Ăна илĕртесси — нимех те мар вĕтуншăн.
Çын нумайăи шăп меллĕ ăнăçушăн.
Хăюллă пулăр, пĕлĕр кăтартма ăсталăха!
Кирлех пулсан, кăларăр сценăсем çине
Фантазие, юратăва, туйăмлăха,
Ăс-хакăла, анчах вĕсем çумне
Кăштах хушма эсир ан манăр-ха
Çынна култаракан хаваслăха.

Директор

Нимрен ытла, туссем, тĕрлĕ камит кăтартăр!
Çынсем хавас курма — ку пысăк киленÿ;

Ан тив, эшкер ҫавар карса куҫлатăр...
Ҫынсем умне тĕлĕнмелли сарса хурсан,—
Вара пулать пит пысăк ҫитĕнӳ;
Эшкер ырлать сире пур кăмăлтан.
Халăх йышне нумайййипе ҫеҫ ҫавăр!
Ҫашни хăй кăмăлĕ мĕн ыйтнине туянтăр!
Нумай параканни нумайăшне юрать,
Вара эшкер киле ыр кăмăлпа каять.
Хăюллăн ваклăр мĕн парассине:
Ҫав вак-тĕвек сире чăн ăнаҫу парать.
Эшкер кăмăлласассăн ваккине,
Мĕне кирлех ăна пĕр кӳмерккен пама?
Вак-тĕвеке ăспа туйма ансат,
Ансат куракансене те кăтартма.

Поэт

Ҫурмастăр-и эсир ку мел ирсĕррине?
Чăн-чăн ăстаҫăшăн вăл чыссăр та киревсĕр!
Ҫырашкасси[4] начар варланчăкне
Чи лайăххи шутне, иккен, хуратăр эсĕр.

Директор

Пире кун пек ӳпкев кӳрентермест:
Ҫашни ҫынах, ăс-хакăлне кура,
Тĕл перекен пăшал илет.
Утне кура турти [5],— ҫакна тытар асра.
Ҫама валли ҫыратăр-ха?— ыйтам сиртен.
Пĕри килет кунта салху сирме,
Тепри, тутлă апат ҫисе кӳпсен,
Ҫилет ăна кунта ларса ҫĕртме;
Ҫунтан начар та пулкалать вăл пирĕнпе:
Виҫҫĕмĕшсем хаҫат-журнал вуланипе
Анраҫҫĕ те пуҫлаҫҫĕ хурлама пире.
Вĕсемшĕн бал, театр е маскарад пĕрех:
Пĕлес килни ҫеҫ вĕсене туртать кунта;
Хĕрарăмсем — япшар тумпа ҫиҫме килеҫҫĕ,
Ҫусем хăйсен рольне аван пĕлеҫҫĕ.
Мĕскер вĕҫетĕр шухăшпа ҫӳл тӳпере?
Мĕнпе савăнтарать тулли театр сире?
Эшкер ҫине патне пырса пăхсамăр!
Ҫусем сивлек, лешсем сăпайсăр.
Пĕри картла ҫапма ĕмĕтленет,

Тепри юхха хĕрпе асасшăн сĕмленет.
Ҫун пеккисемшĕн чаплă музăна
Чĕнни вăл кулăшла кăна.
Ҫакна ыйтатăп эпĕ сирĕнтен:
Нумайтарах кăтартăр ҫĕннине.
Ан пăрăнăр пĕр тытнă тĕллеврен.
Йалт арпаштарăр халăх ăспуҫне;
Ёненĕр, унсăрăн юраймăр эшкере.
Мĕнле пек? Илĕртет-и ҫак сире?

### Поэт

Ҫайса шыра эс урăх чурасем!
Турă мана пилленĕ аслă тивĕҫсем.
Унăн тивлетĕнчен кулма парам-и?
Поэтăн чыслă хастарне сутам-и?
Мĕнпе чĕртет поэт ҫынсен чĕрисене?
Мĕнле хăват хĕмлентерет ун хавалне?
Ун чĕринче тапса тăран хастарĕ —
Пур тĕнчене ытамлакан гармони мар-и?
Тĕнче-анне чĕм-пурнăҫ ҫиппине
Арлать сив аллипе, аврать йĕки ҫине,
Мĕн-мĕн пурри, сехетсерен ылмашăнса,
Юрлать пĕр ĕнерӳсĕр пирĕн таврара,—
Ҫак пурнăҫ юхăмне кам-ха чĕртет,
Ун ҫемлĕ таппине кам пĕлтĕр туйăмпа?
Ҫам тĕнчери уйрăммине пĕрлештерет,
Пурне те чаплă пĕр аккорд тăвать ăспа?
Ҫам чун-чĕре сассин хĕрӳллĕ тăвăлне,
Хĕвеланăҫĕнчи [6] мăн шухăш тарнăшне
Ăнлантарма пултарĕ чăннипе?
Ҫам пултарать чунтан саван хĕрĕн ҫулне
Витме ҫурхи илемлĕ чечекпе?
Ҫам вăл ахаль ҫулҫăсене капăрлатать,
Ҫынна чыс тумалли пуҫ кăшăлĕ ҫыхать?
Ҫам турăсен тĕрекĕ, кам Олимп хуралĕ?—
Вăл — поэтри этемлĕхĕн ăс-халĕ.

### Мыскараҫă

Халь усă курăр ҫав ăс-халпала ĕҫре!
Ҫырсамăр хавхаланнă сехетре.
Тен, юрату ҫинчен ҫырас теместĕр-и?
Ҫураҫҫĕ икĕ чун пĕрне-пĕри,
Саваҫҫĕ, курнăҫу, пĕрне-пĕри кĕтни,

Ырра ӗмӗтленни е шиклӗ чун кӳтни:
Телей е ҫывӑх, е тарать инҫе,
Е савнӑҫ, е инкек — кӑтартӑрччӗ веҫех.
Ак хатӗр те сире ҫӗнӗ роман!
Ҫаплах пулать вӑл пурнӑҫра ялан.
Этем пурнӑҫӗнчен йӑлт илӗр кирлине:
Пурте сӑнанӑ ку туйӑмсене,
Анчах пуртех пӗлмест ҫав весене!
Тӗтрелле те чӑпар картинӑра
Илемлӗ чӑнлӑхӑн пӗр хӗлхемне
Эс вырнаҫтар ик питлӗ ултавра,—
Вара пулать чуна уҫан шерпет;
Тути пурне те кӑмӑла, шет, килӗ,
Унтан хӑйне мӗн кирлине кӑшт илӗ.
Кунта ыр яш-кӗрӗм килет;
Вӑл пьесӑран ӑстӑн уҫҫи кӗтет.
Кунта шерпет тупма пултарӗ:
Ачаш чунсен ӑш хыпнине кантарӗ.
Унран ӗмсе илет салхуллӑ апатне.
Пӗрин хавассӑр шухӑшне сирет,
Теприн суранлӑ чӗрине сиплет.
Шеп пьесӑр ак пурин чунне савӑнтарать:
Кашни хӑй чӗринче мӗн пуррине курать.
Ҫитет вӑл макӑрас-кулас патне:
Пурте чӑн илеме чунтан хисеплеме,
Ҫут ӗмӗтпе хавхаланма пӑхаҫҫӗ,
Анчах та чӑннине курмаҫҫӗ.
Кам пурнӑҫа сӑнанӑ — тӗлӗнмест нимрен те,
Кам ҫитӗнсе ҫитмен — вӑл кӑмӑллӑ темпе те.

## Поэт

Тавӑрса пар мана яш ӗмӗре;
Ун чух эп ҫамрӑк, ешӗл пулнӑ,
Ҫӗн юррӑмсем ман чӗререн
Пӗр чарӑнмасӑр, вӗҫсӗр юхнӑ;
Ман тӗнчене тӗтре хупланӑ:
Хам сӑхӑ аллӑмпа эп татнӑ
Чипер чечексене пайтах,
Кашни папакӗнче эп сӑр* ыранӑ.
Эп чухӑнччӗ,— мӗн-мӗн кирли ҫапах
Таса телей валли ман пулнӑ:

* Сӑр — вӑрттӑнлӑх.

Чĕрем чăнлăхшăн çуннă,
Ырланă йăнăш сăнсене!
Парсам мана яш юн хĕмне,
Чарусăр ĕмĕт туртăмне,
Хам хуйхăллă таса телейсене,
Юратупа хаярлăх хăватне,
Пар тавăрса яш ĕмĕре.

## Мыскараçă

Эх, тусăм! Яшлăх кирлĕ вăл сире
Тăшманпала вăрçа тухма,
Мăю çине чипер хĕре
Хутра-ситре ыталаса çакма;
Çĕр çывăрмасăр ташлама,
Ĕçсе-çисе хавасланма;
Пĕр тытнă йывăр тĕллеве
Ансатăн пурнăçа кĕртме.
Анчах ăстанăн лира каласа
Çынсен чунне хускатасси,
Ăпла-капла тек йăнăшса
Пĕр тытнă тĕллеве пурнăçласси,—
Ку, ваттисем, сирĕн шăпа;
Сире чыслатпăр çавăнпа.
Ватти ача пулаймĕ тек нихçан та,
Анчах этем — ача кирек хăçан та.

## Директор

Çитет сире тек тавлашма,
Ӳпкелешме, халап çапма!
Мĕскершĕн пит пакăлтатас?
Ĕçе, туссемĕр, тытăнас.
Мĕн калаçас чăрмав çинчен?
Мĕскер кĕтет чун хавалне?
Поэт — хавхалану патши хăех-ĕçке:
Ун кӳлмелле поэзие ĕçе.
Мĕн-мĕн кирли пире паллах:
Хаяр шерпет — нимрен паха;
Пар эс пире ăна часрах!
Паян тума шăп кирлине
Ма хăварас-ха ырана?
Мĕскер тума май пуррине
Ярса тытар-ха паянах,

Вара тин вăл алран тармасть.
Халь нимĕçсен сцени çине
Тухма кирек кам пултарать:
Эсир пуçпех хуçа кунта,
Сире мĕн кирлĕ — аллăрта.
Ав, декораци, машинсем,
Ус курăр çутăпа, шывпа-вутпа ĕçре,
Шел мар бенгал çути те çăлтăрсем:
Нимрен чару пулмасть сире.
Çак сценăна мĕнпур тĕнче вырнаçтăр,
Этем, чĕрчун кĕрсе тăрайтăр —
Çӳл пĕлĕтрен çĕр витĕр тамăка
Ҫĕрнеклĕн аннине кăтартăр халăха! [7]

## ПӖЛӖТ ÇИНЧИ ПРОЛОГ

Турă, архангелсем, унтан Мефистофель

Рафаил

Хĕвел çăлтăрсемпе çураçлăн
Куçать авал йĕрленĕ çулĕпе,
Кĕрлет аслатин пек мăн сассипе[8],
Хăй юррине юрлать мăнаçлăн.
Никам пĕлмест çак курăну мĕнне,
Кӳрет хăват вăл пирĕштисене.
Ытарайми катмар тĕнче
Чăн малтанхи пекех чечен.

Гавриил

Тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа
Çĕр чăмăрĕ пырать вăр çаврăнса;
Васкавлă черетпе ылмашăнаç
Çап-çутă кун, сĕм-тĕттĕм каç;
Ав тинĕс ирĕкре шавлать,
Чултуллă çырана вăл çапăнать.
Анчах та тинĕспе пĕрлех çыран
Çĕр çаврăннă май куçать ялан.

Михаил

Çĕре хирсе, шыва вăр хумхатса
Туллаççĕ те кĕрлеççĕ тăвăлсем;
Пур тĕнчене тăп-тăн сăнчăрласа

Ĕçлеççĕ çут тĕнче хăвачĕсем.
Пурне хирен хĕлхем çиçет,
Çӳлте хăруш аça кĕрлет,
Анчах та тăваççи * çӳлтен
Сунать тӳлеклĕх ĕмĕртен.

Виççĕшĕ пĕрле

Мăн тăваççи ĕçне курсассăн
Ӳсет ялан вăй-хал хавассăн:
Сан чаплă ĕçӳсем чипер питех
Чăн малтанхи кунри пекех!

Мефистофель

Қаллех эс, турă, килтĕн пирĕн тавраша
Çĕрӳ çинчен пĕлме,— унта мĕн тамаша?
Мана эс йышăнаттăн ырă кăмăлпа,
Çампа эп килтĕм сан тарçу-тĕрçӳ çине.
Қаçар, эп ăста мар илемлĕ халапа;
Анчах хĕрӳ сăмах эп пуçарсан,
Қулса яратăн эс,— пĕлеп ку чăннине,—
Ху тахçанах кулма манман пулсан.
Хĕвел е тĕнчесем çинчен çук ман сăмах:
Қурап умра этемĕн асапне анчах.
Çав пĕчĕк çĕр турри ** эс тунă чух малтан
Мĕнле шăраннă, çавăн пек айван!
Ана çӳлти кăварăн ырă хĕлхемне
Паман пулсан, вăл лайăх тытĕччĕ хăйне.
Çакна ăс тет, анчах вăл ус курать унпа
Хăй сыснаран сысна кăна пулма!
Қунта йăла-йĕрке сăпай, çапах
Сăмах илемĕшĕн калам: вăл чăннипе
Хăй тунахар уй шăрчăкĕ майлах —
Сиксе çӳрет çаран çинче:
Çӳле вĕçе-вĕçе ухса анать,
Юрлать ялан пĕр кивĕ юррине,
Вăл курăк ăшĕнче йăваш кăна
Ларсан юратчĕ, çук, хăй сăмсине
Пĕрмай чикет лапра ăшне.

---

* Тăваççи — турă (творец).
** Этем.

Турă

Сан пĕтрĕ-и? Ҫунта эс яланах
Элекпе ҫеҫ килен! Е ҫĕр ҫинче
Ырри ҫук-им вара пачах?

Мефистофель

Ҫук, тем тесен те, япăх пирĕн ҫут тĕнче!
Этем — апăрша! Ăна питех те шел —
Текех ҫынна хĕн кăтартма ҫитмест мехел.

Турă

Эс Фауста пĕлен?

Мефистофель

Хай доктора?

Турă

Вăл ман чура.

Мефистофель

Апли апла та, ун екки тĕлĕнмелле:
Чĕри канмасть ҫак ҫĕр ĕҫми-ҫимипеле.
Ялан таҫта мала вăл ăнталать.
Пĕр вĕҫĕм тарăн шухăшпа ҫунать.
Айваннине хăех туять:
Вăл пĕлĕтрен ыйтать чи лайăх ҫăлтăрсем,
Ҫĕртен — чăн-чăн рехет киленӳсем,
Анчах ни аякри, ни ҫывăхри унне
Лăплантармасть чĕрийĕ сурнине.

Турă

Вăл ăсĕпе халь тĕттĕмре ҫĕтсе ҫӳрет,
Анчах кайран ӳкет тĕп-тĕрĕс ҫул ҫине;
Пахчаҫă йывăҫ лартнă чух пĕлет
Унран мĕнле чечек, ҫимĕҫ илессине.

Мефистофель

Саклат хурап: вăл ман пулать!
Ак ирĕк парăр çеç мана —
Часах вăл ман хыçран пырать.

Турă

Манран чару пулмасть сана.
Çын çĕр çинче çӳренĕ хушăран
Пулаççĕ йăнăшсем — ăнтăлусем пуртан.

Мефистофель

Рехмет сире: эп шырамастăп виллине!
Виллисенчен хама эп аякра тытатăп.
Мана парсамăр хĕрлĕ питлине:
Чĕррисене мала хуратăп,— вĕсемпе
Шăшипеле кушак вылянă пек вылятăп.

Турă

Сана ирĕк паратăп пĕтĕмпе:
Ил ун чунне ху аллуна.
Пултаранах пулсан, ăна
Ертсе каях ху хыçăнтан,—
Анчах, калап, эс намăса юлан!
Ыр çын тĕмсĕлӳре те тупатех
Хăй шыракан тĕрĕслĕхе!

Мефистофель

Аван! Шел, ку ĕç пымĕ вăраха.
Сире ăтса ямастăп саклата;
Ман ĕмĕт пурнăçа кĕрсен,
Кĕрет пĕлтерĕр эпĕ çĕнтерни çинчен.
Вăл çын ман мăнакка çĕлен пекех*,
Тек авкаланĕ тип тусан çисех.

Турă

Ун чух ним шиксĕр кил ман патăма!
Сан пеккипе ман хирĕçӳ пулман...

* Евăна илĕртнĕ çĕлене çапла каланă (библирен).

Чее усал-тӗсел ушкӑнӗнче
Чи манерли эс ҫеҫ ман тӗлӗшрен.
Этем хавшак: хӑй шӑпине
Вӑл пӑхӑнса кану шырать ялан харам,
Ҫампа ӑна пӗр канӑҫсӑр юлташ парам:
Шуйттан шав хӗтӗртсе тутартӑр ун ӗҫне!
Эсир, ҫӑтмах ачийӗсем, киленӗр
Чӗр илеме мӗн ӗмӗрех курса;
Мӗскер пур, ҫӗнӗрен пырать пулса,
Ҫавна таса юратупа хисеплӗр;
Мӗн улшӑнса, тӗтрен ҫеҫ туйӑнать сире,
Ҫавсем сире вырнаҫчӑр лӑпкӑн, ӗмӗре.

Пӗлӗт хупӑнать. Архангелсем саланаҫҫӗ.

Мефистофель
(*пӗчченех*)

Хӑшпӗр чухне ку мучие курас килет,
Анчах нумай пуплессӗм ҫук унпа.
Ҫун пек мӑнаҫлӑ пуҫлӑх, усалпа
Сӑпайлӑ калаҫни чӑнах та килӗшет.

# ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

## 1-МĔШ СЦЕНА

### ÇĔРЛЕ

Шĕвĕр маччаллă тăвăр, çӳллĕ пӳлĕм. Фауст чавсаланмалли пукан çинче сĕтел хушшинче ларать, вăл ăшчикĕ çуннипе пăлханать.

### Фауст

Аслăлăха вĕрентĕм, тухтăр эп пулайрăм,
Суд-йĕр ĕçне, хам инкеке, тур саккунне [9]
Эп витĕрех ăнлантăм,
Анчах туятăп хам ухмаххине.
Куратăп тин, юлашкинчен:
Эп ăсланман малтанхинчен!
Магистр эпĕ, доктор та çитменнине.
Вун çул хушши вĕренекенсене
Апла-капла эп вĕрентетĕп,
Хам хыçăмран унта-кунта ертсе çӳретĕп,
Анчах пĕлӳ памасть ку никама.
Çак шухăш çунтарать ман ăшăма!
Паллах, эп ăслăрах пур айванран: пупран,
Магистртан та доктортан, çырашкаран;
Иккĕленӳ тавраш мана тертлентермест;
Усал та, тамăк та шиклентермест,
Анчах пĕр савнăç та манра юлмарĕ,
Нимех те тĕплĕрех пĕлме пулмарĕ,
Этемсене аванлатас шутпа
Эп нимĕн те туман, хам шухăшпа!
Çук манăн сумлăх та пуянлăх,
Пĕр ырлăх та курман эп асăнмалăх...
Кун пек тăрлавсăр пурнăçа

Пĕр йытă та чăтаймĕ, иçмасса!
Ак çавăнпа асам ĕçпе паллашрăм,
Ырăсемпе юри туслашрăм.
Кĕтеп: вĕсен чĕлхи-çăварĕ
Тĕнчен тĕп тупсăмне уçма пултарĕ,
Вара эп хам пĕлменнине
Асаплăн тек пĕлтермĕп çынсене.
Тĕнчен вăрттăнлăхне, шалти пур çыххине
Çунатăп эп пĕлме чиккисĕр;
Вара чĕлхем юхтарĕ чăннине,
Палкамĕ пуш сăмах тулккисĕр.

Тулли çут уйăх! Санăн çуттунта
Пайтах эп лартăм çаканта.
Қаçхи салхуллă шăплăхра,
Мана хăртан çак хуйхăра
Халь çутатни чи юлашки пулинччĕ.
Пуш пĕлӳрен* пушанăпинччĕ,
Лере, тусем çинче, васансенче,
Ачаш, тӳлек çутту çинче,
Ырăсемпе вĕçейĕпинччĕ,
Им сывлăмпа тасалăпинччĕ!

Татах ку тĕрмерех пăчланăп-ши?
Ылханлă, тăвăр хӳшĕ! Шел,
Хăçан кунтан эп тухăп-ши?
Аран-аран кĕрет хĕвел
Эрешлĕ, сăрлă кантăкран;
Стена тавра мачча таран
Қив хут, муртак кив кĕнеке
Выртать — тусан, кĕве кулли;
Қолби, реторчĕ туп-тулли
Қунта йăлтах ман инкеке!
Ак сан тĕнчӳ! Мĕнпур çутту!
Мĕн-ма чĕрӳ ыратнине,
Хура салху тулланине,
Мал ĕмĕтӳ илĕртнине
Туймасть вара сан хăвату?
Çак çут тĕнче — чипер чечек,
Этем хавасĕн чăн хысми,[10] —
Пулайрĕ саншăн тĕп инкек
Харам тусан, виле шăмми!..

* Пуш пĕлӳ — суя пĕлӳ.

Тăрса вĕçтер тула, уçса!
Хăй Нострадам[11] асам кĕнекипе
Сана парать çулна уçса:
Каях эс вăл кăтартнипе!
Чипер тăнла тĕнче калаçнине,
Вара пĕлетĕн çăлтăрсен çулне,
Халу пулать питех хăватлă,
Сана ырру сăмах хушать хаваслăн!
Таса çак паллăсен пĕлтерĕшне
Пĕлеймĕ пирĕн типшĕм те начар ăс!
Туятăп — ырăсем вĕçеç кунта пĕр харăс,—
Пĕлтерĕр эп мĕн ыйтнине!

*(Кĕнеке уçать те Макрокосм[12] паллине курать.)*

Чĕрем саван палла эп куртăм та,
Мĕнле вут шанчăк хыпрĕ кăкăрта!
Яш чухнехи кунсен телейлĕ вучĕ
Каллех хăр шăмшака кĕрсе те тулчĕ!
Турри хăех çырман-ши ку палла?
Пăлханакан чуна вăл пусарать,
Хавшанă чĕреме савăнтарать,
Тĕнчен вăрттăнлăхне уçса парать
Ман тĕлĕнен чун-хавала!
Эп турă мар-ши? Çутă ырлăх ман тавра!
Кунта тĕнчен тĕлĕнмелле чăн тĕпĕ,
Катмар, хăватлă тытăмĕ умра!
Анлантăм ăслă çын[13] каланине халь эпĕ.
«Ырсен тĕнчи выртать яр-уççăн,
Асу çеç çывăрать асаплануçăн.
Вăран, вĕренекен! Ӳтне шыва кĕрт,
Ирхи им шевлере[14] ăна чĕрт!

*(Палла тимлесе пăхать.)*

Епле пĕр пĕтĕмре пурте пĕрле тач çыхăнать,
Пĕри тепĕрине куçать те пурăнать[15].
Епле çӳлти вăй-хăватсем вĕçсе çӳреççĕ,
Пĕрне-пĕри çут ылтăн куркапа сийлеççĕ![16]
Сенкер çунатсемпе пăрлаттарса
Çавра çĕре, çӳлтен анса,
Ыталаса тăраççĕ, чĕрĕлĕх кӳреççĕ,
Пур тĕнчене йĕрке-илем кĕртеççĕ!
Епле сăнар!.. Анчах сăнар кăна!
Чиккисĕр çут тĕнче — ыталăттăм ăна!

Çут тĕнчене чун-чĕм паран,
Çĕре те пĕлĕте тăрантаран
Тивлетлĕ кăкăр, эс ăçта?
Имшер чĕрем сана чĕнет кунта!

*(Чăтаймасăр кĕнеке листине малалла уçать те Çĕр ыррин [17] паллине курать.)*

Ак урăх паллă! Ķу вара
Пач çĕнĕ туйăмсем чĕртет манра.
Эй, Çĕр ырри, мана эс çывăхрах!
Ķуратăп хам: мана эс тăванрах!
Сăну çĕклет, хушать ман вăйăма,
Эрех пекех чĕртет тăп юнăма.
Вăйлантăм эп — хăюллă, хатăр,
Эп хуйхăрма та, савăнма та хатĕр!
Тĕнче ăшне ним шиксĕр эп чăматăп;
Хаяр çил-тăвăлпа вăрçа тăратăп,—
Ķарапăм путĕ е вăл путмĕ —
Ман чунăм сăр! та тумĕ.

Çут уйăх пытанать,
Лампада ерипен сӳнет,
Усал çăвак шăршă перет,
Çӳлте юнак хĕлхем çунать:
Çанçурăма çӳçентерсе,
Сехре пусать ман чĕрене:
Çӳлте хăват тăрать вĕçсе,—
Сисетĕп вăл çывăххине.
Чĕнсе кăларнă Çĕр ырри!
Чĕрем сикет-çке çав тери,
Пур ĕмĕтпе эп сан патра!
Тух, курăн ман умра!
Эп санăн, эй, тухсам!
Вилем хăть, курăнсам!

*(Фауст кĕнекине хупать те темле ăрăм сăмахĕсене вăрттăн калать; хĕрлĕ çулăм ялкăшса каять те, унăн ăшĕнче Çĕр ырри курăнать.)*

Ы р ă

Ķам чĕнчĕ-ха мана?

Фауст
*(урăх еннелле пăрăнса)*

Хăруш сăнар!

Ырă

Эп тухрăм эс хăватлă чĕннипе;
Ман пăхана шав вĕçрĕн чĕрӳпе,
Анчах...

Фауст

Инкек мана! Чăтма хал çук сана!

Ырă

Ман сассăма илтесшĕн, сăнăма курасшăн
Пайтах эс çунтăн тунсăхпа.
Хăватлă сассуна итлерĕм те — хавассăн
Эп сан умра! Анчах сан, çи-этем *,
Сехрӳ хăпса та тухрĕ тем?
Хăюллă чĕннĕ сасă, парăнми ăспа
Тĕнче ытамлакан хастарлă улăп,
Хĕрӳллĕ шухăшпа пирĕнпеле тан пулăп
Тесе шутланă Фауст, эс ăçта вара?!
Пĕрре ман сывлăш вĕрнипех
Аçа çиçтернĕн ӳкрĕн те ăман пекех
Авкаланатăн ман умра!

Фауст

Вут-хĕм сăнар, сан умăнта пуçа пĕкместĕп,
Кур: эпĕ — Фауст, пĕртанах санпа, пĕлетĕп!

Ырă

Ĕçсен тăвăлĕнче,
Чĕр пурнăç юххинче
Ухатăп та анатăп,
Унта-кунта пулатăп.
Эп — çуралу, эп — вилĕм,

* Çи-этем — сверхчеловек, этемрен те аслă çын.

Ҫӗрлен мăн тинӗс [18]
Ылмашлă куҫăм,
Иртен кунҫул пир станӗпе ҫапла ӗҫлетӗп,
Турă валли чӗр тум тӗртетӗп [19].

Фауст

Ҫут тӗнчене ытамлакан ӗҫчен вăй-хал,
Епле сана пит ҫывăх туйрăм халь!

Ыр ă

Ҫама пӗлме хал пур, эс ҫывăх пӗр ҫавна,
Анчах мана мар!

*(Пачах ҫухалать.)*

Фауст
*(кăмăлӗ хуҫăлнипе ӳкет)*

Сана мар?
Ҫама тата?
Эп, турă сăнарри,
Сана та ҫывăхра мар-и?!

Алăка шаккаҫҫӗ.

Шаккаҫҫӗ. Эп пӗлеп: юлташ [20] килет!
Асап та хурлăх! Шухăшăм йăлтах пӗтет!
Имшер наукăн йăрă хурчӗ [21]
Ытарайми сăна сирсе те хучӗ!

Алăк уҫăлать те, Вагнер лампăпа кӗрет; халат, ҫывăрмалли калпак тăхăннă. Фауст ун енне кăмăлсăррăн ҫаврăнать.

Вагнер

Ҫаҫарăр! Эсӗр темӗн сасăпах вулатăр:
Грексен трагединчен пулас?
Илемлӗ вулама пит пултаратăр.
Ҫуна эп хам та вӗренме хавас:
Чысласҫҫӗ пирӗн хушăра кун пек ăсталăха!
Пупа актер канаш пани те пит паха.

Фауст

Эхер те пупӗ хăй шăпах актер пулсан, —
Апла та пулкалать вăл хушăран.

Вагнер

Мĕн тăвăн? Эпĕ хам ялан кабинетра[22]
Уявсенче кăна пулап кăшт урамра;
Унта та тĕкĕр[23] витĕр пек курап çынна,—
Епле япшар чĕлхесĕр вĕрентер ăна?

Фауст

Қалан сăмах чунтан тухмасть пулсан,
Харам эсир мĕн калани;
Тĕнче умне халап яма тухсан,
Чунтан шăрантăр калаçу тени:
Çын чĕрине вутпа вăраттăр,
Унта илем те тĕрĕслĕх çураттăр!
Эсир мĕнле? Пĕр вырăнта ларатăр,
Ют çын ĕçкин юлашкине пухатăр[24]—
Пулать вара шăп винегрет,
Сив çулăмпа вăл пĕçертет.
Сирте йăла капла пулсан[25], куна, калас,—
Ачасемпе тăр-ухмахсем кăна хавас.
Чунтан-вартан тухман хăрăк сăмах
Çынсен чунне явăçтармасть пачах.

Вагнер

Çапах ораторăн телейĕ — шеп сăмахра!
Анчах ку енĕпе — хам пуринчен кайра.

Фауст

Шыра таса чапа, хăвна тивĕçлине!
Ма ăмсанан камитçăн намăс калпакне?
Аспа йӳн пирĕн сăмахра пурах пулсан,
Илемлĕ вăл эрешсĕрех.
Қалас сăмахăн йӳнĕ пулмасан,
Пуш сăмахсем вылянтарни те ахалех.
Эпир пайтасăр ывăтан вĕçкĕн сăмах
Çынна ултавăн танати анчах:
Қĕрхи хăр-тип çулçа çил-тăвăл
Вылянтарса шав кăларни кăна вăл!

Вагнер

Ах, туррăм, науки питех те анлă-çке,—
Кунçуламăр вара ытла кĕске!
Тишкерӳпе тăрмашнă самантра
Чĕрем ялан тамашара.
Пĕлӳ çăлкуçĕ [26] çывăхне çитме
Темле меслет те тиветех пĕлме;
Çулне, майне тупан — инкек килет:
Çурма çултах эсрел ярса илет.

Фауст

Пергамент [27] ăшкану çăлкуçĕ пулĕ-ши?
Вăл шухăшпа çунан ăса кантарĕ-ши?
Кам пурнăç ыйтăвне пĕлме çунса хыпать,
Хăй чунĕнче кăна çăлкуç тупать.

Вагнер

Анчах ăспа авалхине курни,
Авал ăсчах мĕнле шутланине пĕлни,
Эпир унран мала мĕн чухлĕ иртнине туйни —
Пире чăн-чăн телей пекех!

Фауст

Питех мала! Хĕвел патне çитех!
Юлташăм, иртнине пĕлме асапсăр мар:
Иртнин кĕнекине уçаймăн эс вăр-вар [28].
Эпир саман палли тени, ан ман,—
Çыравçăсен ăстăнĕнче пĕр-пĕр саман
Хăй евĕрлĕ сăнарланни кăна.
Ăна пĕлме эс тытăнсан, чунна
Хура салху пусса илет,
Вара таçта çитех тарас килет!
Ку япала чăнах та сан умра —
Киревсĕр кивпитти çӳпçи вара;
Ăна камитçăсем, пит чаплă вылякан
Камит вăййи чухне, каппайăн калакан
Япшар ӳкĕтпеле пĕрех туян.

Вагнер

Анчах тӗнче! Этемӗн ăсӗ, ун чӗри!
Ку такама та кăсăк çав тери.

Фауст

Ия! Эпир «пӗлӳ» тени мӗскер-ши çав?
Ак çакăнта мӗнпур чăрмав!
Кам ачана ят тӗрӗс хунă?
Кам пурнăç чăнлăхне пӗлесшӗн çуннă,
Хăй шухăш-туйăмне каланă яр уçса,
Айван эшкер умне хăюллăнах тухса,—
Çавна хӗненӗ, çакнă е çунтарнă... Çитӗ!
Халь уйрăлар пуль ӗнтӗ.

Вагнер

Кун пек чипер те ăслă калаçма
Кунтах эп хатӗр халӗ çӗр каçма.
Ыран мункун, ерçӳ пулать-ши сирӗн?
Ун-кун çинчен татах пуплесчӗ пирӗн.
Чӗрем мана пӗлӳ патне чӗнет;
Нумай пӗлеп, татах пӗлес килет.
*(Тухса каять.)*

Фауст
*(пӗчченех)*

Епле ун шанчăк иксӗлмест?
Епле кирӗк пухма вăл ӳркенмест?
Шырать сăх аллипе çут ылтăна,—
Аман тупсан, питех хавас ăна!
Кунта çӗр ыррисем мана пăлхатрӗç —
Епле пуш сăмаха кунта вăл пакăлтатрӗ?
Çапах тав ку хутра сана, çӗршыв пепки 29
Этем ачисенчен чи пӗчӗкки!
Мана эс ӗмӗт пӗтесрен хăтартăн;
Асар-писер тыткăнӗнчен кăлартăн:
Çак курăну ытла катмар, сехре —
Чике старик пекех анрарăм вӗт сӗре!

Йăлтăртатан ӗмӗртенхи чăн çывăхне
Пыма шутларăм, тур сăнарӗ, ун çумне;

Чиккисӗр мухтавра, ҫӳл пӗлӗт ҫиҫнинчӗ
Тарма шутларӑм вилӗм аллинчен,
Ман пулас килчӗ аслӑрах пирӗштинчен,
Ҫут тӗнчене пӗлме шутларӑм чӑн тӗпрен,
Савнас тесеттӗм туррӑн евӗр хӑватпа —
Ак тавӑру пуҫтах хӑюлӑхшӑн мана;
Пӗр мӑнаҫи сасси мана кӑларчӗ тусана!
Ҫук, куртӑм: эп тан мар санпа.

Хӗрсе ҫунан чунпа сана чӗнсе кӑлартӑм,
Анчах алра тытса тӑма ҫитмест хӑватӑм:
Ҫав самантра вӑл тӑчӗ улӑп пек кунта,
Хама эп туйрӑм пӳрнеккейӗн, тупата,—
Мана хаяррӑн чартӑн эс: куҫ хупиччен
Этем шутне куҫартӑн — халь каллех пӗччен!

Ман мӗн тӑвас? Қамран пӗлес?
Ӑҫта каяс? Мӗнрен писес?
Инкек! Эпир пыран ҫулсем ҫине
Хӗрӳ ӗҫпех чару туса хуратпӑр!
Қуллен ӗҫлен ӗҫпех илем патне,
Таси патне ҫитме чӑрмав тӑватпӑр.
Ҫӗр ырлӑхне эпир алла илсен,
Чӑн ырлӑха та ӗмӗт вырӑнне шутлатпӑр.
Қунҫул пӑтравӗнче эпир, ҫӗтсен,
Ыр туйӑма, ҫут ӗмӗте час ҫухататпӑр.
Илемлӗ те таса, хаваслӑ ӗмӗт
Ҫӳле хӑюллӑн ыткӑнать кӑна,—
Қӗҫех сӳнсе ларать ун ҫутӑ хӗмӗ,
Ҫӗрти пуш хӗвӗшӳ йӑлтах хуплать ӑна.

Пуш тӑрмашу, салху кӑшлаҫҫӗ чӗрене;
Қунран-кунах асап килсе пире пусать,
Темле инкек те пӗтерет ҫын телейне,
Ун канӑҫне ним систерми лӑскать.
Вӑл тӗрлӗ сӑн-сӑпат та йышӑнать:
Ача, килйыш, хӗрарӑм хуйхӑртать;
Хаяр эмел, шыв-шур, пушар, хӗҫ чӗтретет;
Пур япалах ҫухалнӑ пек йӗртет.

Ман куҫӑм уҫӑлчӗ — тан мар эп турӑпа!
Айван та пушӑ ӗмӗт туслӑ мар манпа!
Тусан ҫинче выртатӑп эп, хурт евӗр,
Иртен-ҫӳрен таптанӑ тейӗр.

Йĕри-тавра тусан! Стена, çав çӳлĕксем
Мана асаплăн хĕстереççĕ.
Вĕсем çинчи муртак янкар, кĕнекесем
Ман мĕскĕн чунăма тек хĕсĕрлеççĕ.
Тусанлă çӳпĕ, кĕнеке купи! Мĕне вĕсем?
Тĕнче асаплă вăл: тертпе пурнать этем,
Телейлисем питех сахал, ан ман,—
Çакна пĕлмех пин кĕнеке вулас-и ман?
Эс, кĕтесри пуç купташки,—
Ман пек телейсĕр çыннăн юлашки,
Мĕскер шăлна йĕрсе манран кулатăн?
Мана мĕнех калас тесе çунатăн?
Тен, сан хуçу чăна тупас тесе
Çӳренĕ тĕттĕмре, ыр шуçăма кĕтсе!
Машин урапиcем, кӳсекĕсем, винтсем,
Манран кулатăр, тен, хатĕрĕмсем!
Эп алăк патĕнчех тăраттăм,
Сире чăнах çăра уççи тесе эп шантăм...
Уççи чее, çапах та уçаймасть вăл çăрине,
Вăл тупаймасть ыйтун тĕп тупсăмне!
Çанталăк кăнтăрла та шав пытанчăк:
Вăл уçтармасть хăй виттине;
Эпир ăспа уçма пĕлменнине
Винтпа, кӳсексемпе уçма çук шанчăк.
Ак кивĕ хатĕр уссăрах выртать унта:
Сана аттеçĕм тыткаланă, эс çампа кунта!
Ав хут тĕрки выртать тахçантанпа,
Хуралнă лампăран йăсланнă* хăрăмпа.
Капла вĕт-шак тыткăнĕнче ларассăм пур,
Ĕçсе тустармаллаччĕ пурлăха!
Аçу-аннӳн еткерĕнчен эс усă кур:
Ан пултăрччĕ сана вăл хурлăха.
Пире ним усă паманни — йывăр çĕклем,
Самантлăххи кăна — пайта кӳрен валем.

Мĕн куçăм ман çав кĕтесе шав тирĕнет?
Мĕскер магнит пекех туртать çав кĕленче?
Ман чунăмра сасартăк шухăш çиçĕнет,
Çĕрле сĕм вăрманта ялт! çиçнĕ çутă пек.

Салам сана, пĕртен-пĕр ырă кĕленче!
Тытап сана хаваслăн уйăх умĕнче.

---

* Й ă с л а н н ă — йăсăрланнă.

4*

Санра этем хăватлă ăсĕ те пĕлӳ,
Манран сана чи пысăк хисеплӳ.
Ыр ыйхă, çăмăл тĕлĕк эс паратăн,
Тăп вилĕм, канăç юхтаратăн!
Хуçу пĕр пулăшу кĕтет санран:
Хăтар ăна эс çакă хурлăхран.
Пăхап сана — чĕре асапĕ лăпланать,
Тытап сана — хĕрӳ хастар йăвашланать.
Чун тăвăлĕ лăпланчĕ çак тертрен,
Мăн тинĕсе çул палăрать халь инçетрен!
Ман патăмрах ун çийĕ тĕкĕр евĕр çуталать,
Çĕн кун мана çĕн çыр патне халь йыхравлать.
Куратăп: вут-хĕм кӳме анать çиçсе,
Эп хатĕр катари çула кайма вĕçсе!
Унта, çĕн тĕнчене, каяп хавас,
Çĕрте çук телейпе ман киленсе пурнас![31]
Анчах ăман мĕн тивĕçпе курать ку телее?
Тӳртпе тăр эс хĕвел енне[32],
Этем уçма хăйман хăрушă алăка
Яри уç эс, хăюллăнах пырса;
Çын турăран кая марне эс халăха
Кăтарт, ху чĕр пуçна парса!
Вăл пуçпĕтермĕш алăк умĕнче
Ас-халăм ӳктĕр хăраса; ун патĕнче
Хăй тамăк çунтăр-çиçтĕр вучĕпе,
Сана хăратĕ вăл пуçу пĕтессипе,—
Çапах та ан хăра, ярса пус тепĕр пусăм!

Çывхар кунта, куç пек таса куркаçăм,
Нумай выртатăн манăçра эс, тусăм!
Тусанлă хуппуна сирсе пăрах, сăйлавçăм *!
Тахçан авал эс ваттисен ĕçкисенче,
Пĕрне-пĕри çавăракан сăмахсенче
Çиçсе йăпатнă-мĕн хăнасене:
Сана алран алла ăсатнă кӳршĕ кӳршине,
Кашни мухтав юрри хывма пикеннĕ
Шеп чĕнтĕр пек эрешсене сăвăласа,
Вара ăна пĕр сывлами шалт ӳпĕнтернĕ,—
Çапла çав пулнă йăласем аваллаcа.
Куç умĕнче яш чухнехи ыр ĕçкĕсем...
Сана, куркам, эп кӳршĕме текех сĕнеймĕп,
Сан эрешне сăвăласа ĕçеймĕп!

---

* Сăйлавçăм — сăйласа ĕçтерекен.

Йӳҫҫи хаяр, ӑна юхтарнӑ аллӑмсем;
Ӑспа ятарласа тӗсенипе
Ӑна чунтан-вартан суйларӑм хам;
Юлашкинчен ӗҫетӗп вилӗм куркине,
Сана, пӗлми ыр шуҫӑм, чӗререн салам!

*(Фауст наркӑмӑш куркине тути патне ҫывхартать.)*

Чансем кӗрлени тата хор юрлани илтӗнет.

Ангелсен хорӗ

Христос чӑн чӗрӗлчӗ!
Тӗттӗме лекнисен,
Вилӗме пӳрнисен,
Айӑпа кӗнисен
Ӑсапӗ сӗврӗлчӗ.

Фауст

Мӗнле илемлӗ сас! Паллан чан сассисем
Мана памаҫҫӗ вилӗм йӳҫҫине ӗҫме.
Пире ку пӗлтерет таса хыпар халь ҫитнине,
Христос вилӗмӗнчен чӗрӗлнине.
Пирӗштисем ӑна пытарнӑ каҫхине
Юрланӑ ҫак юрра пӗрле пуҫтарӑнса,
Ҫынсен ылханлӑ ҫылӑх каҫнине курса.

Хӗрарӑмсен хорӗ

Ырӑ мирӑпа [33]
Сӗртӗмӗр шур ӳтне,
Чӗркесе пирпе
Хутӑмӑр тупӑка;
Ҫилтӗмӗр пӑхма
Эпӗр Христос патне,—
Ах! Ҫук вӑл тупӑкра:
Ҫайнӑ илсе.

Ангелсен хорӗ

Христос чӗрӗлчӗ!
Ҫам хӗн-хур айӗнче,
Илӗртӳ картинче
Пӑрӑнать ирсӗртен,—
Вӑл пехиллӗ!

Фауст

Илемлĕ сасăсем! Эсир мана каллех
Хăватлăн çÿпĕрен чĕнетĕр çÿлеллех!
Сире чĕри хытман çынна чĕнме сĕнетĕп,
Илтеп хыпар, анчах та ĕненÿ çук манăн!
Мана эсир чĕртейĕр-и? Пĕлместĕп.
Ан кĕт хăват[34]— вăл ĕненÿ пепки айванăн!
Ман халăм çук хыпар килен çĕре вĕçме;
Çук уçă çул мана унта çитме...[35]
Яш чухнехи паллан ыр сасăсем мана
Каллех савма чĕнеççĕ пурнăçа,
Шăмат каçне çÿлти çут савăш курнăçса
Таса чупак паратчĕ манăн тутана,
Чансен сасси илетчĕ ырă тыткăна,
Хĕм чĕремпе кĕлле хавас тăраттăм.
Темле пĕлми хăват туртатчĕ çав мана,
Хире, сĕм вăрмана чун кантарма каяттăм,
Хĕрÿ куççуль çине-çине тумлатчĕ,
Ман чунăмра вĕр-çĕн тĕнче пулса тăратчĕ.
Йăлтах ман асăма килсе те кĕперленчĕ:
Ача сатурлăхĕ, ирхи телей — яш тусăм...
Эй çук! Тумастăп халĕ йăнăш пусăм:
Аса килни ман асапа халь кунĕлетрĕ!
Илемлĕ сасăсем! Шав кĕрлĕр ман çинче!
Юхать куççуль, халь илĕртет тĕнче!

Вĕренекенсен хорĕ

Тăчĕ тупăкĕнчен
Вилĕме çĕнтерсе;
Ухрĕ пĕлĕт çине
Чапĕпе çиçсе;
Çăлăнăç çутипе
Çутатать тĕнчене;
Вăл хăварчĕ пире
Хурлăхлă терте;
Эпĕр пăчăхатпăр
Йывăр хĕнре;
Чунпа ăнтăлатпăр
Турă патне.

Ангелсен хорĕ

Христос чĕрĕлчĕ,
Çĕресрен хăтăлса.

Асапсен сăнчăрне
Татăрсам васкаса!
Çĕр çинче хурлăхра
Пурнакансене,
Выççине çăкăрпа
Ырлакансене,
Ырлăха сăмахпа
Саракансене
Вăл çывăхра.

## 2-МĔШ СЦЕНА

### ХУЛА ХАПХИ ТУЛАШĔНЧЕ

Уçăлса çӳрекенсем хапхаран тухаççĕ

М а ç т ă р а   п у л ă ш а к а н с е м

Ăçта кайма тапрантăр?

Ы т т и с е м

Сунарçăсен çуртне.

М а л т а н х и с е м

Эпир Арман патне [36] каятпăр.

П ĕ р и

Каяр пĕве патне.

Т е п р и

Унта кайма çул пит начар.

Т е п ĕ р   у ш к ă н ĕ

Эс мĕн шутлан?

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Ыттисемпе каяп.

Тăваттăмĕшĕ

Сире кайма сĕнетĕп Бургдорфа.
Унта хĕрсем чипер, сăри те пит паха!
Вăрçас тесен — кирек кам та хавас.

Пиллĕкмĕшĕ

Ёнсӳ кĕçтет-им сан? Вăрçас килет пулас?
Аяк пĕрчисене суса ярaççĕ ак.

Хĕрарăм-тарçă

Çук, çук! Мана ан йыхăр эс, каях.
Қиле таврăнмалла ман хăвăртрах.

Тепри

Ăçта? Вăл, тен, тирек панче, аллейăрах.

Малтанхи

Мĕскершĕн савăнас-ха манăн?
Ялан вăл сан хыçран çӳрет.
Санпа ташлать, кулать, пуплет,
Ку савăнăç ман мар çав, санăн!

Тепри

Паян унта вăл пĕр-пĕччен пулмасть,
Қаларĕ: леш кăтрийĕ те юлмасть.

Студент

Эх, вĕшлесем! Мĕнле чупаççĕ çав хĕрсем!
Юлташ, çитер-ха вĕсене хуса!
Хаяр табак, çăра сăра, шеп пикесем,—
Пире мĕн кирлĕ урăх, иçмасса!

Хула хĕрĕ

Ха, янкăс йĕкĕтсем! Тĕлĕнмелле!
Пăхма та намăс, тупата!
Хăйсем—чипер хĕрсем тиркес çук темелле,—
Хĕр-тарçăсен йĕрпе чупаççĕ, ав, таçта!

Иккӗмӗш студент
*(пӗрремӗшне)*

Тӑхта: ав, ик пике килет;
Пӗри,— ман кӳршӗ хӗрӗ,—
Мана ытла та килӗшет.
Пӑх-ха: мӗнле ӗлккен тумтирӗ!
Хӑйсем вӑрах утса ҫӳреҫҫӗ,
Эпир ҫыпӑҫасса кӗтеҫҫӗ.

Пӗрремӗш студент

Эх, тусӑм, хӑвӑрт, ан вӑтан,
Чӗкеҫ вӗҫсе кайма та пултарать!
Шӑматкунне урай тирпейлӗ шӑлакан
Уяв кунне пит лайӑх ачашлать [37].

Хула ҫынни

Ҫук, ҫӗнӗ бургомистр ниме тӑман этем.
Кунран кунах мӑнаҫланса пырать вӑл тем.
Унран хула нумай пайта курмарӗ.
Темле тӳлев те шутласа кӑларӗ.
Пӗрмай хула йӗрки начарланать;
Хӑйне пушшех пӑхӑнтарма муталанать.

Ыйткалакан
*(юрлать)*

Хаваслӑ ушкӑнпа ҫӳретӗр
Эсир кунта халь, ыр ҫынсем;
Пӑхсамӑр ман ҫине, хӗрхенӗр,
Хускалччӑр сирӗн чӗрӗрсем!
Ҫынна паран сӑваплӑ пулӗ:
Илтсемӗр манӑн кӗллӗме,
Ҫак савӑклӑ уявӑн кунӗ
Пухасшӑн эпӗ те ҫиме.

Хула ҫынни
*(иккӗмӗшӗ)*

Уяв кунне пӗрле калаҫнине саватӑп,
Вӑрҫу та ҫапӑҫу ҫинчен пупленине:
Таҫта ҫав Турци ҫӗрӗнче касаҫҫӗ,

Чикеççĕ халăхсем пĕр-пĕрине.
Эп чӳрече умне стакан тытса ларатăп;
Ман уммăн шыв çинче кимсем куçаççĕ;
Қаç еннелле хамăн киле кĕретĕп,
Ăш кăмăлпа тăнăçлăха пиллетĕп.

Хула çынни
*(виççĕмĕшĕ)*

Çапла, пускилĕм! Эпĕ те сунап çавнах.
Қам пит вăрçасшăн — чикĕштĕр те вăрçтăр!
Çут тĕнчене ӳпĕнтерсе пăрахтăр —
Қунта кăна кивви пек пултăр яланах.

Қарчăк
*(хула хĕрĕсене)*

Э-эх, мĕнле чипер тумланнă пикесем!
Мĕнле савас мар-ха сире, чиперккесем?
Ма-ха манран мăнаçлăн йĕрĕнетĕр?
Ват карчăкран та ыр сăмах илтетĕр.

Хула хĕрĕ

Атя, Агата! Қарчăкран шăвар!
Пире тухатмăшпа çын куçĕнче тĕс мар
Сăмах хушма; çапах мана Энтри каçне [38]
Аван кăтартрĕ вăл тур çырнине.

Тепри

Ана кăтартрĕ вăл мана та:
Çарти çын — хăй чипер мĕнле!
Ялан вăл куçăм умĕнче, таçта та
Шырап, тĕл пулаймастăп нимĕнле.

Салтаксем

Çӳллĕ хӳмесем,
Парăнăр пире!
Қаçăр пикесем,
Қăмăллăр пире!
Илĕпĕр сире,
Хăпмĕ те сехре!

Ҫӑмӑллӑ тӳлев
Харсӑр ӗҫсемшӗн!
Ҫӗнтерӳ — тӗллев
Паттӑр эшкершӗн*.
Йывӑр кӗрешӳ.
Чӗнчӗ кӗрешме,
Чыслӑ вилӗме
Савӑнӑҫлӑ тӳт,—
Ак мӗн пире шӳт!
Ҫак вӑл ҫапӑҫу —
Сан чӑн пурнӑҫу!
Парӑнӗҫ хӗрсем,
Ҫӳллӗ хӳмесем!
Чаплӑ ӗҫсемшӗн
Тивӗҫлӗ тӳлев!
Ҫӗнтерӳ — тӗллев
Паттӑр эшкершӗн!

Ф а у с т п а  В а г н е р кӗреҫҫӗ.

Ф а у с т

Вакланнӑ пӑр ӑсанчӗ тинӗсе,
Йӑлтӑртататъ ҫур кунӗ савӑк куллипе;
Ҫиҫеҫҫӗ айлӑмсем ҫурхи илемӗпе;
Шупка сив хӗл хавшарӗ, ҫӳл тусем ҫине,
Ту хушӑкне каять вӑл аякка.
Унта вӑл пытанать хӑватсӑр хаярпа,
Ҫурхи ачаш ем-ешӗл курӑка
Хӑш чух сапать вӑл сив юрпа,—
Анчах хӗвел чӑтасшӑн мар шап-шур тӗсе:
Инҫе ҫӗре ярасшӑн вӑл ӑна хӗссе.
Ҫирек ӑҫта чӗрри ваксарӗ ҫуралма,
Мӗн пурӗ туртӑнать ӳсме, папакӗ — ҫурӑлма,
Ёшне ларман пулсан халь чечеке,
Чечек тӗсне тумланнӑ халӑх чиперкке.

Пӑхсам, кур: авалхи кив хапхаран
Хире эшкер тухать таттисӗрех, васкавлӑ;
Уҫҫа тапать вӑл пӑчӑ хуларан,
Тумланнӑ капӑр, хӑй хаваслӑ,—
Ҫынсем хӗвел ҫинче канма тухаҫҫӗ.

---

* Э ш к е р — салтак пулкки.

Вĕсем Христос чĕрĕлнипе савнаççĕ —
Хăйсем те чĕрĕлсе вăранчĕç:
Вăрах хĕл кунĕсем иртсе пăчланчĕç;
Сĕм пӳлĕмрен, хĕн тертлĕ ĕçсенчен,
Лапкасенчен, тĕтре чартаксенчен,
Эрешлĕ çурт тăррисенчен, ĕç лаçĕнчен,
Сĕм чиркӳсен кĕллисенчен
Ĕçхалăх тапрĕ шавлă ушкăнпа.
Ем-ешĕл уй-хирсем лăпкаç ыр сывлăшпа.
Пăх-ха, пăхсам: хирсем те, çулĕсем те
Лăках хаваслă та чăпар çеç халăхпа;
Лере, шывсем çинче, шăв-шавĕ те, хавхи те,
Унта вĕлт-вĕлт тăваççĕ кимĕсем йышпа.

Путас пекех тиенĕ юлашки пĕр кимĕ,
Тапранчĕ те ишет, çитмест ун тимĕ;
Ав, аякри тусем çинче, çӳлте,
Ула-чăпар тумсем курнаççĕ пур çĕрте.

Асту! Ял шавĕ илтĕнет ман хăлхана;
Пур çын та савăнать — ак чăн çăтмахăна!
Ватти-вĕттин — пурин те савăк чĕрисем.
Кунта туяп хама этемĕн, эп кунта этем!

Вагнер

Саватăп, доктор, сирĕнпе уçса тухма,
Унта хисеплĕ, усăллă мана канма;
Анчах хура кăнттам эшкер çинче пĕччен
Пулма сунманччĕ эпĕ халиччен.
Тискер, киревсĕр хăтлану ялан
Ман кăмăла вара тăшман.
Скрипкин найлавĕ, вăйă шавĕ-мурĕ
Ман хăлхана çурсах ярать;
Усал çыхланнă евĕр, халăх айкашать —
Çапла вара вĕсен пур савнăç, ташă-юрă.

Халăх
*(çăка айĕнче ташлать, юрлать)*

Кĕтӳ ачи ташша пуçлать,
Пушмак, чечек, хăю, пиншак,
Вĕçет-çиçет ун çийĕн.
Этем çăка тавра шавлать,

Асар-писер ташша ярать,—
Ҫупăс нăй-нăй пĕр ҫеммĕн.

Ҫаччи унта кĕрет, сикет,
Хитре хĕре кăлтах тĕкет
Чавсипеле сисмеслĕн.
Пики чăрах пăхать качча:
«Аван мар-ҫке капла, ача,—
Тет хĕр: —Сăпай мар эс темĕн».

Ачи ярса илет ăна,
Вĕсем тĕвеҫҫĕ, ак, ташша,
Ҫĕпе арки вĕҫет ҫеҫ.
Хĕре ҫĕклет вăл чавсипе,
Хĕрсе кайса ташланипе
Вĕсем ăшша пиҫеҫҫĕ.

«Эс яр мана, тархасшăн!
Мĕн ачашлан лартасшăн,
Сăмаххусем ултавлă!»
Вăл ыталать ăна, туртать,
Лере тек халăх ҫуйхашать,
Ҫупăс сасси янравлă.

## Ватă хресчен

Пур халăх савăннă ҫĕре
Эсир килни питех аван.
Эсир пит чаплă ҫын, пире
Ҫапах, куратпăр вĕт, манман.
Ҫак пархатарлă халăх халь
Сире сĕнет курка сăра,—
Вăл уҫăр сирĕн кăкăра,
Вăл патăр чунăра вăй-хал!
Миҫе тумлам ҫак куркара,
Ун чухлĕ ыр кун пуҫăра!

## Фауст

Эп сирĕн сывлăхшăн ĕҫеп симе,
Чыса кура пит пысăк тав сире!

Халăх Фауст тавра пухăнать.

Ватă хресчен

Хаваслă кун килсе пире
Чыс кăтартни паха питех.
Хăрушă, йывăр вăхăтра
Пайтах çӳретĕр пирĕн хушăра.
Аçу чиртен сыватнисем, чим-ха,
Ќунта чылайăшĕ манман çав ырлăха:
Вăл вилĕмрен нумай хăтарчĕ,
Чума чирне ăстан пусарчĕ.
Эс, йĕкĕт чух, кирек ăçта çӳреттĕн,
Аçупала чирленисем патне
Ним шиксĕр, паттăррăн кĕреттĕн,
Нумай этем пытанчĕ çĕр айне,—
Çапах сывах эс юлтăн вĕт, сыватакан:
Çăлакана хăтарчĕ Çăлакан.

Халăх

Вăй-хал сунатпăр, чыслă тухтăр!
Сан ĕмĕрӳ пит вăрăм пултăр!

Фауст

Ќам вĕрентет ыр ĕç тума çынна,
Пуç тайăпăр пурте çавна.

*(Вагнерпа малалла каять.)*

Вагнер

Çак сăмаха, хăвна ырланине
Илтсен эс, аслă çын, мĕн туйрăн-ши?
Ќам хăйĕн хастарне, мĕн пĕлнине
Ќирлĕ ĕçе ярать — мĕнле телейлĕ-ши?
Сана курсан, мĕнпурĕ хăвăрт улшăнчĕ:
Чупаç, васкаç, тавра кĕпĕрленеççĕ;
Ачисене сана тек кăтартса тĕллеççĕ;
Скрипка шăп пулчĕ, ташă чарăнчĕ;
Иртетĕн эс,— çынсем тăраç ĕретленсе,
Çĕлĕкĕсем пĕлĕтелле вĕçеççĕ!
Сан умăнта кăшт çеç ӳкмеççĕ,
Шăп чиркӳри пекех чĕркуçленсе.

Фауст

Каяр лере: çав чул çине ларар,
Пăртак канса пăхар.
Вăл вырăнта эп час-часах ларattăм,
Тип тиркесе, турра хыт тархаслаттăм.
Усал чире, хăрушă асапа чарма
Алла тăсса турра эп кĕлтăваттăм,
Ах! ахлатса, куççуль тăкса хыт йăлăнаттăм,
Хам йăлăнни каймасть тесеччĕ харама.
Çак халăх мухтани ку вăхăтра
Пит тăрăхлана пек янрать ман хăлхара:
Эпир, аттепеле ачи, ку мухтавпа
Сахал вĕт тивĕçлĕ мăнаçланма.
Аттем ман, тĕттĕмрех ĕçчен, темле майпа
Тăрмашнă çут тĕнчен вăйне хăй ăнланма;
Ун тупсăмне тупасшăн çуннă
Мĕнпур вăйпе, хăйле, çапах та тӳрĕ пулнă [39].

Адептсемпе [40] пĕрле вăл ларнă
Хура пăч кухньăра [41] тач хупăнса;
Унта имçам, бальзам тупма хăтланнă,
Пĕрлешĕнми япалана хутшăнтарса!
Арăслана чипер саранапа
Лĕпрех шывра мăшăрлантарнă.
Çак мăшăра пĕçертнĕ çулăмлă вутпа,
Пĕр савăтран тепĕрине куçарнă.
Унтан нумай тĕспе йăлтăртатан
Пике-патша пулса та тухнă:
Чиртен имлен имçам ак хатĕр пулнă.

Унпа сыватнă тĕрлĕ амакран.
Асапĕ ытларах вăйланнă:
Чирли пурте çăва çине ăсаннă.
Кам та пулин сывалнă-ши?—
Тесе ыйтман-тăр нихăшĕ.
Ак пирĕн чаплă çеç сиплев!
Кунти ту халăхĕн йышне
Эпир муртан ытла пĕтернĕ.
Эп хам та пиншер çынна ĕçтернĕ,
Вĕсем халь çук — эп, ак, пурнатăп...
Пире, этемĕн чуниллисене,
Ман урлă халăх чыс кăтартнине
Тата мухтанине куратăп!

Вагнер

Мĕн кулянатăр ун пирки çунса?
Эсир ыттисенчен мĕн пĕлнипе ĕçре
Тӳр кăмăлпа, чыспа пайта курсан,
Çитмерĕ-им вара унпа сире?
Эсир, ыр ывăл пек, чыс тунă аçуна.
Унран пĕлӳ туяннă, çав наукăна
Эсир кайран тата мала шутартăр,
Ăна халь сирĕн ывăл малалла куçартăр.

Фауст

Суя пĕлӳ ултавĕнчен тухма
Кам шанчăк çухатман,— телейлĕ!
Эпир мĕн пĕлнине ĕçе яман,
Пĕлменнипе çынна сипленĕ.
Э, чарăн: ку салхуллă сăмахсем
Çак савăк вăхăта пăсаççĕ.
Пăх-ха: анса ларан хĕвелĕн урисем
Садсемпеле çуртсем çинче çунаççĕ.
Хĕвел таçта инçе кайса анать,
Унта каллех вăл пурнăç вăратать...
Эй, парăр-ха мана çунат — çĕртен хăпма
Хĕвел хыçĕнченех ырми вĕçсе пыма!
Вара ман урасенĕн айĕнче
Çиççе çеç выртĕччĕ тĕнче:
Пăхса киленĕп ту тӳписене
Хĕлхем хыпса çунтарнине;
Васан-лапам шăпах çывăрнине эп курăп;
Шур кĕмĕл çырмасем тӳлеккĕн юхнине,
Вĕсем пĕрле сар ылтăн мăн шыв пулнине
Куç сиктерми пăхса çеç пырăп,
Çӳл тăрăллă тусен хушăкĕсем
Чĕрем ăнтăлнине пӳлсе чараймĕç.
Шалт тĕлĕннĕ чĕр куçăмсем
Тăпланнă лĕп тинĕссене пăхса тăранĕç.
Ак ман умра хĕвел пытанчĕ,
Анчах аманнă чунăмра çуралчĕ
Каллех хăватлă ĕмĕтĕм:
Хĕвел хыççăн пырса, ун çутине тек ĕçеттĕм;
Умра пĕрмай яр-çутă кун тăринччĕ;
Хыçра сĕм-тĕттĕм каç пулса пыринччĕ;
Çӳлте кăвак тӳпе шуса юлинччĕ;

Айра хум хыççӑн хум чупинччӗ.
Илемлӗ ӗмӗт, илӗртӳллӗ тӗлӗк!
Пулаймӗ çав вӑл маншӑн тӗлӗнмелӗх.
Ӳт çунатсем пире вӗçме çӗклеймӗçӗ,
Сывлӑш ӳтрен тухсан — вара тин вӗçӗ.
Анчах вӗçес сӗм-туйӑм этемре —
Ялан пур пирӗн çутӑ ӗмӗтре.
Çӳлте, кӑвак тӳпе уçлӑхӗнче,
Тӑри сасси янранине тӑнлатӑн-и,
Хӑватлӑ ӑмӑрт вӑрмансем, тусем çинче
Çунат сарса яраннине пӑхатӑн-и;
Тӑрна карти тӑван çӗрне
Çӳл пӗлӗт айӗн кайнине куратӑн-и,—
Этем сасартӑк çунатсем хушать,
Вара çӳле вӗçес хавас тапса тухать.

Вагнер

Паллах, сахал мар тунсӑхланӑ эпӗ те,
Çапах ман ун пек тӗмсӗлӳ пулман пӗртте.
Часах йӑлӑхтарать мана уй-хир, вӑрман,
Эп кайӑк çунатне нихçан та ӑмсанман.
Том хыççӑн том, листа хыççӑн листа
Вуланине мӗн çитӗ, тупата!
Хӗл каçӗ те хавас иртет,
Чӗрем те савӑккӑн сикет.
Сайра пулан пергамент тупӑнсан,
Вара хӑвна пӗт-пӗтӗмех туян.

Фауст

Санра кун пек пӗр туртӑм çеç курнать;
Юрать: урӑххине пӗлме ан хапсӑн.
Ман чирлӗ кӑкӑрта ик чун пурнать,
Пӗрне-пӗри тӑшман,— çунаççӗ уйрӑласшӑн![42]
Пӗри хавас çӗр çинчине —
Ку пурнӑç ачашне савать;
Тепри — çут пӗлӗт таврашне —
Унти ырсем патне туртать.
Эй ырӑсем, эсир çӗрпе кӑвак тӳпе
Уçлӑхӗнче вӗçетӗрех пулсан,
Ансамӑр ман пата эп чӗннипе!
Илсемӗр хӑвӑр патӑра кунтан!
Пулса курасчӗ урӑх пурнӑçра!

Асамлă плащ ман, ах, пулинччĕ,
Унпа вĕçсе çӳресчĕ çутçанталăкра,
Тĕнчен пур илемне пăхса киленĕпинччĕ!
Мана паха вăл патшасен порфирĕнчен [43],
Пуянăн чăн ĕлккен тумтирĕнчен!

Вагнер

Ан йыхăр сывлăшра вĕçен ырсен йышне [44].
Вĕсем мĕн ĕмĕртен этем чунне,
Çил кăларса хăватлă çуначĕсемпе,
Тĕнчен тăват енчен асап-синкер ярасçĕ.
Пăр сăмсаран шĕп-шĕвĕр шăлĕпе,
Хăйранă çивĕч чĕлхипе тек сăнăласçĕ;
Мал енĕнчен вĕсем хăр çил вĕртесçĕ,
Çын кăкăрне ĕмсе çĕртесçĕ;
Тăр-кăнтăртан — усал шăрăх кӳресçĕ,—
Этем пуçне хĕвелĕн шалкăмне кĕртесçĕ;
Кай енĕнчен лăш варкăш хăваласçĕ,
Унтан хир-çарана шыва ярасçĕ.
Вĕсем, итленĕ пек, чĕнсен килесçĕ,
Çапах кайран пирех вĕт илĕртесçĕ:
Çынна вĕсем пирĕштисем пекех,
Анчах хайли вĕсен — инкек текех.
Киле кайма шăпах самант пире:
Кас пулчĕ, сивĕ, йăсланать тĕтре.
Улах кĕтес питех паха çĕрле.
Мĕн эсĕр тинкеретĕр лерелле?

Фауст

Пăх-ха, тыр ăшĕнче хура лиска çӳрет.

Вагнер

Курап, анчах сана вăл ма тĕлĕнтерет?

Фауст

Мĕн вăл? Пăх-ха авантарах!

Вагнер

Ман шутпала лиска йытах:
Хăй хуçине йĕрлет пек шыраса.

Фауст

Куратăп: уткăнать вăл ункăн çаврăнса.
Ак, кунталлах çитет, çитет,
Ури йĕрпе хĕлхем çиçет.

Вагнер

Куçу тем, уйăмăл кăтартать вара:
Хура лиска çеç курăнать умра.

Фауст

Туяп, пире вăл ункă варрине кĕртет,
Асам танатипе карса илет.

Вагнер

Шырать хăй хуçине — тупать юта!
Пăх-ха, вăл шикленсе чупать кунта.

Фауст

Унки тăварлансах пырать... Чупса та çитрĕ ак.

Вагнер

Çапах вăл йытă çеç, усал марах.
Куратăн, найкăшать, лăп вытрĕ, ачашланчĕ;
Йали те йыттăн: хăрлатрĕ те лăпланчĕ.

Фауст
*(йыхăрать)*

Лиска, лиска! Атя каятпăр!

Вагнер

Ухмах вĕт янавар! Эпир тăратпăр,
Вăл та тăпах тăрать, пире кĕтет;
Ăна чĕнетĕн — сан патна вĕçет;
Кирек мĕн ÿкерсен — тупса парать;
Шыва патак персен — илсе тухать.

Фауст

Ӑнах та тӗрӗс эс калан куна.
Тӗлӗнмелли ҫук: вӗрентнӗ ҫеҫ ӑна.

Вагнер

Ҫун пек вӗрентнӗ йытӑ таврашне
Вӗреннӗ ҫын та савӗ хӑш чухне.
Ӑна маттур студент ӳстернӗ пит чипер,
Ҫампа вӑл тивӗҫ сирӗн хисепе.

Вӗсем хула хапхинчен кӗрсе каяҫҫӗ.

## 3-МӖШ СЦЕНА

### ФАУСТ ҪАБИНЕЧӖ

Фауст лискапа кӗрет.

Фауст

Хӑвартӑм уй-хире, ҫарансене;
Тӗтре хупларӗ вӗсене.
Пусарччӗ хавална эс, чунӑм!
Сӑпайлӑ ӗмӗтӗм, вӑран!
Тӑплантӑм урнӑ хавхаран,
Тӑвӑллашмасть ӳтре халь юнӑм:
Турра та этеме савас хӑватлӑх
Манра ҫӗнелчӗ тараватлӑн.
Анчӑк, лӑпкӑ пул! Ун-кунӑн мӗн куматӑн?
Ҫитӗ алӑк патӗнче тек найкӑшмашкӑн;
Ҫамака хыҫне вырт, ӑшӑн, кан,— куратӑн —
Ак ҫемҫе кӳпчӗк ҫывӑрма выртмашкӑн.
Ҫул ҫинче пире йӑпатрӑн эсӗ майсӑр.
Сиккелерӗн, чупрӑн каллӗ-маллӗ,
Выртчӗ ӗнтӗ тӑппӑн, ашкӑнмасӑр,
Лӑпкӑ, таравант хӑна пулсамччӗ халӗ.
Хӑҫан кичемлӗ пӳлӗмре каллех
Ман лампа тусӑм лӑпкӑн ҫутатать,
Лӑпланнӑ чунӑмра хаваслӑх вӑранать,
Ӑс-хакӑл урӑлса вӑйне илет веҫех,
Ыр шанчӑк чӗрере чечекленет,

Ăшра салху сӳрĕкленет,
Ун чух чăн пурнăç çăлкуçĕ уçăлать,
Унта çĕн ĕмĕт ыткăна пуçлать.
Анчăк, шăпланччĕ! Ӳлесе ан лар!
Çӳлтен илтĕннĕ чух ыр сасăсем
Эс ӳлени пĕрре те килĕшӳллĕ мар!
Пирĕн час-час çапла: хăшпĕрисем
Ыр шухăша ăнланаймасăр, илемпе
Тӳрĕлĕхрен питех хаяр кулаççĕ,
Тытса та чарайми улаççĕ.
Эс те çапла ӳлетни:м чăтайманнипе?
Инкек мана! Ман чирлĕ кăкăрта
Йăвашлăхпа тӳлеклĕх çук пăртакçă та.
Ах! Мĕншĕн эсĕ, канăçлăх çăлкуçĕ, типрĕн?
Мĕн-ма хыпса çунать-ши ăшăм-чиккĕм?
Кун пек малтан та пулнине пĕлеттĕм —
Ăна миçе хут хам та тĕсесеттĕм!
Анчах та ку хуйха сирме меслет тупатпăр:
Эпир пĕлĕтрине пахалама пуçлатпăр,
Хурав кĕтетпĕр хай çӳлтен пĕлтерничен[45].
Ун шуçăмĕ Çĕн халалра [46] çунать тĕпрен.
Çак авалхи таса кĕнекене уçам,
Ăспа тĕпчем унта мĕн çырнине,
Паха чăн нимĕç чĕлхипе
Таса тĕп çырăва хам куçарам [47].

*(Кĕнекене уçать те куçарма хатĕрленет.)*

Çырса хуни çапла: «Сăмах чăн малтанах пулнă»[48]
Чăрмав сиксе те тухрĕ ман, пăх-ха.
Эп сăмаха кун пек хакла хумастăп.
Мана ăстăн чăнах кăтартрĕ, хам туятăп,—
Текста улăштарса ман çырмаллах халь.
Çырап: «Ăстăн чăн малтанах пулнă».
Тăхта, хыт шухăшла, ку малтанхи йĕрке
Чăнни патне чи çывăх пулмалла!
Анчах Ăстăн пурне те тăваймасть-ĕçке!
Пурин пуçламăшĕ Вăй-хал мар-ши,— уйла.
Вăй-хал тесе çырса хуратăп.
Çапах каллех ман чунăма темскер кăшлать.
Анчах ман ăсăм халь çуталчĕ, шухăшлать:
«Малтан Ĕçлев пулнă» тесе çыратăп [49].
Анчăк, ан нăйла, ан кускала,
Юласах тесен кунта халь манпала!
Кунашкал юлташ тĕс мар мана:

Эсӗ найкӑшни чӑрмав кӑна,
Ҫампа каяс пулать пӗрин пиртен.
Лайӑх мар та хӑнана хӑвалама,
Мӗн тӑвас, хушас пулать кайма:
Алӑк уҫӑ, тух та шӑвӑн пӳлӗмрен.
Анчах мӗскер ку ман умра?
Чӑнах е уймӑл курӑнать?
Лиска ӳсет, вӑрӑмланать.

Ытла тискер ку мыскара!
Вӑл халӗ йытӑ мар пачах —
Чӑн бегемот! Ун куҫӗ ялт ҫунать,
Хӑй ҫӑварне карса пӑрахнӑ,
Асавсене чанках тӑратнӑ!
Ман хӑвата час курӑн ак:
Сана чар Сӑламан ҫәри — чарак! [50]

У с а л  с ы в л ӑ ш  а ч и с е м [51]
*(коридорта)*

Лекрӗ ак пӗри! Васкар!
Юрамасть унта кӗме.
Ват усал танатара
Тилӗ пек ларать кӗтсе
Пулӑшу халь пирӗнтен.
Хӑвӑртрах йӗри-тавра
Ушкӑнпа пуҫтарӑнар,
Вӗҫкелер пит тимлесе,
Тыткӑнран ӑна ҫӑлар!
Аслӑ та хӑватлӑ вӑй:
Пулӑшнӑ пире те вӑл!

Ф а у с т

Усал йӗке пӑхӑнтарам,
Малтан тӑват сӑмах калам [52]:
Саламандра, ялкӑштар!
Эс, Ундина, мӑкӑрлан!
Эс, Сильфида, варкӑштар!
Эс, Хӗртсурчӗ, ватӑрлан!
Ҫу тӗнчене тӑват хӑват
Тытса тӑрать тӑмат *;
Ҫам вӗсене пӗлмест,

* Т ӑ м а т — тӗреклӗ, ҫирӗп.

Вӗсен вӑйне витмест,—
Ун хал ҫук тухатма,
Ырӑсене тытма.
Ҫулӑмра ҫухал,
Саламандра!
Ҫӑлтӑрла ҫутал
Эс, Сильфида!
Хумпала хутӑш
Эс, Ундина!
Арӑмсене пулӑш,
Incubus, Incubus [53],
Юлашкинчен сӑмах тат!

Ҫук, ку тӑвата хӑватран
Пӗри те ку тискер тамашара
Ҫук пулӗ: вӑл тӑпах выртать,
Шӑлне йӗрет, мана кулса хӑртать.
Йӗк сывлӑша хӑваласа тартма
Тата хаяр пуҫлам-ха тухатма.
Чим-ха: эс тамӑк йӑхӗскер пулсан,
Кур: ак ҫӗнтерӳ палли сана! [54]
Усал-тӗсел хӑрать унран,
Ҫӑва эсрелӗ пӑхӑнать вӑр-вар.
Аха, сехре хӑппи тӑратрӗ сан шӑртна!
Ылханлӑ, чӗмсӗр янавар!
Пӗлейӗн-и ӑс-халупа
Ӑна, пултарӑнманскере,
Ӑна, ӑспа пӗлменскере,
Хӗрес ҫинче пӑталаннӑскере,
Чӗр вилӗме те тамӑка ҫӗннӗскере?
Ӳсе пуҫларӗ, слон пекех катмар,
Илемсӗр те хӑруш, хаяр!
Ав, кӑмака хыҫне вӑл тулчӗ,
Пӳрт маччине ҫити вӑл пулчӗ.
Тӗтрен вӗссе сапаланасшӑн.
Тискер усал, хуҫа эп саншӑн!
Ахальтен мар юнатӑп хӗреспе:
Сана ҫунтарӑп турӑ вучӗпе!
Ан кӗт эс халь манран
Хаяр таса виҫҫин вутне! [55]
Ан кӗт, калап сана чунран,
Чи вӑйлӑ тухатун хал-хӑватне!

Тӗтре саланать те, кӑмака хыҫӗнчен ҫӳревҫӗ схоласт тумӗпе [56]
Мефистофель тухать

Мефистофель

Мĕскер йăслатăр çак? Эп пулăшма хавас!

Фауст

Ак кам пытаннă йытă ăшĕнче:
Унта пăчланнă-мĕн схоласт!
Пит кулăшла!

Мефистофель

Салам наука çыннине!
Чылай тарларăм эп сире пула.

Фауст

Мĕн ятлă эс?

Мефистофель

Ыйту пит кулăшла!
Кам сăмаха тиркет питех,
Пăхмасть япаласенĕн тулашне вуçех,
Шырать вĕсенĕн тĕшшине кăна,—
Кун пек ыйту тĕлĕнтерет мана!

Фауст

Пĕлес тесен эсир камне,
Пăхас пулать сан пеккисен ятне,
Сире ятсем ĕçĕрсене кура параççĕ:
Усал-тĕсел, е чунилли е урăхла калаççĕ.
Эс вĕсенчен хăшех пулан вара?

Мефистофель

Ялан усал тума шутланă хушăра
Пĕр ырă çеç тăван хăватăн пайĕ эпĕ.

Фауст

Аван вăлту: тӳрех кала — пĕлеймĕп.

Мефистофель

Эп нимĕн те йышăнман хăват*—
Ак çакă манăн улшăнман сăр**,
Ман кăмăла шăпах вăл лат ***:
Ку тĕнчере мĕнпур чĕрри юлмасть кăнмасăр.
Апла пулсан, авантарах çуралманни!
Эсир усал тесе хаклаканни,—
Пăсма-ишме çунни, ытти усал ĕçсем
Е шухăшсем,— йăлтах ман тăвусем.

Фауст

Мана эс: «Эпĕ — пайĕ», терĕн;
Эс пĕтĕмпех-и?— тен, пĕлтерĕн!

Мефистофель

Сăпай пирки çапла каларăм,
Анчах эп чăннине кăтартрăм.
Эсир кăна вăл хăвăр хăлтăр-халтăр
Пĕчикçĕ тĕнчĕре пĕр кап тесе шутлатăр!
Хама эп чи малтан чăн та капах пулнин,
Çутта çуратнă тĕттĕм татăккин,
Пĕр пайĕ çеç тесе шутлатăп,
Çапла вара эп пайăн пайĕ пек пулатăп.
Мăнаçлă çутă хайĕн амăшпе
Тава кĕрет, хăватлă тĕттĕмпе,
Унран чысне, çут тĕнчине илесшĕн [57].
Анчах тухаймĕ ĕçĕ ак мĕскершĕн:
Çути вăл хăй ӳтрен çуралнă,
Ӳтре кăна илемлĕ, чаплă.
Анчах ӳт — çуттăн чăн чикки; сехечĕ çитĕ
Ӳт аркансассăн, пĕтĕ ун çути те.

Фауст

Тăнлатăп халь ĕçӳ сан чаплине,
Чухлатăп вăл мĕнле пысăккине!
Вăю çитмест катмаррине ватма,
Унпа эс тытăннă вĕт-шаккăн аркатма.

---

* Х ă в а т — усал хăват (шуйттан).
** С ă р — кăмăл, характер.
*** Ш ă п лат — шăпах килĕшӳллĕ.

Мефистофель

Анчах кунта та манăн ĕç ăнмасть-ха.
Ĕмĕртенхи Нимскер ăмăртуçи хай —
Темскер — йăх-ях тĕнче — хăнк та тумасть,
Хăй тĕрлĕрен сиен чăтать:
Ăна яратăп эпĕ вут-кăвар, кахат;
Çил-тăвăлпа, шывпа, çĕр чĕтретсе хиреп,
Анчах та тинĕспе çĕр — çав-çавах тăмат.
Этем, чĕрчун ĕрченипе
Темле майпа та кĕрешеп:
Мĕн чухлĕ пĕтереп мурпа, чирпе,
Çапах та пурнăç анлă шыв пекех юхать.
Ĕçсем çапла начар — ăсран тухма пулать.
Пăх-ха: çĕрпе шыв, сывлăш пур çĕрте те
Тăпра ăшне — чĕрре, типпе, ăшша, сивве те
Пăхмасăр шав яраççĕ пурнăç тымарне.
Хам аллăмра вута кăна
Тытса хăвартăм хӳтлĕх пекшĕн тыткăна,
Ахаллĕн кĕлмĕçĕн юлаттăм ахăртне[58].

Фауст

Эппин, хăватлă, пурнăç тăвакан
Ыр кăмăллă вăя харамăн
Тăратăн хирĕç, парăнман шуйттан,
Ху чышкупа юнан хăранăн!
Пуçла ватма урăххине,
Тискер хаос ачи, кăсăккине!

Мефистофель

Чăн, кун пирки шухăшласа пăхас...
Пĕрле тепре ятарлă калаçас,
Халь ман каяс, юрать кайма?

Фауст

Мĕне кирлех капла ыйтма?
Ку паллашушăн эп хавас тем пек:
Килес тесен, хăвна ан чар питех.
Кирек ăçтан кĕр: авă — чӳрече!
Уçах ман алăк та, лере — мĕрче*.

* Мĕрче — мăрье.

Мефистофель

Пăртак именчĕк калама.
Мана кунтан май çук кайма:
Асамлă паллă пур санăн пусаху çинче.

Фауст

Çак пентаграмма[59] саншăн сарăп?*
Эхер ку саншăн чикĕ çĕр çинче,—
Қала мана эс, тамăкăн çури,—
Епле пулмарĕ-ха вăл саншăн сăлăп?

Мефистофель

Эсир ăна тĕплех туман-мĕн çав тери:
Қăшт хушă юлнă, шăп кĕрес енче,
Вара эп кĕтĕм ун витĕр хĕсĕнсе.

Фауст

Қу мел санран чиперрĕн мăшкăлларĕ!
Апла эс манăн тыткăнçă иккен!
Епле кĕтмен çĕртен капла ĕç ăнăçайрĕ?

Мефистофель

Лиска ку мерекке пулассине кĕтмен;
Қаçса кĕрейрĕ вăл пусахана,
Анчах кунтан тухма çук шуйттана.

Фауст

Сик кантăкран, пулас çук-çке чăрмав.

Мефистофель

Усал-тĕселĕн хăйĕн пур тăрлав:
Мĕн витĕр кĕтĕн, çавăн витĕр тухмалла.
Қĕмешкĕн ирĕклĕ, тухма çук,— пулмалла
Хуçан чури.

* Сарăп — сиен, усал.

Фауст

Уять-мĕн тамăк саккуна.
Ҫу пит аван, асра тытас куна:
Апла пулсан, санпа сăмах татма пулать-тĕр.

Мефистофель

Эпир сăмах парсан, илетĕн пĕтĕмпех.
Сана эпир ним те лартмастпăр,
Анчах сăмах татма халь вăхăт кĕскерех.
Тепре килсен, калаҫăпăр туллин,
Халь ҫул уҫма ыйтатăп, намăс та пулин.

Фауст

Тăхта-ха пĕр самант! Аҫта васкан аплах?
Ярса кăтарт мана пĕр-пĕр хитре юмах.

Мефистофель

Яма ыйтап! Эп вĕт каллех килетĕп.
Ун чух ыйт: кирлине йăлт пĕлтеретĕп.

Фауст

Сана эп хам чĕнмен, ху лекрĕн капкăна.
Ҫама тытма май килнĕ шуйттана,
Ярса ҫаклат ăна ытамăн:
Ăна тепре часах тытаймăн.

Мефистофель

Эс пит ярасшăн мар пулсан,
Сан патăнта юлма эп хатĕр пĕр самантлăх,
Анчах та хам мыскарапа чăн йăпатмалăх
Эс ирĕк пар мана, кăмăл туртсан.

Фауст

Хуть мĕн хăтлан эс, ҫук чарассăм,
Анчах йăпат мана хавассăн.

Мефистофель

Юлташăм, пĕр сехетлĕх вăхăтрах,
Яланхипе танлаштарсан, йăпанăн
Пĕр çултинчен те ытларах.
Ним ӳтсĕр мĕлкесенĕн юррисем,
Вĕсем кăтартакан чипер картинăсем
Асамçă вăййисем мар вĕт, ăнланăн;
Эс туйăмна йăпатăн, ырă шăршăпа
Ķиленĕн, ырă курăн тутлă апатпа,—
Сана темскер те парăп каварпа!
Эпир пурте кунта: чĕнме те кирлĕ мар.
Ну, харăссăн пуçлар!

Усал сывлăш ачисем

Тӳпе тасалтăр,
Шалкам тамалтăр!
Ачаш çил евĕр
Йăвашшăн вĕртĕр
Сенкер эфир!
Саланăр, пĕлĕтсен
Ķатрамĕсем, эсир!
Ачашшăн чĕтресе,
Мăчлатчăр çăлтăрсем,
Çутатчăр хĕвелсем!
Пит çăмăл кĕтӳпе,
Ӳт-пӳсĕр илемпе
Вĕçеççĕ вĕлтлетсе;
Вĕсен чечен эшкерĕ
Çӳле пĕр ăвăнать
Е çĕрелле анать.
Çӳхе тумтирĕ
Шевленĕн хумханать,
Тивлет-телей сарать.
Илемлĕ çĕрсенче,
Сăваплă шухăшра,
Ķанаççĕ лăпкăра
Хаваслă çынĕсем;
Саваççĕ савнисем,
Лăпкаççĕ пĕр-пĕрне,
Ирлеççĕ чĕрисем.
Тĕреклĕ тымарсем,
Ķăларăр хунавсем!

Ӳстерӗр туратсем,
Сӗтеклӗ иҫӗмсем!
Ӑсанăр, ҫырласем,
Пусаркăч ăшнелле;
Пусаркăч пусарать
Пылак сапаксене,
Ҫут шывăн юхтарать
Ӗипетлӗ эрехне.
Чулсем хушшипеле
Тухать вăл хӗсӗнсе;
Ҫап-ҫутă ту ҫинчен
Ӑнать кӳлӗсене.
Тусен хушшисенче
Тӳрем ҫӗрсем, варсем
Ҫиҫеҫҫӗ илемпе.
Ҫăтмах кайăкӗсем
Шерпет ӗҫеҫҫӗ,
Хӗвелӗ еннелле
Вӗҫсем вӗҫеҫҫӗ:
Тинӗссенче ҫӳрен
Ҫут утравсем патне
Хӗрсе васкаҫҫӗ;
Хаваслă юрăсем
Унта янраҫҫӗ;
Ҫут ҫарансем ҫинче
Таш ташлакан хорсем
Ҫиеҫҫӗ куҫ вăйне;
Ухаҫҫӗ ту ҫине,
Чăмаҫҫӗ хум ăшне,
Вӗҫеҫҫӗ сывлăша
Йăр та яр ҫурса;
Ыр пурнăҫ патнелле
Туртан чун ӗмӗтне
Лăпкаҫҫӗ ăшӗнче;
Вӗсем шав уткăнаҫҫӗ,
Пӗрмай туртăнаҫҫӗ
Чиккисӗр тӗнчере
Ҫут ҫăлтăрсем ҫиҫсе
Пурне те телейпе
Илӗртекен ҫӗре.

Мефистофель

Ҫывратрăр йăпатса! Сывлăш ачисем,
Тавах сире йăпанчăк юрăсемшӗн.

Сире эп парăма юлатăп, тусăмсем.
Çук, Фауст, эс пире, усалсене, çĕнеймĕн!
Хусамăр чаплă картинăрсемпе
Ăна тата авантарах минретĕр:
Вăл пĕтĕмпех улталакан тĕлĕксемпе
Пăчлантăр, суйланса тертлентĕр.
Анчах ку пусаха çинчи палла илме
Мана йĕкехӳре асавĕ кирлĕ.
Ăна часах пулать чĕнсе килме.
Ак пĕр йĕкехӳри кунтах килет,
Вăл эпĕ хушнине тума та тимлĕ.
Йĕкехӳрен, шăнан, шапан, пăрçан, шăшин,
Хăнклан та пыйтăн мăн патши[60],
Сана çак пусаха патне пыма чĕнет —
Унта вăл çу ăçта сĕрсе хурать,
Çавна ху шăлупа часрах хырма хушать.
Часрах ĕçе! Пăх-ха, çав кĕтесре
Асам палли чарать мана тухма.
Çитет! Аван! Мухтав васкавлă ĕçĕре!
Ну, Фауст, çывăр! Ҫилĕп ак часах курма.
*(Тухса каять.)*

Фауст
*(вăранса)*

Ҫаллех эп улталаннă тем?
Таçта çухалнă ырăсем?
Ултавлă усала курсаттăм тĕлĕкре,
Лиска тухса та ыткăннă тӳрех.

## 4-МĔШ СЦЕНА

### ФАУСТ ҪАБИНЕЧĔ

Фауст. Мефистофель.

Фауст

Шаккаççĕ. Ҫам унта? Ҫĕрсемĕр!

Мефистофель

Ку эпĕ.

Фауст

Кӗрӗр!

Мефистофель

Виҫӗ хут чӗнсемӗр.

Фауст

Ну, кӗрӗр!

Мефистофель

Халь кӗретӗп.
Шанатӑп, иксӗмӗр сӑмах халь татӑпӑр;
Сана кичемлӗхрен хӑтарӑпӑр.
Хӑвна манран сӑнар илен:
Ман ҫиййӗмре атлас тумтир,
Сар ылтӑн сӑрнӑ ҫӗн йӗлен,
Шлепкем ҫинче автан хӳри,
Ҫумра ман ҫивӗчӗ хантсар *,—
Ӗпле эп савӑк та хастар!
Пӑрах пули-пулми ӗмӗтсене,
Тумлан эс те ман пек хитре,
Вара тин туйӑн пурнӑҫ пылакне
Ансатӑн, чаплӑн ирӗкре.

Фауст

Темле тумтир эп тумлансан та,
Кӑшлать ҫак ҫӗр асапӗ манӑн чӗреме.
Татас ҫук эпӗ ҫӗрӗн тӑллине.
Шӳтпе халь йапанмашкӑн — ватӑ ҫав ытла та,
Ним сунӑмсӑр пулма — эп яшӑ вӗт питех,
Тӗнче мана ним те памасть тинех.
«Ан иртӗн! Эс ан иртӗн!»— янӑрать
Пӗрмай ҫак юрӑ пирӗн хӑлхара.
Ӑна юрлать ҫак пурӑнӑҫ ялан,
Чуна хырса, мӗн авалтан.
Тӑратӑп-и ирпе,— мана асап кӗтет.

* Хантсар — авалхи хӗҫ.

Пӗлетӗп эпӗ: вӑрӑм кун иртет.
Анчах памасть пӗр ӗмӗте те,
Пӗрне те пурнӑҫа кӗртме мана!
Хаваслӑх самантне сисеп те,—
Хурлавҫӑ ӑстӑнах хӑртать ӑна:
Пӗр самантра эп савнӑ сӑнсене
Йӑлт варалать куллен-кунхи тискерсемпе.
Ҫӗрле пулать те, эп хӑравҫӑн
Выртатӑп вырӑнӑм ҫине.
Ман ҫывӑрнӑ чухне те канӑҫ ҫук, мӑнтарӑн:
Тискер ҫӗҫ тӗлӗксем курап ҫӗрле.
Ҫӑкӑрӑмра пурӑнакан туррах
Тӗпрен хумхантарать ӑна вӑрах.
Вӑл хӑй тытса упрать манри хӑватсене,
Анчах ӑшран тухма памасть вӑл вӗсене.
Ман пурнӑҫ йывӑр та йӳҫек —
Вилме те хатӗр эп кӗҫех.

Мефистофель

Анчах та вилӗм кӑмӑллӑ хӑнах мар-ҫке.

Фауст

Ҫам вӑрҫӑра пуҫне хурать ҫӗнсе,
Хӑй ҫамкине лавр кӑшӑлне сырать.
Хӗрӳллӗ ташӑ хыҫҫӑн вилӗм кам тупать
Савнин ытамӗнче,— вӑл пит телейлӗ!
Ах, мӗншӗн эпӗ ҫавнашкал киленнӗ
Чухне, мана мӑнаҫлӑ ырӑ курӑнуҫӑн,
Вилсе выртман-ши ҫав тери хӑруҫӑн!

Мефистофель

Ҫапах ҫав каҫхине ман пӗр паллан
Эмел тултарнӑ куркине ӗҫме хӑйман.

Фауст

Ҫу вӑрттӑн шӑршласси — сан тӗп ӗҫӳ нихак.

Мефистофель

Пурнех пӗлмесп пулин — ӑна чухлап пӑртак.

Фауст

Мана чансен саван сасси ирпе
Хăрушă асапран хăтарнă хыççăн
Ача туйăмĕсем вăранчĕç хыттăн,—
Эп улталантăм çав илĕртнипе.
Чуна мĕн илĕртет — ăна манран ылхан!
Мĕн йăпатать чĕремĕре ялан,
Телейсĕр пирĕн ăстăна
Мĕн астарать,— пурне те ылханап.
Ылхан — этем чунне, ăс-хакăлне,
Хăйне асла хуран мăн кăмăлне!
Ылханлă вăл эпир ниме тăман
Çиçке ăстиçукпа суккăрланни!
Сире пурне те эп ярап ылхан,
Мухтав, хисеплĕ ят йăхран йăха
Парса пырас текен ултавлă ĕмĕтсем!
Эпир телей тесе шутлаканни —
Чура, ача-пăча, хĕрарăмсем
Тытса тăма çунни — ылхан сана!
Юратупа ачашланни, ылхан сана!
Пире усал ĕçсем тума тĕртен,
Қахал канас, ясар артак кӳрен
Пуянлăха та ылханатăп!
Ылхан сипетлĕ иçĕм сĕткенне,
Хĕлхем сапан ун эрехне,
Юратăва, тĕне те шанчăка,
Нимрен ытла чăтăмлăха!

Ырă сен хорĕ [61]
*(курăнмасăр)*

Инкек! Инкек!
Эс, Фауст, ватрăн-çке,
Илемлĕ тĕнчене
Хăватлă аллупа.
Вăл — ишĕлчĕк купа!
Ăна çур турă ватрĕ темшĕн.
Шеллетпĕр
Ниме тăман ун ванчăкне,
Йĕретпĕр
Сая каян илемшĕн.
Тĕреклĕ
Çĕршыв ачи, ăна

Ура çине тăрат,
Илемлĕ
Çурта каллех çĕнет
Ху чĕрӳнте
Малтанхинчен чечен!
Таса чунпа
Эс çĕнĕ, ырă пурнăçа пултар,
Эпир йышпа
Сана вара
Çĕн юрăсем юрлар.

Мефистофель

Ман пĕчĕк ырăсен
Тăн пур вĕсен.
Итле вĕсен ыр канашне:
Ĕçе, хаваслă пурнăçа чĕнеç!
Анлă тĕнчене,
Пурнăç çиçнĕ çĕре,
Ăспа юн тĕннĕ * кĕтесрен
Тухса вĕçтер эс, ан ӳркен!

Çитĕ хуйхупала тек йăпанма!
Кур: халат пек вăл ăскать сан кăкăрна!
Пит начар йыша лексессĕн те, çапах
Эс этем çинче этем пекех туян хăвна.
Çук, ун пек начар йыша сана
Кам шутлать ертсе кайма, чăнах?
Эпĕ пит чаплисенчен мар та, итле,
Çĕнĕ пурнăçа манпа пĕрле
Пит хавас кĕме шутлатăнах пулсан,
Эпĕ тăрăшса сана хĕсметлĕп,
Санăн тӳрĕ çулпуçу пулса лĕскетĕп,
Утăм та юлмасăр пырăп сан умран:
Пур çĕрте те эпĕ — сан чуру,
Шанчăклă тарçу, йалт итлекен тусу.

Фауст

Мĕнпе эп саплăп ку хĕсметшĕн?

* Тĕннĕ — сивĕннĕ, сĕврĕлнĕ, хытнă.

Мефистофель

Э, кун çинчен ытла ир пуплемешкĕн.

Фауст

Çук, çук! Шуйттан вăл хыркăн:
Ахаль тумасть вăл ним те çыншăн.
Мана патах татса кала сăмах:
Татаймасан — кĕт пăтăрмах.

Мефистофель

Кунта эп сан чипер тарçу пулатăп,
Мĕн хушнине йăлтах тăватăп.
Анчах эпир лере ак тĕл пулсан,
Эп хушнине тăвас пулать вĕт сан.

Фауст

Лере мĕн пулĕ — уншăн пăлханмастăп;
Ку тĕнчене эс çăмăл аркатсан,
Ун вырăнне çĕнĕ тĕнче тусан,—
Мĕнле инкек пур-ха,— курмастăп.
Ман туртăмсем пурнаççĕ çĕр çинче,— кунта,
Хĕвелĕ çутатать ман асапсене кунтах:
Эп хăтăлсан кунран та, лешсенчен те,
Кайран мĕн пулнипе ман ĕçĕм çук пĕрре те.
Пĕлес килмест ман кам унта пулассине,
Вĕсем савма-писме пултарнине;
Унта, ют тĕнчере, кунти пекех,
Çӳл, ай пурри-çукки мана мĕне кирлех!

Мефистофель

Эппин, часрах кавар тăвар,
Алă çапсах сăмах татар!
Халех сана мереккемпе йăпатăп,
Никам курманнине кăтартăп!

Фауст

Мана, çара шуйттан, мĕскер пама пултарăн?
Этем ăсне, мăнаçлă туртăмне

Эс ăнланаймăн, тĕрлĕ çимĕçпе хăналăн,
Анчах илеймĕп эпĕ унăн техĕмне;
Нихçан ăтса илмен пуш вăйăпа йăпатăн;
Мана, хăй ыталанă май, куçне
Теприн çине пăхан хĕре тыттарăн;
Мана сар ылтăн та парса тултарăн —
Вăл тарĕ алăран чĕр кĕмĕлтен те йăпăрт;
Мана эс парăн турăсен чапне,—
Вăл саланса çухалĕ тĕтĕмрен те хăвăрт,—
Вĕсем — татнă чухнех çĕрекен çимĕçсем,
Самантлăха ешернĕ йывăççем!

Мефистофель

Кусем пирки хăрассăм çук пачах.
Сана паратăп ун пек ырлăх тем чухлех.
Анчах эс, тусăм, хăш чухне
Шут тытăн тутанмашкăн урăхне?

Фауст

Хăçан тӳшек çинче тулать артак екки —
Ун чух çитет шăпам чикки!
Мана пуш ĕмĕтпе эс йăпатсан,
Эп кăмăллă пулсан хампа,
Ӳт-пӳ артакĕпе улталансан,
Вара — пĕтӳ! Çитет тек тупăшма!
Ак ман саклат [62].

Мефистофель

Юрать!

Фауст

Ну, ал çапар.
Иртсе пыран шух вăхăта:
«Самант, илемлĕ эсĕ, чарăнсам, тăхта!»—
Тесе эп кăшкăрсан, эс хатĕрле
Мана илмешкĕн тыткăн сăнчăрне.
Хам пĕтессе кĕтетĕп эп айшатăн.
Вăл самантра пуç пĕтесси çитет;
Эс те ху ĕçӳнтен тухатăн,
Вара кунçулăм ман пĕтет.

Мефистофель

Қаланине шайла: нихҫан асран каймасть вӑл.

Фауст

Унта сан ирӗк пултӑр, явӑл.
Эп шутламасӑр каламастӑп.
Сана е урӑхне чура пулатӑп,—
Тек кун пирки сӑмах хушмастӑп.

Мефистофель

Хам тарҫӑ тивӗҫне сан доктор ӗҫкинче [63]
Эп паянах пуҫлап тумашкӑн.
Тата ак мӗн: тем те пулать кунҫулӗнче;
Сана ыйтатӑп ал пусса памашкӑн.

Фауст

Расписка? Ак чӑкраш! Чӑн этеме,
Вӑл панӑ сӑмаххи мӗнне пӗлместӗне?
Эп калани сана хам виличчен
Халал парать ман чӑн хуҫа пулма.
Урса куҫать, шав вылянать тӗнче,—
Мана юрамасть-и вара тупа пӑсма?
Ухмахӑн ҫурални пире хуплать!
Унтан кам хӑтармашкӑн пултарать?
Қам чунӗпе таса та тӳрӗ, ҫав телейлӗ:
Нимскер пама та вӑл шеллеймӗ.
Анчах пичет пустарнӑ хут листи —
Пурне те хӑратан мукка чисти.
Сӑмах хур тӗкӗ айӗнчен тухсан тӗнет,
Вара тирпе тӑпа [64] хӑват илет!
Сана манран халь хӑшӗ кирлӗ, чӗр шуйттан?
Пергамент, пӑхӑр, мрамор е шур хут —
Ху ирӗккӗн суйла пӗрех хут!
Перо, ҫыра, хур тӗкӗ, грифель,— мӗн ыйтан?

Мефистофель

Мӗн шӑртланса пит ҫуйӑхан?
Эпир пӗр шавсӑрах майлашӑпӑр аван.
Пире кирек мӗнле хут та юрать ҫырма,
Анчах ыйтатӑп ална юнпа пусма.

Фауст

Ҫапла кирлех пулсан сан кăмăлна,
Эппин, тăвар сан путсĕр йăлуна.

Мефистофель

Юн вăл — хăйне йышши сĕткен.

Фауст

Ҫаланă сăмаха пăсмастăп — ан хăра.
Ăна тытма хамах тимлеп, ĕнен.
Ҫурап: хампа мăнаҫланни харам.
Хам тивĕҫпе эп ак санпа ҫеҫ тан.
Хăватлă ырă мăшкăлларĕ-ха манран,
Мана пĕлме паман тĕнче вăрттăнлăхне.
Ман уҫă шухăшсен ҫыххи арканчĕ;
Пĕлӳ патне ҫунни мана йăлт йăлăхтарчĕ;
Халь ĕнтĕ хамăн чикĕсĕр сунăмсене
Пусарăп эп ӳт-пӳ сĕмне кантарнинче,
Асамăн курăнми чаршавĕ айĕнчен
Ҫурап тем тĕрлĕ тамашасене!
Эп вăхăтăн кĕрлевлĕ юхăмне чăмам,
Теветкелле кирек ăҫта путам!
Асап та савнăҫ, тарăху, телей
Арпашчăр черетпе кирек мĕнле;
Ĕҫре кăна этем усрать хăйне.

Мефистофель

Меслет-тĕллев енчен чару пулмасть сана.
Мĕн тутанас килет,— эс хып та ҫăт ҫавна;
Мĕне хавас кĕлет чуну,— ҫаклат йăлтах,
Хăйса, кирек ăҫта ал-хапăлтах!

Фауст

Хавас-телей ҫинчен сăмах пымасть,— ĕнен!
Сиксе чăмам эп тертлĕ киленӳ ăшне,
Юратупа пĕрле хаярлăха сăнам,
Хуйхи ҫинчен имҫамлă телейне курам;
Ман хал, пĕлӳшĕн ҫуннинчен йăлт хăтăлса,
Пуҫлатăрччĕ пур асапа туйма:

Этем йӑхне элчел мӗн ҫырнӑ-тӑр чӑтма —
Пурне те ман курасчӗ ӑнаса!
Хам ӑсӑм куҫӗпе вӗсен тарӑнӑшне,
Пысӑкӑшне пӑхса курас;
Этем йӑхин пур хуйхине, пур савнӑҫне
Хам кӑкӑра эп пуҫтарам,
Ҫуҫ курӑмне чикки таран сарам —
Юлашкинчен, ванса, пулам харам.

Мефистофель

Ҫак ҫӗр ҫинчи кӗрешӗвӗн пӗлтерӗшне
Пин ҫул хушши эп мӑйӑр пек кӑшларӑм.
Пӗр ҫын та ҫак кив мӑйӑр тӗшшине,
Мӗн ачаран илсе куҫ сӳниччен,
Ҫӑлараймаи. Ӗнен, юлташӑм!
Пӗр турӑшӑн кӑна ку ҫут тӗнче!
Вӑл илнӗ ӗмӗртен ҫиҫен ҫутта хӑйне,
Пире путарнӑ тӗттӗм каҫ ӑшне,
Тӗттӗмпеле ҫути — сире тӳпе.

Фауст

Ҫапах пӗлес килет!

Мефистофель

Ана чухлатӑп!

Анчах эп ҫакӑнтан хӑратӑп:
Ҫунҫул кӗске, ӑсталӑх анлӑ.
Сире ҫапла канаш парам пит майлӑ:
Ҫапла тесен, эсир ку енӗпе
Пӗр чаплӑ поэтпа калаҫӑр.
Сирте вӑл, хӑй хастарӗ вӗҫнипе,
Ҫут тӗнчери пур ыррине пуҫтартӑр:
Усланӑн * вутлӑ хастарне,
Пӑланӑн хӑвӑрт чуппине,
Итал ҫыннин вӗри юнне,
Ҫурҫӗр ҫыннин ҫирӗплӗхне.
Чеелӗхпе тӳрӗлӗхе килӗштерме
Пултартӑр вӑл хайла меслетпеле,

---

* Услан — арӑслан.

План тăрăх идеал тăвайтăр
Ăна сире вăл юраттартăр,
Этем тума пултарайсан çакна,
Эп «Микрокосм» тесе ят парăттăм ăна.

Фауст

Манăн тĕллев харам кăна пулсан,
Этем ăрăвĕн ĕмĕтне тăваймасан,
Мĕне тăратăп эпĕ чăнласа?

Мефистофель

Эс чăннипе мĕскер, çавă кăна.
Пуçна кăтра парик-мĕн тăхăнсан та,
Çӳл тăрнаккай * çине тăрсан та,—
Эс вăл — эсех юлатăн чунупа.

Фауст

Этем ăс-хакăлĕн мĕнпур пуянлăхне
Пухма тимлерĕм ĕмĕрпе.
Куратăп — пуçтарни пĕр харама иккен:
Нимле çĕн вăй-хавал тапмарĕ чĕремре,
Пĕр çӳç пĕрчи чухлĕ ӳсмен ĕлĕкхинчен,
Пĕр утăм çывхарман чикĕсĕрри патне.

Мефистофель

Юлташăм, эс япаласем çине
Пăхан ытти çынсем пекех.
Кунçулăн хавасне илме май пур чухне
Ху вăхăтна шайлас пулать ăспа, йӳнпе.
Аллу-уру, куçу-пуçу сан хăвăн-çке,
Ют çыннăн мар вĕсем тĕрĕссипе.
Сан кунçулу çинче лекен киленӳсем
Сана пӳрмен-и-мĕн вĕсем?
Хам кӳмене эп улт лаша кӳлсен,
Вĕсен вăй-халĕ ман мар-и вара?
Çак лашасенĕн çирĕм те тăват ура;
Вĕсем те манăн мар-и пĕр тесен?
Часрах васка! Ним те ан шухăшла!

* Çӳл тăрнаккай — çӳллĕ йывăç ура.

Тӳрех ман хыççăн чăм пуçупала
Кĕрлевлĕ тĕнчене хавасланса! Кичем
Апла-капла шухăшлакан этем
Кунçулĕ: вăл шăпах хирте текех
Чупса апат шыран выç выльăх пек:
Хăй — ешерекен çаран çинчех.

Ф а у с т

Мĕнрен пуçлас?

М е ф и с т о ф е л ь

Часрах кунтан тарас!
Асап шăтăкĕнче мĕн-ма ларас?
Вĕренекенсемпе асаплăн
Хăвна хăртни вăл пурнăç-и?
Куна ху кӳршӳне парах хаваслăн!
Пуш кĕлтене çапни вăл тухăç-и?
Ху пуçунта чи пахине
Пама хăймастăн эс ачасене.
Ха, ак пĕри килет те ман сăмах çинех.

Ф а у с т

Ана йышăнаймастăп хальхине.

М е ф и с т о ф е л ь

Хуса яма май çук килнĕскерне:
Вăл, шеремет, кун пек ыр сехете
Нумай кĕтсе пуль, çавăнпа хаваслăхне
Сӳнтересрен ахаль ярасшăн мар.
Сан çĕлĕкне, плащна эп тумланам,
Вара ман пулĕ сан сăнар.
*(Хывăнса тумланать.)*
Халь хамăн çивĕч ăсăма ĕçе ярам!
Сана эп нумаях памастăп тăхтама,
Каях, пуçтарăн çул çине тухма.

Ф а у с т тухса каять.

М е ф и с т о ф е л ь
*(пĕчченех, Фауст вăрăм тумтирĕпе)*

Этем ăсне, пĕлӳн çап-çут пайăркине,—
Мĕнпе этем хăватлине те аслине,—

Эс кураймасӑр мӑшкӑлла кӑна;
Суялӑх усалне пар йӑпатма хӑвна —
Вара лекетӗн эс пуҫпах ман аллӑма!
Ӑна элчелӗ тыткӑн сӑнчӑрне чӑтман,
Мала ӑнтӑлакан чун панӑ;
Вӑл, чунӗ хыт уткӑннипе,
Тӗнче савӑнӑҫне таптать, ӑнманӑ!
Ӑна пуҫса чикем шавлан тӗнче ӑшне:
Ҫак ӑҫтиҫукшӑн ӑшӗ хыпнипе
Вӑл малалла шав тапаланӗ,
Пута-пута асаплӑн чаваланӗ;
Вӑл кӑлӑхах тертленӗ канӑҫлӑх кӗтсе,
Ӗҫме-ҫими ун тунсӑхлӑ ҫӑварӗнчен
Вӗҫсе тарса пырайтӑр умӗнчен;
Мана чунне сутма ӗлкӗрмесессӗн,
Ҫавах вӑл пӗтмелле хӑй ӑссӗн.

Пӗр в ӗ р е н е к е н кӗрет.

В ӗ р е н е к е н

Тин ҫеҫ эп килтӗм хам халпа *;
Сире чысланине те кӑтартма,
Тата пурте саван ӑсчах ҫынпа
Шутларӑм эп курса юмахлама.

М е ф и с т о ф е л ь

Қун пек сӑпай сӑмах пит чыслӑ маншӑн:
Ман пеккине курма пайтах пултарӑн.
Эсир ӑҫта вӗреннӗ-ха малтан?

В ӗ р е н е к е н

Мана илсемӗр вӗренме — ыйтап чунтан!
Пӑртак мул та пур манӑн, сывлӑх та
самай;
Аннем мана ярасшӑнах пулмарӗ,
Ман вӗренессӗм килчӗ кирлине чылай.

М е ф и с т о ф е л ь

Апла пулсан, ку сирӗн ӗмӗте тултарӗ.

* Ӗҫпе, шухӑшпа.

Вĕренекен

Анчах тӳрех калам сире:
Мана темме киле туртать сĕре.
Ҫу стенасем те пӳлĕмсем пачах
Ман кăмăла каймаççĕ-çке. Йăлтах
Ҫунта кичем: пĕр ешĕл курăк та,
Пĕр йывăç та çук таврара!
Ыйхăласа ларса класра,
Ҫурми-илтми, шухăшлами пулан кунта,

Мефистофель

Ҫирек мĕнле ĕçре те хăнăху кирлех:
Ача та амăш кăкăрне хыпмасть тӳрех.
Вăл, хăнăхсан, пит киленсе ĕмет.
Ҫапла çав пирĕнпе те пулкалать:
Пĕлӳ кăкри вăраххăн тутланса пырать,
Унтан ăна çын иленсе çитет.

Вĕренекен

Вăл кăкăра ыталăттăм хавасланса,
Анчах ăна мĕнле майпа тытас хăйса?

Мефистофель

Малтан ман акă мĕн пĕлес килет:
Сире кирлĕреххи хăш факультет?

Вĕренекен

Пĕлес килет ман тĕппипех:
Пĕлĕтпеле çĕре, унта мĕн пуррине,
Ҫут тĕнчене тата наукăна
Пĕлес тесе çунатăп пĕтĕмпех.

Мефистофель

Эсир çул-йĕр суйланă чăннине,
Анчах пăркаланми тытас пулать ăна.

Вĕренекен

Чунтан-вартан эп тăрăшатăп вĕренме;
Анчах хăш чух канас та йăпанас килет;

Саватăп ирĕкре хаваслăн çӳреме,
Нимрен ытла уявсенче, çулла.

Мефистофель

Хисеплĕр вăхăта: вăл таврăнмасть калла!
Эпир кăтартнă тĕп йĕрке сĕнет
Сире тирпейлĕрех пайта курма унпа.
Юратнă тусăм, манăн шухăшпа,
Малтанласа халь логика курсне
Сире питех вĕрентмелле.
Испан атти[65] пекех, вăл сирĕн ăсăра
Тытать тĕреклĕ хытлăхра.
Питех шухăшласа тăмасăрах,
Ăстăн пусми çине вăрах
Ухса пыма хăнăхтарать;
Ĉайран вăл урлă-пирлĕ те унта-кунта
Сулăнасран ăна пит хăтарать.
Унтан сире çав тĕллевпех тата
Пурте пĕлен ансатлă ĕçсенех,
Эсир хусамăр та пĕлнисенех,—
Апат çиме, ĕçме — йăлтах хушаççĕ:
«Пĕрре, иккĕ, виççĕ!» командăпа.
Пуçра этем шухăшĕсем куçаççĕ
Станпа пир тĕртнĕ евĕрлĕ майпа:
Ĉалла-малла чупать ăса текех;
Ăна пĕрре ярсах, çипсем пĕр-пĕринпех
Ним курăнми хĕресленеççĕ,
Пин тĕрлĕ ытама кĕреççĕ.
Философ та сире çапла ăнлантарать:
«Ĉу — ак çапла, вăл — ак капла,
Çавна пула леш те пулать çапла;
Пĕрин сăлтавĕ çук пулсан,
Теприн те çав сăлтав пулмасть».
Вĕренекенсем тăнлаç чунтан,
Анчах хăйсем тĕртӳçĕ * пулаймаççĕ.
Чĕрчун мĕнне пĕлес тесе çапла тăваççĕ:
Малтан ученăй ун чунне тартать,
Ĉашни пайне хăйне çеç пăхкалать;
Анчах çав самантра, мĕн тăвăн,
Вĕсен шалти çыхxи йăлтах пĕтет,

---

* Тĕртӳçĕ — пир-авăр тĕртекен.

Вĕçсе тарать, мăнтарăн!
Encheiresin naturae тет [67]
Ăна хими; вăл хăйĕнчен хăех кулать,
Анчах çавна пачах туймасть.

Вĕренекен

Куна ман пуç ăнланаймасть темме.

Мефистофель

Кайран аван кĕрет сĕме.
Ăнлан пит тĕплĕрех редукцие [68],
Вĕрен классификацие [69].

Вĕренекен

Çакна илтсен, эп ухмахлантăм пулĕ:
Пуç çаврăнать ман арман чулĕн.

Мефистофель

Унтан, ыттисенчен мала хурса,
Эсир метафизикăна [70] тимпе вĕренĕр,
Этем пуçне кĕрейменнине
Хыт тăрăшса кĕртме пикенĕр.
Кĕрет-кĕмест,— ан пăхăр çаврăнса:
Илемлĕ сăмахсем эсир аптранине
Ялан пултарĕç çĕнтерме.
Анчах пĕрремĕш çур çулти ĕçсем валли
Сире кирлех йĕрке хатĕрлеме.
Кашни кун пилĕкшер сехет ларни
Сире çитет; чан çаппинчен ирпе
Çитес пулать кунта шăп йĕркепе.
Вĕренмелли параграфпа килте паллашăр;
Кайран кунта профессор мĕн каланине,
Кĕнекере пуррине çеç вуланине,
Пăхса пыма эсир пултарăр [71].
Сире мĕн-мĕн вĕрентнине,
Светтуй сывлăш калană пек, тетрадь çине
Тирпейлĕ, тĕрĕссĕн çырса хăварăр.

Вĕренекен

Мана кирлех мар пек куна ик хут хушни.
Апла тунин уссине хамах чухлатăп:
Шур хут çине хурапала çырни
Çумра пулсан, киле тӳлек каятăп.

Мефистофель

Мĕнле факультета суйларăр?

Вĕренекен

Юриспруденцирен хăтарăр.

Мефистофель

Эп уншăн айăпа хумастăп-ха сире:
Хамах пĕлеп унта пайта çукне пире,
Саккунсемпе правасем те пĕр пек тăмаççĕ:
Чирсем пекех, пĕри çине тепри килеççĕ;
Пĕр ăруран тепĕрине куçаççĕ;
Пĕр çĕршывран тепĕрине çӳреççĕ.
Паян ырри — ыран начар,
Ханттар тени — пулать хастар.
Ваттин ятне — яшсем çине!
Тĕнче пире паран права [72] çинчен
Ним те çырман саккунсенче.

Вĕренекен

Юриспруденцирен апла
Эсир пистертĕр кăмăла.
Сиртен канаш илен — телейлĕ, шет!
Эп вĕренме шут тытрăм турă саккунне.

Мефистофель

Сире ман тĕрĕс çулпала ярас килет:
Кун пек наукăра чăн-чăн çулне
Тупма хĕн, пит те çăмăл аташса кайма:
Унта пытанчăк наркăмăш нумай кĕтет.
Çампа сипетлĕ эмелне сиенлинчен
Питех те йывăр уйăрма.

Ҫунта вӗрентекен каланинчен
Иртме май ҫук; ун сӑмахӗпе
Тупа та тумалла,— пулӑр хатӗр!
Вара тин шанчӑк керменне чӑн ҫул-йӗрпе
Сире кӗме ансат пулать-тӗр.

Вӗренекен

Анчах сӑмахсенче ӑнлав пурах-тӑр!

Мефистофель

Чӑн та ҫапла! Анчах та ан кулянӑр!
Ӑнлавсенче ҫитменлӗх пур чухне
Сӑмахпала ылмаштарма юрать ун пеккине.
Сӑмахпала тупӑшусем тӑваҫҫӗ,
Сӑмахсенчен системӑсем пулаҫҫӗ;
Этемсене ӗнентереҫҫӗ сӑмахпах:
Сӑмахсенче ним те улӑштарма ҫуках.

Вӗренекен

Ҫаҫарӑр: эпӗ йӑлӑхтартӑм пуль сире,
Анчах ыйту ҫине сиртен хурав кӗтеп:
Мӗн калӑр-ши ҫав медицина тӗлӗшпе?
Виҫ ҫул хушши — нумай-и вӑл пире.
Анчах саман кӗтмест, вӗренмелли — пит анлӑ!
Ҫулне чипер кӑтартнӑ хыҫҫӑн ку енпе
Вара мала кайма та паллӑ.

Мефистофель

*(хӑй ӑшӗнче)*

Пуш сӑмахсем пакӑлтатма ҫитет:
Ҫаллех шуйттан пулас килет [73].

*(Сасӑпа.)*

Ҫу медицина сывлӑшне туйма ансат.
Ак мӑн тӗнче, пӗчик тӗнче мӗнне пӗлме
Тивет сире, вара ӗҫ хӑй майпе каять.
Ҫунта ытла ҫунсах юрамӗ вӗренме:
Никам та хӑй пӗлме пултарнинчен ытла
Пуҫне чыхса тултараймасть капла.
Ҫам саманта ярса тытать,
Вӑл ҫын чыс, чап валли ҫул-йӗр уҫать.

Сăн-пуç та сирĕн япăх мар капла,
Хăюлăх та тупатăр-ха эсир, паллах.
Ҫам хăй чунне шанать хытах,
Ана ытти çын та шанать çапла.
Нимрен ытла хĕрарăмсем патне
Пыма вĕренĕрсем: вĕсем «вăл ыратать»,
«Ку ыратать» тесе ахлатнине
Пĕр меслетпе çеç сыватма пулать.
Пурте лекеççĕ сирĕн тетеле,
Пăртак сăпай тыткалама пĕлсен.
Эсир хусамăр ят тĕлĕшпеле:
«Чăн-чăн ăста, ман пек ăста
Тупаймăр эсĕр тĕнчере ниçта»,—
Тесе ыр ят çирĕплетсен,—
Вара сасартăк тепĕр тухтăр ĕмĕрне
Хăйман меслетсемпе ĕçле пуçлатăр;
Пĕлес тесе шнур хĕснине
Ачаш ӳтне çемçен пусатăр,
Ҫунса тăран куçа мăч-мăч хĕсетĕр,
Чипер пĕвне ыталаса илетĕр.

Вĕренекен

Ку пит аван! Аçта мĕн гумалли паллах.

Мефистофель

Теори, тусăм, пур çĕрте те типĕ,
Чĕм йывăççи кăна ялан сип-симĕс.

Вĕренекен

Сиртен илтни асамлă тĕлĕк курнăнах.
Тата тепре юрамĕ-ши килме
Сиртен кун пек хăватлă ăс илме?

Мефистофель

Мĕн пĕлнине памашкăн хатĕр эп ялан.

Вĕренекен

Ахаль мĕнле тухса каяс кунтан?
Сире ик-виç сăмах хам альбома
Ыйтап çырса хумашкăн асăнма!

Мефистофель

Питех хавас ҫырса пама!
*(Ҫырать те альбомне каялла парать.)*

Вӗренекен
*(вулать)*

Eritis sicut Deus, scientes honum et malum *.
*(Альбомне хупса пуҫне чыслӑн таять те тухса каять.)*

Мефистофель

Итле ҫак сӑмаха тата ҫӗлен акай каланине,
Хӑвӑн турӑ сӑнарне ҫухатӑн, тусӑм, ахӑртне.

Фауст
*(кӗрет)*

Ӑҫта каятпӑр?

Мефистофель

Ҫӑмӑлу туртан ҫӗрех.

Малтан — пӗчикҫӗ тӗнчене, унтан — хай
мӑннине [74].
Унта ку усӑллӑ пӗлӳ курсне
Вӗренӗн, тусӑм, эс хӗпӗртесех.

Фауст

Курап: ман мӑн сухал — чӑрмав кӑна
Тӗнче ырлӑхӗпе пайта курма.
Шанмастӑп эпӗ ку мыскарана;
Эп хӑнӑхман ҫын хушшинче пулма;
Хама ыттисенчен кая туятӑп,
Эп именетӗп, вӑтанатӑп.

---

* (лат.) — «Ырӑпа усала турӑ пек пӗлекен пулатӑр». Ҫак сӑмахсемпе, библи каланӑ тӑрӑх, ҫӗлен «ырӑпа усала пӑлтерекен йывӑҫ» ҫимӗҫне илӗртсе ҫитернӗ имӗш.

Мефистофель

Ыр тусăм, парăнĕ пурте сана;
Хăвна кăна шан,— пурнăçа илен ална.

Фауст

Епле каям-ши пăрахса хам килĕме?
Ăçта-ха тарçăсем, утсем, кӳме?

Мефистофель

Эпир плаща манне саратпăр —
Çилтен те çăмăл çĕкленсе каятпăр.
Анчах та çак хастарлă вĕçеве
Ан ил эс пысăк çыхăсем пĕрле.
Эп хамăн вутлă сывлăша вĕретĕп те —
Ухатпăр çĕр çинчен çӳл пĕлĕте.
Мĕн чухлĕ çăмăл, çавăн чул часрах вĕçен.
Сана эп саламлап çĕн пурнăç çулĕпен!

## 5-МĔШ СЦЕНА

### АУЭРБАХĂН ЛЕЙПЦИГРИ ХУПАХĔ [75]

Ĕçсе савăнакан юлташсен ушкăнĕ.

Фрош

Епле! Никам кулмасть? Никам ĕçмест?
Сире, эй, сӳсленсе ларма çитет!
Эсир паян йĕпе кĕлте пекех,
Ытти чухне тар пек хыпаттăрччĕ тӳрех.

Брандер

Ху айăплă — кама-ха урăх айăплас?
Сысна пек, ирсĕр нихăш хăтланмасть.

Фрош
*(ун пуçĕ çине пĕр стакан эрех ярать)*

Апла-тăк, ак сана!

Брандер

Чăн та сысна!

Фрош

Ху ыйтрăн та — эп шăвартăм сана.

Зибель

Ҫам хирĕҫет, ăна — тула!
Ĕҫ те мĕнпур йышпа юрла.
Эй! яр юрра!

Альтмайер

Хурах! Ҫуратăр хăлхана!
Часрах парсамăр мамăк, хăлхана чикем!

Зибель

Мачча-стена тăр! чĕтренсен кăна
Бас хăватне туять этем!

Фрош

Юрать! Ҫам килĕшмест — ăна вăшт тулалла!
Ха, тра-ла-ла-ла-ла!

Альтмайер

Ха, тра-ла-ла-ла-ла!

Фрош

Ну, халь пырсем ĕнерĕнчĕҫ юрра!

*(Юрлать.)*

Таса, хăватлă Рим престолĕ[76]
Ма ку таран ларатĕ халĕ?

Брандер

Пит япăх юрă, тьфу! политика юрри!
Ҫашни ирех тав тăвăр туррăра:

Рим ёмпӳне хӳтёлесси пирӗн ӗҫ мар!
Мана элчел сыхланӑ-тӑр юри:
Эп ҫуралман ни канцлер, ни патша пулма:
Анчах аслисӗр пирӗн те ҫук пурӑнма:
Ҫампа эпир те папӑна суйлар [77].
Эсир пӗлетӗр мӗскерле ҫынна
Суйлаҫҫӗ ҫакӑ пысӑк вырӑна.

Ф р о ш
*(юрлать)*

Вӗҫ, шӑпчӑк, вӗҫ, хӑпар эс тӳпене,
Қала ҫӗр пин салам ман савнине!

З и б е л ь

Салам-и, савнине?— ан асӑн ун ҫинчен!

Ф р о ш

Салам тата чуппа яратӑп пуринчен!
*(Юрлать.)*

Сӑлӑп ил!— каҫ шӑпланать.
Алӑк уҫ!— савни шаккать.
Алӑк хуп!— тул ҫутӑлать.

З и б е л ь

Юрла, юрла, ӑна мухтав юрри хывса!
Хӑвӑнтанах ак вилӗпӗр кулса:
Ав улталарӗ хам варли мана.
Улталӗ-ха ак хӑвӑн та сана.
Тӗл пултӑрччӗ хӗрт-сурт ӑна ҫул юппинче,
Пулса тӑринччӗ эх! вӑл ун савниййӗ!
Хай Блоксбергран вӗҫсе килен ват каҫтакиййӗ*
Ыр каҫ сунинччӗ хӑть ӑна «мекек» тесе!
Хастарлӑ каччӑ пуҫ тайни ӑна
Ытла пысӑк хисеп пулать кӑна!
Ӑна салам-и? Ҫук, ун вырӑнне
Ҫапса ҫеҫ ватмалла ун кантӑкне!

---

* Қ а ҫ т а к и — качака таки.

Брандер
*(сĕтеле чышкипе çапса)*

Ан шавлăр! Итлĕр хытăрах!
Эп пурăнма пĕлеп, паллах!
Ҫунта савакансем ларассĕ ушкăнпах.
Пурне те эпĕ ыр сунса,
Сăмах калам хисеп туса.
Эп хыврăм юрă çĕннине:
Ман хыççăн юрлăр хушмачне *.
*(Юрлать.)*

Йĕкехӳре кĕрет те нӳхрепе,
Ҫиет сив çу, ăш çу пайтах;
Шăп Лютер пек кӳпĕннипе
Ӳстернĕ хырăмне панках.
Эмел парать те кашавар —
Писет чунран çак янавар:
Ҫама-ши вăл юратнă?

Хор
*(хавасланса)*

Ҫама-ши вăл юратнă?

Брандер

Вăл каллĕ-маллĕ чупкалать,
Ăна кăшлать, кăна çулать,
Лачакаран вăл шыв ĕçет,
Ыратнине пач чараймасть.
Ак, шеремет, ун-кун сикет,
Ун ăшĕ пăтранать, хăсать:
Ҫама-ши вăл юратнă?

Хор

Ҫама-ши вăл юратнă?

Брандер

Чупса кĕрет вăл кухньăна,
Вилес чухне асапланса,

---

* Хушмач — хушса юрламалли

Урайёнче ах ахлатса,
Чĕтрет, йăваланать кăна.
Хай кашавар калать кулса:
«Пăх-ха: чăнах вилет çунса —
Кама-ши вăл юратнă?»

Хор

Кама-ши вăл юратнă?

Зибель

Ак ухмахсем! Йăпанчăк тупнă çав!
Вĕлерекен эмел апăршана
Парассинчен пуçне чипер выляв
Вĕсем пачах тупман, чăнах!

Брандер

Йĕкехўре хăçантанпа сан хисепре?

Альтмайер

Мăн хырăмлă кукша пуç чĕрине
Ытла йăвашлатса пăрахнă-çке инкек.
Шыçса кўпчен йĕкехўре хăй сăнарне
Аса илтернĕ пек туять вăл, ахăртнех.

Фаустпа Мефистофель пырса кĕреççĕ.

Мефистофель
*(Фауста)*

Сана тўрех эп савăнăçлă йыша
Илсе кĕртетĕп. Ак чарусăр яшă ушкăн:
Пăх-ха: ним ĕççĕр-хĕлсĕр ак мĕнле ашма
Пулать ку тĕнчере: ним хуйхă та çук унăн!
Хавас уяв ханттарсене кашни кунах.
Кашни каччи, пит савăнса, сахал ăспах
Çут тĕнчере ташша çапать хĕрсе,
Кушак çури хăй хўрине тытас тесе
Вăр çаврăннă пекех. Кивçен парсан
Хупах хуçи, пуç мухмăрла ыратмасан,
Вара вĕсемшĕн тикĕс çут тĕнче.

Брандер

Ҫусем ютран килнӗскерсем иккен:
Ман чун сисет ӑна вӗсен манерӗнчен;
Вӗсем кунта килни пӗр-ик сехет ҫеҫ, тен.

Фрош

Эс тӗрӗсех каларӑн! Пирӗн Лейпциг чаплӑ:
Пӗчик Париж пек вӑл, ҫынна юсать хӑватлӑ

Зибель

Эс вӗсене ӑҫтан тесе шутлатӑн?

Фрош

Мана эс ирӗк пар! Пӗр кӗленче лартсан,
Вӗсен чӗрне айӗнчине йӑлтах калатӑп.
Вӗсем ахаль ҫынсем мар курӑнать, тӑван:
Ахальтен мар вӗсем ҫавтер мӑнаҫлӑн та
Усаллӑн тытӑҫҫӗ хӑйсене кунта.

Брандер

Шӑпӑрлансем пуль-ха вӗсем, хӑяматсем!

Альтмайер

Чӑнах ҫапла пуль ҫав.

Фрош

Апла пулсан, вӗсем
Ҫумне ман ҫулӑхас, сӑлтав тупса.

Мефистофель
*(Фауста)*

Хӑйсем панче шуйттан, ҫапах туймаҫ ӑна:
Ҫухавинчен тӳрех хӑть ил ярса.

Фауст

Салам сире, ыр халӑх!

Зибель

Тав ырӑ сӑмахна!

*(Мефистофель енне чалӑшшӑн пӑхса.)*

Ку ма кӑшт уксахлать ара?[78]

Мефистофель

Парсамӑр ирӗк, ыр ҫынсем, хушша лармa.
Аван эрех май ҫук кунта тупма,
Ҫампа эпир киленӗпӗр калаҫура.

Альтмайер

Эсир, куратӑп, иртӗхнӗ этем вара.

Фрош

Ӗнер эсир ҫӗр каҫнӑ Риппахра.
Хайхи Ухмах Иван панче пуль тен?[79]

Мефистофель

*(Фроша пуҫ таять)*

Ҫук, килтӗмӗр эпир паян пит инҫетрен,
Пӗркун эпир калаҫрӑмӑр унпа нумай.
Пӗлтерчӗ вӑл тӑванӗсем ҫинчен чылай:
Пурне те пуҫ тайма houре вӑл мана.

Альтмайер

*(шӑппӑн)*

Ак лекрӗ — туйрӑн?

Зибель

Ку ахаль ҫын мар сана.

Фрош

Тӑхта, лектерӗп-ха эп те ӑна!

Мефистофель

Кунта кӗретшӗн илтрӗмӗр эпир
Пӗрле пит чаплӑ ҫеҫ юрланине.

Кунта сассем янраççĕ çав тери:
Куна валли пит çӳллĕ тунă маччине.

Фрош

Эсир юрра ăста пулас, паллах!

Мефистофель

Хавасăм пысăк та, хастар сахалтарах.

Альтмайер

Пире пĕр юрă юрласа кăтартăр.

Мефистофель

Хăть те çĕр юрă, итлесех килсен.

Зибель

Юрать, анчах çĕн юрăсем юрлатăр.

Мефистофель

Эпир халь килтĕмĕр Испанирен —
Эрех те юрă çĕршывĕнчен!
*(Юрлать.)*
Тасти çĕрти патшанăн
Пăрçа-тус пулнă та... [80]

Фрош

Илтетĕр-и? Пăрçа! Пĕлетĕр-и куна?
Пăрçа — мĕнле паха хăна!

Мефистофель
*(юрлать)*

Тасти çĕрти патшанăн
Пăрçа-тус пулнă та,
Ана ачи пек савнă,
Упранă ылтăнла.
Вăл çĕвĕçе чĕнтернĕ —

Леш çийěнчех пырать:
«Çěле халат парнелěх,
Хăйне ят пěр çытма».

Брандер

Эсир ан манăр çěвěçе çакна хушма:
Эхер вăл хěрхенет-тěк хăй пуçне,
Пăрçа çинчен илейтěр виçине
Тěп-тěрěс, пултăр пěр хутламсăр çав çытма!

Мефистофель
*(юрлать)*

Пăрçа пит шеп тумланчě—
Пархат та йăпăрка!
Пăрçа министр пулайрě,
Çап-çутă çăлтăрпа!
Ķăкăр çинче хěресě —
Пăхма куç йăмăхать.
Тус-тăванне лартать вăл
Хисеплě пуçлăха,
Пурне те хăй çыртать вăл
Тискер хаярлăхпа.
Патшан мěнпур эшкерě,
Ķилйышě асапра.
Хыçкаланас пулсассăн —
Пěлмест вăл никама!
Эпир — пире çыртсассăн —
Чěрне айне ăна!

Хор
*(хаваслăн)*

Эпир — пире çыртсассăн —
Чěрне айне ăна.

Фрош

Бис! браво! бис! Мěнле маттур хушмачě!

Зибель

Ķирек хăш пăрçана ялан çапла тăвасчě!

Брандер

Чĕрне айне ăна — вара пăрçа тĕп пултăр!

Альтмайер

Эрехĕ сывă пултăр!
Чăн ирĕк — сывă пултăр!

Мефистофель

Эп ирĕкшĕн хам та ĕçме хавас,
Анчах аван эрех ăçтан тупас?

Зибель

Çаллех! Пире тĕс мар кун пек сăмах!

Мефистофель

Хăратăп эпĕ хуçана кӳрентерме,
Атту хăнасене кӳреттĕмĕр çăтмах:
Уçас тесеччĕ хамăр çĕн хупах.

Зибель

Хăналăр!— хуçана пĕлеп тивĕçтерме!

Фрош

Пире ĕçтер пĕрер стакан аван эрех,
Сире вара эпир мухтатпăр тем пекех.
Анчах кăштпа çитмест: эрех темне* пĕлме
Мана хама тивет ăна чылай ĕçме.

Альтмайер
*(хуллен)*

Çу хăнасем Рейн патĕнчен — туяп хамах.

Мефистофель

Мана пăра парсамăр [81].

* Тем — техĕм, тутă.

Брандер

Мĕн тума?
Эсир эрех пички хăварнă-им тулта?

Альтмайер

Ав ещĕк кĕтесре: пăра пулас унта.

Мефистофель
*(пăра илет те Фроша)*

Мĕнле эрех ĕçсе пăхас килет?

Фрош

Мĕнле эрех? Темли те пур-и-мĕн вара?

Мефистофель

Кам мĕнлине ĕçес тет,— вăл çавна ĕçет.

Альтмайер
*(Фроша)*

Эс тутуна çулла пуçларăн-и, ара?

Фрош

Апла пулсан, тултарăр рейнвейнне*:
Мала хурап тăван çĕршывăн эрехне.

Мефистофель
*(Фрош умĕнчи сĕтеле пăраласа)*

Пар ăвăс — шăтăк питĕрме!

Альтмайер

Э, мыскара! Эс улталасшăн-им пире?

Мефистофель
*(Брандера)*

Сире хăшне?

* Рейнвейн — Рейн эрехĕ.

Брандер

Шампанскине!
Мачча таран вăл таптăр кăпăкне!

Мефистофель шăтарать; хăнасенчен пĕри çав вăхăтра ăвăсран пăкă тăвать те шăтăксене питĕрет.

Брандер

Юратнине мĕн-ма хурлас?
Хăш чух ютран килни те пит аван;
Чăн нимĕçе француз тус мар нихçан,
Анчах ĕçетпĕр унăн эрехне хавас.

Зибель

*(Мефистофель ун патне пынине курса)*

Эп йӳçĕ эрехе питех кăмăллă мар.
Мана пылаклине мĕн те пулин тыттар.

Мефистофель

*(пăралать)*

Эппин, сире Токай текеннине парас.

Альтмайер

*(Мефистофельпе Фауста)*

Çук! Пăхăр-ха мана, улпутăмсем, куçран,
Ҫапла эсир кĕрет кулатăр-çке манран?

Мефистофель

Ай-ай! Ҫун пек хăнасенчен куçкĕретех
Кулма хăрушă: тăхтăр пĕр минут!
Пĕлтерĕр хăвăртрах: кам халь мĕнле эрех
Кăмăлласа ĕçмешкĕн тытрĕ шут?

Альтмайер

Кирек хăшне,— пуплес мар нимсĕрех,

Шăтăксене пурне те шăтарса ăвăс пăкăсемпе питĕрсе хунă.

Мефистофель
*(урмăш хăтланса)*

Çырла эрех парать текех,
Мăйра ўсет така çинчи пекех;
Эрехĕ тĕм çинче пулать;
Сĕтел пире эрех парать;
Çанталăка чипер пĕлсен,
Пире вăл парĕ мыскара!
Ну, пăкă, сирпĕн!— ĕçĕрсем!

Пурте
*(пăкăсене кăлараççĕ; стакансем тытаççĕ те, кашнине кирлĕ йышши эрех юхать)*

Ой, ыр çăлкуç! Ак пархатар!

Мефистофель

Сыхлан, тумлам сая ан яр!

Вĕсем тата тепĕр хут ĕçеççĕ.

Пурте
*(юрлаççĕ)*

Пире аван Қаннибалла,
Эпир ĕçетпĕр сысналла!

Мефистофель

Ак сатурланчĕ халăх: савăнăр пăхса!

Фауст

Часрах каяр кунтан тухса.

Мефистофель

Тăхта, пăхар вĕсем сыснан хăтланнине,
Курар вĕсенĕн пĕтĕм илемне.

Зибель
*(асăрханмасăр ĕçет те, эрехĕ çĕр çине тăкăнса хыпса каять)*

Хурах! Çунатпăр! Эй! Пушар!..

Мефистофель
*(вут чĕлхипе тухатса)*

Тăплан, асамлă вут-кăвар!
*(Пурне те.)*
Тасатакан вут [82] халь пулмарĕ пит хаяр.

Зибель

Мĕн ку? Тăхта!.. Сана çак мыскара мĕнне
Кăтартăпăр! Пĕлместĕн-тĕр эпир камне!

Фрош

Кун пек мăшкăлласа пăх-ха тепре!

Альтмайер

Кунтан тухса шутарăр хальтерех!

Зибель

Мĕнле эсир кулма хăтлантăр?
Е ку ача вăййи тесе шутлатăр?

Мефистофель

Шăп, кив эрех пички!

Зибель

Эс ху — мелке!
Сана пулать ĕнтĕ пĕрер кўпкев!

Брандер

Асту! Сире ак чышкă пулатех!

Альтмайер
*(сĕтелтен пăкă кăларать; унтан çулăм персе тухать)*

Пушар! Çунап!

Зибель

Эй! Вăл — асамçă!
Тытас ăна! Ун пуçĕшĕн укçа параççĕ!

Çĕçĕсем туртса кăлараççĕ те Мефистофеле тапăнаççĕ.

Мефистофель
*(мăнаçлăн)*

Суя сăмах, анрат пуçа!
Суя сăнар, пăтрат куçа,
Унта-кунта куçа-куçа! [83]

Пурте куçĕсене чарса пĕр-пĕрин çине тĕлĕнсе пăхса тăраççĕ.

Альтмайер

Аçта-ха эп? Çĕршывĕ çăтмахла!

Фрош

Ак иçĕм пахчисем!.. Куçа мĕн улталать!..

Зибель

Çырла сапакисем кĕреççĕ ман алла!..

Брандер

Ах, тĕмĕсем мĕнле! Епле патвар!
Сапакисем тата! Ытла катмар!

Зибеле сăмсинчен ярса тытать. Ыттисем те çавнах тăваççĕ те çĕççисене çĕклеççĕ.

Мефистофель
*(малтанхи пекех)*

Шуйттан епле шӳт тунине

Ан манăр эсĕр ĕмĕрне.

*(Фаустпа иккĕшĕ курăнми пулаççĕ. Ыттисем тинех тăна кĕреççĕ.)*

Зибель

Мĕн?

Альтмайер

Епле?

Фрош

Ку сан сăмсу нихак!

Брандер
*(Зибеле)*

Эп санăнне иккен тытатăп, ак!

Альтмайер

Ман шăмшака амантнă евĕрлех!
Пукан парсамăр: ак ӳкеп халех!

Фрош

Мĕн пулчĕ-ха пире?— ыйтап сиртен.

Зибель

Аçта-ха ултавçи? Ман аллăма лексен,
Ямастăпах чĕр халлĕн эп ăна!

Альтмайер

Эп куртăм хам: утланчĕ те пичке çине
Вăл хупахран тухса вĕçтерчĕ инçене [84].
Мĕн ку? Такам чул çыхнă тейĕн урана.

*(Сĕтел енне çаврăнса.)*

Эрех татах тапса тухсан аванччĕ.

Зибель

Ҫунта ултав та куҫ пăвни анчах.

Фрош

Ҫапах та халь эрех чăнах
Эп ёҫнĕ пек туйсаччĕ.

Брандер

Сапакасем тата? Мĕнле ăнлантарас?

Альтмайер

Хăват ҫуках тесе ăҫтан калас?

## 6-МĔШ СЦЕНА

## ТУХАТМĂШ ҪАРЧĂҪ ҪУХНИ

Лутра вучахра вут ҫинче пысăк хуран ҫакăнса тăрать. Ҫўлелле хăпаракан пăс ăшĕнче тĕрлĕрен сăнсем курăнаҫҫĕ. Ама маймăл (упăте) [85] хуран патĕнче ларать, хурантан ҫиелти кăпăкне пуҫтарса илет, вăл вĕресе тăкăнасран асăрхать. Аҫа маймăл ҫурипе ун ҫывăхĕнче ăшăнса ларать. Стенипе маччине тухатмăш карчăкăн пўртре тыткаламалли эреш-мерешлĕ япалисене ҫакса тултарнă.

Фаустпа Мефистофель

Фауст

Тухатмăш хăтланни йĕрĕнтерет мана!
Ҫунта киревсĕр мелсемпе
Мĕнле ҫĕнетĕн манăн хамана?
Ват карчăк кирлĕ-ши кун пек ёҫре?
Мĕн-ма кашаш ыйтас карчамасран?
Ҫак йĕрĕнчĕк им-юм ăҫтан
Чакартăр вăтăр ҫул ман пурнăҫран?
Ҫук, шанчăк пĕтрĕ халĕ ман!
Ҫут тĕнчене хăватлă ăс параймĕ-ши
Пире яшлатакан бальзам йышши?

Мефистофель

Эс, тусăм, ăслă патăн та ку ыйтăва:
Çамрăкланма чăнах мел пур тĕнчен,
Анчах пире валли кăна çырман ăна,
Тата тĕлĕнмелле вăл çырнинчен.

Фауст

Пĕлес килет ман ун çинчен!

Мефистофель

Укçасăр, тухатусăр, имсĕрех, итле,—
Яшланмалли мел ак çапла:
Яла кайса хирте ĕçле пуçла:
Ху аллупа ака тытса ĕçле;
Чав, хусăкла, кас, ануна шурат;
Асна-пуçна хĕстер, тăлла,
Çи яланах ахаль апат,
Выльăхсемпе пĕрле эс пурăн выльăхла,
Ху ĕçлекен çĕре тислĕкŷпе çĕнет.
Ĕнен: ку сакăрвун çулта та яшлатма
Пултаракан чăн тĕрĕс сăр * меслет.

Фауст

Сухапуçне, кĕреçене эп хăнăхман,
Мана тĕс мар çак япаласене тытма;
Çук, ансăр пурнăç килĕшмест мана!

Мефистофель

Апла тухатмăш кирлĕ ку ĕçре.

Фауст

Пĕлместĕп эп: ма карчăк кирлĕ-ха пире?
Пĕçер хăвах, пĕр чăрмавсăр, ĕçмине!

Мефистофель

Ак вăхăта иртермелли хавас ĕнер **.
Унпа хăтланиччен хывап эп пин кĕпер [86].

* Сăр — вăрттăн.
** Ĕнер — ăсталăх, искусство.

Ҫунта пӗлӳ тата ӑсталӑхсӑр пуҫне
Чӑту та кирлӗ ҫав пайтах.
Нумай ҫул тӑрӑшма тивет унта:
Вӑл вӑхӑт ҫитиччен йӳҫме пуҫлаймӗ.
Ҫунта нумай меслет пӗлме тивет!
Шуйттан ҫакна пурне те вӗрентет,
Анчах хӑй вӗсене йӑлтах тӑваймӗ.
*(Тискер кайӑксем ҫине кӑтартса.)*

Пӑх-ха, вӗсем мӗнле чипер!
Ак хӑрхӑмӗ, ак ар тарҫи!
*(Тискер кайӑксене.)*

Ҫилте мар-и хуҫи?

Тискер кайӑксем

Вӑл мӑрьерен
Тухса ӗҫке
Вӗҫтерчӗ, тен.

Мефистофель

Вӑл нумайччен ҫӳрет-и вӗҫсе?

Тискер кайӑксем

Вут пирӗн урана ӑшӑтиччен.

Мефистофель
*(Фауста)*

Мӗнле пекрех — питех хитре?

Фауст

Ытла та йӗксӗк — ӗмӗрте курман кун пеккине.

Мефистофель

Мана сӑмахӗпе хӑтланӑшӗ вӗсен
Пит килӗшеҫҫӗ, ытарма та ҫук иккен.

*(Тискер кайӑксене.)*

Шуйттан пуканисем, мӗскер тӑватӑр?
Мӗн пӗҫеретӗр? Мӗн юмлатӑр?

Тискер кайӑксем

Ыйткалакан шӳрпи ӟерет кӗрпесӗр! [87]

Мефистофель

Апла нумай хӑна кӗтетӗр?

Ҫушак аҫи

*(Мефистофель патне шуса пырса ачашланса)*

Выля манпа пӗрле,
Ман шӑтӑк кӗсъене
Нумай укҫа тултар!
Укҫасӑр пит начар;
Мана укҫа паратӑн,
Пит ӑслӑ эп пулатӑп!

Мефистофель

Ҫак йексӗк пӗр ҫӗклем укҫа ӑтса илсен,
Хӑйне телейлӗ туйӗччӗ, тен, пуринчен.

Ҫурисем пысӑк чӑмӑрпа выляса ӑна кустараҫҫӗ.

Аҫи

*(чӑмӑр ҫине кӑтартса)* [88]

Ак ҫут тӗнче!
Ҫусать, вӗҫет
Пуш уҫлӑхра,
Вӑр ҫаврӑнса.
Янтарӑн * янӑрать,
Питех патрак!
Варри пушах,
Тулаш ҫиҫет
Е тӑп ҫунать.
Пурнап халь те!
Саван ачам,
Алран ярсам,
Атту вилен.
Ҫу — тӑм: ҫапсан,
Эс ҫӗмӗрен.

---

* Янтар — кӗленче, кантӑк.

Мефистофель

Мĕскер тăватăр алапа?

Аçи
*(алана илсе)* [89]

Ҫунта хурах пулсан,
Ана тытма пулать унпа.

*(Ами патне чупса каять те ăна ала витĕр пăхтарать)*

Ала çине пăх-ха:
Ӳнта вăрра куратăн-и?
Ҫам вăл — хăйса калайăн-и?

Мефистофель
*(вут патне пырса)*

Мĕн усă-ха сире çак куршакран?

Аçипе ами

Ухмах купташка!
Мĕнле эс куршака
Уйăраймастăн хуранран?

Мефистофель

Сăпайсăр янавар!

Аçи

Сан милĕк пур алра.
Лар-ха ак çакăнта.

*(Мефистофеле кресло çине ларма сĕнет.)*

Фауст
*(çав вăхăтра куçкĕски çине çывхарса, е аяккарах кайса пăхса тăрать)* [90]

Мĕскер тăватăр алапа?
Ытарайми сăнар куçать мĕлкен çиçсе!
Эй, юрату, мана ху çунатна парсам!

Унта çак самантрах илсе кайсам!
Ку тăвăр пўлĕмрен мĕнле вĕçем-ши?
Çав турпике патне епле çитем-ши?
Тĕтре пек сирĕлет ку сăн чăл-пар...
Ытла та чаплă ку сăнар!
Епле пулайнă çав тери чипер?
Умри хитре ўтре кăвак тўпен
Мĕнпур илемĕ пухăннă-и тен?
Мĕнле пулнах çак çĕр çинче кун пек этем?

Мефистофель

Паллах: хăй тăваççи улт кун тăрмашнă [91]
Çынна туса, кайран хăйĕн ĕçне ырланă,
Эппин, ырламалли пулнах иккен.
Халь куç умĕнчине пăхса килен,
Кайран тупса парап ун пеккине.
Кама тĕнче пўрет çавна качча илме,
Кирек кам та телейлĕ тейĕччĕ хăйне.

Фауст куçкĕски çине çаплах пăхать. Мефистофель хыçлă пукан çинче ларать, милĕке вылятса калать.

Патша пек трон çинче ларатăп,
Алра ак скипетр, кирлĕ халь корона.

Тискер кайăксем

*(çав вăхăтра тĕрлĕ урмăш хусканусем тăваканскерсем, хытă кăшкăркаласа, Мефистофеле корона пырса параççĕ)*

Пулсамччĕ ырă! Çыпăçтар
Тарпа тата юнпа
Корона çĕмрĕкне [92].

*(Коронăна майсăр тытса çурмалла катаççĕ те катăкĕсене йăтса тавралла сиксе çўреççĕ.)*

Ак хатĕр те!
Курни çинчен калатпăр,
Мĕн илтнĕ — сăвăлатпăр.

Фауст
*(куçкĕски умĕнче)*

Ах, пуçăм çаврăнать.

Мефистофель
*(тискер кайăксем çине кăтартса)*

Чăнах, çавсем çине пăхса
Ман хамăн та ăш пăтранать.

Тискер кайăксем

Мехел çитсен,
Пире те шухăш
Килсе кĕрет [93].

Фауст
*(малтанхи пекех)*

Хал çук чăтма: чĕрем вĕрет.
Каяр кунтан, каяр часрах!

Мефистофель
*(малтанхи пекех)*

Килĕшесех пулать, паллах:
Вĕсем чăн уçă кăмăллă поэт.

Ами асăрхама пăрахсан, хуран вĕреме пуçлать. Кăпăкĕ тăкăнать, пысăк çулăм пулать те мăрьерен палкаса тухать. Тухатмăш карчăк, пит хытă çухăрса, çав çулăм витĕр мăрьерен кĕрет.

Тухатмăш карчăк

Ай-ай-ай! Мур янаварĕсем!
У, сыснаран та сыснасем!
Çăвар карса ларатăр!
Мана пĕçертрĕр, хурана, ав, тартрăр!
Ак эп сире пĕрре!
*(Фаустпа Мефистофеле курса.)*
Ха-а! Эсир камсем!
Мĕн кирлĕ-ха сире?
Мĕскер шыратăр?
Тухса чуптарăр!
Вутра ак çунĕç шăммăрсем!
*(Çăпалапа хурантан ăсать те пурне те вутпа сапать. Тискер кайăксем çухăраççĕ.)*

Мефистофель

*(милĕке çавăрса тытать те аврипе савăт-сапана çапать)*

Çапап! Ватап!
Тăкатăп апатне!
Чăл-пар хуранне!
Ку вăйă çеç!
Сан юрă çеммипе
Таккатăп майĕпе.

Тухатмăш карчăк хăраса ӳкнипе каялла чакать.

Мана палларăн-и, элес-мелес?
Ху хуçуна, ху пуçлăхна, палларăн?
Мана тепре сăмах чĕнсен,
Сана тата сан кĕтĕвне
Хирсе тăкатăп, милкемес!
Ман хĕрлĕ камсула [94] чыса хумастăн?
Автан тĕкне хисеп тумастăн?
Кунта эп пит-куçа витсе килмен!
Камне эп хам пĕлтерессе кĕтен?

Тухатмăш карчăк

Ыр çыннăм, каçару ыйтап тӳрмен саламшăн,
Сан урунта ут чĕрнине курманшăн!
Тата çăханăрсем ăçта-ха,— калăрсам! [95]

Мефистофель

Ку хутĕнче халь каçарам,
Эпир курнăçманни нумай пулать.
Культура малалла ӳссех пырать;
Вăл шуйттана та ĕлккенрех пулма хушать.
Халь çурçĕр акăш-макăшне ниçта кураймăн;
Ман çук хӳре, чĕрне те майрака,—
Эп вĕсене хывса пăрахрăм аякка,—
Ут урине хывса утма çук халăм манăн,
Анчах унпа эшкер умне тухма хаймастăп,
Ун вырăнне эп, шукăль çамрăксем пекех,
Суя ура пекки çыхса ак мухтанатăп.

Тухатмăш карчăк
*(ташласа)*

Пуç çаврăнать ман хĕпĕртенипех!
Сана каллех, улпут-шуйттанçăм, куртăм-и?

Мефистофель

Шăп! Юрамасть мана кунта шуйттан теме!

Тухатмăш карчăк

Ма-ха? Кунта мĕскер пур-ха аван марри?

Мефистофель

«Шуйттан» сăмах юмахсене лекни нумай пулать,
Анчах çынсем çапах пит улшăнман.
Вĕсем куçран хуса катертнĕ усала,
Анчах усал этем малтанхинчен чакман.
Халь титулăм — «улпут-барон» — чухла!
Эп кавалерсенчен те кавалер, пĕлен,
Ман чыслăхăм пирки ан иккĕлен.
Пăх, манăн герб çинче мĕн япала!
*(Аллипе темле лайăх мар хускану тăвать.)*

Тухатмăш карчăк
*(ахăлтатса кулса)*

Ха-ха-ха-ха! Пĕлетĕп сирĕн шӳтĕре!
Эп халĕ те манман сире, путсĕрскере!

Мефистофель
*(Фауста)*

Вĕрен эс, тусăмçăм, ан юл манран:
Çапла тыт эс хăвна тухатмăшпалан.

Тухатмăш карчăк

Манран сире мĕн кирлĕ-ха татах?

Мефистофель

Пар-ха тулли стакан леш ĕçмине;

Анчах, пĕлетĕн, ватăраххине!
Вăл вĕт хаярланать çултан çулах.

Тухатмăш карчăк

Питех хавас! Ман пур пĕр шеп янтар.
Хăш чух ĕçетĕп хам унтан.
Вăл халĕ пĕртте шăршлă мар.
Сире валли ялан пур ман пĕр-ик стакан.

*(Шăппăн.)*

Юлташăра асамламан пулсан,
Вăл пĕр сехет те пурнаймасть.

Мефистофель

Ан пăшăрхан! Ку юлташа пулать
Эс хатĕрленĕ им шăпах кăна.
Ту тимĕр ункă, пăшăлтат тухатăвне,
Тултар чăпах стакан хăватлă им-юмна.

Тухатмăш, аллине темле хускаткаласа, тимĕр карта ӳкерет те унта тĕрлĕ япаласем вырнаçтарать. Стакансемпе чӳлмек-хурансем янрама пуçлаççĕ. Тухатмăш карчăк пысăк кĕнеке йăтса тухать, маймăлсене лартса çаврăнать, кĕнекине пĕрин çурăмĕ çине хурать, ыттисем факел тытса тăраççĕ. Унтан вăл, пуçне сĕлтсе, Фауста хăй патне чĕнет.

Фауст
*(Мефистофеле)*

Мана кала-ха: ку мĕн тамаша?
Ухмахăн хăтланать хуçкалансах;
Пурте вăл—минретӳ, ултав анчах.
Эп курнă тахçанах ку акăш-макăша.

Мефистофель

Эх, амутке, кусем вĕт култарма кăна!
Эс карчăка ытла ан айăпла:
Вăл та вĕт лекĕр, лапăртаттăр ухмахла.
Е унсăр сиплĕ мар ку им-юм сана?
*(Фауста ункă варрине тĕксе кĕртет.)*

Тухатмăш карчăк
*(кĕнеке çине пăхса, хатарланса калать)*

Ӑнлан: хуш вуннă
Çумне пĕрре,
Ĉалар икшер,
Виççе хур çуммăн —
Пулан пуян.
Эс тăватта хурат,
Пиллĕкпеле ултта хушса
Тăватăн çиччĕ,
Сакăр хут илсе,—
Халь ĕнтĕ çитĕ.
Ак тăххăрĕ — пĕрре,
Вунни пушах.
Тухатмăш карчăкĕн
Çапла хисеп ăсталăхĕ![96]

Фауст

Ĉу карчăк сивчирпе анрашать пулас.

Мефистофель

Юлташăм, ку пуçламăшĕ кăна;
Ун пĕтĕм кĕнеки калать çапла!
Ӑна пĕлме ан тăрăш — вăл харам;
Урлă-пирли пит нумайран
Ӑсли те час-часах каять ăсран.
Пурте ку кивĕ-çĕнĕ вĕт пĕр вăхăтрах.
Истори кĕнеки çине пăхсам,
Аса ил: яланах çапла пулнă, ара:
Виççе пĕрре, пĕррене виççĕ тенипе
Ӗмĕртенпе çынна минретнĕ[97].
Ĉапла сӳпĕлтетме юри вĕрентнĕ —
Никам та тавлашас темест ухмахсемпе.
Çынсем пăхаççĕ сăмахне анчах:
Пĕлтерĕшне вĕсем чухласшăн мар пачах.

Тухатмăш карчăк
*(малалла калать)*

Пĕлӳ çуттин
Чăн-чăн уççи

Пуриншĕн те пытанчăк!
Ăссăр кăна
Уçма ăна,
Тивлет пекрех, пур шанчăк!

Ф а у с т

Мĕн арăш-пирĕш вăл пакăлтатать!
Ман пуçăм ырата пуçларĕ кун пирки.
Çĕр пин ухмах эшкер юрри
Кĕрленĕ пек вăл туйăнать!

М е ф и с т о ф е л ь

Çитет, илемлĕ Сивилла[98], е, çитет!
Пире эс хăвăн им-юмна ĕçтер,
Тултар тулли пĕр стаканне!
Сиен тăваймĕ вăл юлташăн сывлăхне:
Ман вăл пур степенне те витĕр тухнă,
Нумай тем тĕрлĕ йывăр сыпкăм тунă[99].

Тухатмăш карчăк, тĕрлĕ ăрăм йăлисене туса, ĕçмене куркана ярса парать; Фауст ăна тути патне илсе пырсан, унтан пĕчĕк çулăм тухса каять.

М е ф и с т о ф е л ь

Час ӳпĕнтер ку куркана —
Вăл хăвăрт çĕклĕ кăмăлна.
Ķам «эс» тет чĕрĕ шуйттана,
Хăрамалли çук ун çулăмран.

Тухатмăш карчăк тимĕр картана уçать; Ф а у с т унтан тухать

М е ф и с т о ф е л ь

Халь юрамасть тăма; тухар çула!

Т у х а т м ă ш  к а р ч ă к

Сире пĕр сыпкăмĕ те кайтăр хавала!

М е ф и с т о ф е л ь
(*тухатмăш карчăка*)

Парне илетĕнех мехел çитсессĕн,

Вальпурги каҫӗ эс мана систерӗн.

Тухатмӑш карчӑк

Ак илӗр ҫак юрра. Вӑй хуштӑр ҫак сӗткен,
Ана юрлас пулать хутран-ситрен.

Мефистофель
*(Фауста)*

Часрах каяр! Эс лайӑхрах тарла:
Сана им-юмӗ витӗр ҫаптӑр,
Атту пулмасть унран пайта.
Эс лӑпкӑ уҫӑлса ҫӳре, чӑрмавсӑр —
Сасартӑк Купидон[100] санра асма тӑрсассӑн
Вара тинех туян хӑвна хавассӑн!

Фауст

Кӳр, тепӗр хут пӑхасчӗ куҫкӗски ҫине:
Эп курнӑ сӑн чипер питех!

Мефистофель

Ҫук, ҫук! Часах эс курӑн кӗретех
Мӗнпур чипер хӗрарӑм тӗслӗхне.
*(Шӑппӑн.)*
Кӗҫ туйӑнӗ сана им-юм асамӗпе
Ҫашни хӗрарӑмах чипер Елена пек.

## 7-МӖШ СЦЕНА

### УРАМ

Фауст иртсе пыракан Маргаритӑна хирӗҫ пулать.

Фауст

Чипер пикем, сире салам!
Юрать пулсассӑн, ӑсатса ярам?

Маргарита

Пике те мар, чипер те мар! [101]

Киле çитетĕп пĕчченех вăр-вар.

*(Аллине туртса илет те каять.)*

Фауст

Эй, пÿлĕхçĕм! Ку хĕр мĕнле чипер!
Эп ĕмĕрте курман кун пеккине.
Мĕнле сăпай, мĕнле аван тата,
Кăштах пур шăрчĕ те, тăхта!
Пичĕ — хĕвел, тути — вут-хĕм,
Ах, вĕсене манма та хĕн!
Пуçне мĕнле именчĕк усрĕ,
Мĕнле кĕскен каларĕ хучĕ!
Кĕрсе те ларчĕ ăшăма —
Сăмах тупаймăн ырлама!

Мефистофель кĕрет.

Фауст

Итле, эс туп хĕрачана!

Мефистофель

Хăшне?

Фауст

Кунтан халь çеç ак иртнине.

Мефистофель

Çавна? Вăл халь кăна пуп патĕнчен:
Тин çеç тасалчĕ çылăхĕсенчен;
Эп пытанса тăрса итлерĕм,
Ун çылăх çуккине тĕпчерĕм.
Вăл пуп патне кайни те ахалех,—
Ун тĕлĕшпе эп халсăр пĕтĕмпех [102].

Фауст

Вăл вунтăват çултан каях мар пек.

Мефистофель

Эс Дон-Жуан пек калаҫатӑн[103].
Пар эс ӑна халех чипер чечек!
Сан еккӳне парӑнайман пӗр чыслӑх та,
Пӗр савӑш та ҫук пуль тесе шутлатӑн,
Анчах ку яланах пулмасть пайта!

Фауст

Сума сӑван магистрӑм, эс мана
Йӗрке те чыс ҫинчен ан та шарла!
Сана кӗскен татса калам ҫакна:
Ҫак чиперкке паян ҫӗрле выртмин
Ман ытамра,— эпир пач уйрӑлар
Шӑп ҫур ҫӗр тӗлӗнче, эппин!

Мефистофель

Шутла: эс ыйтнине мӗнле халех тӑвас?
Ик эрнерен кая мар ман тӑхтас
Пулать сан ӗмӗтне тума:
Пар вӑхӑт йӳтӗмпе сӑлтав тупма.

Фауст

Ҫак чипере пуҫ ҫавӑрма
Ман ҫич сехет пулсассӑнах,
Эп шуйттана чӗнес ҫук пулӑшма!

Мефистофель

Эс ҫӑмӑлттай француз пекех пуплетӗн.
Мана ан тарӑхсам сасартӑках.
Тӑхта, ан хыпалан: асса киленӗн.
Вӑл савӑшу пулать тата хӑватлӑрах,
Ҫакна кӑна эс ту: ху ытларах астар;
Пире хӑшпӗр кӗнекесем
Ӑс панӑ пек ҫеҫ ӗҫлесем:
Чее майпа хӑтлан, паха парне тыттар.

Фауст

Хавасӑм унсӑрах хастар.

Мефистофель

Тăнла ним шӳтсĕрех, кулмасăрах:
Ķаларăм эп сана: куна
Тытма май çук сатурлăхпах.
Сасартăк тапăнни витмест ăна,
Ķунта пит кирлĕ çав ултавлăх.

Фауст

Унран парне илсе пар асăнмалăх:
Çак хĕр ытарайми мăй çухине
Е уринчи чăлхийĕн çыххине.
Илсе кайсам мана ун пӳлĕмне!

Мефистофель

Ытла юратрăнах пулсан ăна,
Ķур — эп мĕнле çунатăп саншăн.
Ķашни пĕр саманта упрасшăн:
Халех ун пӳлĕмне леçеп сана.

Фауст

Ăна курап? Вăл ман пулать?

Мефистофель

Эй çук! Эпир унта пырас чухне
Ķаять вăл хăй кӳрши патне;
Эс ху тăхта, пулас савăнăçна кĕтсе
Ун пӳртĕнче, ху чĕрӳне килентерсе.

Фауст

Хăçан? Халех?

Мефистофель

Пăртак тăхтамăн-и?

Фауст

Ăна валли парне тупма манмарăн-и?
*(Тухса каять.)*

Мефистофель

Парне парасшăн? Япăх мар пуçлать!
Ĕç лайăх тухасса шанма пулать.
Пĕр вырăнта пытарнă выйкăта [104],
Тĕрĕслесе пăхасчĕ вăхăтра.
*(Тухса каять.)*

## 8-МĔШ СЦЕНА

### ҪАÇПА

Тирпейлĕ пĕчĕкçĕ пӳлĕм. Маргарита çӳçне çивĕтлет.

Маргарита

Ҫу пархатарлă çын камне
Мана кам пĕлтерет, ăна
Эп хаклă тӳлĕттĕм ятне.
Улпут таврашĕ пуль чăнах:
Вăл унсăрăн хăйне манпа
Хăюллăн тытмĕччĕ капла.
*(Тухса каять.)*

Мефистофельпе Фауст

Мефистофель

Кĕр, ак кунта, хуллен кăна!

Фауст
*(кăшт чĕнмесĕр тăрсан)*

Ҫай, пĕчченех мана хăвар.

Мефистофель
*(пӳлĕме тавралла пăхса)*

Ҫашни хĕрех кун пек тирпейлĕ мар! [105]
*(Тухса каять.)*

Ф а у с т

*(тавралла пăхса)*

Салам сана, юратнă хӳтлĕх,
Витсе илсем чуна, ыр пӳлĕх,—
Саву — таса асапăн ыр хавалĕ!
Ман шанчăкăн сăваплă халĕ,
Мана телейлĕ туччĕ çакăнта.
Епле тӳлек, тирпей йĕрке кунта!
Мĕнле çителĕк кун пек çуклăхра!
Мĕнле рехет çак чухăн хăтлăхра!

*(Вырăн патĕнчи сăран кресло çине лап! выртать.)*

Асаттесен хисеплĕ тронĕ!
Эс ырлăх-шырлăх кунсенче
Кантарнă ват шăмшаксене!
Маçакĕн типĕ аллине, тен, вăл чуптунă
Ман юратни, тусĕсенчен хăпса,
Çунан питпе-куçпа чупса пырса.
Пикем, сан сывлăшу кунта вĕçет —
Кирек ăçта тасалăх та типтер,
Ытармалла та мар чипер:
Сана çав сывлăш кунсерен хистет,
Хушать пӳрт урайне таса тытма,
Уру айне таса хăйăр сапма,
Сĕтел çине таса çитти сарма.
Эй, савнă алă! Эс, хăват майлах,
Çак чухăн хӳшĕрен епле çăтмах
Тумашкăн пултаратăн! А унта!

*(Кравать чаршавне уçать.)*

Мĕнле таса чĕтрев мана тытать,
Тĕреклĕ туртăм ыталать!
Сехечĕпе эп тăраттăм кунта!
Кунта, ыр тĕлĕксен хӳтлĕхĕнче,
Пăхса усранă çĕн пирĕштие тĕнче!
Кунта ачан ачаш кăкри сывланă
Таса лĕп пурнăç сĕткенне;
Сăваплă пултару туса кăларнă
Илемлĕ турă сăнарне!
Эп ма кунта?
Мĕскер мана кунта çитерчĕ?
Мана кам-ха аташтарса çĕтерчĕ?
Мана мĕн кирлĕ-ха? Мĕскер кăшлать чуна?
Телейсĕр Фауст, паллас та çук сана!

Мана мĕнле асамлă сывлăш витрĕ!
Тăрлавсăр киленӳ шухăшĕпе эп çитрĕм,
Анчах сăпайлă юрату ăна аркатрĕ.
Эпир вăш çил кулли çеç-ши вара?
Ман ирсĕр ĕмĕте йăлтах вăл татрĕ.
Хуçи килсе кĕрсен çак самантра,
Мана курсан, мĕскер вăл калĕ?
Кĕççе пит, аскăнчăк, вăтаннипе
Хам чăрсăршăн пит çуннипе,
Ун умĕнче лапах эп ӳкĕп халĕ!

Мефистофель
*(кĕрсе)*

Часрах кай! Вăл кунта килет.

Фауст

Атя, каяр! Эх, курасси пĕтет!

Мефистофель

Эп ак илсе те килтĕм пĕр арча шăпах,
Ăна эпир пике валли лартар шкапа.
Унта паха та капăр япалак*.
Чипер хĕр чĕрине астарĕ аванах.
Кун пек хитре теттесемпе халь эпĕр
Тата шепрех тетте ярса илетпĕр.
Ача — ялан ача, вăййи — ялан вăййах.

Фауст

Мĕнле хăйса тытăнасах?

Мефистофель

Акă вăл епле!
Эс арчине хăвна валли илетĕне?
Сан малтанах калас пулатчĕ,
Мана чăрмав тăвас та марччĕ,
Сана кун евĕр хыт кукар теместĕм,
Хам ĕнсене хыçса чĕрместĕм.
*(Арчине шкапа лартать те питĕрсе илет.)*

* Япалак — хитре япалана ачашласа çапла калаççĕ.

Ну, халь вĕçтер! Чипер пике пĕччен
Çӳретĕр-ха кунта, шутлатăр сан çинчен,
Юраттăр вăл сана хăй ирĕкĕпех.
Мĕскер кичем пăхан ку териех?
Питӳ-куçу юлхав студентсене
Физикăпа метафизика лекцине
Ирĕксĕртен вуланă евĕрлех!
Атя халех!

Тухса каяççĕ. Маргарита лампа йăтса кĕрет.

Маргарита

Кунта пит шăршлă, пăчă![106]
*(Чӳрече уçать.)*
Тулта ăшах мар, лăпкă.
Анне килинччĕ хальтерех!
Темскер пĕчченсĕ шикленеп:
Шăмшак тем çӳçенет текех.
Мĕнле ытла хăравçă эп.
*(Салтăннă май юрлать.)*
Пĕр Фулăра[107] пулнă патша.
Мĕн виличчен вăл юратса
Упранă мăшăрĕ парса
Хăварнă ылтăн куркана.
Вăл савнă хаклă парнине
Нимрен ытла çут тĕнчере;
Куççуль тăкса хăй савнине
Асне вăл илнĕ ĕçкĕре.
Валеçнĕ вăл вилес чухне
Пуянлăхне пур ачине;
Анчах халаллă куркине
Қăна хăварнă вăл хăйне.
Чи юлашки сехетĕнче,
Мăн тинĕс хĕрринчи çуртне
Пуçтарнă вăл рыцарьсене
Сывпуллашма хăй ĕçкинче.
Юлашки хут патша илет
Хăй куркине, ăна ĕçет,
Вара чун-чĕм хавалĕпе
Ăна перет хумсем ăшне.
Қурать курка вăркăннине,
Ăна хумсем путарнине;
Патша куçне тĕтре карать,

Вара хăй те вилсе каять.

*(Шкапа тумне çакса хума уçать те унта пĕчĕк арча ларнине курать.)*

Ăçтан ку чаплă, шеп арча
Лекме пултарнă-ха шкапа?
Эп питĕрсеттĕм çăрапа —
Ăна кам лартнă-ха кунта?
Тен, панă такама анне
Укçа кивçен, леш хунă саклата
Ку арчана. Мĕн-ши шалта?
Уççи те пур. Пăхам ăшне!
Пăхса илни тем айăпах мар, тен.
*(Уçса пăхать.)*
Эй, пӳлĕхçĕм! Мĕнле чипер иккен!
Эп ĕмĕрте курман кун пеккине!
Ку тум пуян улпутăн пикине
Уявсенче капăрланма тĕсех!
Чăн ылтăн-кĕмĕл капăр!
Çам тăхăннă ăна ку тапхăр?
Вăчăрине çакас килет питех.

*(Капăр тума тумланать те куçкĕски çине пăхать.)*

Ах, ман кун пек алка пулсан пĕрре!
Ăна çаксан мĕнле чипер-çке!
Мĕне кирлех хитре пулни пире?
Çипуç начар пулсан питех тиркеççĕ.
Пире мухтаç шелпе кăна,
Пурте ырлаççĕ ылтăна:
Мулшăн çунаççĕ,
Мулшăн чупаççĕ.
Укçа-пухчасăр тамаша!
Епле эпир пит апăрша!

## 9-МĔШ СЦЕНА

### УÇАЛСА ÇӲРЕНИ

Ф а у с т шухăшласа уткаласа çӳрет. Ун патне М е ф и с т о ф е л ь утса пырать.

М е ф и с т о ф е л ь

Ăнман юратупа та тĕпсĕр тамăкпа —
Гата мĕнпе тăвам хаяртарах тупа!

Фауст

Мĕнле амак çыхланчĕ-ха санпа?
Ма çуйхашан капла хаярланса?

Мефистофель

Эп хам шуйттан пулман пулсан,
Шуйттан патнех вĕçтерĕттĕм анса!

Фауст.

Ăсу сан пăтранса каймарĕ пуль, ами?
Сана тĕс мар капла урни!

Мефистофель

Шутла-ха: пирĕн хаклă капăра
Хай Гретхен патĕнчен пуп йăкăртнă ара.
Вăл, хĕрĕ, арчана кăтартнă амăшне;
Ку, мĕскĕн, хăраса шалтах аптрать:
Леш яланах пуçне тур кĕнеки çине
Чиксе ларать, кирек ăçта шăршлать:
Ăçта мĕскер таса, мĕскер усал.
Вăл ещĕке курсан шутлать тӳрех:
Кунта мĕскер таси пур-ха,— часрах тасал!
«Ачам,— тет амăшĕ хĕрне пĕрре,—
Таса мар пурлăх — ирсĕр капкăн вăл пире!
Ăна парне парар тур амăшне,
Пире вăл уншăн маннă парĕ пĕлĕтрен».
Мăнтарăн Гретхен çавă сĕнӳрен
Тĕлĕннипе чарсах пăрахнă хай куçне:
Парнелĕх лашанне пăхма хушман шăлне.
«Ку арчана мана парне параканни
Çав териех турра пăрахнă-ши?»
Çав вăхăтра хай амăшĕ пупа чĕнет.
Сасартăк леш кун сăлтавне туйса илет,
Питне-куçне çветтуйăн пек туса калать:
«Эсир чăнах сăваплă шутласа кăларнă!
Парне паран этем алли хухмасть!»
Чиркӳ çăварĕ пит те анлă,—
Ун хырăмĕ ĕçлет хăватлă[108].
Чиркӳ чылай çĕршыв çăтса антарнă,
Анчах вар чирĕпе вăл аптрамасть.

Юратнă хĕрĕмсем, ултавпала пуçтарнă
Мула чиркӳ кăна çăтмашкăн пултарать.

Фауст

Ҫу вăл чылай пайта куран йăла!
Ҫорольпе жид та — çавăн пек ăста.

Мефистофель

Пуп пирĕн чикнĕ тĕпсĕр кĕсйине,
Хуп кунтăка кăмпа пуçтарнă пек,
Сулăсене, çĕрĕсене, алкасене,—
Тав та туман, пĕр ывçă мăйăр панă пек.
Айвансене райра сăвап тыттарнă,
Вĕсен чунне пит савăнтарнă.

Фауст

Хăй Гретхенĕ?

Мефистофель

Шеллет, асапланать:
Парне ăна ним канăç та памасть,
Вăл кунĕн-çĕрĕн тумĕсем çинчен шутлать,
Нимрен ытла парнеçине курасшăн тек.

Фауст

Ман тусăмăн инкекĕ — маншăн та инкек.
Туп эсĕ тепĕр çавăн пек парне!
Анчах унран та пахараххине.

Мефистофель

Пурте ача тетти çеç тетĕр, ахăртне!

Фауст

Туп!— тетĕп,— хăть кирек мĕнле!
Ҫав кӳршĕ арăм урлă эс тимле[109].
Шуйттан, шуйттан пекех хăтлан!
Парне туп эс кирек ăçтан!

Мефистофель

Итлеп, ыр çыннăм, пĕтĕм кăмăлтан!

Фауст тухса каять.

Саван ухмах айван ĕçе ăста:
Хĕвел те, çăлтăрсем те, уйăх та
Пама вăл хатĕр фейерверк тума,
Хăй савнине йăпантарма!

## 10-МĔШ СЦЕНА

### КŶРШĔ АРАМĔН ÇУРЧĔ

Марта
*(пĕччен)*

Эй турă, каçарсам упăшкана!
Вăл ним вырăнне хумарĕ-çке мана:
Тĕнче касмашкăн тухса тарчĕ,
Мана пĕр-пĕчченех хăварчĕ.
Ăна эп нимĕнпе кӳрентермен —
Куна хăвах аван пĕлен.
Мĕнле савattăм хам ăна,
Нихçан улталаман, чăнах.
*(Йĕрет.)*
Ютра вилсе пăчланчĕ пулĕ, тен?
Мĕнле хыпар илес вилни çинчен?

Маргарита кĕрет.

Маргарита

Ах, Марта, ыр инкем!

Марта

Мĕн пулчĕ, Гретхен?

Маргарита

Хăранипе ура чĕтрет ман темĕн!

Шкапра каллех темле арча ларать,
Унта тăп-туллиех хитре япаласем,
Малтанхинчен те чаплăрах хăйсем.

Марта

Халь ан пĕлтер эс аннӳне,
Атту каллех пупа кайса парать.

Маргарита

Пăх-ха, арчи мĕнле — тĕлĕнмелле!

Марта
*(Маргаритăна капăрлантарса)*

Телейлĕ эс, илемлĕ пукане!

Маргарита

Мĕскер усси пур-ха мана!
Хăю ҫитмест ку тумпала тухма
Е чиркĕве капăрланса кайма.

Марта

Час-час кил эс ман патăма,
Ку хаклă тумпала эс капăрлан;
Ҫак куҫкĕски ҫинче хăвна пăхса йăпан;
Эп те сана пăхса савăнкалам.
Эс ерипен хăйса ҫитен капла:
Уяв чухне ҫакса тухан пĕр капăрне —
Вăчăрине е ĕнчĕ майине.
Куна аннӳ часах сисмест,
Ана пăртак суйма тивет.

Маргарита

Ку арчине кам лартнă-ши халь ман пата?
Темскер аван марри пур пек кунта!

Алăка шаккани илтĕнет.

Ах! Ку анне килет пулĕ мана чĕнме?

Марта
*(алăк шăтăкĕ витĕр пăхса)*

Çук, пĕр улпут килет кунта темме.
*(Алăкне уçать.)*
Тархасшăн, кĕрĕрсем!

Мефистофель кĕрет.

Мефистофель

Қаçарăрччĕ мана
Тӳрех килсе кĕнишĕн çакăнта.
*(Маргарита умĕнче чыс парса, каялла чакать.)*
Эп Марта Швердтлейн патнеччĕ пĕр ĕçпе.

Марта

Эп — Марта. Ырă çын, мĕн йӳтĕмпе?

Мефистофель
*(Мартăна шăппăн)*

Палларăм халь сире, мана çитет кунпа;
Анчах мăнаç, чипер пике пур-çке кунта.
Чăрмавшăн каçару ыйтап чунран.
Ман ĕç васкавлă мар: тепре кĕреп кайран.

Марта
*(Маргаритăна хыттăн)*

Пăх-ха: пике тесе ыр çын сана чĕнет,
Улпут пики тесе шутлать. Епле хисеп!

Маргарита

Çук, эп пике мар, ахаль хĕрех...
Эсир ытла ырларăр... Эп тумлантăм çех.
Чипер япалисем пĕри те манăн мар.

Мефистофель
Пахалама пĕлеп: кунта хакли тум мар!
Кĕрнек, хитре пит-куç — чăн-чăн улпут пикин.
Кунта юлма пултарăп-и, эппин?

Марта

Мĕскер каласшăнччĕ, тархасшăн, калăрсам!

Мефистофель

Сире калас килет упăшкуран салам,
Анчах вăл ячĕ, шел, усал хыпар-хăнар.
Ыр упăшка хушать сире
Нумай чупма ҫут тĕнчере.

Марта

Вăл вилнĕ? Пĕтрĕн, савнă упăшкам!
Ӳкеп! Вилеп! Мĕнле чăтам?

Маргарита

Ах, Марта, чарăн, чунăм!

Мефистофель

Ҫак хуйхăллă ĕҫ хыпарне калатăп, илтчĕ.

Маргарита

Ман кунашкал юратмалла пулминччĕ:
Ҫун пек инкек пулсассăн пĕтĕ пуҫăм!

Мефистофель

Телей инкексĕр мар, инкек телейсĕр мар!

Марта

Мĕнле вăл пĕтнине, ах, калăрсам часрах!

Мефистофель

Выртать вăл инҫетре, Падуйăра [110],
Ҫветтуй Антоний хăй хăт* пачĕ-ха ăна.

* Хăт пар — лайăх вырăн пар.

Вăл халĕ вăранми тӳлек выртать,
Таса та лăпкă, сивĕ вырăнта.

Марта

Сире вăл мĕн хушса хăварчĕ?

Мефистофель

Сире пĕр пысăк йывăр ĕç тума хушсаччĕ:
Вăл виççĕр панихида чиркĕве
Ун чунĕшĕн ыйтать саккас пама [111].
Ман хамăн пуш-пушах кĕсъе.

Марта

Укçа ним те ямарĕ-и? Мĕнле?
Ķутамккинче кирек мĕнле ăста килне
Илсе килет мĕн те пулин парне —
Хăй çемйине е арăмне савăнтарма;
Çимест, ĕçмест, пурнать чăн кĕлмĕçле,
Çапах илсе килет! Эй, упăшкам!

Мефистофель

Сире эп пит шеллеп, мадам;
Анчах те сирĕн мăшăр чăннипе
Укçа тăккалакан этем пулман иккен [112].
Çылăхсене вăл каçарттарнă пĕтĕмпе,
Ķунçул начар тесе кӳреннĕ виличчен.

Маргарита

Ах, апăрша! Мĕнле юратнă арăмне!
Эп уншăн хытă кĕлтăватăп чиркӳре.

Мефистофель

Эппин, юрать качча тухма сире:
Эсир пит ырă хĕрача!

Маргарита

Ах, çук, мана ир-ха кайма качча!

Мефистофель

Эппин, чипер пуса каччи пулать тупма.
Ҫун пек чечен хĕре хĕрсе ыталама
Ҫирек хăш каччă калĕ — ку телей тесе.

Маргарита

Ҫунти сăпай йăла капла тума хушмасть.

Мефистофель

Йăла те пур, те ҫук, анчах капла пулать!

Марта

Ну, калăр-ха татах!

Мефистофель

Эп тăтăм итлесе
Вăл вилнĕ чух ун пуҫĕ вĕҫĕнче:
Пĕр ҫĕрĕк улăм ҫеҫчĕ айĕнче;
Вăл вилчĕ чăн, Христос каланă пек,
Ҫапах ĕҫĕсене ылханчĕ пĕтĕмпех:
«Пăрахрăм арăма, хам ĕҫĕме,
Ҫампа эп тивĕҫ ылхана кĕме!
Мана асап ҫакна аса илме!
Ах, арăм каҫаринччĕ ҫылăхăмсене!»

Марта
(*макăрса*)

Эй, савнă упăшкам, каҫартăм вĕсене!
Ăна эп ыррăн ҫеҫ аса илеп.

Мефистофель

«Ах, туррăм, арăм ҫылăхлă манран ытла!»

Марта

Суять вăл! Тупăк умĕнче суять апла!..

Мефистофель

Паллах, вилес чух вăл суйланнипе
Çаларĕ пуль кун евĕр,— терĕм эп.
Çу пулчĕ пуль вилес чух асапланнăран.
«Пĕр канăçлă минут та ман унпа пулман.
Тар кăларса эп çăкăр тупрăм,
Ача-пăча асаппала ӳстертĕм,
Эп хăтлă пурăнма мĕн кирлине йăлт турăм,
Анчах килениччен çимен, выçах йӳтерĕм».

Марта

Эп савнине, эп асапланнине
Вăл маннă? Эп хама чыспа тытни харам?

Мефистофель

Вăл лайăх астăватчĕ кусене!
Çаларĕ вăл: «Хам Мальтăран каятшăн
Турра кĕлтурăм арăмпа ача-пăчашăн;
Вăл пачĕ ырлăхне мана, тӳрех калам:
Пире уç тинĕсре тĕрĕксен карапĕ
Тĕл пулчĕ, пысăкскер; илсе пыратчĕ
Султанăн чикĕсĕр пуянлăхне.
Эпир ăна хыт тапăнтăмăр, пурлăхне
Вăйпа туртса илсе валеçрĕç,
Мана та ун чухне пĕр пай тивретрĕç».

Марта

Ăçта-ши вăл укçа? Пытарнă-ши?

Мефистофель

Ăна халь тупасси — çил хӳрине тытни;
Неапольре [114] вăл ĕçкелетчĕ ирĕкре,
Ăна чипер хĕр ернĕччĕ пĕрре;
Ун хуйхине кура çав хĕр ăна пит савнă;
Хăй те ăна юратнă,
Ачаш сĕмне вăл виличчен усрană, тет.

Марта

Ах, ирсĕр! Вăрă! Хăй ачисене тăшман!

Ана нуша, ни хуйхӑ, ни вилес сехет
Ясар, усал ӗҫрен хӑтарайман!

Мефистофель

Юрать, халь вилнӗ вӑл, ӑна тӗсех!
Эп сирӗн вырӑнта, калам тӳрех,
Хура тумпа ҫулталӑк ҫеҫ ҫӳремелле,
Ҫав вӑхӑтрах ҫӗн упӑшка тӗсемелле.

Марта

Эх, эп тупаймӑп ҫав тепре
Ун пеккине ку тӗнчере!
Вӑл питӗ лайӑх айванккаччӗ!
Ют арӑмсем патне чупма хавасчӗ,
Ҫын эрехне кирек ӑҫта ӗҫетчӗ,
Ялан тӗнче касса ҫӳретчӗ,
Тата картла вылятчӗ яланах.

Мефистофель

Ҫаксем кӑна? Ку кӑлтӑк пысӑк мар пачах.
Вӑл хӑй хӑтланнӑ пек тума
Сире чарсах кайман пулас.
Кун пек йӗрке тесен, хавас
Хам та сирӗнпеле сӑмах татма.

Марта

Ах, эсӗр шӳт тӑватӑр, мыскараҫӑ!

Мефистофель
*(хӑй ӑшӗнче)*

Халь шутарас. Асӑрханас пӑртакҫӑ:
Вӑл шуйттана та, тен, лектерӗ вӑлтине.

*(Маргаритӑна.)*

Никам та йышӑнман-и сирӗн чӗрене?

Маргарита

Эсир кунпа мӗскер каласшӑн-ха?

Мефистофель
*(хăй ăшĕнче)*

Эх, айăпсăр ача!
*(Сасăпа.)*
Сыв пулăр-ха!

Маргарита

Сыв пулăр!

Марта

Кăшт çеç тăхтăр-ха:
Ман упăшка ăçта, хăçан,
Мĕнле вилни çинчен хут илесчĕ ман.
Темле ĕçре те кирлĕ йĕркене тытма,
Çампа вилни çинчен пĕр хаçатра
Пичетлесен аван хама.

Мефистофель

Хисеплĕ çыннăм, чăнлăха çирĕплетме
Свидетель иккĕ те çитет кирек ăçта.
Ман пĕр паллан аван çын пур-ха çавăнта,—
Вăл çирĕплетĕ ман сăмахсене.
Эхер те сирĕн кăмăл пур пулсан,
Ăна чĕнсе килеп кунта.

Марта

Илсе килсемĕрччĕ!

Мефистофель

Пике килет-и?
Сире эп йăлăнап, тархасшăн, килĕр!
Вăл ăслă та маттур, илемлĕ, тимлĕ.
Вăл каччăран та каччă темелле.

Маргарита

Хĕратăп, ыр çын умĕнче хĕрелмĕп-и?

Мефистофель

Эсир, патша курсан та, ним хĕрелмĕр.

Марта

Ҫапла, сире унпа пĕрле
Садра кĕтетĕп кĕҫĕр эп ҫĕрле.

## 11-МĔШ СЦЕНА

### УРАМ

Фаустпа Мефистофель.

Фауст

Ну, ĕҫ мĕнле? Килет-и май халех?

Мефистофель

Аху! Хĕрсе те кайнă! Вут пекех!
Ытла васкан! Ку кайăка тытатпăр.
Паян ак Марта пахчине каятпăр.
Мĕнле вăл арăм: чăн-чăн евчĕ
Хĕрпе качча пĕрлештерме!

Фауст

Пит лайăх!

Мефистофель

Хăй те пирĕнтен парне кĕтетчĕ.

Фауст

Чăн, ҫăкăрпа тăвар хире-хирĕҫле.

Мефистофель

Ăна парар ҫапла ĕнентерсе:
Ун упăшкин шăмми-шакки ĕнтĕ виле,
Падуйăра выртать вăл халь ҫĕрсе.

Фауст

Пит ăслă! Пирĕн уншăн çавăнта
Қайса килес пулать-и-ха тата?

Мефистофель

Sancta simplicitas! [115] Қайма кирлех те мар.
Ăна эс хут çырса ал пус та пар.

Фауст

Қунтан аван пулмин, сан план пулать харам.

Мефистофель

Пăх-ха, сăваплă çын епле! Ыйтам:
Эсир пĕртте суя причак паман-и?
Тĕнче, çĕр, турă, пурнăç, чун çинчен,
Çынсен мĕнпур чун-чĕринче, пуçĕсенче,
Çавсем çинчен эсир мăнаçлăн каламан-и?
Çак йӳнсĕр арăш-пирĕшсене
Эсир куçпа курни пекех ĕнентеретĕр.
Тĕрĕссипе эсир çав япаласене
Çак Мартăн вил упăшкине
Пĕлмен пекех, ним те пĕлместĕр [116].

Фауст

Софист [117], ултавçă эсĕ яланах!

Мефистофель

Мана халех улталама шутлатăн,
Қунта ĕç мĕнрине чухлатăн.
Таса чун, эсĕ ыранах
Мăнтарăн Гретхена улталăн,
Савап, тесе, ăна шантарăн.

Фауст

Тупа тăватăп эпĕ чĕререн.

Мефистофель

Паллах, мĕн виличчен саватăп,

Урăххине пач юратмастăп,
Улталамастăп эп пачах
Тени те санăн пĕтĕм чунранах?

Фауст

Çитет, тек ан шарла, пăрах!
Ачаш илемлĕ туйăмпа çунатăп,
Çав туйăма тĕп-тĕрĕс ят пама
Эп юрăхлă сăмах шыратăп;
Шухăшăмпа, ăна ширанă май,
Эп пĕтĕм тĕнчене ярса тытатăп,
Чĕре вутне эп «ĕмĕрхи саву,
Таса, чиккисĕр юрату»
Тесе каланă сăмаха —
Çакна та явăлăн ултавĕ тес-и-ха?

Мефистофель

Çапах та эпĕ тĕрĕсех калап! [118]

Фауст

Итле, сана ак ман халап:
Кашнин хăй шухăшĕ пур калама.
Тӳрре тухас тесе тăрăшакан,
Чĕлхи витет пулсан, ялан
Сăлай тупать тӳрре тухма.
Часрах! Сӳпĕлтетни мĕскер пайта?
Эс калани чăн пултăр, тупата!

## 12-МĔШ СЦЕНА

### САД

Маргарита Фауспа, Марта Мефистофельпе алла-аллăн тытăнса уçăлса çӳреççĕ.

Маргарита

Хамах туяп: эсир мана шеллетĕр,
Ман кăлтăкăмсене йăлтах сисетĕр;

Мана пăртак хама та намăс.
Эсир — çӳревçĕ; кашни тĕл пуланпах,
Ҫирек кампа сăпайлă яланах,
Нумай пĕлетĕр, çавăнпа та ман ăс
Сире килĕшес çук пачах.

Фауст

Ҫашни сăмахăр, пăхса илни пĕрре —
Темрен те хаклă маншăн тĕнчере.
*(Ун аллине чуптăвать.)*

Маргарита

Мĕскер эсир! Мĕн чуптăвас ăна?!
Ман аллăм кушăхнă хура ĕçпе.
Ҫилте тем те тума тивет мана.
Анне ялан тирпей тытма хистет.

Иртсе каяççĕ.

Марта

Эсир ыр çын, шав çул çӳретĕр-и?

Мефистофель

Мĕн тăвăн, пирĕн ĕç çапла мар-и!
Хăшпĕр çĕрте юлма та хавасах —
Анчах — каяс пулать çав ытарсах.

Марта

Яш чух тĕнче курни аван!
Хусах, кичемлĕ пурнăç та çитет кайран:
Ват çыннăн шăпинчен тараймăн,
Ун чух вара нумай чупаймăн!

Мефистофель

Эп ун çинчен шутлап пит хăраса.

Марта

Çампа ан манăр манăн канаша.

Иртсе каяççĕ.

Маргарита

Вара, паллах, çухал куçран, тасал асран!
Йăлишĕн çеç эсир сăпай.
Тен, сирĕн мансăрах туссем нумай,
Пурте вĕсем, тен, ăслăрах манран.

Фауст

Эй, чунăмçăм, ĕнен, этемĕн пĕлĕвĕ тени —
Каппайни çеç, суя кĕрнекленни!

Маргарита

Мĕскер?

Фауст

Мĕн-ма тӳр кăмăлпа сăпайлăх
Пĕлмеççĕ-ши хăйсен таса пахалăхне!
Мухтанманни тата йăвашлăх —
Пуриншĕн те таса, паха парне.

Маргарита

Эсир хăть ман çинчен кăшт шутласан,
Эп хам та шутлăттăм сирĕн çинчен ялан.

Фауст

Эсир час-час пĕччен-и?

Маргарита

Яланах.
Хуçалăх пирĕн пысăк мар,
Çапах ăна тытмашкăн çăмăл мар.
Хĕрарăм тарçă çук, пур ĕç тивет мана:

Апат пĕçер, ух, шăл, тумтир çĕле,
Таçта та çит, ир пуçласа каçчен ĕçле.
Аннем хаяр, вăл пур ĕçре те
Тирпей ыйтать, ытла çукран та мар:
Эпир ыттисенчен пит чухăнах та мар,
Çынсем пек пултаратпăр пурăнма эпир те.
Атте пире чылай тупра хăварчĕ:
Хула тулашĕнче çуртпа ват çимĕç сачĕ.
Мана халь пурăнма çăмăлтарах:
Ман йăмăк вилчĕ, пиччеçĕм салтакра.
Йăмăкăмпа пайтах чăрмав курсаттăм.
Эп вăл асапсене каллех хавас чăтма:
Ăна пит хытă юрататтăм.

Фауст

Вăл сан сăнарлă пулнă-тăр, паллах,
Пăхма чăн пирĕшти майлах.

Маргарита

Çуралчĕ вăл аттемĕр вилнĕ хыççăн.
Хамах ăна чун кĕртрĕм эп пăхса.
Аннемĕр, тертлĕ çăмăллануçăн,
Пире кăштах каймарĕ пăрахса.
Анне чирпе нумай выртсаччĕ,
Пĕчик чуна пăхма пултараймастчĕ,
Йăмăкăма сĕт çитерме мана хушатчĕ.
Ăна тăрантараттăм шĕвĕ сĕтпеле.
Ача аван ӳсетчĕ, хам ача пекех
Ман алă, ман чĕрçи çинче кунĕпеле
Вылятчĕ, сиккелетчĕ вăл текех.

Фауст

Ун чух эс чăн телейлĕ пулнă.

Маргарита

Паллах вăл, хуйхине те сахал мар эп курнă.
Çĕрле сăпки те ман çумрахчĕ.
Ман йăмăк сăпкара выртатчĕ.
Ача кăшт сасă парсанах сиксе тăраттăм,
Ăна часрах хам патăма илеттĕм

Е ăшă сĕтпеле тăрантараттăм;
Йĕрет пулсан, ăна çĕклеттĕм,
Çĕрĕпеле йăтса çӳреттĕм.
Ирпе тӳрех ĕçе: кай пасара,
Кĕпе-йĕм ух, ĕçле шав кухньăра;
Çапла иртет кунçул самай,
Ĕнер, паян — ялан пĕр май.
Хăш чух пит ĕшенсе çитетĕн,
Вара ыйхи пылак, хавас çиетĕн.

Иртсе каяççĕ.

Марта

Хусах çынсем эсир пурте пĕр пек:
Сирĕнпе ачаш пулма хĕрарăма инкек.

Мефистофель

Сирĕнешкел хĕрарăма тупсан,
Эпир те хатĕр тӳрленме ялан.

Марта

Пĕлтерĕр тӳррипе мана, эппин:
Сире юратман-и кам та пулин?

Мефистофель

Ват çын çапла каланă: «Ăшă пӳрт тата
Ыр арăм ылтăнпа чăн ахахран паха».

Марта

Ĕç сирĕн çитмен-и юрату патнех?

Мефистофель

Мана таçта та йышăннă хĕпĕртесех.

Марта

Вăл мар! Эсир хытах юратрăр, тен?

Мефистофель

Хӗрарӑмпа шӳтсем тумастӑп эп пӗртте.

Марта

Ҫаллех мана туймастӑр.

Мефистофель

Пит те ӑнланасшӑн!
Эп пӗлтӗм: эсӗр маншӑн ыр пуласшӑн.

Иртсе каяҫҫӗ.

Фауст

Эп пахчана кӗрсен, мана
Эс, ангелӑм, тӳрех палларӑна?

Маргарита

Ҫурмарӑр-и,— кӑшт чикрӗм эп пуҫа?

Фауст

Мана, чипер савним, каҫар!
Ирпе эс чиркӳрен тухсан, сана
Эп ментертӗм, чӑрсӑррӑн пырса.

Маргарита

Чӑнах ментӗм эпӗ малтанах:
Ҫунашкалли пӗртте манпа пулман.
Хальччен те ман ҫинчен усал сӑмах тухман.
Шутларӑм эп: хама тыткалани чӑнах
Ҫунта капла пуҫтах пулма хистерӗ-ши?
Епле ахаль хӗре тӳрех ерме пӗлейрӗ-ши?
Чӑнпа калас-тӑк, хамӑн кӑмӑл
Хӑех сирӗн енне тем ҫаврӑнчӗ пит ҫӑмӑл.
Сире эп ҫилленме пултараймарӑм,
Вара хама хам хытӑ айӑпларӑм.

Фауст

Юратнă тусăм!

Маргарита

Тăхтăр-ха!

*(Салтак тӳми çеçкисене тата-тата пăрахать.)*

Фауст

Мĕскер татан?

Маргарита

Çук, вăйă ку.

Фауст

Мĕнли?

Маргарита

Ан кулăр-ха манран.

*(Пăшăлтататать.)*

Фауст

Мĕскер пăшăлтататан?

Маргарита
*(кăшт илтĕнмелле)*

Савать — савмасть!

Фауст

Эх, пирĕштийĕм!

Маргарита
*(малалла калать)*

Савать — савмасть...

*(Юлашки çеçкине татса пăрахать.)*

Савать! Чăнах!

Фауст

Савать, юратнă тусăм!
Чечек çапла уçса пани
Пулайтăр пирĕншĕн элчел хăй калани!
Вăл юратать, чăнах! Ăнлантăн-ши, ман чунăм?
*(Ăна ик аллинчен ярса тытать.)*

Маргарита

Чĕтретĕп эпĕ!

Фауст

Тусăм, ан хăра!
Сăмахпала ăнлантарма май çуккине,
Эп куçăмпа пăхни, алпа тытни сана
Тӳрех каласа паччăр чăннине!
Эс парăнсам киленĕве çак сехетре!
Ĕнен, телейĕмĕр вăл пырĕ ĕмĕре:
Телей пĕтни — вăл пирĕн ĕмĕт татăлни.
Çук унăн вĕçĕ, çук хĕрри — вăл иксĕлми!

Маргарита ун аллине хытă чăмăртать те вĕçерĕнсе тарать, Фауст пĕр самант шухăшласа тăрать те ун хыççăн утать.

Марта
*(аякран çывхарса)*

Қаç çывхарса килет.

Мефистофель

Қиле каяс пулать.

Марта

Ярас килмест сире халех,
Анчах та пирĕн çавнашкал хула:
Қунти çынсен кӳрше йĕрлессинчен
Пуçне ним ĕç те çук теме юрать.
Хăвна сыхпа тытсассăн та,
Сыхланаймастăн ирсĕр элекрен.
Хай яшăсем ăçта?

Мефистофель

Вĕçтерчĕç çулпала,

Ик лĕпĕш пек.

Марта

Пики юратрĕ, тен.

Мефистофель

Ҫаччийĕ те — хĕрне. Тĕнче çапла иккен!

## 13-МĔШ СЦЕНА

### САДРИ БЕСЕДКА

Маргарита чупса кĕрет те алăк хыçне пытанать, пӳрнине тута патне тытса, хушă витĕр пăхать.

Маргарита

Килет!

Фауст
*(кĕрет)*

Ах, алхасма! Мана витлен! Тăхта!
*(Ăна чуптăвать.)*

Маргарита
*(Фауста ыталаса чуптăвать)*

Савниçĕм! Пĕтĕм чĕререн савап сана!

Мефистофель шаккать.

Фауст
*(урине тапса)*

Кам ку?

Мефистофель

Юлташăр.

Ф а у с т

И, сысна!

М е ф и с т о ф е л ь

Ҫаяс пулать киле.

М а р т а
*(кӗрет)*

Ӑнах, ыр ҫынӑм, пулчӗ халь ҫӗрле.

Ф а у с т

Ман ӑсатса ярас мар-и сире?

М а р г а р и т а

Ах, кирлӗ мар! Анне мана... Сыв пулӑр!

Ф а у с т

Пит шел, ман час каяс пулать. Сыв пулӑр!

М а р т а

Адью!*

М а р г а р и т а

Тепре курнӑҫиччен!

Ф а у с т п а М е ф и с т о ф е л ь тухса каяҫҫӗ.

М а р г а р и т а

Ку ҫын тем те пӗлет! Тӗлӗнмелле!
Эп хӗрелсе тӑрап ун умӗнче,
Ун хыҫҫӑн,именсе, «ҫапла» калап кӑна.
Ача вӗт эпӗ, шеремет!
Манра ӑна мӗскер-ши килӗшет —
Ӑнланаймастӑп эп ҫакна.
*(Тухса каять.)*

---

* С ы в п у л (капла Марта мухтанса калать).

## 14-МĔШ СЦЕНА

### ВĂРМАНТИ ÇĔР ХĂВАЛĔ

Ф а у с т
*(пĕчченех)*

Хăватлă ырă, эпĕ ыйтнине
Пурне те эсĕ патăн. Вутлă сăнарна
Кăтартрăн эс ахальтен мар мана.
Мана эс патăн халĕ парнене
Тĕлĕнмелле çанталăк тĕнчине,
Ăна пĕлме, савма та киленме вăй патăн.
Эп унăн илемне сивлеккĕн сăнама
Килмен çак тĕнчене, сив чунлă хăна евĕр;
Ун тарăн кăкринчи чăн вăрттăнлăхсене,
Пытанчăкне курма хăват мана пиллерĕн.
Вĕрентрĕн эс мана тăвансене курма
Шывра та, сывлăшра та, вăрманта та.
Çил-тăвăл ращара кĕрлет, хуçать,
Катмар чăрăшсене тĕпрен кăклать,
Вĕсем ўкни те ахлатни ку вырăнтан
Сас панăн кĕрлесе килет таçтан —
Ун чух мана илсе пыратăн
Çĕр хăвălне; унта, пĕччен çĕрте,
Хам кăкăрти тĕлĕнтермĕшсене кĕретĕн
Асăмпала уçса куратăп.
Ман куçăмсем умне лăплантаран
Çут уйăх шăвăнса тухать çўл тўпене.
Хура тўпесенчен, йĕпеннĕ катаран
Авал сăнарĕсем сăнасшăн эпĕ çуннине
Йăвашлатса ухаççĕ шурă ĕлкесем пекех.
Курап: чи лайăххи лекмест-ха этеме.
Мана çывхартрăн турăсем патне çитех,
Тупса кăтартрăн эс çул юлташне,
Халь вăл манран пĕртте хăпмасть,
Вăл питĕ кирлĕ. Хăй усал, пуçтах,
Мана хурлать, ним вырăнне хумасть:
Парнўсене санне пахаламасть пачах.
Мана ытарайми илем кăтартрĕ,
Ман кăкăрта вăл юрату çуратрĕ;
Савса йăпаннă чух та халь виçерен тухмастăп,
Анчах, йăпаннă май, каллех савас килет.

М е ф и с т о ф е л ь пырса кĕрет.

Мефистофель

Сана ма кун пек пурăнăç — чăн савнăç?
Мĕнрен пит кăмăллă сĕм вăрманти ку канăç?
Пĕрре капла туса пăхма пырать,
Çайран каллех чуну йăпав ыйтать.

Фауст

Мана ним уссăр тек йўткетиччен
Эс урăх кирлĕ ĕç тупаймастăн-им?

Мефистофель

Ну, ан çиллен. Санпа тавлашиччен
Çаяп: пĕрмай сăмахланни пит лайăх-им?
Эс ăссăр, сĕмсĕр те тўрмен,—
Сана кăнăçтарма ăçтан пĕлен?
Çунĕпеле ĕçлетĕп, канаймастăп,
Вута-шыва ўкетĕп,— юраймастăп.
Çамку çине çырман сана мĕн кирлине.

Фауст

Ак халь тапратрĕ вăл ўпкелеме!
Йăлăхтарса çитерчĕ — эп мухта ăна!

Мефистофель

Эс, çĕрĕн мĕскĕн ывăлĕ, мĕнле
Ман пулăшусăр пурăнăн, çутта курмасăр?
Эс пуш ĕмĕтўсен танатине
Пуç-урупах çакланнăччĕ, камалсăр!
Эп пулăшман пулсан сана,
Эс тахçанах каяттăн тĕнчерен.
Мĕскер пытантăн эс кунти сĕм вăрмана,
Салхуллă ўхĕ евĕр, пĕр-пĕччен?
Е çĕрĕк мăк тата йĕпе чул хушшинче
Шапа пек пурăнма шутларăн?
Хавасланма аван меслет майларăн?
Сан ăшăнта хай докторах иккен!

Фауст

Ӳу пуш ҫӗрте мӗнле тӗлӗнмелле хавал
Эп илнине пӗлме ҫитеймӗ санӑн хал.
Ҫакна эс ӑнланмашкӑн пултарсан,
Мана ӑмсанмӑттӑн, шуйттан пекех, нихҫан.

Мефистофель

Пит пысӑк ырлӑх тупрӑн ҫав, мӗн калӑн!
Пӗрмай выртан йӗпе, мӑкланнӑ чул ҫинче:
Пӗлӗтпеле ҫӗре сӑнатӑн киленсе,
Хӑвна ху турӑ евӗрлех тытатӑн
Мӑн кӑмӑлпа; шыран ҫӗр тӗпӗнче
Мӗн пуррине туллин ӗмӗтленсе.
Ҫак тӗнчере йӑлтах улт кун хушши пулса
Ёлкӗрнине пуҫпа, шухӑшпала туйни;
Мӑнаҫ вӑй-халпала темскер хавасланса
Темле телейпеле питех те киленни,
Ҫут тӗнчене ӑспа ыталаса,
Артаклӑ ҫеҫ юратура пит ирӗлни,
Хам вилӗме пӗтертӗм эп, тесе суйни,
Юлашкинчен,

*(Темле лайӑх мар хускалса илет.)*

Сӑпай пирки мана
Ӳу ирсӗр сӑмаха пит намӑс калама.

Фауст

Тьфу, йӗксӗк!

Мефистофель

Ӳилӗшмест-им сана?
Мӗнле, намӑсланса, мана эс сурмӑн-ха!
Таса чӗрийӗ килӗштернине
Пур чух та юратмасть таса хӑлха!
Ухмах! Ӳирек мӗн чухлӗ ултала хӑвна,
Вӑл санӑн ирӗк, эп чармастӑп,
Анчах ан ман, куна яраймӑн инҫене.
Халь эс аптранине куратӑп:
Паян-ыран сана салху, ӳркев пусать.
Ҫитет! Ав, сан савни асапланать;
Вӑл хуйхӑллӑ, сана кӗтет,

Хытӑ юратнипе хӑрса типет.
Сан юрату малтан хӗрӳ кӗрленӗ,
Юр ирӗлсе пулан шыв евӗрлех,
Ун чӗрине шӑварнӑ вӑл, имленӗ;
Халь шыв юхмасть, кӗҫ-вӗҫ типес пекех.
Сана калле кайни авантарах
Хӑвна ху вӑрманта патша пек туйнинчен:
Ху ҫамрӑк, шеремет савни патне кайса,
Сана питех юратнӑшӑн хӑватлӑрах
Эс йӑпантар ӑна, артак парса!
Ун вӑхӑчӗ вӑрах шӑвать пӗччен;
Чӳречерен пӑхать, сӑнать ҫуртсем ҫинче
Шур пӗлӗтсем шӑвӑннине ҫӳлте.
«Ах, эпӗ кайӑк пулӑттӑм!»— тесе юрлать.
Ҫӗрле те, кӑнтӑрла та вӑл сана кӗтет;
Пӗрре сасартӑк вӑл хытӑ савӑнать,
Тепре хуйха каять, чӗри кӳтет;
Е макӑрса ярать, е чарӑнать.
Сана вӑл хытӑ юрататъ, куратӑп.

Фауст

Ҫӗлен! Ҫӗлен!

Мефистофель
*(хӑй ӑшӗнче)*

Юрать, хамах туятӑп.
Сана ман хамӑн аллӑма илесчӗ!

Фауст

Ҫай! Ҫай кунтан, ман куҫӑмран!
Ан асӑн ун ятне, пӗтесшӗ!
Ман юрату тамалнӑ чӗрере
Ясар шухӑшсене ма вӑратан?

Мефистофель

Эс пуҫӗпех пӑрахнӑн туйӑнать хӗре;
Ҫу ҫакӑн пек мар-и-мӗн ӑннипе?

Фауст

Эп хам кирек ăҫта пулам,
Анчах вăл ҫывăх вĕт мана ялан!
Христос ӳтне[119] вăл тутипе
Сĕртĕнейсен, ҫавна та ăмсанатăп.

Мефистофель

Ҫапла, юлташăм! Эп те ăмсанаттăм
Эсир пĕрле хай роза хушшинче
Пĕр мăшăр пек йăпаннине курсан.

Фауст

Ясар евчи, ҫухалччĕ ман куҫран!

Мефистофель

Ятлаҫ, эс вăрҫнине итлеп кулса,
Хăй турă арҫынпа хĕрарăма пултарнă,
Пĕр-пĕринпе ерме майне кăтартнă,
Вĕсен ĕҫне чыса хурса.
Мĕскер тĕнсе тăран, пăрах хуйха!
Сана савни пӳртне кайма сĕнеҫҫĕ,
Пуҫна касма каска патне чĕнмеҫҫĕ.

Фауст

Мĕн вăл ҫӳлти телей, эп унăн кăкăрĕ
Ҫинче туян телейпеле танлаштарсан?
Ун кăкăрĕ ҫинче канап пулсан,
Мана асапĕ ун пушшех те палăрĕ.
Ман савнăҫăм ҫук, эп камалсăр таркăн,
Ним канăҫ, хӳтлĕх ҫук, эп — каскăн!
Эп чул хысак ҫинчен хысак ҫине
Хăрушшăн сикекен, тĕпсĕрлĕхре пĕтен
Пит шавлă шывсикки пекех иккен.
Манран инҫе те мар, Альп тăвĕ хӳттинче,
Вăл пурăннă, савни, хăй пĕчĕк пӳртĕнче,
Ача пекех айван, таса ĕмĕтсемпе,
Хăй хĕсĕк ҫеҫ тĕнчин нушисемпе.
Мĕскер, усал, шырарăм?
Эп тусене аркатрăм,

Вак чул туса пурне те.
Сана кунпа ҫитмест-и-мĕн элле?
Ăна тата ун чунĕн савнăҫне те
Пĕтертĕм эпĕ, патăм тамăк аллине!
Элчел мĕскер пулмашкăн ҫырнă — пултăр.
Шуйттан, асапăм вăхăтне чакар!
Элчелĕ ун ман пуҫ ҫине халь тултăр!
Эпир унпа пĕрле пĕтсе путар!

Мефистофель

Ҫаллех вĕрет! Ҫаллех ҫунать!
Ухмах, ҫавна кайса йăпат!
Аптранипе ним тăваймасăр
Ĕҫӳ йăлтах арканнă пек шутлан-тăр.
Ҫам яланах хăюллă, пит мухтав ăна;
Ҫун чухлĕ пултăн эсĕ шуйттанпа пĕрле,
Ун шухăшне илмешкĕн вăхăт вĕт сана.
Аптранă шуйттанран ухмах ҫук тĕнчере.

## 15-МĔШ СЦЕНА

### ГРЕТХЕН ПӲЛĔМĔ

Гретхен
*(пĕччен кĕнчеле арласа ларать)*

Ăшчик вăркать,
Чĕрем ҫунать;
Ҫилмест тӳлек
Чуна каллех.

Вăл ҫук ҫĕрте
Виле пурте,
Телей хура,
Тĕнче ҫара.

Ман чухăн пуҫăм
Пăтранчĕ, шанчĕ;
Ман мĕскĕн туйăм
Арканчĕ, ванчĕ.

Ăшчик вăркать,
Чĕрем ҫунать;

Ҫилмест тӳлек
Чуна каллех!

Ӑна курасшӑн
Пӑхатӑп кантӑкран,
Ӑна шырасшӑн
Тухатӑп ҫуртӑмран.

Мӗнле тирпейлӗ
Уттийӗ унӑн,
Мӗнле кӗрнеклӗ
Пӳ-сӑнӗ тусӑн!

Ҫулли — илемлӗ,
Пӑхни — хӗлхемлӗ,
Чӗлхи — хастарлӑ,
Алли — хӑватлӑ!

Ӑшчик вӑркать,
Чӗрем ҫунать;
Ҫилмест тӳлек
Чуна каллех!

Чун туртӑнать
Савни ҫумне,
Вӑл ыткӑнать
Ун ытамне.

Ыталӑттӑм,
Чуптӑвӑттӑм,
Йӑлт ирлӗттӗм,
Тӑп вилӗттӗм!

## 16-МӖШ СЦЕНА

### МАРТА САЧӖ

Маргаритӑпа Фауст.

Маргарита

Сӑмах пар, Генрихҫӑм, мана!

Фауст

Мĕн кирлĕ, парăп!

Маргарита

Эс тӳрех кала:
Ҫав тĕн ҫине мĕнле пăхатăн?
Эс ху чипер ҫынах, анчах
Хăвна тĕн енĕпе ҫăмăл тытатăн.

Фауст

Ку ыйтăва, ачам, ан тапратах.
Пĕлетĕн эсĕ, эп сана саватăп.
Эп ҫывăх ҫыншăн чунăма паратăп.
Ҫам хăйĕн савăнăҫне тупать тĕнре,
Эп ун тĕнне тивместĕп нимĕн те.

Маргарита

Ҫунпах ҫитмест, сан кирлĕ ĕненме.

Фауст

Ҫирлех-ши?

Маргарита

Ах, ман сана мĕнле
Ĕнентерес? Эс аслă ĕҫсене [120]
Хисеплеместĕн.

Фауст

Эп хисеплетĕп вĕсене.

Маргарита

Анчах эс уямастăн. Ак кăнтăр кĕллине
Ҫаймастăн, ҫылăх та каҫарттармастăн, тусăм.
Турра эс ĕненетĕн-и-ха?

Ф а у с т

Савнӑ чунӑм!
«Турра эп ӗненеп» теме хӑюлӑх камӑн
Ҫитейӗ? Ӑслӑлӑхҫӑран, пупран ыйтсан,—
Ялан хурав вӗсенӗн хатӗр саншӑн;
Анчах хуравӗ кулнӑ пек тухать санран.

М а р г а р и т а

Эппин, эс ӗненместӗн?

Ф а у с т

Ангелӑм, ӑнлан:
Кам ун ятне тӳрех пултарӗ калама?
Хӑйса уҫса ҫапла кам калӗ:
«Ӑна эп ӗненетӗп!»
Тулли туйӑмпала кам хӑйӗ:
«Ӑна эп ӗненместӗп!»—
Тесе пурин ҫинче хӑюллӑн кӑтартма?
Пурне те вӑл тытакансҫер,
Пурне упракансҫер,
Пур тӗнчене —
Сана, мана, хӑйне
Тытса тӑмасть-и ытамласа?
Ҫӳлте кӑвак тӳпе карса тӑмасть-и?
Айра ҫак пирӗн хытӑ ҫӗр выртмасть-и?
Пиртен ҫӳлте мӗн ӗмӗрхи ҫут ҫӑлтӑрсем
Ҫиҫсе тӑмаҫҫӗ-и ӑшӑ кӑмӑлпала?
Сан куҫсене ман куҫӑмсем
Пӑхатшӑн чӗрере тата пуҫра
Темтепӗр ҫуралмасть-и ҫавна пула?
Вӗсем пӗр курӑнми тата курӑнакан
Ӗлке пулса тӑмаҫҫӗ-и-мӗн сан тавра?
Ҫакна эс курнипе сан чӗрӳне ҫапла
Таса хаваслӑх каплансан,
Ӑна кирек мӗнле ятпа кала:
Хӑть ырлӑх, турӑ, юрату, чӗре!—
Куна валли ят ҫук пӗрре.
Кунта чӑнах кирли ятра мар,— туйӑм.
Ят вӑл ҫӳлти яр-ҫутӑна
Тӗксӗмлетен сас пек е тӗтӗм пек кӑна.

Маргарита

Ҫу лайӑх, тӗрӗс, тусӑм!
Пуп та ҫапла ӑнлантарать,
Анчах вӑл кӑшт урӑхларах калать.

Фауст

Ҫирек ӑҫта та, чунӑм,
Хӑйсен чӗлхисемпе ҫынсем,
Хӗвел ҫуттийӗнче пурнакансем,
Ҫапла калаҫҫӗ вӗт,— эп те калап ҫаплах.

Маргарита

Йӑлт тӗрӗс пек илтсессӗн ку сӑмах,
Ҫапах пӗр кӑлтӑк пур унта, туятӑп:
Хӑвна эс христиан пекех тытмастӑн.

Фауст

Юратакан пепкем!

Маргарита

Сана хайхи ҫынпа курсассӑн,
Ялан эп хуйхӑрап, асапланатӑп [121].

Фауст

Ҫампа?

Маргарита

Ҫампа пӗрле ҫӳрен.
Ӑна эп кураймастӑп пӗтӗм чӗререн!
Ун ирсӗр питӗнчен хӑранинчен
Ытла эп ӗмӗрте нимрен те хӑраман,
Ун пек тискер ҫынна нихҫан курман.

Фауст

Пачах хӑрушӑ мар вӑл, савнӑ пукане!

Маргарита

Манра юн пăтранать вăл пур чухне.
Эп пур çынна та кăмăллатăп;
Сана кĕтсе эп чунăмпа çунатăп,
Анчах сехре хăпса тухать ун умĕнчех:
Ана туятăп пит усал этем пекех.
Эп тĕрĕс мар калап пулсан, турри каçартăр.

Фауст

Тĕнчешĕн акăш-макăш та кирлех-тăр.

Маргарита

Анчах ун пек çынпа эп пурăнмастăпах!
Кунта килсен, мана вăл яланах
Мăшкăлласа пăхать, ун куçĕнче
Темскер тискерлĕх çутăлать,
Ниме те ăшă кăмăлпа пăхмасть;
«Вăл никама та çĕр çинче савмасть»,—
Тесе ӳкернĕ евĕр ун çамки çинче!
Санпа чухне мана ялан аван,
Пит çăмăл, ăшă, ирĕклĕ, тăпах;
Вăл пур чухне эп аптăрап йăлтах.

Фауст

Эс, пирĕштийĕм, ытлашши туян!

Маргарита

Мана ку туйăм пусрĕ пуçĕпех;
Вăл иксĕмĕр ларан çĕре пырса кĕрсен,
Сана эп юратман пекех туяп, пĕлсем.
Эп кĕлĕ тăваймасп вăл пур чухне вуçех;
Ак çакă, Генрих, манăн чĕрене çурать!
Кала, сана мĕнле пек туйăнать?

Фауст

Ахаль эс кураймастăн пуль?

Маргарита

Ман каймалла. Сыв пул!

Фауст

Хăçан санпа пĕрле эп канăп-ши?
Хăçан сана лăпах ыталаса,
Сан кăкăру çумне хам кăкăра хурса,
Чунпа чун çăт пĕрлешĕç-ши?

Маргарита

Ах, эп пĕччен юлсассăн кĕçĕрех
Сана хам алăка уçаттăм яриех;
Анчах аннеçĕм... Çывăрать пит сискĕн.
Пире анне тытсан, эп, мĕскĕн,
Унтах вилсе выртатăп намăсран.

Фауст

Эс, ангел, ун пирки пачах та ан чăрман!
Пĕр виç тумлам çеç пар шывпа çакна,
Аннӳ час кайĕ вăрăм ыйхăна.

Маргарита

Эп саншăн темĕн те тумашкăн хатĕр!
Паллах, унта эс наркăмăш хушман-тăр?

Фауст

Ун пек канаш параймăп эп сана.

Маргарита

Ах, савнă тусăм! Мĕн майпа мана,
Ман пуçăма каплах хыт çавăртăн?
Эп темĕн те тăвăп сан кăмăлшăн.
Саншăн тăрăшнинчен ытла
Тек тăрăшма та çук пек халь мана.
*(Каять.)*

Мефистофель
*(кĕрсе)*

Ăçта сан упăтŭ?

Фауст

Каллех шăршларăн?

Мефистофель

Эп сирĕн сăмаха пăртак илтсе тăнларăм.
Сире халь, доктор, ŭкĕт пачĕç курăнать [122].
Кун пек урок сире усса юрать:
Хĕрсем пĕлесшĕн кам тĕне чысланине:
Кам ĕненет чун-чĕререн,
Вăл час лекет алла çемçен.

Фауст

Эс аçтаха! Курмастăн: вăл чунĕнче
Таса юратăва çеç кăмăллать!
Сăваплă ĕненŭ тулли ун чĕринче;
Çав ĕненŭ упрать ăна хăйне.
Шеллет ман пек аташнă çывăх çынсене.

Мефистофель

Эх, ытлашши хавасла еркĕн!
Хăвна пике астарнине сисместĕн!

Фауст

Пылчăкпала вутран çуралнă мыскараçă!

Мефистофель

Вăл пит-куçран пĕлме ăста асамçă.
Лара-тăра пĕлмест вăл эпĕ пур чухне:
Тискер ман сăнарта сисет ăс пуррине,
Вара асапланса вăл тертленет,
Мана шуйттан е ырă гени тет.
Хм! Кĕçĕр!..

Фауст

Санӑн мӗн ӗҫ пур унпа?

Мефистофель

Эп те, юлташӑм, кӑшт ҫеҫ йӑпану тупап.

## 17-МӖШ СЦЕНА

### ҪАЛ ПАТӖНЧЕ

Гретхен тата Лизхен кӑкшӑмсемпе.

Лизхен

Хыпар илтмен-и Варвари ҫинчен?

Гретхен

Ҫук. Эп килтен тухса-мӗн ҫӳремен.

Лизхен

Сивилла каласа кӑтартрӗ кӑшт мана:
Вӑл лекнӗ-ха юлашкинчен!
Ан каҫӑрт сӑмсуна!

Гретхен

Мӗскер тата?

Лизхен

Начар япала!
Ҫиет, ӗҫет вӑл икӗ ҫыншӑн халь пӗччен.

Гретхен

Ах!

Лизхен

Ҫавӑ кирлӗ-ха ӑна, хай ҫӑмӑла!
Нумай вӑл ҫакӑнчӗ хӑй каччине майран!

Ташша та уява çӳретчĕ унпалан,
Ķирек ăçта малта пуласшăн пикенетчĕ:
Хăй илемне пăхма ним намăссăр сĕнетчĕ;
Ķаччи канфет та кукăль çитеретчĕ,
Паратчĕ час-часах парне-сарне,
Пĕрле эрех, сăра ĕçетчĕç;
Вылятчĕç, чуптăватчĕç пĕр-пĕрне!
Ак ĕнтĕ кĕтнине туянчĕ:
Халь хĕр чечекĕ çĕре ӳксе таптанчĕ.

Гретхен

Ах, мĕскĕн!

Лизхен

Эс ăна шеллетĕн-çке!
Пире, ав, каçсерен арланă чух анне
Пĕр пусăм та ямастчĕ хăйĕнчен инçе;
Вăл пур — ларать хăй савнипе хапха панче
Е тĕттĕм чух садра унпа çӳрет.
Вăл вăхăт иртнине туйман пуль, шет.
Ак халь таса чиркӳ алтарĕ умĕнче
Ķаçарттару кĕпипеле тăма тивет [123].

Гретхен

Ķачча илет пуль-ха ăна, ханттар.

Лизхен

Ķаччи ун пек ытла тăрлавсăр мар:
Вăл йăпанма каллех тупать пĕр-пĕр çĕртен.
Е хӳрине тӳлерĕ, тен!

Гретхен

Ķу пит начар.

Лизхен

Ķачча илсен те, хăпма çук усал ятран:
Пуç кăшăлне яшсем ватаççĕ çурмаран,
Эпир, хĕрсем, вĕсен хапхи умне
Сапатпăр хылчăк-улăм турамне [124].
*(Ķилне каять.)*

Гретхен
*(килне кайнă май)*

Эп йĕлĕк айăплаттăм мĕскĕн хĕрсене,
Апăршасем кун пек шара лексен.
Çын çылăхне хаяр питлес тесен,
Ăçтан ман тухнă çивĕч сăмахсем?
Ытла та чыссăр туйăннă мана вĕсем!
Мĕн чул хурланă эпĕ вĕсене?
Хама чылай мухтанă ырласа,
Халь хам та лекрĕм çылăхлă ĕçе!
Ах турă! Кун патне астарса
Илсе пыни пит тутлăччĕ, аванччĕ-çке!

## 18-МĔШ СЦЕНА

### ХУЛА СТЕНИ ПАТĔНЧЕ

Крепость стенинчи путăкра хуйхăракан турă амăшĕ кĕлетки, ун умĕнчи кăкшăмсенче чечексем. Гретхен хăйĕн чечекĕсене ыттисен çумне лартать.

Гретхен

Илтсем, эй, ырăскер,
Пурне саваканскер!
Çăлсам мана çак йывăр асапран!
Хĕç тирнĕ чĕрелли,
Пин тĕслĕ асапли,
Эс ывăлу панче тăран.
Эс ашшĕне чĕнен,
Чĕрӳ хаваленчен
Ху асапна ăна яран.
Кам пĕлет,
Мĕн çиет
Ман мĕскĕн чĕреме?
Асап ăна мĕнле туллать.
Мĕскершĕн хытă тунсăхлать,
Пĕр эсĕ пултаран пĕлме.
Этем нумай çĕрте те
Çунать чĕремĕм:
Куç уçаймастăп намăсран.
Килте пĕччен юлсан,

Йĕреп, йĕреп ялан;
Чĕрем, ах, çурăлать-çке çурмаран.

Хам чўрече çинче
Ўстернĕ çак чечексене
Куççулĕпе шăвартăм эп ирпе,
Сана лартса памашкăн илеспе.

Ирхи хĕвел пайăркисем
Ман пўлĕме çиççе кĕрсен,
Эп вырăнăм çинче ларattăм:
Вĕри куççульпеле макраттăм.

Çак намăсран мана хăтар,
Çак инкекре, ах, ан хăвар;
Турамăш, мĕскĕне курсам,
Илтсем, илтсем, мана çăлсам!

## 19-МĔШ СЦЕНА

### ÇĔРЛЕ. УРАМРА, ГРЕТХЕНСЕН ÇУРЧĔ УМĔНЧЕ

Валентин, салтак, Гретхен пиччĕшĕ.

### Валентин

Кĕреттĕм ĕлĕк чух ĕçме сăра
Юлташсемпе; шăв-шав тăратчĕ хупахра;
Чиперккесем çинчен сăмах пыратчĕ —
Кашни хăй савнине мухтатчĕ:
Ун савнинчен хитри çук имĕш тĕнчере.
Ларattăм эп сăпайлăн кĕтесре,
Пакăлтисем сăмах пĕтериччен кĕтсе,
Мăйăхăма пĕтĕркелесе.
Унтан тулли стаканăма тытаттăм,
Ана çўле йăтса, сăмах калаттăм:
«Кама кам килĕшет —
Ман хамăн йăмăкшăн ĕçес килет.
Çак çĕршывра ман йăмăкран
Хитрийĕ пур-ши — Гретхенран?»
Вара пуçлатчĕç кăшкăрма:
Чăнах та çук унран чиперрине тупма.
Вара мухтанчăксем çыртатчĕç чĕлхине.
Çук, апла мар халь пĕтĕмпе;
Хыçса лар ĕнтĕ ĕнсўне!
Кашни йăх-ях манран кулма пăхать,
Пўрнипеле тĕллет văл ман çине:

Ҫунта эп айӑплӑ пекех шутлать.
Эп лар чӗнмесӗр, парӑмҫӑ пекех:
Вӗсенӗн сӑмаххи чӑнах,
Элекӗ ҫук унта пачах!
Вӗсен кашни сӑмахӗ те хӑех
Мана вута перет, тар кӑларать,
Анчах та вӗсене ватса тӑксассӑн та
Ҫу суйине, эх, кӑтартма пулмасть!
Пӑх-ха, килеҫҫӗ иккӗн пытанса кунта!
Ман йӑмӑк еркӗнӗ мар-ши тата?
Вӑлах пулсан, халех ӑна яп! ҫухаран.
Ҫук! чӗрӗлле ямастӑп аларан!

Фаустпа Мефистофель кӗреҫҫӗ.

Фауст

Ҫӳлте чиркӳ риза пӳлӗмӗнчен *
Сӳнми лампада йӑлкӑшать.
Вӑрахӑн вӑл сӳнет те, пур енчен
Сӗм-тӗттӗм пухӑнса пусать.
Ҫаплах ман кӑкӑра
Ҫарса илет хура кара.

Мефистофель

Чӗрем ман хӑвӑрттӑн тапать:
Вӑл халь ҫурхи каҫпа кушак ами патне
Шуса пыран кушак аҫин пек туйӑнать.
Ман шухӑшсем те пит аван пурте:
Е аскӑнҫӑ, е вӑрӑ мыскари вӗркет.
Ман пӗтӗм халӑм пит хавас кӗтет
Вальпургин ытарми каҫне.
Ак виҫмине ку шеп уяв ҫитет;
Вӑл каҫ чӑнах ыйхӑ пачах килмест.

Фауст

Ун чух ҫӗр айӗнчен хайхи
Инҫе ҫуталнӑ вайкӑт тухӗ-и?

Мефистофель

Халь кӗтмелли нумай юлмарӗ сан:
Мул хуранне туртса эс кӑларан.

* Риза пӳлӗмӗ — чиркӳ тумӗсем усрамалли пӳлӗм

Пĕркун эп пăхнăччĕ ятăрласах:
Унта çут талерсем[125] лăках.

Фауст

Ман савнине капăрланма
Çĕрĕсемпе ал суллисем пур-и пама?

Мефистофель

Унта эп куртăм хаклă япала:
Вăл ĕнчĕ мăй сыххийĕ пулмалла.

Фауст

Питех аван! Мана кичем чăнах
Каймашкăн ун патне пуш алăпах.

Мефистофель

Хăш чух сире, ман шухăшпа, юрать
Парнесĕрех курма рахать.
Çӳлте йăлтăртататççĕ çăлтăрсем;
Вĕсенĕн çуттинче шӳтпе тĕлĕнтерем:
Эп Гретхена юрлам сăваплă юррăма.
Ăна илтсе часах вăл тухĕ урама.

*(Гитара каласа юрлать.)*

Ан кĕт ирех
Ху савнине
Çунан чĕрен
Эс алăк умĕнче, Катринхен *!
Кĕрех, кĕрех
Эс ун патне!
Хĕрле кĕрен —
Тухаймăн каялла хĕр халлĕн.
Сыхлан чечен
Сăмахсенчен!
Вăл киленсен,
«Киле чипер кай»,— тет кайран.
Çук, ан ĕнен
Ун сăмахне,

* Катринхен — Кĕтерин, Кĕтерне.

Илме пикен
Часрах венчет ҫӗрри унран.

Валентин
*(малалла тухса)*

Ҫама унта эс астаран,
Усал йӗкехӳре тытан? [126]
Малтан вататӑп купӑсна,
Унтан вара — купӑсҫине!

Мефистофель

Гитара ман йӑлтах арканчӗ.

Валентин

Пуҫу та ак ҫаплах саланӗ.

Мефистофель
*(Фауста)*

Ан парӑн, доктор! Хӗҫ кӑлар!
Мала! Хӗстер ӑна! Тӑр юнашар!
Хӑюллӑ чик хӗҫӳпеле! Ан чак!
Эп хирӗҫ тапӑнатӑп. Ак!

Валентин

Тӑр хирӗҫ!

Мефистофель

Эпӗ хатӗрех!

Валентин

Татах!

Мефистофель

Халех!

Валентин

Манпа вӑрҫать чӑн-чӑн шуйттан! [127]
Мӗн пулчӗ? Аллӑм кайрӗ, ак, халран.

Мефистофель
*(Фауста)*

Чик!

Валентин
*(ӳкет)*

Пĕтрĕм!

Мефистофель

Ҫу ухмах лăпланчĕ!
Часрах, часрах кунтан тарасчĕ!
Кĕҫех ак пулăшу персе ҫитет.
Полиципе ĕҫе майлаштарап хамах,
Анчах ман турă судĕнчен[128] тарас килет.

Каяҫҫĕ.

Марта
*(чӳречерен)*

Часрах кунта!

Гретхен
*(чӳречерен)*

Ҫурта ҫут-ха часрах!

Марта

Вăрҫаҫҫĕ! Вĕлереҫҫĕ! Хурах!

Халăх

Ав, ав, пĕри выртать. Шăпах!

Марта

Тытас! Чуниллисем ăҫта?

Гретхен
*(пӳртрен тухса)*

Ҫам выртать?

Халӑх

Аннӳн ыр ывӑлӗ кунта.

Гретхен

Эй, пӳлӗхҫӗм! Мӗнле инкек!

Валентин

Вилетӗп! Вилӗм ҫитрӗ, эх!
Хӗрарӑмсем, ан ӳлӗр, килӗр!
Ҫывхарӑр кунтарах,
Сире калам сӑмах.
Ан шавлӑр... итлӗр:

Пурте ун тавра тӑраҫҫӗ.

Эс питӗ ҫамрӑк, Гретхен,
Айван, пӗлӳ ҫук санӑн.
Начар ҫул-йӗр суйларӑн,
Эс пултӑн вӑрттӑн еркӗн;
Тӳрех калам, мӑнтарӑн:
Ҫай вӑл ҫулпа кӗретӗн.

Гретхен

Ах, турӑҫӑм! Пиччем! Мӗн аташан?

Валентин

Турра эс мӗншӗн асӑнан?
Мӗн пуласси пулчех,
Мӗн пулмалла — вӑл пулатех.
Малтан ҫӳрен эс пӗринпе,
Унтан пуҫлатӑн тепринпе,
Вӗсем вуник таран пулсан —
Вара хула сӑки пулса тӑран,
Ҫын намӑсӗ ҫуралсанах

Пит пытанса çӳрет, шăпах;
Ķаçхи сĕм-тĕттĕмпе вăл витĕнет.
Ун чух ăна кăнтма та йывăр мар,
Эпир ăна пăчлантарма та хирĕç мар.
Анчах вăл ӳснĕçем ӳсет;
Ӳссе çитсен, кун çутипех çӳрет,
Хăй сăнсăртан вăл йĕрĕнмест.
Ун пичĕ мĕн тери хăрушăрах,
Ăна ун чухлĕ çутă кирлĕ ытларах.
Эп пит аван пĕлеп: вăл вăхăт çитетех;
Мур чирĕнчен хăранă еверлех,
Ак тарĕç, аскăн хĕр, санран вĕсем.
Çын сан çине пăхсассăн, пăтранса
Ķаять чуну-чĕрӳ намăсланса,
Çынсем çине куçна уçса пăхаймăн,
Эс малашне çакаймăн ылтăн вăчăра,
Илемлĕ çухапа вĕçеймĕн ташăра,
Чиркӳ алтарĕ умĕнче тăраймăн![129]
Уксах-чăлах, ыйткалакан таврашĕнче
Пытанăн эсĕ ют хӳшĕсенче!
Сан çылăхна турă каçарĕ, тен,
Çавах ылханлă эс мĕн виличчен!

Марта

Ķапла хаяр ылханиччен
Эс ӳкĕн çылăхусенчен!

Валентин

Ах, аскăн евĕчи, аяк пĕрчисене
Эп шĕкĕлчĕттĕм санăнне хĕрсех.
Шанатăп, турă ман çылăхсене
Вара каçарĕччĕ ытлашшипех.

Гретхен

Пичче! Пиччем! Мĕнле асап!

Валентин

Ан макăр, эп сана калап!
Чысна çухатрăн та, вара тӳрех
Чиксе амантрăн манăн чĕрене.

Пиччӳ каять халь турӑ аллине
Ним шиксӗр, тӳр салтак пекех.
*(Вилсе каять.)*

## 20-МӖШ СЦЕНА

### СОБОРТА

Чиркӳ кӗлли пырать, юрлаҫҫӗ, орган калаҫҫӗ. Гретхен халӑх хушшинче. Ун хыҫӗнче Усал Сывлӑш.

Усал Сывлӑш [130]

Эс ӗлӗк, Гретхен, Алтарь патне
Таса чунпа килеттӗн,
Арканнӑ кӗнекери кӗлӗсене
Вула-вула ачашшӑн эс калаттӑн;
Эс турӑпа ача вӑййи ҫинчен
Ӑшра уйлаттӑн.
Эх, Гретхен!
Мӗн пулчӗ сан пуҫна?
Мӗнле хӑрушӑ айӑп
Ҫашлать сан чӗрӳне?
Аннӳшӗн кӗлтӑватӑн?
Сана пула
Вӑл лекнӗ вӗҫӗмсӗр хӗне!
Сан алӑку ҫинче кам юнӗ? [131]
Чӗрӳ айне мӗн юлнӑ?
Мӗскер унта йӑшӑлтатать,
Хӑй пуррипе сана тек хӑратать?

Гретхен

Ах, хуйхӑ!
Мана пит пусрӗҫ шухӑшсем,
Вӗсем кӗпӗрленеҫҫӗ ӑшӑмра.
Мӗнле ман хӑтӑлас-ши вӗсенчен!

Хор

Dies irae, dies illa
Solvet saeclum in favilla. *

* Ҫатоликсен хӑрушӑ суд ҫинчен калакан юрри, вӑл чӑвашла. «Ҫилӗ кунӗ, ҫак кун тӗнчене пӗтерет, ӑна кӗлтӑвать». Ҫу гимн вилнисене асӑнакан кӗлле кӗрет. Вӑл ҫылӑхлӑ ҫынсене хӑрушӑ судра мӗн кӗтни ҫинчен калать.

Орган сассисем

Усал Сывлӑш

Ӳк хӑраса!
Тӳт кӑшкӑртать!
Чӗтреҫҫӗ тупӑксем!
Хӑрушӑ сасӑпа
Чуну сан чӗрӗлсе
Кӗлрен тӑрать.
Асапсене сиссе
Вӑл та чӗтрет!

Гретхен

Часрах каясчӗ ман!
Хӑруш орган сасси
Ман кӑкӑра хӗсет,
Вӑл сывлӑша пӳлет.
Ҫак юрӑ чӗрене
Тирет тӗпрен.

Хор

Judex ergo cum sedebit,
Quidquid latet, adparebit
Nil inultum remanebit. *

Гретхен

Ах, пӑчӑ-ҫке!
Мана мачча пусать!
Тухасчӗ ирӗке!
Уҫ сывлӑша, уҫҫа!

Усал Сывлӑш

Пытан — эс пытараймӑн
Ху ҫылӑхна та намӑсна!
Уҫ сывлӑш-и халь, ҫутӑ-и?
Хуйхӑ сана!

* Ун чух судья ларать те, мӗн пытанса тӑни ун умне йӑлтах курӑнать, нимӗн те тавӑрмасӑр юлмасть.

Хор

Quid sum miser tunc dicturus,
Quem patronum rogaturus,
Quum vix justus sit securus? *

Усал Сывлăш

Çветтуй çынсем
Пичĕсене санран пăраççĕ,
Тасаскерсем, сана
Алă тăсса пама хăраççĕ.
Хуйхă!

Хор

Quid sum miser tunc dicturus?**

Гретхен

Парсам, инке, кĕленчӳне!
*(Ăнран кайса ӳкет.)*

## 23-МĔШ СЦЕНА

### АМĂР КУН. ХИР.

Фаустпа Мефистофель.

Фауст

Пĕчченех вăл! Аптăраса çитнĕ! Çĕр çинче асапланчĕ, йăнăшпа супрĕ, халĕ — тĕрмере! Йывăр асап тунă çын пек хупса лартнă ăна. Çаксем пурте çав тери таса, йăмшак, ачаш чун çине тиенчĕç. Ак мĕн пулса тухрĕ. Эсĕ, ирсĕр сутăнчăк, çаксене пурне те манран пытарса тăнă! Халь намăссăр, хĕпĕртесе савăнма пултаратăн, хăвăн усал куçусене тискер хаярлăхпа çаврăнкаласа тăратăн! Тăхта! Тăр кунта, ман умра, асаплантар мана, йĕрĕнчĕк! Тĕрмере! Тӳсейми асапра! Усал вăйсен тата çын чунне

* Эпĕ, телейсĕр, ун чухне мĕн калăп? Тӳрĕ çын та аран çăлăнать пулсан, кама хута кĕме тархаслăп?
** Мĕскер калăп эпĕ, мĕскер, ун чухне.

ним хĕрхенмен тӳресен аллинче! Ҫав вăхăтра эсĕ мана киревсĕр киленӳсемпе йăпатма хăтлантăн, вăл никамран пулăшу илеймесĕр пĕттĕр тесе, ун хĕн-хурне манран пытартăн.

Мефистофель

Вăл анчах мар кун пекки.

Фауст

Йытă, тискер кайăкран усал йĕксĕк! Пур ҫĕрте те пур ырă сывлăш![133] Ăна хăйĕн ĕлĕкхи тумтирне тăхăнтарт, каҫсерен лĕскесе ҫӳресе, ҫул ҫинчи ним шухăшсăр ҫынна ҫултан ааштарса, хулпуҫҫинчен уртăнса ҫĕре ӳкерне чухнехи анчăк тумĕ ăшне каллех персе чик! Ăна хăй юратнă сăнарне пар та ман умра ҫĕре сарса пăрах, эпĕ ăна, киревсĕре, хам урасемпех таптаса лӳчĕркем!.. Вăл анчах мар!.. Ху мĕн каланине чухлатăн-и? Этем чунĕ чăтайми асап, хĕн! Ҫав тери хуйхă, ҫав тери асап нумай ҫын пуҫĕ ҫине мĕнле яма пулать? Пĕри те пулин ҫакăн пек хуйха чăтса курнă пулсан, унăн асапĕ ҫылăхсене каҫаракан Ĕмĕрхи тӳре умĕнче ыттисен пурин ҫылăхне те каҫарттараймасть-и вара? Ҫак пĕрин хуйхине курни ман пуҫ мимине чăтма ҫук асаплантарать. Эсĕ пур, ним те пулман пек шăлна йĕрсе, темиҫе пин ҫыннăн элчелĕ ҫавăн пек тесе, ăшра кулса тăратăн!

Мефистофель

Эпир каллех ҫивĕч ăсăн чиккине ҫитетпĕр, халăх калашле, ăсран пăс тухать! Ҫала-ха: пирĕнпе ҫыхланнине чăтаймастăн пулсан, ма пирĕнпе ҫыхланма шутларăн? Пуҫ ҫаврăнассинчен хăратăн пулсан, мĕншĕн вĕҫме тытăнас? Ҫала-ха кам ерсе кайнине: эпир санпа е эсĕ пирĕнпе?

Фауст

Эй, хăвăн сăхă шăлна ан йĕр! Эпĕ вĕсенчен йĕрĕнетĕп. Мана хăвăн сăнна курма тивĕҫлĕ тунă тĕлĕнмелле аслă Ырă! Эсĕ манăн чĕрепе чунăма куратăн! Ҫак намăссăр юлташпа, кама та пулин усал тăвасшăн е пĕтересшĕн пĕрмай ҫунаканскерпе, вĕлернинче киленӳ шыраканскерпе, эсĕ мĕншĕн мана ҫыхлантартăн?

Мефистофель

Эсĕ час каласа пĕтеретĕн-и?

Фауст

Ҫăл ăна, е сана хуйхă пулать! Йывăр ылхану сан пуҫу ҫине пиншер ҫуллăха!

Мефистофель

Мана тавăру сăнчăрне татма, ун уҫҫине уҫма ирĕк паман. «Ҫăл ăна!» Ҫалама ҫăмăл. Ҫам ăна пĕтес патне ҫитерчĕ? Эпĕ е эсĕ?

Фауст тарăхса кайнипе тавралла пăхкалать.

Ҫиҫĕмрен ярса тытасшăн! Аван, ăна сире, вилĕмлĕ мĕскĕн ҫынсене, паман. Хирĕҫ калакан айăпсăр ҫынна пĕтерсе хурасси — вăл тирансен меслечĕ,— вĕсене аптăратса ҫитерсен усă куракан меслет.

Фауст

Илсе кай мана унта! Ăна ирĕке кăлармалла.

Мефистофель

Хăвна кĕтекен хăрушлăх ҫинчен эс шухăшласа пăхрăн-и? Асту: эсĕ хулара ху тунă айăпăн юнлă йĕрне хăвартăн вĕт! Вĕлернĕ вырăнта тавăракан сывлăшсем вĕҫсе тăраҫҫĕ, вĕлерекенĕ унта таврăнасса кĕтеҫҫĕ.

Фауст

Мĕн калăн тата эсĕ? Пĕтĕм тĕнче вилĕмĕпе ылханĕ сан пуҫу ҫине килтĕр, тĕнче тĕлĕнтермĕшĕ! Илсе кай, теҫҫĕ сана, ирĕке кăлар ăна!

Мефистофель

Юрать, эп сана илсе кайăп. Итле, эпĕ мĕн тума пултаратăп: пĕлĕтпе ҫĕр вăйĕсем пурте ман алăра мар вĕт. Эпĕ тĕрмеҫĕсен ăстăнне пăтратма пултарăп, эсĕ тĕрме ҫăрисене ил те ху аллупа этем аллипе, ăна тĕрмерен ирĕке кăлар. Эпĕ сыхласа тăрăп, сана илсе каякан асам

лă лашасене хатĕрлесе тăратăп. Эпĕ çаксене анчах тума пултаратăп.

Фауст

Унта часрах, халех!

## 24-МĔШ СЦЕНА

### ÇĔРЛЕ. УÇĂ УЙ

Фаустпа Мефистофель хура лашасемпе вĕçтерсе пыраççĕ.

Фауст

Ма пуç касси патне пуçтарăннă вĕсем? [134]

Мефистофель

Пĕлместĕп эп, анчах темскер тăваççĕ.

Фауст

Улхаççĕ те анаççĕ, çаврăнаççĕ.

Мефистофель

Вĕсем — тухатмăшсем.

Фауст

Тем тухатаççĕ?

Мефистофель

Ан тив, тухатчăр! Ман хыççăн, малалла!

## 25-МĔШ СЦЕНА

### ТĔРМЕ

Фауст çăра çыххи тытнă, тимĕр алăк патĕнче.

Фауст

Эп ютшăннă, сехре мана пусать:

Мĕнпур этем асапĕ ман ҫинче.
Ҫак тимĕр алăк хыҫĕнче
Пĕр айăпсăр чун сăнчăрта ларать.
Мĕскер тăхтатăн, кĕме хăймастăн?
Саван куҫа курма хăратăн?
Васка! Эс хăрани — ăна чĕр вилĕм!
Часрах ҫăл! Ан хăра эс нимĕн!

*(Ҫăрана ярса тытать.)*

Маргарита
*(шалта юрлать)*

Анне мана вĕлерчĕ [135]
Ирĕклĕрех асасшăн!
Усал атте пĕтерчĕ
Йалт кăшласа апатшăн!

Манăн пĕчĕк йăмăкăм
Шăммăмсене пуҫтарнă,
Йĕпе ҫĕре пытарнă;
Вăрман ҫерҫи пулайрăм,
Юта вĕҫсе каятăп!

Фауст
*(алăка уҫса)*

Савниййĕ ун кунтах, ҫапах та вăл туймасть;
Айне пăрахнă улăмĕ чăштăртатать,
Тăллана сăнчăрĕ чăнкăртатать.

*(Пӳлĕме кĕрет.)*

Маргарита

Килеҫ! Ҫитет вилес самант!

Фауст
*(хуллен сасăпа)*

Шăп, ан шавла! Сана савни ҫăлать.

Маргарита
*(ун ури патне чĕркуççи çине тăрса)*

Хĕрхен мана! Асапăма эс çăмăллат!

Фауст

Шăпрах. Хуралçă вăранать.
*(Ун сăнчăрне çапса ватма пуçлать.)*

Маргарита
*(чĕркуççи çинче)*

Кам ирĕк пачĕ-ха сана,
Палач, çапла хĕн кăтартма мана?
Ирччен пар пурăнма! Тăхта!
Ыран вĕлермелле вĕт! Мĕн ытла
Ирех килсе кĕрен кунта?.
Эп çамрăк, çамрăк! Ак ыран ирпе
Сасартăках вилеп чĕр вилĕмпе!
*(Ура çине тăрать.)*
Чиперччĕ эп, çавна пула
Пĕтетĕп; тусăм пурччĕ çывăхра,
Халь вăл манран пит катара!
Пуç кăшăлĕ арканчĕ, çеçкисем саланчĕç...
Вăйпа ан чăмăрта капла!
Мана сан вилĕмрен çăласчĕ.
Хĕрхен, сана эп ним усал туман,
Хам ĕмĕрте сана пачах курман.

Фауст

Кун евĕр асапа мĕнле чăтас?

Маргарита

Халех пырап, пăртак тăхта!
Ман ачана çеç тăрантарас:
Ăна йĕрсе йăтса çӳрерĕм çĕрĕпе,
Вĕсем, мурсем, туртса та илчĕç-çке ирпе.
Хăйсем мана калаççĕ: эс ăна вĕлернĕ,
Сĕм вăрмана кайса, ав, пенĕ.
Пĕр ирсĕр юрă хывнă ман çинчен...[136]
Вăл юмахра пулни иккен.

Апла ма тăрăхлас манран?
Эп унашкал никçан пулман!

Фауст
*(ун умне чĕркуçленсе ларать)*

Сан юратни уру панчех выртать,
Сана вăл тыткăнран çăлать.

Маргарита
*(унпа юнашар чĕркуççи çине ӳксе)*

Часрах чĕркуççи çине тăрар,
Ырăсене хыт йăлăнар!
Пăх-ха, пусма панче,
Сак айĕнче,
Вут ялкăшать,
Унта чĕр тамăках çунать.
Хаяр шуйттан
Юнать унтан!

Фауст
*(кăшкăрса)*

Гретхен! Гретхен!

Маргарита
*(тăнласа итлет)*

Ку тусăм сасси!
*(Сиксе тăрать. Сăнчăр ӳкет.)*
Ун сассиех ку, ун сасси!
Илтетĕп, вăл мана чĕнет!
Çăлать, пулатăп ирĕкре! Кĕтет!
Ăçта вăл? Ун патне вĕçетĕп хыпăнса,
Чĕри çумне эп тĕршĕнеп канса.
Мана вăл чĕнчĕ: «Гретхен!» Вăл кунтах.
Усал-тĕсел шăй-шайĕ, тамăк шавĕнче
Вăл хытă чĕнчĕ çакăнтах;
Эп илтрĕм хам савнийĕн сассине:

Фауст

Кунта эп!

Маргарита

Эс кунта? Қала татах!
*(Ăна ыталаса.)*
Қунта эс! Эс кунта! — Ман асапсем ăçта?
Мана çăлма кунта халь килтĕн эсĕ!
Эп çăлăнтăм! Ак пĕр урам кĕтесĕ —
Қунта сана эп чи малтан тĕл пултăм.
Ак пахчине те куртăм;
Сана эп Мартăпа кĕтеттĕм, ав, унта...

Фауст
*(ăна туртса)*

Атя! Атя!

Маргарита

Тăхта кăштах!
*(Ун çумне пăчăртанать.)*
Мана санпа ытла аван!

Фауст

Васка! Часрах!
Пĕтетĕн вĕт васкамасан!

Маргарита

Е чуптума та эс пĕлместĕн?
Эс мансăр пит сахал пулсаттăн.
Епле час чуптума та мантăн?
Ма эп сан умăнта чĕтретĕп?
Ĕнер çеç сан сăмаххунта, санрах,
Райри пек, пĕлĕтсем çинчи пекех туяттăм,
Чуптунă чух эс хĕскĕч пек хыт пăчăртаттăн.
Чупту, чупту мана часрах!
Тута тумастăн,—
Эппин, хам чуптăвам сана!
*(Ăна ыталаса илсе чуптăвать.)*
Ах, сан туту пит сивĕ! Сан хĕрӳ ăçта?
Санран ăна туртса кам илнĕ?
Ах, хуйхă, хуйхă-çке мана!
Элле хам та эп сивĕ?
*(Унран пăрăнать.)*

Фауст

Атя! Ман хыççăн пыр! Савни, ăнлан!
Сана эп юратап чунтан!
Атя манпа халех кунтан!

Маргарита

*(ун енне çаврăнса)*

Ку эсĕ-и вара? Чăнах та эс пулан?

Фауст

Чăнах! Атя часрах!

Маргарита

Мана çăлатăн-и?
Мана чĕрӳ çумне хыт пăчăртатăн-и?
Мĕнле манран эс хăрамастăн?
Пĕлместĕн-и,— кама çăлатăн?

Фауст

Атя! Часрах каяр! Тул çутăлать.

Маргарита

Ах! Эпĕ аннене пĕтертĕм,
Хам ачана вĕлертĕм!
Ман хĕр вăл—сан хĕрӳ пулать...
Ия, вăл санăн та! Курап — ку эсĕ!
Пар аллуна! Ку — тĕлĕк мар?
Аллу саннах; анчах ăна шăл-ха вăр-вар:
Пăх-ха,— ун çийĕнче юн тĕсĕ! [137]
Мĕн турăн эс? Часрах тискер хĕçне
Пытар хăй йĕннине!

Фауст

Мĕн пулнине тин таврăймăн,
Васка: пире эс тыттаратăн.

Маргарита

Çук, пурăн, пурăн, савнă тусăм!
Итле, эс авăт виçĕ пусă...
Тул çутипе тивет вилме...
Пĕр пуссине хур аннеме,
Унпа юнашар ман пиччеме,
Мана аяккарах, анчах кăшт çех.
Эс ачама хур кăкăрăм çинех:
Қам выртĕ унсăр халь манпа пĕрле?
Санпа пĕрле выртма раххатчĕ-çке мĕнле?
Аса килеççĕ-и телейлĕ çав кунсем сана?
Анчах вăл телейсем килеймĕç халь калле,
Эс, хаклă тусăм, хăвалатăн пуль мана?
Çапах эс ман умра тăратăн,
Мана ачашшăн, кăмăллăн пăхатăн!

Фауст

Мана саватăнах пулсан, атя манпа!

Маргарита

Ăçта-ха?

Фауст

Ирĕке!

Маргарита

Унта халь шăтăк
Кĕтет пулсан, çав уç çулпа атя
Леш тĕнчери ĕмĕрлĕх шăплăх
Патне, анчах та малалла — пĕр пусăм та...
Қаятăн эсĕ? Генрих, ман санпа пырасчĕ!

Фауст

Пыма пултарăн! Алăк та уçах.

Маргарита

Çук, каясси пулмасть. Ман шанчăк тарчĕ.

Ма-ке тарас? Мана кӗтет хурал унтах...
Қапла ҫукпа мӗн пуранас — асап!
Қиревсӗр кӑмӑлпа ӑҫта каяп?
Ют халӑх хушшине кичем тухма...
Вӗсем мана шыраҫҫӗ, ав, тытма.

Фауст

Апла эп те юлатӑп.

Маргарита

Васка, эп йӑлӑнатӑп!
Ҫӑл мӗскӗн ачуна!
Тӳрех чуп аната,
Ҫӑлкуҫ патне.
Унта сукмак тупса
Кӗр эс вӑрман ӑшне.
Сулахайра кӗпер унта;
Ун айӗнче ача выртать,
Йӗрет вӑл, кӑшкӑрать,
Шывра юхса пырать,
Тухма хӑй хӑтланать,
Аллисене тӑсать,
Тыт, ҫӑл часрах!

Фауст

Тӑна кӗрсем! Самант паха кунта:
Пӗр пусӑм ҫеҫ — эпир тулта!

Маргарита

Ту урлӑ пирӗн, ах, иртесчӗ хӑвӑртрах:
Унта пӗр чул ҫинче анне ларать,
Шӑмшакӑм тӑрӑх сивӗ сӑрлататать...
Унта пӗр чул ҫинче анне ларать,
Ман еннелле пуҫне сӗлтет,
Куҫне вӑл уҫаймасть, пуҫне те ҫӗклеймест...
Вӑл вӑранмасть, нумай ҫывӑрать.
Пире килентерме ӑна ҫывратнӑ...
Эмел парса ӗмӗрне татнӑ.
Телей саманчӗсем, ах, тарчӗҫ;
Вӗсем ӑҫта-ши кайрӗҫ?

Фауст

Ни йăлăнса май çук тартма, ни сăмахпа;
Эппин, сана илсе каяп вăйпа!

Маргарита

Ма-ке вăйпах? Ан тив мана!
Ҫапла хытах ан тыт-ха ман алла!
Пурне те эп тăваттăм ыр кăмăлпа.

Фауст

Ав кун çути килет! Савним, кĕр-ха тăна!

Маргарита

Кун? Юлашки кун! Вилĕм кунĕ!
Вăл пулмаллаччĕ манăн туйăн кунĕ!
Асту, савни, çынсем эп сан пулни çинчен
Ан пĕлччĕр. Ман пуç кăшăлĕ арканчĕ:
Телейлĕ пуç çине инкек персе, ав, анчĕ!
Тăхта, эпир пĕрле тĕл пулăпăр, енчен,
Анчах та ташăра мар,— çук, ăна пӳрмен!
Ав, халăх урамра кĕпĕрленет,
Урамăн уççине вăл шăнăçма пĕлмест...
Ав, чан çапать... Ак тӳре
Хăй туйине шарт! хуçрĕ çурмаран...[138]
Ман алсене тытаççĕ, çыхрĕç, ак тӳрех
Мана халь пуç каски патне туртаççĕ!
Пурте чĕтреççĕ-мĕн хăранăран:
Мана касас пуртта сулса яни
Хăйсен пуçне çак шăплăхра касни
Пекех вĕсем пурте туяççĕ.
Эшкер тăрать шăпах,
Ҫăва шăтăкĕнчи майлах!

Фауст

Ах, мĕншĕн эп çуралнă-ши?

Мефистофель
*(алăкра)*

Часрах! Мĕн сăмахлатăр ытлашши!

Тул çутăлать. Пире тытаççĕ!
Ман ыр утсем ташлаççĕ,
Хăранипе ураççĕ.

Маргарита

Вăл кам çĕр айĕнчен ӳссе хăпарчĕ?
Вăл! Вăл! Мĕн кирлĕ ку таса çĕрте ăна?[139]
Вăл йĕрĕнчĕк ман чуншăн халĕ!
Ăна эс хуш кайма кунтан!

Фауст

Часрах! Пурăнмалла вĕт сан!

Маргарита

Сан аллуна эп, турă сучĕ, парăнатăп.

Мефистофель

Часрах! Атя ман хыççăн е каятăп.

Маргарита

Эй, турă, эпĕ санăн! Эс мана çăлсам!
Пирĕштисем, çӳлтен вĕçсе анса,
Çунатсемпе мана хупăрлăрсам!
Эс, Генрих, пит хăрушă-çке мана!

Мефистофель

Вăл пĕтрĕ!

Сасă çӳлтен

Çук, çăлăнчĕ!

Мефистофель
*(Фауста)*

Часрах ман хыççăн!
*(Фаустпа пĕрле çухалаççĕ.)*

Маргарита сасси
*(тĕрмерен хуллен)*

Генрих! Генрих!

# ИККЁМЁШ ПАЙЁ

# ПĔРРЕМĔШ АКТРАН

## ИЛЕМЛĔ ВЫРĂН

Халран кайнă **Фауст** ешерекен çаран çинче канăçсăр ыйхăласа выртать. Ĕнтрĕк вăхăчĕ. Фауст тĕлĕнче чипер ачасем пек ырăсен ушкăнĕ вĕçсе тăрать.

**Ариэль**[140]

*(Эол арфисем каланă май юрлать)*

Сиплĕ çумăр йĕпетсессĕн
Çуркунне чечексене,
Хир кăваррăн витĕнсессĕн
Çĕнĕ ешĕл тумтирне,—
Пĕчĕк ырăсен хăвачĕ
Сип кӳрет пур инкекрен,
Ыр-усаллине пăхмасăр,
Сыватать пур чир-чĕртен.

Эсир кунта вĕçсе килсемĕр ушкăнпа,
Эльфсен таса ĕçне тусамăр кăмăлпа:
Унри хаяр кĕрешекен вăйне пусарăр,
Шеллевсĕр тирекен ӳпкев йĕпне лăшлатăр,
Тасатăр ун асне элчел сехрисенчен.
Тăватă срок парать сире каçхи тĕнче —[141]
Таса тивĕçĕре халех тусамăр!
Пуçне чĕп-чĕр çытар çине хурсамăр,
Лета [142] шывпе савса сапсамăр,—
Тӳрлеттĕр ыйхă унăн ырнă шăмшакне,
Вăл куртăр чĕррĕн, çирĕппĕн кун çутине.

Часрах тума пикенĕр хăвăр ĕçĕре,
Таса çутта ăна парсамăр çĕнĕрен.

Эльфсен хорĕ

*(пĕрерĕн, икшерĕн, темиçешерĕн пĕрлешсе тата ылмашса)*

(Sérénade)

Ăшă сывлăш тăп-тăпах,
Ешĕл ĕшнесем шăпах,
Тутлă чечексен шăршийĕ,
Чиксĕр çăмăл каç тĕтрийĕ;
Юрлăр шăплăх юррине,
Ача пек вăл канăç туптăр;
Ыр ачашлăх лăпкăн хуптăр
Ырнă куçĕн хупахне!

(Notturno)

Каç та пулчĕ, сапаланчĕç
Çăлтăрсем чăн тӳпере,
Ушкăн-ушкăн кăварланчĕç
Çутăсем кунта, лере,—
Кӳлĕсен тĕкĕрĕнче;
Каçĕ шăнк уяр, таса;
Тăнăç тĕнче тӳпинче
Уйăх чаплă — хăй патша.

(Mattutino)

Шуччăр ырă сехетсем,
Хуйхă-савнăçа сирсе;
Сывăх имлĕ самантсем,—
Эсĕ шан кун çиçессе!
Варлă ту-сăрт хушшинче,
Йывăçсен сулхăнĕнче,
Пиçнĕ тырă уйĕсем —
Кĕмĕл тинĕс хумĕсем.

(Réveil)

Ĕмĕт пурнăçа ак килĕ:
Хĕвелтухăç тап-тасах!

Ыйхӑ пусмӑрӗ пит тимлӗ:
Сирӗлтер ӑна часрах!
Пул эс тимлӗ те хӑюллӑ
Мӗшӗл ушкӑн хушшинче.
Ҫам сатур та пултаруллӑ,
Ҫӗнтерет вӑл ӗҫӗнче.

Ариэль

Итлӗр! Ҫӗр кӗрлеҫҫӗ Орӑсем![143]
Вӑл шава илтӗҫ ырсенӗн хорӗсем;
Ҫӗнӗ кун тӗсне кураҫ куҫсем.
Пӗлӗтӗн хапхи чӗрик тӑвать,
Фебӑн[144] урапи шавпа тухать!
Мӗн тери шӑв-шав кӳрет ҫути!
Сарӑлать, кӗрлет тӳтӳт сасси,
Хупӑнать куҫ, хупланать хӑлха,
Виллисем кӑна илтмеҫ ҫакна!
Васкӑр хӑвӑрт чечексем патне;
Кӗрӗр шаларах вӗсен ӑшне;
Ҫулҫӑсем ӑшне, ту хушшине пытанӑр:
Сирӗн хӑлхӑра вӑл ан хуплатӑр!

Фауст

Татах эс, пурнӑҫ, чӗр юхӑмпа юхатӑн,
Ҫаллех халь саламлатӑн ылтӑн пек ире!
Ҫӗр, эс тӗлӗнмелле-ҫке ӗмӗрех!
Эс кӗҫӗр те ыр канӑҫпа сывларӑн,
Таса, ыр ӗмӗтсем мана сунса,
Чи лайӑх ӑнтӑлусем парса.
Тӗнче ӑранчӗ — вӑрманта мухтать
Пин саслӑ хор пурнӑҫ ӑраннине.
Ирхи кӑвак тӗтре хуплать васансене,
Анчах ҫӳлти яр ҫутӑ, ав, анать
Вӗсен тӗпне. Ак йывӑҫӑн турачӗ,
Тӗтре хупламанскер, ӗҫне кӑнтарчӗ;
Ҫине-ҫинех унта чечек ларать кулса;
Ҫеҫки ҫинче тумлам чӗтрет ҫунса.
Епле тӗлӗнмелле! Туяп хамах:
Ман таврари тӗнче чӑн-чӑн ҫӑтмах!

Ҫӳлте вут хыпрӗ ту тӑррисене[145]:
Хавас сехет хӗретрӗ вӗсене.

Пире кайрантарах курăнакан çутта
Эсир, ту улăпсем, куратăр чăн малтан!
Вĕсен вылян урийĕ çутатса ярать
Ту-сăртсемпе тӳлек васансене,
Вăл аялтан та аяла анать, ав, варсене.
Хĕвел çаври тухать, йăлтăртататать!
Пăхма хал çук, куçа пăрап унран.

Пирте таса ăнтăлусем ачашлакан
Ыр ĕмĕтсем уçсан хăйсенĕн алăкне,
Çаплах пулать: хăватлă вут-хĕм тивсенех
Ҫалла сиксе ӳкетпĕр хăранипе тӳрех:
Пăртак çутма шутлатпăр пурнăç çуртине —
Вут тинĕсĕ хыпса илет пире.
Мĕн ку? Е юрату, е çилĕ
Вĕри юххи пире ярса та илĕ?
Эпир асапланатпăр: пăчлăх та хăрушлăх,
Пире çак вутлă тинĕсре аван та хурлăх;
Эпир ача пек хăраса ӳкетпĕр,
Вара каллех çĕртен ярса илетпĕр.
Хĕвел, тӳртпе тăратăп эпĕ сан енне:
Пăхатăп савăнса çиçен шыв сиккине;
Вăл сакăлта çинчен шав сакăлта çине
Сикет, кĕрлет, пин юххăн вакланать,
Шывне çӳле, çут пĕлĕте, сапать,
Сирпĕнчĕксем çинче, хитрен пĕкĕленсе,
Сĕвек кĕперĕ тек тăрать çиçсе.
Е çухалать вăл, е тухать каллех,
Чĕр сывлăмне вăл сирпĕтет текех.
Вăл пирĕн ĕмĕтсен сăнарĕ тейĕр:
Ăна тимпе пăхсан, туятăн чĕрӳпе,—
Çак пурнăç пирĕн, каласан тĕрĕссипе,
Чечен сĕвек кĕперĕ сăнĕ евĕр.

## ПАТША КЕРМЕНĔ

Трон пӳлĕмĕ. Патшалăх совечĕ. Патша хăй таврашĕнчи чаплă тумланнă çынсен свитипе пырса кĕрет те трон çине ларать. Ун сылтăм енне астролог тăрать.

Патша

Салам сире, туссем! Эсир кунта
Пуçтарăнтăр таçтан та ман пата.

Ак пирĕнпе пĕрле кунта ăсчахçă;
Ăçта çухалчĕ манăн мыскараçă? [146]

Юнкер

Вăл сирĕн тум аркийĕ хыçĕнче пыратчĕ,
Кунта кĕретшĕн ӳкрĕ те аманчĕ.
Ăна йатса ăсатрĕç, мăнтăра:
Пĕлместĕп — вилĕ вăл е ӳсĕр ку хутра.

Тепĕр юнкерĕ

Тепри таçтан сиксе те тухрĕ,
Кунта тĕккелешме хăюлăх тупрĕ.
Тумланнă хăй питех чипер,
Анчах пит-куçĕ ун ытла тискер.
Кермен патне вăл çитрĕ вĕçтерсе,
Хурал айпăлтине тытать хĕреслесе,
Анчах сатур пуçтах кĕчех çурта,—
Ак вăл хăех халь шăп кунта!

Мефистофель
*(кĕрет те трон енне пуççапса)*

Мĕне çав ылханаççĕ те кĕтеççĕ?
Мĕне хуса яраççĕ те чĕнеççĕ?
Мĕне пурте ялан хурлаççĕ?
Мĕне кайран ырлаççĕ?
Кама пурте хаяр ятлать,
Анчах ятне илтсессĕн—кăмăллать?
Мĕнле вăл трон патне çул тупнă?
Кайран хăех тронтан вăл супнă?

Патша

Çитет сана, камит, сӳпĕлтетме!
Кунта тĕс мар ытарлăн ыйтусем [147].
Унпа йăпанччăр манăн улпутсем.
Вĕсен тупписене пĕлтер эс çавсене,—
Вара вĕсем пулаççĕ хавасрах,
Ват мыскараçă кайрĕ пирĕн хушăран [148].
Ун вырăнне эс йышăн хăвартрах.

Мефистофель тронăн сулахай енне тăрать.

### С а с ă с е м
*(халăх хушшинчен)*

Ак урăх мыскараçă, лешĕ — синкерте!
Ку ăçтисем? Епле вăл кĕнĕ-ха кунта?
Ватти пит йăлăхтарчĕ. Вăл ăçта?
Леш — чăн пичкеччĕ, ку — шерте.

### П а т ш а

Çапла, юратнă тусăмсем, сире салам!
Эсир кунта пуçтарăнтăр, калам,
Телейлĕ çăлтăр хӳттипе
Пире телей сĕнет кăвак тӳпе [419].
Ĕçе тытăниччен çут тĕнчене
Эпир хаваслăрах курасшăн
Тата илемлĕ маскарад курса савнасшăн.
Хĕпĕртеме чăрмав çук пек пире —
Мĕн-ма пуçтарăнас салху çĕре?
Эсир каларăр: «Ҫирлĕ ку çапла!»
Юрать, эппин, вăл пултăрах апла.

### Ҫ а н ц л е р

Патша пуçне çутункă кăшăллать,
Ҫапла ун ырă ĕçĕ чапланать.
Ăна тума вăл пултарать пĕччен кăна!
Тӳр суд! — çынсем ыйтаççĕ пĕр çакна,
Ҫакна пурте кĕтеççĕ, юратаççĕ;
Ăна калла илсен, аран чăтаççĕ.
Ҫампа патша ăна хăй халăхне халлатăр.
Анчах мĕне кирлех-ха вăл,
Пуçа — тулли ăс-хакăл, чĕрене — ыр кăмăл,
Алла çут ирĕклĕх, — кирек ăçта пăлхавăр,
Йĕрке чĕтрет, этем асапланать, йĕрет,
Усал çине! усал купаланать пулсан?
Ху ларакан хисеплĕ вырăнтан кĕрет
Пăх эсĕ тавралла патшалăху çине:
Хăрушă тĕлĕк курнă евĕрлĕ туян!
Саккунсăрлăх, саккунлă пек пулса,
Усал ĕçсем тăвать патшалăхра.

Пĕри ют кĕтĕве илет пусмăрласа,
Тепри — çын арăмне; чиркӳ япалине

Вăрлать, çапла майпа пуйнипеле
Нимскер асапсăр вăл пайта курать.
Шыравçă судăн çуртĕнче тăрать,
Судйи хитре пукан çинче ларать кĕтсе;
Пăх-ха: айăплисем кар! тăчĕçĕ хӳтĕленсе —
Суя кавар куçкĕретех çитет ӳссе.
Айăплисен хутне кĕрет кавар эшкерĕ —
Вăл судьясем енчен тупать хӳтте,
Вара айăпсăрри хăй айăпа юлать.
Пурте ванас патне çитейрĕ:
Пĕтӳ кĕтет патшалăхра пурте.
Ăçтан унта, кун пек пулсассăн, аталанĕ
Тӳрре вĕрентекен таса чĕре?
Ултавçă-пусмăрçă умне çĕре
Таса чунли хăех ӳпне йăванĕ:
Судья, çухатнипе хăй хăватне,
Тăрать юлашкинчен усаллисем çумне.
Ķалавăм пит салхуллă ман, анчах
Халь пурнăç чăннипе тата салхуллăрах.
*(Пауза.)*

Халех мĕн те пулин васкавлă тумаллах!
Кун пек йĕркесĕрлĕх те пăтăрмах
Сан троншăн пысăк та хăруш юнав:
Ăна ишме те пултарать пăлхав.

## ВИÇÇĔМĔШ АКТРАН

Фауст

*(Елена патне сăнчăрланă Линцея çавăтса пырать)* 150

Пике-патшам! Сана эп ĕмĕтлентĕм
Кĕтсе илме хисеплĕ чысласа,
Ун вырăнне ертсе килетĕп
Кунта хам чурана, сăнчăрласа.
Вăл маннă хăйĕн тивĕçне,
Çампа та тăваймарăм хамăн тивĕçе.
Усал чура, ыйт каçару, чĕркуçленсе,
Мăнаçлă арăмран хыт йăлăнса!
Чипер патша, вăл питĕ куçламас:
Ăна эп лартрăм çӳл пашне çине
Пăхмашкăн таврари ĕшнесене,
Çĕр çинчине аякрине курма,

Çӳл пӗлӗт тӳпине шав сӑнама:
Унта куçа мӗскер курӑннине,
Сӑртсем-тусем çинчен варсемпеле
Хам çурт патне кӗтӳ е çар çывхарнине.
Эпир кӗтӳсене хута кӗретпӗр,
Тӑшмансене сыхпа тӑрса кӗтетпӗр.
Паян вӑл турӗ пысӑк айӑп!
Пике-патшам, ку саншӑн пысӑк сарӑп!
Эс килнӗ — вӑл мана пӗлтерейменӗ,
Хисеплӗ хӑнана эп чыслӑх кӳрейменӗм.
Вӑл тивӗç мар тек пурӑнма апла:
Ана кӗтет, паллах, халь вилӗм,
Вӑл чӗр юн ӑшӗнче выртас кӗтемӗн,
Анчах хӑвах суд ту: каçар е айӑпла.

Елена

Мана паратӑн пысӑк тивӗç халь —
Патшан тата тӳрен мӑн тивӗçне:
Эс, ахӑр, сӑнама шутлан мана.
Пӗр тивӗçне тӑвам-ха, тӳренне;
Кала! Итлем, мӗн калӗ айӑпли.

Куçлавçӑ Линцей

Пуç таяп сана пӑхуçӑн!
Пурнӑç-и е вилӗм — ман шӑпам,
Пӳлӗх панӑ ыр патшаçӑм,
Çавӑртӑн ман пуçӑма!

Ӗмӗр кӗтнӗ ирпеле хӗвел
Тухасса эп тухӑçран,—
Ах, турах! тӗлӗнмелле,
Тухрӗ вӑл кӑнтӑрларан.

Айлӑмсем, тусем курас тесе,
Эпӗ пӑхрӑм унталла,—
Куртӑм сӑхӑ куçсемпе
Ытарми чипер çеç пӗр сӑна.

Куçӑмсем ман çивӗчрех
Йывӑç тӑрринчи рыç куçӗнчен.
Ӗненмерӗм, ыйхӑри пекех,
Хамӑн куçӑмсем çивӗччине.

Мĕнпурĕ çаврăнать умра:
Чăнкă вал та башня, стенасем,
Куçăм умĕнче хура кара.
Сирĕлчĕ тĕтре, умра — çут турпикем!

Чунăм хытă туртнипе
Пăхрăм эпĕ ун енне —
Суккăрлатрĕ ман куçа
Ытарма çук хĕр-хуçа.
Хам хуралçă тивĕçне манса,
Эпĕ тӳт те кăшкăртман...
Айăпла мана! Çиллӳ те сан
Пулĕ кăмăллă мана.

Елена

Ку сарăпăн сăлтавĕ эпĕ пултăм,
Епле-хауншăн айăплам ăна?
Хаяр элчел, мана ма пӳртĕн-ши
Арçын чĕрисене çав териех
Пăлхантарма? Мана инкек!
Вĕсем пач шеллемеççĕ хăйсене те,
Чи пахине те! Хăйсемпе пĕрле
Мана илсе çӳреççĕ геройсем,
Турăсем те шуйттансем ялан,
Тек вăрçă-çапăçу сăлтавĕсем туса.
Эп вĕсемпе çĕтсе çӳренĕ, тĕнчене
Пăлхатнă инкекпе, унтан инкек
Вăйланнă виçĕ хут таран.
Ана ӳстертĕм халь тăватă хут [151].
Ку мĕскĕн кайтăр ирĕклĕн.
Турăсем суккăрлатни — ним айăпсăр.

Линцей каять.

Фауст

Куратăп, сан сăнну, пике-патшам,
Ана пит вирлĕ суранлатнă;
Курап, тĕлĕнмелле çĕмренӳсем,
Хыт каранна уххи пенипеле,
Ман кăкăра пыра-пыра тиреççĕ.
Вĕсем, çунатланса ман килĕмре,
Енчен енне пӳртре шăй-шай вĕçеççĕ.
Эп мĕн? Пур шанчăклă тарçăмсене

Эс ман тăшман тума пултарăн,
Стенасене — ман шанăçран тухма:
Ҫапла патшалăхпа çар парăнать
Хăватлă çĕнтерӳç-хĕрарăм аллине.
Халь ĕнтĕ хамăн пурлăха
Тата хама сан ирĕкне паратăп,
Ҫунтан вара пире тытса тăрсам —
Патша пулсам кунта ĕмĕрлĕхе!

Елена
*(Фауста)*

Эп калаçас теп санпала. Лар-ха
Манăн çума. Сана валли пур вырăн.
Ҫапла ман вырăна эс тĕреклетĕн.

Фауст

Малтан, пике-патшаçăм, ирĕк пар
Сана чĕркуçленсе причак пама,
Ҫăнтарнă аллуна тута тума.
Сан чикĕсĕр çĕршывунта пулам
Сана сыхлавçă, тарçă та саванçă!

Елена

Ҫунта курни-илтни тĕлĕнтерет!
Тĕлĕннипе санран нумай ыйтса
Пĕлес килет. Ҫала мана: мĕншĕн
Чуран сăмахĕ çав тери ютла
Тата пит кăмăллă янрарĕ?
Саспала сас, сăмахпала сăмах
Пĕр-пĕринпе килĕштерсе лăпкарĕç
Ман хăлхана ачашласа [152].

Фауст

Эс пирĕн халăх чĕлхине
Ҫавтер юратрăнах пулсан,
Чĕреренех юратăн юррине;
Эпир халех калаçăпăр ку майпала.
Ҫалаçнă май хăвах вĕренĕн.

Елена

Илемлӗ пуплеме мӗнле вӗренмелле?

Фауст

Ансат: сăмах чун-чӗререн çеç килмелле.
Қам вӗренесшӗн ăнтăлать, тупасшăн кирлине,
Шырать вăл...

Елена

Хăйпеле телей тупаканне.

Фауст

Пăхас пулмасть малашрине те, иртнине те,
Пӗр хальхинче...

Елена

Савăнăç та, телей те.

Фауст

Телей, власть шанчăклă ак çакăнпа;
Мӗнпе çирӗплетес ăна?

Елена

Ман алăпа.
Пит аякра, çапах пит çывăх эп сана!
Сан патăнта пит çăмăл халь мана!

Фауст

Эп пит хавас. Чӗтрет ман сассăм.
Қу тӗлӗк мар-ши? Ним туймасть халь асăм.

Елена

Эп вилнӗччӗ, чун кӗчӗ халь мана каллех,
Савап сана: эп чӗрӗлтӗм, çӗнелтӗм савнипех.

Ҫак тинӗсри тӑмат сыхланакан,
Европӑпа ту-сӑртлӑ ансӑр
Пырлак пӗрлештерен ҫурутӑ сан
Ҫунтан вара ешертӗр чарӑнмасӑр[153].

Пур йах та ырӑ куртӑр ҫакӑнта:
Ҫунтан паха кӗтес ҫук ҫӗр ҫинче!
Ҫуралнӑ ман пике-патшам кунта,
Вӑл пултӑр ӗмӗрех ун аллинче;

Ҫунта сар хӑмӑш хушшинче
Вӑл тухнӑ акӑшӑн ҫӑмартинчен,
Хӑй амӑшне тата пиччӗшсене
Тӗлӗнтерсе илемлӗ сӑнӗпе[154].

Ҫӗрӳ выртать сан умӑнтах,
Чечеклӗн капӑр сарӑлса.
Чипер кӑна савниҫӗм, эсӗ хур ӑна
Ҫу ҫӗр ҫинче нимрен те маларах!

Ҫунти тусен тӑррисене ҫӳлте
Хӗвелӗн сивӗ урисем кӑшт ӑшӑтаҫҫӗ,
Ҫапах имшер ҫеҫ курӑк ӳскелет,
Ӑна качакасем хавас кӑшлаҫҫӗ.

Тапаҫҫӗ ҫӑлкуҫсем, кӗрлеҫҫӗ шывӗсем,
Ешерчӗҫ тайлӑмсем, ту айккисем;
Выртаҫҫӗ сарӑлса варсен ҫаранӗсем;
Ҫӳреҫҫӗ мамӑк ҫӑмлӑ сурӑх кӗтӳсем;

Пӗччен асӑрханса ҫӳрет ӗне те вӑкӑр
Чике ҫыранӑн тӑвайккисенче,
Унти тусен хӑвӑлӗсенче
Вӑл хӑй валли тупать лӑп ӑшӑ хӑтлӑх.

Сыхлать Пан[155] вӗсене; сыхра
Пурнаҫҫӗ нимфӑсем тӗмсем тавра,
Хӑватлӑ юмансем, тӳр вуллӑ йывӑҫсем
Пӗлӗтелле пӑхаҫҫӗ, пӗр-пӗрне хӗссе.

Ҫу вӑрмансем — питех авалхисем!
Ҫатмар юман ӳсет пӗлӗтелле,

Чăтлăхсенче сăпай вĕренесем
Сĕткен пуçтарнă ĕмĕрĕпеле.

Унта, кил-çурт хӳтлĕхĕнче,
Ача, путек валли ăш сĕт юхать.
Лапам-васан çиме-ĕçме парать,
Пыл сăрхăнать çака хăвăлĕнчен.

Кунта ĕмĕртенпе илпек те çитлĕх,
Пурин сăнне нар сапнă пек, хĕп-хĕрлĕ;
Кунта çынсем кашни-пĕр чĕрлĕхлĕ,
Пурте таса та сывă, пур çĕрте те сиплĕх.

Кунта мĕн ачаран ара çитех
Этем аталанать кун çутинчех.
Çакна курсан, ыйтас килет пит тĕлĕнсе:
Камсем кусем: çынсем е турăсем?

Кунта кĕтӳç пулса хăй Аполлон [156] çӳренĕ,
Çампа та пулнă, тет, чи хитрисем ун евĕр;
Кунта тĕнче хăвачĕсем, таса çĕрте,
Нимскер чăрмавсăр хутшăнаç пĕрле.

*(Еленăпа юнашар ларать.)*

Эпир халь иксĕмĕр те — эс те, эп те —
Телейпеле пуян, манар ĕлĕкхине!
Сана çуратнă аслă турă хăй иккен —
Эс авалхи тĕнчен тивлечĕ!

Пире халь тăвăр ку кермен:
Телейлĕ пирĕн пурнăçа кĕтет
Çав Спарта çумĕнчи Аркади [157]:
Унта ялан хитре яш вăй çиçсе тăратĕ.
Унта, телейлĕ çĕршыва, çул тытăпăр,
Унта хаваслăн иксĕмĕр пытанăпăр!
Илемлĕ чатăршăн трона хăварăпăр,
Аркадири телейпеле халланăпăр.

## ЭВФОРИОН

Ф а у с т, Е л е н а, Э в ф о р и о н тата х о р [158]

Э в ф о р и о н

Ачăр юррине хыт тăнласа,
Эсĕр хăвăр савăнатăр;

Манăн савăк ташшăма пăхса,
Сирĕн чĕрĕр хĕмлĕн таптăр.

Елена

Çĕр çинче телей курасшăн
Пĕрлешеççĕ ик чĕре.
Турă савнăçне туймашкăн
Тепĕр чун кирлех пире.

Фауст

«Эпĕ — сан, эс — манăн» сăмахсем
Çавăн чух тин пулĕç пĕтĕмле:
Илĕç кирлĕ тивĕç ăнлавсем:
Эпĕр çавăнпа чăнах пĕрле!

Хор

Чаплă мăшăрăн пĕрлевĕ *
Çак ытарайми ача çуралнипе
Пултăр пит нумай çула телейлĕ!
Эпĕ савăнап вĕсен канашĕпе.

Эвфорион

Ярăр-ха чупкалама,
Ярăр вăйă вылями!
Ман ухас килет çӳле —
Сывлăша — ав лерелле!
Ман хавасăм пур вĕçме.
Вăйлă ĕмĕт — пĕлĕте çитме.

Фауст

Ерипен! Хуллен!
Чăрсăр ан хăтлан!
Ак ӳкен, вилен!
Хаклă ывăл, эс ăнлан!
Санăн пысăк синкерӳ —
Пирĕн пуçшăн вĕлерӳ.

---

* Пĕрлев — союз, пĕр канашлă пулни.

Эвфорион

Эп шумас пĕртте
Хырăмпа ҫĕрте.
Ярăр аллăма,
Ярăр кăтрама,
Ярăр тумтире!
Сирĕн мар вĕсем!

Елена

Ывăлăм, шутла:
Эсĕ камăн-ха!
Хĕрхенсем пире!
Ан пăс илеме:
Пирĕн ыр кĕвве
Ан пăссам сĕре!

Хор

Хăратăп ҫакăнтан:
Пĕрлев ку арканать!

Еленăпа Фауст

Чарăн, асăрхан
Чăрсăр ĕмĕтрен!
Эсĕ кăмăллан
Пурнăҫ панипен!
Ҫĕр илемĕпе
Ҫанлĕ чечеклен!

Эвфорион

Сире юрас тесе
Чаратăп ĕмĕте.

*(Хор патне чупса пырать те хĕрсене хăйпе ташлама сĕнет.)*

Савăк халăх, халь тăратăп
Сирĕнпе хавасланса,
Мĕн тăватпăр: е ташлатпăр,
Е юрлатпăр савăнса?

Елена

Лайăх турăн эс куна;
Эс чиперсене суйла,
Хӳхĕм ретсемпе тăрат!
Савăн выляса!

Фауст

Хăвăрт пĕтчĕр вăйăсем!
Ҫирлĕ мар йăпанусем!
Ҫу мана савăнтармасть.

Эвфорион тата хор ретĕн-ретĕн кукăркаланса ташлаççĕ.

Хор

Сан илемлĕ хулусем
Хускалаççĕ меллĕн,
Санăн ылтăн кăтрусем
Вĕçкелеç илемлĕн,
Урусем çĕре тивми
Шуçкалаççĕ çăмăл,
Сан пĕвӳ вĕçет ӳкми,—
Çĕкленет яш кăмăл.
Эс, чипер ача,
Хал паратăн,
Пирĕн хавала
Хăпартатăн.

Эвфорион

Эсĕр, шух ураллă
Хир качакисем,
Çĕнĕ вăйăсем,
Пуçлăр-ха васкавлă!
Эпĕ пулăп кайăкçи,
Эсĕр пулăр кайăкки!

Хор

Тытасшăн эс пире?
Ҫу ĕç сана хĕн мар.
Ытарайми хитре

Ача, эпир хавас
Сан ытамна
Лекме, тытма сана.

Эвфорион

Анчах юрать тытма
Чӑтлӑхсемпе тухса,
Тункатасем, чулсем
Ҫинчен сиксе каҫса!
Ансат лекекенсем
Туртмаҫҫӗ чунӑма.
Вӑйпа илни кӑна
Савӑнтарать мана.

Хор тата Эвфорион чупса саланаҫҫӗ.

Еленӑпа Фауст

Мӗнле сатур! Мӗнле пуҫтах!
Ӑна йӑвашлатма ҫуках.
Ним чарӑнми шӑв-шав
Тӳтсем чӗнен йыхрав
Пекех тӑрать ҫырмасенче,
Йӗри-тавра вӑрмансенче.

Хор

*(пӗрерӗн пит хӑвӑрт чупа-чупа кӗрсе)*

Пурин панчен вӑл йӗрӗнсе
Чупса иртсе каяйрӗ;
Чи шуххине вӑл хӳтерсе
Ун хыҫҫӑнах чупайрӗ;
Ав, халӗ тытнӑ та
Туртса килет кунта.

Эвфорион

*(ҫамрӑк хӗре аллинчен ҫавӑтса)*

Ҫамрӑк чӑрсӑра тытса
Килтӗм хам валли; ӑна
Парӑнтарӑп эп вӑйпа.
Савӑнас килет ман выляса,
Парӑнмасть вӑл ирӗккӗн мана,

Хам чĕрем çумне хĕсесчĕ чăрсăра!
Хастарпа вăя кăтартăп пуççăра!

Хĕрача

Қай ман патăмран, каях кунтан!
Хал хастарĕ, ирĕк пур манра пайтах;
Вĕсене йăвашлатайман çăмăлах!
Эс мана ку пăтравра тытни сана
Пит мухтантарать пулсан,
Эсĕ ху çинчен шутлан ытла нумай.
Эс тытса пăх-ха мана:
Савăнмашкăн çунтарап сана, тăмсай!

*(Çулăм хыпса илет те çунса хăпарса каять.)*

Вĕçсе пыр сывлăша ман хыçăмран!
Хăвала мана чиккисĕр уçлăхра!
Тарнă тĕллевне хуса тыт хăвăртрах![159]

Эвфорион

*(хăй çине ӳкнĕ хĕлхемсенчен силленсе)*

Ман тавра хура вăрман,
Çӳл тусем мана хĕсеççĕ.
Эпĕ çамрăк та тĕреклĕ.
Ав, илтетĕп катаран:
Аякра çилсем кашлаççĕ,
Инçере хумсем шавлаççĕ.
Аякран пăхма мана кичем пачах,
Çывăхран курас килет йăлтах.

*(Чул çинчен çул çине сиксе, çӳллĕрен çӳле хăпарса пырать.)*

Елена, Фауст тата хор.

Хир качаки пек эс пуласшăн?
Сыхлан, кĕçех персе анатăн!

Эвфорион

Ман çӳле пит çĕкленес килет,
Ман инçетрине курас килет.
Халь куратăп — хам ăçта:
Ман умра выртатĕ авă
Сарăлса Пелопс утравĕ[160].
Тинĕс пек шавлать кунта.

Хор

Савнӑ чун, кунта ансам,
Пирӗнпе пулсам!
Йӑвӑ ҫеҫ вӑрмансенче,
Чул сӑртсем ҫинче,
Тутлӑ ҫырласем пиҫеҫҫӗ,
Ылтӑн улмасем ӳсеҫҫӗ.
Ку илемлӗ ҫӗршывра
Юл, чиперӗмҫӗм, кунта!

Эвфорион

Лӑпкӑ тӗлӗк тӗлленетӗр?
Вӑл ултав — ҫавна пӗлсемӗр!
Вӑрҫӑ — ак элчел йыхравӗ!
Ҫӗнтерӳ!— ак ун янравӗ!

Хор

Ҫам канӑҫа
Манса чӗнет вӑрҫа,
Вӑл пӗтерет
Телейӗн ӗмӗтне.

Эвфорион

Хӑрушлӑхран хӑрушлӑха
Ним шиксӗр кӗрекен
Сатур паттӑрсене
Ӳстернӗ ку ҫӗршыв нумай;
Вӗсем таса юнне
Ним шелсӗр тӑкнипе
Ҫилеҫ ҫӗнтерӳпе,—
Мухтав маттурсене!

Хор

Ҫӗкленчӗ уххӑн пит ҫӳле;
Ҫапах та пысӑк курӑнать!
Вӑл хурҫӑ тумпала ҫиҫет.
Хӑватлӑ ҫӗнтерӳҫӗн туйӑнать.

Эвфорион

Ҫирлĕ мар хӳме те, вал та!
Сыхлантăр кашниех хăй вăйĕпе.
Арçыннăн тимĕр кăкринчен
Тĕрекли çук тĕнчере!
Ҫамăн ирĕклĕн пурнас килет.
Васкăр çапăçма часрах хире!
Утланса вĕçтерĕç арăмсем,
Ачасем пулаççĕ паттăрсем.

Хор

Ҫĕклен, таса поэзи,
Ҫăвак çут тӳпене!
Яр çăлтăр еверлĕ çиç
Ялан çӳлтен!
Вăл пит инçе пиртен,
Ҫапах сасси кунта çитет:
Вăл инçетрен халь илтĕнет.

Эвфорион

Ҫук, эп ача мар сирĕн умăрта:
Тухать чăн йĕкĕт халь вăрçа!
Пĕрлешрĕ вăл халь чунĕпе
Сатурсемпе те ирĕклисемпе.
Малтан мала!
Чыс тӳр çулпа
Ертсе пырать пире мухтав патне!

Еленăпа Фауст

Чунăм! Тин çеç пурнăç куртăн,
Кун çутийĕ халь тин туйрăн,—
Ҫӳллĕ пĕлĕте ан туртăн,
Тĕлсĕр çийĕн эс пуçна!
Эс пире ют мар.
Тĕлĕк мар
Пирĕн çак таса канаш.

Эвфорион

Илтместĕр-и, сассем кĕрлеççĕ тинĕсрен?
Ăна сасне парать вар хыççăн вар;

Хăруш вăрçа, хĕн-асапа, кур: инçетрен
Шăвать тусан çинче çар хыççăн çар.
Пурте вăрçа
Тухар тăрса!—
Чĕр вилĕме хушу чĕнет хастар.

Елена, Фауст тата хор

Ах, хăрушă! Тамаша!
Сан шăпу чĕр вилĕм-ши вара?

Эвфорион

Эп тăрам-и аякран пăхса?
Çук! Пуçа хурам хăюллă вăрçăра!

Çавсемех

Ытлашши сатурлăхпа хăват
Вилĕме парне!

Эвфорион

Пултăр! Манăн пӳ хăйне
Хушрĕ ик çунат!
Эп вăрçа каятăп!
Асапа чăматăп!

Ту хĕрринчен сикет. Тумтирĕ ăна пĕр хушă сывлăшра çĕклесе тытса тăрать. Пуçĕ унăн йăлтăртатать; ун хыççăн çап-çутă йĕр пырать.

Хор

Икар! Икар! [161]
Ах, хуйхă! Шар!

Чипер йĕкĕт ашшĕ-амăшĕн ури патне ӳкет, вăл вилĕ. Унăн сăнĕ унти çынсене хăйсем пĕлекен çын сăнне аса илтерет. Ӳчĕ çухалать, пуçĕ çинче йăлтăртатакан çутă пĕлĕтелле хӳреллĕ çăлтăр пек хăпарса каять. Лирипе мантийĕ çĕр çине выртса юлаççĕ.

Еленăпа Фауст

Савнăç тарчĕ пирĕнтен,
Хуйхă килчĕ синкертен.

Эвфорион
*(сасси çӗр айӗнчен)*

Ан хăвар мана, аннем, пӗччен
Мӗлкесен тӗнчийӗнче.

(Сасă шăпланать.)

Хор
*(хуйхăллă юрă)* [162]

Пулмăн эс пӗччен пӗрре те!
Манмăпăр сана нимле:
Уйрăлатшăн пуринне те
Шалт амантрăн чӗрине.
Вилӗ хӳххине йӗместпӗр:
Ăмсанатпăр шăпуна!
Пултăн юррупа илемлӗ,
Чунупа таса, мăнаç.
Эс телей курма çуралтăн
Авалхи патвар йăхран!
Ир-ирех хăвна пӗтертӗн,
Çамрăк вăй чечек сарсан.
Тӗнчене яр витӗрлерӗн
Куçупа, çын хуйхине
Чӗрӳпе часах сисейрӗн.
Чиперкке арăмсене
Çепӗç юрăсем юрларăн,
Илтӗн юрă тыткăнне.
Илӗртӳ хыççăн эс кайрăн
Ӗмӗт хыççăн инçене.
Эс ним вырăнне хумарăн
Йăлапа саккун вăйне.
Улăпла ӗçе васкарăн
Çут ăсу кăтартнипе:
Çӳлтине тупма шутларăн,—
Тупаймарăн эс ăна.
Кам тупать?— Ыйту хуравсăр!
Шарламасть элчел пач та.
Ним чӗнмест нумай асаплă,
Чӗр суранлă халăх та.
Çӗнӗ юрăсем пуçлар-и?
Çӗклӗр усна пуçсене!
Юрăсем çӗршыв хайларӗ,
Ӗмӗр хайлӗ вӗсене.

Вăрăм пауза. Музыка чарăнать.

Елена
*(Фауста)*

Пĕр ват сăмах ман тĕлĕшпе тӳрре килейрĕ:
Телейпеле илем нумайлăха ермеççĕ.
Юратупа телей çыххи халь таталать:
Вĕсемшĕн макăрса: сыв пул! калап сана.
Юлашкинчен сана эп ытамлатăп.
Ил, Персефона,[163] ачампа пĕрлех мана та!

*(Фауста ыталаса илет. Елена ӳчĕ куçран çухалать, тумĕ анчах Фауст аллинче юлать.)*

Форкиада[164]
*(Фауста)*

Тĕреклĕ тыт: тумтирĕ юлчĕ çеç сана!
Тыт хытă эс, ан яр ăна ху аллунтан!
Ăна санран туртса илесшĕн шуйттансем,
Илсе каясшăн вĕт ăна хăйсем патне,
Пике-тур çук кунта: ăна çухатрăн эсĕ;
Анчах юлни çапах та тур тивлетлĕ.
Илсем хăватлă парнене:
Илсе хăпарĕ вăл сана пĕлĕтелле,
Унта эс çӳрĕн ярăнса эфир çинче.
Кунтан пит инçетре пĕрле тĕл пулăпăр.

Елена тумĕ, пĕлĕт пек сарăлса кайса, Фауста хупăрласа илет те ăна çӳле çĕклесе каять.

Форкиада

*(Эвфорион лирипе мантине илсе авансцена патне пырать, вĕсене çӳлелле çĕклесе калать)*

Мана телейлĕ тупăш халь çакланчĕ,
Çапах таса кăвар çухалчĕ,—
Анчах тĕнчешĕн хуйхăрас-и ман?
Пире валли гени чылай хăварчĕ,
Унран чылай поэт пулать тума,
Вĕсен ĕçĕсенче йĕк-кĕвĕçӳ сарма.
Эп вĕсене талант нумай-и парăп,
Анчах тумтир кивçен пама пултарăп.

*(Малти сцена çинчи колонна катăкĕ çине ларать.)*

### Панталис[165]

Хĕрсем, эй!васкăр! Асамран тасалтăмăр:
Фессали ват тухатмăшĕн[166] тухатăвне
Халь хамăртан сирсе пăрахрăмăр.
Çухалчĕ пирĕн хăлхана, çын ăстăнне
Пусарнă тĕрлĕ сасăсен шăв-шавĕ.
Ман хыççăн тамăка пике-патша управĕ —
Ун шанчăклă хăрхăмĕсем,—васкар ку хутĕнче.
Эпир ăна тупатпăр çĕрĕн тĕпĕнче
Хăй çывăхне яман престолĕ патĕнче.

### Хор

Пике-патшасене кирек ăçта пур хӳтĕ.
Вĕсем сĕм-тĕттĕм тамăкра та тӳрĕ,
Мăнаçлă пурăнаççĕ Персефонăпа:
Вĕсем пĕр-пĕринпе пĕртан унта.
Эпир унта мĕнле-ха пурăнар,
Салхуллă тĕттĕмре епле-ха савăнар
Сăр асфодель[167] ӳсен çаран çинче,
Çинçе те çӳллĕ тиреклĕх айĕнче,
Çимĕç кӳмен хăвалăх хушшинче?
Пире унта çара çерçи пекех
Ќичем пулать пăшăлтатма текех.

### Панталис

Ќам ырă ят тупман нимпе те,
Ырри патне пачах та ăнтăлмасть,
Вăл — пĕр тăрлавсăр япала. Çухалăр!
Ќаятăп эп пике-патшанăн йĕрĕпе:
Эпир ĕçпе кăна мар, тӳрĕпе
Чапа тухма та пултаратпăр.

*(Ќаять.)*

### Хор

Ќун çутине эпир таврăнтăмăр;
Эпир чĕрчун пулаймăпăр —
Ќуна пĕлетпĕр те туятпăр хамăр та;
Анчах нихçан та таврăнмастпăр Аида *.

---

* Аид — тамăк.

Ялан хăй чĕрĕ çутçанталăк
Пиртен тăвать чĕр сывлăш:
Эпир кунтан вара унра пурнатпăр[168].

Форкиада авансцена çинче котурнăсем çине тăрса улăп пек пысăк пулать, унтан котурнăсем çинчен анать те хăйĕн пĕркенчĕкне илсе пăрахать, вара Мефистофель тухса тăрать, кирлĕ пулсан, пьеса пĕлтерĕшне эпилогра каласа ăнлантарса парать.

Чаршав хупăнать.

## ПИЛЛĔКМĔШ АКТРАН

### УÇĂ ВЫРĂН

Çӳревçĕ

Акă илемлĕ çеç управлă
Ватă çăкасен усравĕ.
Вăрăм çул-йĕр çӳресе халь тухрăм.
Тепĕр хут ăна эп куртăм!
Акă эпĕ пулнă çĕр умра!
Авă, тинĕс хĕррине хаяр хумсем
Кăларса мана пăрахнă вырăн.
Курăп-ши хисеплĕ мăшăра?

Тĕл пулса ыталăп-ши? Вĕсем
Сыввине пĕлмен эп ыррăн.
Ун чухнех ку мăшăр ватăччĕ,
Иккĕш те пит тараватлăччĕ.
Мĕн? Шаккас-и? Е чĕнес мар-и?
Эсĕр халĕ те сывах пулсан,
Ĕлĕкхи пекех çынна ялан
Ырăлăх тума çунатăр-и?

Бавкида[169]
*(пит ватă карчăк)*

Савнă çыннăм, шăп, шăпрах!
Манăн мăшăрăм канать кăштах!
Халсăр ватă вăрăм ыйхăпа
Хал илет кĕске ĕçне тума.

Ç ӳ р е в ç ĕ

Ырă кинемей, калаччĕ:
Эсĕр иксĕр çăлнă, тен,
Çӳревçе, мана, чĕр вилĕмрен!
Манăн саншăн тав тăвасчĕ.
Эс, Бавкида, чĕртнĕ хĕрхенсе,
Тимлĕн те ăстан эмеллесе.

Қарчăк упăшки тухать.

Манăн пурлăха хăюллă çăлакан
Харсăр Филемон эс-и пулан?
Сирĕн маякун ачаш çути,
Сирĕн чанăн кĕмĕл пек сасси
Çăлчĕç пысăк инкекрен мана,
Эсĕр çеç хăтартăр вилĕмрен!
Парăр ирĕк тĕлĕнмешкĕн тинĕсрен.
Çывхарса ун анлăшне курма,
Пуççапма чĕркуçленсе ăна:
Қăкăрăм тулли ыр туйăма пама.
*(Дюна тăрăх малалла каять.)*

Ф и л е м о н
*(Бавкидăна)*

Арăм, эсĕ кай часрах сада:
Ларт апат сĕтел çине унта.
Қуртăр вăл садран пăхса —
Хăй куçне ĕненмĕ, иçмасса.
*(Çӳревçĕ хыççăн каять.)*

Ф и л е м о н
*(Çӳревçĕпе юнашар тăрса)*

Урнă тинĕс хумĕсем сана
Қăларса пăрахнă çырана,
Халĕ сад ӳсет унта талккишĕпе,—
Çĕр çинчи çăтмах вăл чăннипе.
Эпĕ вăтă, акă халсăрлантăм,
Ĕçсене тума питех хавшарăм;
Халăм манăн чакнă вăхăтра
Тинĕс хумĕ кайнă катана.
Ăслă улпутсен хăюллă тарçисем
Чаврĕç канавсем, тăвайрĕç пĕвесем,—

Парăнтарчĕ тинĕсе этем,
Татрĕ пачĕ вăл хăй талккăшне.
Пăхăр: ешереççĕ çарансем,
Вăрмансем, варсем, садсем, ялсем;
Атьăр, савнăр вĕсене пăхса:
Ҫĕç хĕвел ларать анса.
Вăхăт халь каçхи апат çиме.
Паруссем лере нумай питех!
Ҫирлĕ вĕсене тĕп хўтĕ çĕрлене.
Ҫайăка йăва паха пекех,
Ҫарапа порт йышăнать унта.
Тинĕс хумĕсем шавланă вырăнта,
Пĕтĕм тавралла тўремлĕхре,
Халăх йышлă пурнакан çĕр ешерет.

САД

Виç çын влли сĕтел.

Бавкида
*(Ҫўревçе)*

Мĕн пĕртте сăмах хушмастăн?
Выçварла кăшт та пулин çисем!

Филемон

Пуплеме эс юрататăн:
Ҫаласа кăтарт çав чаплă ĕç çинчен.

Бавкида

Тĕлĕнтермĕш пулчĕ чăннипе:
Эпĕ халь те тĕлĕнсе чĕтретĕп.
Паллă, ку ĕç ырă меслетпе
Пулайман вăл, эп аван пĕлетĕп.

Филемон

Хăйĕн кăмăлпе пире патша
Пачĕ çакăнти çĕре.
Усалли мĕн пур кунта?
Пĕтĕм халăх умĕнче герольд * пире
Ҫĕретех пĕлтерчĕ хытă кăшкăрса,—
Пирĕн дюна çумĕнчи тўремлĕхре

* Герольд — хыпарçă.

Тăрукам ёҫ кайрĕ шăранса:
Самантрах туса та лартрĕҫ хӳшĕсем,
Халь унта катмар чипер кермен, садсем.

Бавкида

Тарҫăсем ĕҫлерĕҫ кунĕпе укҫасăр,
Пуртă кĕреҫе сасси пĕр тамалмасăр
Тăчĕ кĕрлесе; кăвайтă ҫĕрĕпе
Ҫуннă вырăнта — валсем ирпе.
Ҫын та вилнĕ ҫав унта пайтах,
Ахлатни ҫĕрле тăратчĕ час-часах.
Тинĕсе шыв вутăн капланса анатчĕ,
Ирпеле канал пулса тăратчĕ.
Вăл киревсĕр, пирĕн вăрмана, яла,
Ҫурт-йĕре илесшĕн вăйпала.
Вăл ăҫта кӳрше пырса ларать,
Ҫавăнта хăйне пăхăнтарма ҫунать.

Филемон

Хамăр лаптăк вырăнне пире
Лайăх лаптăк сĕнчĕ вăл ҫĕнĕ ҫĕре.

Бавкида

Тинĕсĕн хумĕсене ан шан ытла:
Лайăхрах сăрт ҫинчине сыхла.

Филемон

Эпĕр ак часавая каяр:
Анакан хĕвел урисене пăхар,
Чан ҫапса, пуҫ тайса мухтар ăна.
Пирĕн шанчăк — кив турă кăна!

КЕРМЕН

Сарлака та тӳрĕ канал хĕрринче пысăк сад. Фауст, ватлăхĕ ҫитнĕ старик, садра тарăн шухăша кайса утса ҫӳрет

*(башня ҫинчен рупорпа калать)*

Линцей

Хĕвел анать; халь карапсем
Порта васкаҫҫĕ, юлнисем,

Ак мăн карап кĕрет порта,
Қаналпала килет кунта.
Ялавĕсем илемлĕн варкăшаççĕ,
Тĕреклĕ мачтисем чанках тăраççĕ.
Сана хăй боцман саламлать,
Нумай çула телей сунать.

Тинĕс хĕрринче, дюна çинче, чан çапни илтĕнет.

Фауст
*(картах сиксе)*

Ылханлă чан сасси! Вăл чарана
Яш! çĕçĕ чикнĕн туйăнать мана!
Пăханăмăн чикки те çук малта,
Хыçра — ак тарăху ялан кунта!
Çак чан сасси мана тек йĕкĕлтет:
Унти усал кил-çурт, çăка кати,
Начар чиркӳ хуçа эпех марри
Çинчен пĕрмай тискеррĕн пĕлтерет.
Вăл еннелле эп уçăлма кайсан,
Қайма пĕлмест çич ют мĕлки куçран:
Ялан пусать мана усал сехре,
Вара тарас килет таçти çĕре!

Линцей
*(малтанхи пекех)*

Қаçхи тӳлек çил вĕрнипе
Эрешлĕ ким хавас килет порта.
Ун çийĕнче тавар çеç купипе:
Арча та, михĕ те нумай унта.

Çыран хĕрринче пит илемлĕ кимĕ чарăнать, ун çине ют çĕршывсен таварĕсене туллиех тиенĕ.

Мефистофель тата Виçĕ паттăр

Хор

Пит лайăх çитрĕмĕр,
Аван çӳрерĕмĕр;
Хисеплĕ хуçана
Телей тата салам!

Виçĕ паттăр тухаççĕ те таварсене çырана кăларма тытăнаççĕ.

Мефистофель

Эпир аван тăрмашрăмăр,
Хуçи мухтав сунсан,
Телейлĕ пит пулаттăмăр.
Портран ак ик караппа тухса,
Килсе кĕретпĕр çирĕм кăкарса!
Эпир мĕн ăнăçсем туни çинчен
Пĕлетĕр мĕн илсе килнисенчен.
Уç тинĕсре çын чунĕ ирĕклĕ ялан;
Вăрах шухăшлама тивмест унта:
Хăюллă тапăну кирлех ĕçре!
Тытаççĕ пулă тинĕсре,
Унтах тытаççĕ кимĕсем.
Алла ик-виç карап лексен,
Часах тăваттăмĕш лекет вăлта çине;
Унтан — тӳрех пиллĕкмĕшне!
Йĕрки çапла: кам вăйлă, çав тӳрри,
Кĕсъе çеç пултăр тăп-тулли.
Мĕн тытрăн, теççĕ, мĕн майпа, темеççĕ.
Суту-илӳ е вăрçă-хурахлу —
Вĕсем пурте пĕр — пусахлу:
Çапла вĕсен тĕллевĕ [170].

Виçĕ паттăр

Салам сунмарĕ,
Парне памарĕ,
Эпир ăна тем ырлăх
Ятне кăтартнă шырлăх!
Пăхать пире
Силленнĕ пек:
Элле патша парни —
Ăна сиен туни?

Мефистофель

Парне кĕтни сире
Пулать харам:
Кашни харкам
Пайне ил валеçсе.

Виçĕ паттăр

Ку вăл пире
Нимех те мар:
Пайлатăр мĕнпурне
Вăл çурмашар!

Мефистофель

Тупăшсене малтан
Çурта çӳле
Лартар йĕркипеле.
Хуçа унтан
Сăнатăр куçĕпе,
Хăй хутăр ун хакне.
Вăл тăмĕ-ха тытса,
Парне парать хушса,
Ĕçки те ĕç çине
Пулать сире.
Ыран кĕтеп нумай ула кайăк,*
Пурне те вĕсене хамах майлăп.

*Пушатнă таварасене* Виçĕ паттăр *йатса каяççĕ.*

Мефистофель
*(Фауста)*

Мĕн эс, пĕркелесе çамку тирне,
Салхун пăхатăн телейӳ çине?
Чарусăр тинĕс парăнчĕ çынна:
Йалт пурнăçланчĕç аслă шухăшсем!
Унтан алтса кĕç хӳмеленчĕ măн канал,
Хумсем касса килеççĕ карапсем.
Эс тивĕç мухтама ху пуçлăх пулнине:
Аллу сан çавăрса тытайрĕ тĕнчене.
Малтан пуçланчĕ ĕç ак çакăнтан:
Кунта туса та лартрĕç хӳшĕ хăмаран,
Унтан алтса кĕç хӳмеленчĕ măн канал,
Ун тăрăх халь шăваççĕ карапсем кал-кал.
Сан шухăшу тӳр тарçусенĕн тимĕпе
Çĕнтерчĕ тинĕсе, хăтарчĕ типçĕре.
Кунта...

---

* Мефистофель кунта ют çĕршывсен карапĕсен ула-чăла ялавĕсем çинчен калать.

Фауст

Ылханлă вăл «кунта!» Акă ăçта
Асапăм манăн! Çакă вăл ман тамаша!
Пĕлеп, эс йăрă та чăртмах ăста,
Темле чеелĕх те сăлай пĕлетĕн!
Қалас — аван мар пек, анчах та ман ăша
Қăшлать çапла инкек: кунтан катертĕн
Çав çăкасен сулхăнĕнчен куллен
Эс кăштăрти стариксене хуллен!
Ытла та киленес килет-çке ман!
Қунта ларать, куратăн, ют вăрман:
Эп пуçлăх çак тĕнчен, пĕлетĕн,
Ман чапăм ун пирки çĕрет кĕретĕн.
Унтан пăхса тăрасчĕ таврана!
Унта тăвасчĕ çӳллĕ каланча;
Пăхса сăнассăм пур çĕршывăм анлăшне,
Этем ăс-халĕ тăвакан чипер пултарăмне,
Çынна сипет кӳме ӳстермĕ садсене,
Çак анлă талккăшра этем ыр курнине.
Пире илпек çинчи пур çитменлĕхсем
Нимрен ытла кӳрентереç, мурсем!
Чансен сасси ян! кайсанах,
Çăка çеçкин шăрши сарăлсанах,—
Мана виле шăршийĕ вупăрла туллать.
Çак пĕчĕк çеç ниме тăман çĕр лаптăкки
Манăн хăватлă ирĕке тăллать.
Эп тăрăшрăм темле те çакă юлашки
Самантсенче питех тӳлек пулма,
Анчах чансен сасси пăсать ман чăтăма.

Мефистофель

Паллах, кун пек юравсăр тамаша
Сăпай хăлхашăн пит усал тăшман!
Çын ĕмĕрĕ тăршшипеле янрать-янрать
Ылханлă «кăн та кан» ун хăлхинче:
Шыва кĕртнĕренпе мĕн виличчен паврать,
Пĕрмай вилес-канас çинчен астутарать,
Тем пурнăç тĕлĕк çеç ку çĕр çинче.

Фауст

Ман пĕтĕм çитĕнӳ вĕсем хирĕçнипе
Юравсăра тухать, хисепсĕре юлать.

Асапланса эп пĕтрĕм ĕнтĕ пĕтĕмпе;
Ман тӳрĕ кăмăлăм тек чăтайми пулать.

Мефистофель

Мĕскер эс именен? Вăл вырăнтах
Ялсем тума шутларăн вĕт хăвах[171].

Фауст

Халех, пĕр тăхтаса тăмасăрах,
Эсир куçарăр вĕсене
Эп хатĕрленĕ лайăх çĕр çине.

Мефистофель

Халех куçарĕç çĕн çĕре,
Сиссе те юлмĕç куçнине;
Вăйпа куçарнине вĕсем час манĕç,
Илемлĕ кĕтесе питех юратĕç.
*(Хытă шăхăрать.)*

Виçĕ паттăр пырса кĕрет.

Хуçа мĕн хушнине тăвар аван —
Вара уяв пулать пире ыран.
Вăл япăх йышăнчĕ пире,
Çампа пит тараватвăл пултăр ĕçкĕре.

Мефистофель
*(пăхса ларакансене)*

Авал пулни пулать-мĕн яланах:
Пар, Навуфей, ху пахчуна часрах![172]

СĔМ-ÇĔРЛЕ

Линцей
*(башня çинче хурал тăнă чух юрлать)*

Хурал эп тăратăп
Пашне тăрринче,

Пит çивĕч пăхатăп,
Умра çут тĕнче.
Тавралăх яр-уçă,
Илемлĕ ялан —
Çут çăлтăр та уйăх,
Кĕтӳ те вăрман.

Тĕнчен пур илемĕ
Курнать çакăнтан,
Унпа эп телейлĕ,
Эп йӳнлĕ хамран.

Мĕн курнă, мĕн савнă —
Вăл юлнă пуçа.
Пурте савăнтарнă
Телейлĕ куçа.

Пауза

Киленӳ çеç мар куратăп
Эпĕ çӳллĕ вырăнтан:
Мĕн, хăрушăскер, хăратрĕ
Тĕттĕмре ман куçăма?
Çăкасем тăррин ялтлатрĕç
Хĕлхемсем сĕм-тĕттĕмре;
Ак пушар хуллен шăватĕ
Малалла çил вĕрнипе.
Ку — çунать сурса вăраххăн
Çав мăкланнă çурт, садри;
Пулăшу кĕтет часрах вăл,
Унсăрăн пĕтет чисти!
Ват сынсем питех хăранă
Яланах вут-кăвартан.
Халь вĕсен çуртне хыпайнă
Вут-кăвар — хăруш тăшман!
Хĕрлĕ çулăмпа çунаççĕ
Мăк хуплана стенисем...
Стариккисене çăласчĕ,
Çакă тамăк вутĕнчен!
Çулăм чĕлхисем ухаççĕ
Çулçă витĕр ялкăшса;
Туратсем çунса авнаççĕ,
Хуçăлаççĕ шартлатса...
Ак мĕскер курмашкăн тиврĕ—

Мĕншĕн витĕр куçлă эп?
Ӳкнĕ йывăççем, ак, ишрĕç
Чалăшнă часавайне;
Çулăмĕ çӳлте арканчĕ
Пин-пин тĕслĕ çĕленле!
Хĕрлĕ кăварла лараççĕ
Çуннă йывăççем лере.
Мĕн куçа савăнтаратчĕ
Йалт çухалчĕ ĕмĕре.

Вăрăм пауза. Қаллех юрлать.

Фауст
*(дюна патĕнче балкон çинче)*

Мĕскер çӳлте йĕрсе юрлаççĕ?
Қая халь шелллеме-йĕме!
Пашне çинче ку ман хуралçă
Йĕрсе юрлать, ман чĕреме
Çурса ярать. Ытлаваскарăм...
Вутра кĕлленнĕ çăкасен
Вырăнĕнче часах тăваттăм
Эп çӳл пашне, пăхма çӳлтен
Тавра вырăнсене. Тупатăп
Вăл ватăсене, çĕн çĕр çине
Телей курмашкăн вырнаçтарăп,—
Қаçарĕç тин хур тунине.

Мефистофель тата Виçĕ паттăр (аялта).

Мефистофель

Чупсах халь килтĕмĕр кунта;
Қаçар, шар пулчĕ вĕт унта!
Шаккарăмăр пӳрт алăкне,
Қĕртмерĕç хуçасем пире;
Шаккарăмăр, уртăнтăмăр,
Қăлартăмăр кив алăкне;
Хăратрăмăр, йăлăнтăмăр —
Ним итлемерĕç хушнине;
Пĕлен хăвах: ун пек чухне
Мĕн калани — вĕçех харам.
Сăмах сая тек каясран
Шутларăмăр хуса яма.
Унта эпир пит тăрăшман:

Вилсе те кайрӗҫ сехрепе,
Вӗсен хутне унти хӑна
Ҫӗме шутларӗ те, ӑна
Эпир вӗлертӗмӗр чиксе.
Ҫак кӗрешӳ вӑхӑтӗнче
Ӳкернӗ вут такам пиртен,—
Ак уламӗ, вут тивнипе,
Ҫуна пуҫларӗ кӗрлесех
Пире валли янтланӑ пек.

Фауст

Ман сӑмаха эсир тумарӑр,
Ҫунтартӑр ватӑ мӑшӑра.
Ман ылхана пурте туянӑр:
Эп ылханатӑп пурсӑра!

Хор

Ҫаплах юрлать кив юррине!
Хавассӑн чӑт вӑй пусмӑрне!
Ҫам ҫирӗп, вӑйлӑ та хастар —
Сыхла ҫуртна, хӑвна хӑтар.

Ҫаяççӗ.

Фауст
*(балкон ҫинче)*

Хупласçӗ тӗксӗм пӗлӗтсем ҫӑлтӑрсене;
Вут тамалать, сӳнет, аран ҫунать;
Ҫаҫхи нӳр сывлӑш сарӑлать,
Ҫӳрет ҫил тӗтӗм шӑршине.
Ытла час хушрӑм эп тумаллине,
Ытла та хӑвӑрт турӗç хушнине.
Кун айӑпӗ пурте манра!
Мӗн мӗлкисем тӑраççӗ ман умра?

ҪУР ҪӖР

Ҫӑвакçӳçлӗ тӑватӑ карчӑк тухаççӗ.

Пӗри

Эп Ҫуклӑх пулатӑп.

Иккĕмĕш

Айăп теççĕ-ха мана.

Виççĕмĕш

Чăрмав пулатăп эпĕ.

Тăваттăмĕш

Сирпе Инкек — пĕрле ялан.

Çуклăх, Айăп, Инкек

Алăксене тĕреклĕ питĕрнĕ кунта:
Хуçи пуян, пире кĕртмест çурта.

Çуклăх

Кунта ман мĕлке пулас.

Айăп

Эп хам пачах пĕтеп.

Инкек

Пуян вăл Айăпран ним шикленмест.

Чăрмав

Сиртен, тăванăмсем, никам та кĕреймест.
Чăрмав çăра шăтăкĕнчен кĕрет.

Çуклăх

Кăвак тăванăмсем, пĕрле каяр.

Айăп

Эп хам санпа пыратăп юнашар.

Инкек

Инкек сан хыçăнтан çӳрет, пĕлсем.

Çуклăх, Айăп, Инкек

Хуплаççĕ пĕлĕтсем, сӳнеççĕ çăлтăрсем,
Ҫилет кунта лерен, ав, пăхăрсам:
Эсрел тăванăмăр, пиччемĕр, çывхарса.

Тухса каяççĕ.

Фауст

Тăваттăн килчĕç, виççĕшĕ çеç кайрĕç!
Мĕскер çинчен вĕсем калаçрĕç?
«Элчел» пек аякра янрарĕ.
Ҫунта «эсрелĕн» илтĕнсе вăл кайрĕ.
Вĕсен чĕлхийĕ сасăсăр, хăйсем асамлă,
Ҫу тыткăнран çаплах эп хăтăлман-ха!
Ҫак асамран хăтăлăпинччĕ,
Тухатуран тасалăпинччĕ!
Ҫанталăкпа куçма куçах тăрасчĕ
Ахаль çын пек! Вара этем эп пулнинчен
Чăнах мана пайта пулатчĕ!
Ҫун пек эп пулнă тĕттĕмре чухнех,
Хама та тĕнчене ылханиччен.
Халь пĕтĕм сывлăшра асам вĕçет питех,
Ун аллинчен хăпма кашни ăслай шырать,
Анчах унтан никам та тухаймасть.
Шăн-кăнтăрла ăс-хакăл пирĕн урă,
Ҫĕрле вара ăш ыйхă та пăтранчăк, хурлă.
Чипер çаран çинче утса çӳретĕн —
Ҫăхан кранклатнине илтен, тӳрех ыйту:
Ай, ку мĕне?— Паллах, вăл — инкеке, асту!
Ҫирек ăçта та пуçлăхра суя тĕн:
Ҫу — инкеке, леш — телее, вăл — хуйăха.
Ҫапла тăран пĕччен, кĕтсе хăрушлăха...
Ак алăк уçăлчĕ... Ҫам кĕчĕ-ха?

*(Ҫӳçенсе чĕтресе.)*

Ҫунта такам пур?

Чăрмав

Пур, паллах!

Фауст

Анчах кам-ха?

Чăрмав

Эп — санăн умăнта.

Фауст

Ҫай, кай! Ҫухал!

Чăрмав

Аҫта эп кирлĕ — ҫавăнтах

Фауст

*(малтан ҫилленсе, унтан лăплансан, хăй ăшĕнче)*

Сăмах ан хуш! Ан чĕн! Ан тухатах!

Чăрмав

Ан тив, хăлху мана ан илттĕр —
Анчах чĕрӳ туять сан витĕр.
Хам сăнăма тĕрлĕ улăштарап,
Ҫапах хамăн ĕҫе майлаштарап.
Типҫĕр ҫинче, шывсем ҫинче —
Ҫынсен хăруш юлташĕ эп;
Мана никам та шырамасть,
Анчах мана ялан тупать;
Мана пурте ылхан сунаҫҫĕ,
Ҫапах умра йăпăлтатаҫҫĕ...
Эс Чăрмава пачах пĕлместĕне?

Фауст

Эп хăвăрт тухрăм ҫӳресе ҫут тĕнчене;
Утса пыратшăн киленӳсене
Яра-яра эп тытрăм. Ҫилĕшменнине
Тытса чарман; паман иртме мĕн кирлине,
Ҫаллех эп суннă. Ҫакăн пек чупсах
Хам пурнăҫа эп тухрăм — малтан
Ним чарăна пĕлми, пит шавлă, шухă;
Халь пурăнап йĕркеллĕ, ăслă, шутлă,
Чылай ăнлантăм эп ку тĕнчене,
Ҫул ҫук кайма пире леш тĕнчене.
Ҫам пĕлĕтрен ҫӳлте вĕҫет, шырать унта
Хăйпе пĕр таннине, вăл суккăр-мĕн йăлтах.

Ҫунтах тӗреклӗ тӑр, йӗри-тавралла
Мӗн пулнине хыт асӑрха ӑсупала.
Чӗлхесӗр мар ӗҫчен этемшӗн ҫак тӗнче.
Мӗскер усси тӗнче тӗпне кӗмешкӗн ҫуннинче?
Ярса тыт аллупа пӗлме май пуррине.
Ҫапла ҫеҫ ирттерет ӑсчах хӑй ӗмӗрне.
Усал-тӗсел хӑраттӑрах! Хӑйӗн ҫулне
Телей-асап ҫинче пӗр канӑҫсӑр шырать,
Малтан мала самант канми пырать!

Ч ӑ р м а в

Ҫам ман танатана лекет,
Ниме те хавас мар вӑл тӗнчере;
Сӗм-тӗттӗм унӑн ӑшӗнче тӑрать:
Хӗвел тухмасть, хӗвел анмасть!
Туйӑмӗсем темле хӑватлӑ пулччӑр,
Ҫапах вӑл тӗттӗм ҫеҫ усрать ӑшра.
Тем чул пуянлӑх унӑн пултӑр —
Вӑл ним хуҫи те мар унта.
Телей, инкек чухне вӑл асапра,
Илпек чухне вӑл выҫлӑхра;
Ун савӑнӑҫ е инкек ҫитет —
Ялан пӗлми ӳлӗмхине кӗтет;
Пулассинче вӑл темӗн те шырать,
Паянхинче пӗр ҫуклӑх ҫеҫ курать.

Ф а у с т

Ҫитет! Мана тытаймӑн кунпала!
Тӑнлассӑм ҫук эс ӳпӗлтетнине.
Тасал кунтан! Ҫу нӑйкӑшупала
Тӑнран яран чи ӑслине.

Ч ӑ р м а в

Ӑҫта кайма, ӗҫе вӑл тытӑнать,—
Ун ӗҫ тума ҫитмест хӑват!
Ҫаять — ҫурма ҫулта вӑл такӑнать:
Ӑҫта хӑй кайнине пӗлменнипе
Шалтах сӗнкет, аптранипе.
Тапкаланать хӑй танатарилле,
Пурне курать вӑл тӳнтерле:
Пӗрмай тертлентерет хӑйне,
Чӑрмантарать шавах ыттисене.

Ни вилĕ вăл, ни чĕрĕ — аптрав ялан.
Ни шанăç çук, ни ĕмĕт татăлман.
Ҫана пĕлмест, ĕçрен писет.
Ĕçпе кану картийĕнче сĕнкет,
Чăн ирĕкрен тарать,
Хĕн касмăкне лекет,—
Унта енчен енне çапкаланать;
Вăл лăпланма пĕлмест пачах,
Тӳлек ăна йĕрĕнтерет анчах.
Пурнать ĕнтĕркесе — тĕнче кулли,
Вăл тамăк тупăшĕ валли.

Ф а у с т

Ылханлă мĕлкесем! Этем йăхне
Эсир пин-пин майпа кулянтарма пĕлетĕр.
Ахаль тӳлеклĕ кунсенчех тетел ăшне
Лектернĕ пек пире шиклентеретĕр.
Усалсенчен хăпма пире питех хĕн:
Вĕсен тăлли ытла тĕреклĕ;
Анчах сан хăватна, Чăрмав,
Нихçан та йышăнмастăп çав!

Ч ă р м а в

Ман хăвата эс халĕ сăнаса пăхатăн.
Санран эп ылханпа хăпса каятăп!
Эсир, çынсем, кунçулăр тăршшĕпех
Сĕм-суккăр: эс те, Фауст, суккăр пул вуçех!
*(Ун çине вĕрет.)*

Ф а у с т
*(суккăрлансан)*

Ман таврара тĕнче пачах хуралчĕ,
Анчах ăшри ман çутă ытларах вăйланчĕ;
Тума васкатăп эпĕ хам шутланине:
Хуçин сăмахĕ çеç мала ярать ĕçне!
Ман шанчăклă ыр тарçăсем, ĕçе тăрсамăр,
Ҫашни ыр кăмăлтан çеç тăрăшсамăр,
Хăюллă ман плана тума васкатăр!
Саступ, лум, кĕреçе, кайла
Пурте тытсамăр халь алла!
Хуçа пуçланине часрах туса тăрлатăр!
Чипер йĕрке, васкав ĕçлев

Илеççĕ тивĕçлĕ тӳлев;
Пĕр ăслă пуç палăртнине пин çын тăрса
Қар! тытăнсан, чăн аслă ĕç пулать ăнса!

## ҪЕРМЕН УМĔНЧИ АСЛĂ ҪИЛҪАРТИ

Факелсем

Мефистофель
*(ĕçсен управçи вырăнче, малта)*

Ҫунта, кунта! Часрах, часрах!
Шăмăсенчен, шăнăрсенчен йăлтах
Пуçтарнă лемурсем,
Пайран-пайран тăран çурма йăхсем!

Лемурсем [173]
*(пĕрле юрлаççĕ)*

Ҫирек ăçта, ялан
Эпир пĕрле санпа!
Хушатăн-и пире
Сарма хуçан çĕрне?
Эпир шалча виçе
Илсе хăпартăмăр —
Мĕн тумалла?
Ма килнине йăлт мантăмăр.

Мефистофель

Ĕç сирĕн халĕ кăткăс мар!
Туса хуратăр ку ĕçе вăр-вар.
Эсир виçе тăватăр хăвăртан илсе:
Сиртен чи пысăкки выртать çĕре,
Сĕветĕр ыттисем ун тавралла çерем —
Ашшĕсене валли тăваççĕ çавăн пек,
Пĕр тăрăхла ур* алтăр ун айне.
Ҫу ват çынна çак тăвăр ур-кермен ** тĕсех!
Ҫынсем ялан пĕтеççĕ пурте пĕр пекех.

Лемурсем
*(шăтăк тăваççĕ, шăл йĕрсе кулса юрлаççĕ)*

Яш чух эп тĕнчене саваттăм,

---

* Ур — шăтăк.
** Ур-кермен — виле шăтăкĕ (иронипе).

Унран тутли ним те çук пек туяттăм;
Ăçта сăра — ура хăех унта туртатчĕ.
Мана халь ватлăх ик туя тыттарчĕ,
Эп уçă тупăк умĕнче тăратăп:
Ма эсĕ уçалтăн? — тесе шутлатăп.

Ф а у с т

*(керментен аллипе хыпашласа тухать те алăк янаххи çумне тайăнса)*

Кĕреçесен сасси епле ман хăлхана
Килентерет! Хуçа хăй хушнипе
Пĕр ушкăн халăх тăрăшать кунта:
Хӳме тăвать шывпа çĕр хушшине,
Хăйне хăй çĕр çапла тăплантарать;
Çак тинĕс тавралла тĕреклĕ вал тăвать.

М е ф и с т о ф е л ь
*(айккалла)*

Эс ĕçлени пире кăна пайта!
Пĕве те дамбăсем харам кунта:
Эс тинĕс шуйттанне, ват Нептуна,[174]
Пит чаплă ĕçкĕ хатĕрлен кăна!
Темле эс тăрăш — ĕçӳ ним уссăр пулĕ сан.
Тĕнчен чарусăр вăйĕсем пĕрле
Ак пирĕнпе каварлансан,
Пĕтерĕç сан ĕçне тĕппипелле.

Ф а у с т

Управçă!

М е ф и с т о ф е л ь

Эп кунта!

Ф а у с т

Ĕç халăхне кирек ăçтан пуçтар:
Тӳле, хавхалантар, парне парса астар!
Кашни кунах пĕлтер мана ĕç шунине,
Канав чавас ĕç мĕн тери час пулнине.

Мефистофель
*(шăппăнрах)*

Ман патăма сăмах ак çитрĕ:
Қанав мар, сан пӳртӳ ку — хатĕр, пĕтрĕ.

Фауст

Ушах, ыр сывлăша шăршлантарса
Выртать тусем таран, мĕнпур ĕçе пăсса;
Уçса ярам янкар шывсен кӳлленчĕкне —
Çак юлашки паха ĕçе илетĕп хам çине!
Пит аслă çĕн çĕршыв тăвам кунта,
Мĕльюн çын ырă куртăр çакăнта,
Хăй ĕмĕрне, çанталăк хаярне курса,
Ирттертĕр ирĕклĕ ĕçне кăна шанса.
Илпек çĕрте — сăртсем хушши уйĕсенче —
Ак ирĕк пулĕ этеме, кĕтӳсене;
Çăтмах ешерĕ ку вăрман ĕшнисенче,
Лере, ав, катара, кĕрлетĕр урнă тинĕс,
Қăшлатăр дамба хӳмине пĕр тикĕс,—
Самант тӳрлетĕç суранне. Çак шухăша
Эп парăнатăп! Ман кунçул пушах
Иртмерĕ; ман умра яр-уçă халĕ
Ку çĕр çинчи чăн ăслăлăх халалĕ:
Қам ирĕкшĕн те пурнăçшăн тухать куллен
Қĕрешĕве, çав çын çеç тивĕç вĕсене!
Ача та, ар та, ватă та хăй ĕмĕрне
Ирттертĕр харсăр, чарăнми кĕрешӳре:
Ман ирĕклĕ çĕршывăм, ирĕк халăхçăм
Хăватлă çиçнине курайтăр куçăмçăм!
Вара эп калăттăм саманта:
Ытла илемлĕ эсĕ, тăсăлсам, тăхта!
Ун чух эп çĕр çинче хăварнă йĕрĕме
Шăлса яраймĕ ĕмĕрсен юххи нимле!
Ытараймми çак аслă телее туйса,
Эп киленетĕп халь чăн чаплă самантпа.

Фауст ӳкет. Лемурсем ăна пырса тытаççĕ те çĕр çине хураççĕ.

Мефистофель

Ăна нимле телей те кунăçтараймарĕ,
Пĕр киленӳ те тăрантараймарĕ,

Вылян мӗлкесене хӑтланчӗ вӑл тытма.
Чи юлашки телейсӗр саманта.
Тытса чарма шут тытрӗ, апӑрша!
Манпа ҫапла тӗреклӗ мехелпе
Кӗрешнӗ старике Саман-патша
Ҫӗнтерчӗ! Вӑл выртать ӳпне!
Сехечӗ чарӑнчӗ!

Хор

Тӑрать! Каймасть.
Сӗм ҫур ҫӗр пек ним шарламасть.
Сехечӗ чарӑнчӗ, йӗппи персе те анчӗ.

Мефистофель

Пӗтрӗ!

Хор

Иртрӗ кайрӗ.

Мефистофель

Иртсе те кайрӗ? Акӑ ӑнаҫсӑр сӑмах!
Мӗн-ха иртсе вӑл кайнӑ? Мӗн пулнӑ-ха?
«Пулман» тата «иртсе кайнӑ»—пӗр-пӗрне танах!
Мӗн-ха кӗтет кашни пултарӑмах?
Пурте, веҫех пырать пӗтес патне!
«Иртсе те кайнӑ!» Мӗн тени вӑл ӑнниле?
Пачах пулман пекех — вӑл йӑшӑлтатнӑ, кулнӑ,
Чӑрманнӑ, пулнӑ пек ҫеҫ пулнӑ.
Ҫампа мана ӗмӗртенхи Нимскер ҫеҫ сумлӑ!

* * *

Пӗттӗр мӗнпур йах-ях,
Тӗп пул, ирсӗр суя,
Ҫиҫтӗр ялан ҫалтӑр,
Сӳнми сунса тӑтӑр —
Ҫиҫейтӗр ӗмӗрех
Юрату пӗрчи ҫех!

## ĂНЛАНТАРУСЕМ

Гете «Фауста» 1774-мĕш çулта çырма тытăннă, унăн 1-мĕш пайĕ 1806 çулта, 2-мĕш пайĕ 1831 çулта пичетленсе тухнă. Литература произведенине мĕн чухлĕ ĕлĕкрех çырнă, ăна ăнланма çавăн чухлĕ йывăртарах. «Фауст» чĕлхи хăйне евĕрлĕ: унта ăнланма йывăр вырăнсем, ытарлă, шак хурса калана вырăнсем нумай. Çавăн пеккисене ăнлантарса каламасассăн, «Фауст» чĕлхине ăнланма йывăр. Кунсăр пуçне тата, тĕрĕсрех куçарас тесе, чăваш чĕлхинчи сахалтарах е сайра хутра калакан, тĕрлĕ вырăнсенче çеç калакан сăмахсемпе усă курнă. Хăшпĕр сăмахсене е вĕсен формисене çĕнĕрен те тунă.

## Пĕрремĕш пайĕ. Халал.

Халала Гете 1797 çулта, «Фауста» çырма пуçласан 23 çултан тин, çырнă. Çамрăк чухне пуçланă ĕçе юсаса лайăхлатма тытăнсан, Гете хăйĕн яш чухнехи юлташĕсене аса илсе, трагеди умне «Халал» хушса хурать.

1. Тĕтре сăнсем — Гетен çамрăк чухне пуçĕнче çуралнă Фаустăн, Маргаритăн, Мефистофелĕн поэзиллĕ сăнарĕсем.

2. Туссен сăнарĕсем асра — кусем вилнĕ тăванĕсем, ача чухнехи, яш чухнехи тусĕсем: Мерк, Ленц, йăмăкĕ Корнели т. ыт.

3. Эол — авалхи грексен çил турри. Эол хĕлĕхĕ — Эол арфин (музыка хатĕрĕн) хĕлĕхĕ; вăл музыка хатĕрĕ, çил кăшт вĕрсенех, ĕнерўллĕ сасăсем кăларса тăнă имĕш.

## Театрти пролог

4. Çырашка — начар япаласем çыракан.

5. Кунта Гетен — «вам придется рубить мягкое дерево» (Соколовский), «с волками жить — по волчьи выть» (Холодковский) тенине чăвашла «утне кура турти» е «çўпçине кура хупăлчи» тесен тĕрĕсрех пулать.

6. Кунти ăнланма йывăр вырăнсене çапла ăнлантараççĕ: Пĕрисем «Хĕвеланăçĕнчи» тени поэт хĕвеланăç илемне мухтаса юрланине пĕл-

терет, теççĕ, теприсем — вăл геройсен чаплă вилĕмне пĕлтерет, теççĕ. Виççĕмĕшсем пачах урăхла ăнлантараççĕ: Гете кунта поэзин виçĕ жанрне характеристика панă: 1) «Кам чун-чĕре сассин хĕрÿллĕ тăвăлне...»—драма; «Хĕвеланăçĕнчи мăн шухăш туйăмне»— эпос; «Кам пултарать... Витме çурхи илемлĕ чечекпе» — лирика. 2) «Кам вăл ахаль çулçăсене капăрлатать» — кунта лавр çулçисем çинчен каланă; авал чапа тухнă çынсене чысласа лавр çулçинчен тунă пуç кăшăлĕ тăхăнтартнă. 3) Олимп — Авалхи Грецири ту; ун çинче турăсем пурăнаççĕ тесе шутланă.

7. Ĕлĕкхи театрсен кайри пайĕ виçĕ хутлă пулнă: çÿлтине **пĕлĕт** тенĕ, варринчине **çĕр**, аялти хутне **тамăк** тенĕ. Çавăнтан «пĕлĕтрен çĕр витĕр тамăка анас» тени тухса кайнă.

## Пĕлĕт çинчи пролог

8. Кунта Пифагор планетăсем кашни хăйĕн сассипе ăмăртмалла юрăсем кăларса пыни çинчен калакан легендăна аса илтернĕ, хĕвел хăй куçнă чухне аслати пек сасă кăларса пыни çинчен Талмуд кĕнекинче каланă.

## 1-мĕш сцена. Çĕрле.

9. Ă с л ă л ă х а в ĕ р е н т ĕ м, т у х т ă р э п п у л а й р ă м... Кунта Фауст философи, медицина, юриспруденци, богослови наукисене вĕренни çинчен калать. Ку наукăсем вăтам ĕмĕрсенче тĕп наукăсем пулнă. Çакна кура университетсенче тăватă факультет пулнă. Çапла Фауст пур тĕп наукăна та вĕреннĕ.

Магистр, доктор — ученăй степенĕсем.

10. Х ы с м а — сĕткен; этем хавасĕн чăн хысми — чăн-чăн савăнмалли.

11. Н о с т р а д а м — Мишель Нострадамус (1503—1566 çç.) — алхимик, астролог, французсен IX Карл королĕн килти врачĕ.

12. М а к р о к о с м, вăтам ĕмĕрти мистиксем вĕрентнĕ тăрăх,— пĕтĕм тĕнчене пĕлтерет, микрокосм — этеме. Макрокосм палли — ултă вĕçлĕ çăлтăр — маги кĕнекисенче пĕтĕм тĕнчене, çутçанталăкăн чĕрĕ вăйне пĕлтернĕ.

13. Ă с л ă ç ы н — кунта Нострадамуса пĕлтерет; малалли текст ун кĕнекинчен илнĕскер.

14. И м(л ĕ) ш е в л е, мистиксемпе астрологсен ăнланăвĕ тăрăх — ăслăлăх.

15. Кунта пĕтĕм тĕнчери япаласем пурнăçра пурте пĕрле çыхăнса тăни çинчен каланă.

16. «Çÿлти вăй-хăватсем пĕрне-пĕри çут ылтăн куркапа сиплеççĕ» тени çутçанталăк хăйне хăй хăват парса тытăнса тăнине пĕлтерет.

17. Ç ĕ р ы р р и — çĕршыв хăвачĕ; Гете кунта, вăтам ĕмĕрсенчи ăслăлăхçăсем хăтланнă пек кăтартас тесе, Фауст Çĕр ыррине чĕнсе кăларнă пек тунă, вăл, Гете шухăшласа кăларнăскер, çĕрĕн ĕçĕсемпе пултарăмĕсене тăвакан гени.

18. Çĕр ырри сăмахĕнче Гете çутçанталăк пурнăçĕн диалектикине кăтартнă.

19. Т у р ă в а л л и ч ĕ р т у м т ĕ р т е т ĕ п — çутçанталăкăн (курăнакан тĕнчен) пулăмĕсене пĕлтерет (Гете ăнланăвĕпе, турă— пĕтĕм çутçанталăк). Гете шухăшĕпе, Çĕр ырри турă патĕнче хĕсметре тăрать.

20. Ю л т а ш тесе Фауст хайне пулăшакан Вагнер ученăя каланă.

21. И м ш е р н а у к ă н й ă р ă х у р ч ĕ — çапла Вагнера тăрăхласа каланă.

22. Вырăсла текстсенче кунта кабинет, «музей» тенĕ, нимĕçле текстра — музей (museum). Вăтам ĕмĕрсенче ĕç кабинетне «музей» тенĕ (музăсене ĕçлесе тăмалли пӳлĕм).

23. Т ĕ к ĕ р — аякри япаласене çывхартса кăтартакан труба.

24. Ю т ç ы н ĕ ç к и н ю л а ш к и с е н е п у х а т ă р — çынсем çырнисенчен фразăсем илсе, вĕсене хăвăр майлă каласа паратăр.

25. С и р т е й ă л а к а п л а п у л с а н — çимĕç тутине туясси сирĕн кун пек пулсан.

26. П ĕ л ӳ ç ă л к у ç ĕ — сведенисем илмелли япала.

27. П е р г а м е н т кунта кĕнекесене, авалхи япаласене пĕлес тесе çеç усăсăр тĕпченине кăтартать.

28. И р т н и н к ĕ н е к и н е у ç а й м ă н э с в ă р - в а р — иртнине пĕлме пире питĕ хĕн, вырăсла текстра: д р е в н и е в р е м е н а — к н и г а з а с е м ь ю п е ч а т я м и.

29. Ç ĕ р ш ы в п е п к и — çĕршыв ачи.

30. А й в а н т а п у ш ă ĕ м ĕ т т у с л ă м а р м а н п а — эпĕ айван та пуш ĕмĕтсемпе айланмастăп (аппаланмастăп).

31. Кунта Фауст канлĕ, тертсĕр ĕçпе пурăнасси çинчен калать.

32. Т ӳ р т п е т ă р э с х ĕ в е л е н н е — çĕр çинчи пурнăçран уйрăл.

33. М и р о — ырă шăршлă çу; чиркӳ йăлисене тунă чухне унпа усă кураççĕ.

34. А н к ĕ т х ă в а т: хăват вăл айвансен ĕненĕвĕнчен çуралать.

35. М а н а в а л л и у н т а ç у л у ç ă м а р тесе ăнланмалла.

## 2-мĕш сцена. Хула хапхи тулашĕнче

36. К а й ă к ç ă ç у р ч ĕ, А р м а н, П ĕ в е ç у р ч ĕ — Гете вăхăтĕнче Франкфурт çывăхĕнче халăх канмалли вырăнсем пулнă.

37. Тарçă хĕрсем вĕсене çывăхрах.

38. Э н т р и к а ç ĕ (ноябрĕн 30-мĕш умĕнхи каç), халăх тĕшмĕш ĕненĕвĕ тăрăх, хĕрсем хăйсен турă çырни çинчен юмăç пăхма пит юрăхлă вăхăт тесе шутланă.

39. Т ӳ р ĕ п у л н ă — асам ĕçĕпе хăтланман.

40. А д е п т с е м — вăтам ĕмĕрсенче философи чулне тупасшăн тăрмашнă алхимиксем, философсем тата врачсем.

41. Х у р а к у х н я, х ĕ р л ĕ а р ă с л а н, л и л и (с а р а н а), ç а м р ă к п и к е - п а т ш а — алхимиксен имçамĕсен ячĕсем. Кунта Гете алхимиксен терминĕсемпе усă курать: çӳрен арăслан ылтăн е кӳкĕрте, сарана — кĕмĕле е чĕркĕмĕле пĕлтернĕ.

42. Ку монологра Фаустăн кăмăл туртăмĕн хирĕçĕвĕ палăрать: çĕр çинчи пурнăç патне, идеал, ырă шухăш патне туртăнни.

43. П о р ф и р а — патшасен тĕксĕм хĕрлĕ вăрăм тумтирĕ; вăл патша палли: çын патша иккенне кăтартать.

44. Ку монологри шухăшсене вăтам ĕмĕрти демологирен илнĕ. Вăл вĕрентнĕ тăрăх тĕнчен тăвата енĕ кашниех уйрăм сывлăшсен аллинче тăрать, вĕсем çав енсенчен çилсемпе пĕрле çынсен тĕрлĕ инкекне илсе килнĕ имĕш. Çурçĕрти çилсем сивĕ илсе килнĕ; хĕвелтухăçрисем тип уяра, кăнтăртисем — тĕрлĕ ерекен чирсене, хĕвеланăçрисем çумăрсем кӳрсе çарансене шыва путарнă имĕш.

## 3-мĕш сцена. Фауст кабинечĕ

45. Ç ӳ л т е н   п ĕ л т е р н и — Христос вĕрентĕвĕ тăрăх турă ирĕкĕ çинчен пĕлтернĕ чăнлăх, догма.

46. Ç ĕ н   х а л а л — Новый завет — Библи кĕнекин иккĕмĕш пайĕ. Евангелирен пуçласа. Унта Христос çĕр çине килни çинчен, унăн тĕнĕ пуçланса кайни çинчен каланă.

47. Гете евангели кĕнекине нимĕçле Фауст куçарма тытăннă тесе шутланă (ăна Лютер куçарнă). Иоанн евангелийĕнче логос (сăмах) тенине куçарас тĕлĕшпе тавлашу пынине кăтартать.

48. Ку сăмахсемпе Иоанн евангелийĕ пуçланать. Фауст ку текста форма енчен мар, пĕлтерĕшĕ енчен пăхса куçарасшăн.

49. Кунта нимĕçле текстра Tat (ĕç, ĕçлев) тăрать. Холодковскин — д е л о,  Соколовскин — д е я н и е,  Маклецовăн — д е й с т в и е.

50. Ч а р   С ă л а м а н   ç ă р и — вăтам ĕмĕрсенче авалхи Соломон патша хăватлă асамçă шутланнă: **«Саламан çăри»** — авалхи еврейсен тухату кĕнеки.

51. Сывлăш ачисем (Мефистофеле пăхăнса тăракан усал Сывлăшсем) ăна Фауст тухатнинчен хăтарма хăтланаççĕ.

52. «Т ă в а т   с ă м а х» тенипе Фауст тăват стихийăна тухатать: вута, сывлăша, шыва тата çĕре. С а л а м а н д р а çĕре пĕлтерет, мĕншĕн тесен пĕр тĕшмĕш тăрăх çак чĕрчун вутра çунмасть имĕш; С и л ь ф и д а — сывлăш ыррине, У н д и н а — шыв ыррисене тата Х ĕ р т с у р т  çĕр ыррисене пĕлтереççĕ.

53. Incubus — хĕртсурт ячĕ (латинла), кил ырри.

54. Х ă в а т л ă   п а л л ă — Иисус Христос ятне пĕлтерекен пуçламăш саспаллисем.

55. В и ç ç и н   в у ч ĕ (виçĕ хут таса вут-хĕм) — виççĕллĕ турă (троица) палли.

56. Ç ӳ р е в ç ĕ   с х о л а с т — тĕрлĕ университетсем тăрăх çапкаланса çӳрекен студент. Фауст унран: «Эсĕ кам?»— тесе ыйтсассăн, Мефистофель: «Ялан усал тума  шутланă хушăрах ырă кăна тăвакан хăватăн пайĕ эпĕ»,— тесе хуравланă.

57. Ку ăнланма йывăр монологра грексен турăсем пулса кайни çинчен çӳренĕ вĕрентĕвĕ палăрать. Вăл вĕрентӳ тăрăх çутă Хаосран (Эребран, çĕр айĕнчи тĕттĕмрен) пулса кайнă имĕш.

58. Кунта тĕнчен сиенлĕ вăй-хăватне Мефистофель ĕçĕ пек туса кăтартнă.

59. П е н т а г р а м м а — çăлтăр евĕрлĕ пилĕк вĕçлĕ геометри фигури. Пентаграмма пифагореецсен ушкăнĕн эмблеми пулнă. Вăтам ĕмĕрсенче пентаграммăна хĕрес çине пăталанă Христосăн фигури тесе ăнлантарма пуçланă. Ăна пӳртсен, пӳлĕмсен пусахисем çине, çуртсене усал-тĕселтен, тухатмăш карчăксенчен хăтарас шутпа ӳкерме тытăннă.

60. Нимĕç халăхĕн авалхи тĕшмĕшĕ тăрăх шуйттансем тĕрлĕ ир-сĕр чĕрчунсене: шăна-пăвана, хăнкăла-таракана, шапасене тата ытти çавăн пеккисене — хăйсен аллинче тытса тăраççĕ имĕш.

## 4-мĕш сцена. Фауст кабинечĕ

61. Кунта асăннă ырăсем, грек мифологийĕ тăрăх, Фауст ылханнă пурнăçри пулăмсене пăхса тăракан кĕçĕн ырăсем. Ырăсен хорĕ Фауста хăйĕн чĕринче çĕнĕ лайăх тĕнче туса хума чĕнет.

62. Фаустăн ку сăмахĕсем вăл хăй пурнăçĕнче канăçпа телей тупасса пачах та шанми пулнине, ку самант нихçан пулас çук тесе, Мефистофельпе ирĕклĕн килĕшнине кăтартаççĕ.

63. Д о к т о р ĕ ç к и — доктор ятне илнĕ май тăвакан ĕçкĕ; кунта: сăмах татнă пăлчав ĕçки.

64. Т и р хута, пергамента пĕлтерет (пергамента авал тиртен тунă), т ă п а (ăвăс) — ăвăспа пуснă пичете.

65. И с п а н а т т и — вăтам ĕмĕрти инквизицин çынна асаплантарса ыйтса тĕпчемелли хатĕрĕ.

66. Т ĕ р т ӳ ç ĕ — пир-авăр тĕртекен.

67. Fncheireisin naturae — çутçанталăк вăй-хăватне наука енчен пĕлмелли сăнав. Ку термин авалхи грексен «алла илессине» пĕлтернĕ. Мефистофель ку терминпа вилнĕ чĕрчунсене сăнанă чух усă курнинчен тăрăхлать.

68. Р е д у к ц и (лат.) — логика терминĕ; вăл ăнлавсене тĕп ушкăнсене пухнине пĕлтерет.

69. К л а с с и ф и к а ц и (лат.) — логика терминĕ; вăл ăнлавсене классемпе категорисем тăрăх пайланине пĕлтерет.

70. М е т а ф и з и к а тесе авал философин пĕр пайне каланă; вăл тĕнче нихăçан та улшăнмасть тесе вĕрентнĕ.

71. Кунта Мефистофель профессорсем хăйсен лекцийĕсен пичетленĕ программисене вĕренекенсене малтанах панинчен тăрăхлать.

72. Т ĕ н ч е п а р а к а н п р а в о — эпир çуралнă чухне тĕнчере пурăнма илекен право (естественное право).

73. Вĕренекене ним усăсăр улталани çитет, шуйттан ĕçне тума тытăнас: ăна юрăхсăр канашсем парса пăсса ярас.

74. «П ĕ ч ĕ к т ĕ н ч е» тесе Мефистофель вăтам ĕмĕрти хулана, унти пурнăçа калать; кунта «Фауст» трагедин пĕрремĕш пайĕнчи ĕçсем пулса иртеççĕ. «Măн тĕнче» тесе Фауст патшалăхпа халăх ĕçĕсене тунине каланă; кун çинчен иккĕмĕш пайĕнче çырнă.

## 5-мĕш сцена. Ауэрбах хупахĕ

75. А у э р б а х х у п а х ĕ — Лейпциг хулинчи авалхи хупах (эрех нӳхрепĕ); Гете йĕкĕт чухне унта темиçе хут та пырса çӳренĕ.

76. Т а с а, х ă в а т л ă Р и м п р е с т о л ĕ (тронĕ) — Римри папа тронĕ.

77. Римри папăна кардиналсем хушшинчен суйлакан йĕркерен мăшкăлласа кулакан шӳтле йăла.

78. Библи каланă тăрăх, шуйттан хăйне пĕлĕт çинчен турă тамăка хăваласа янăранпа уксахлать имĕш.

79. У х м а х И в а н — айвантарах лӳппер çынна халăх кулса панă ят; Риппах — Лейпциг хули патĕнчи ял — нимĕç юмахĕсенчи герой Ганс (Ухмах Иван) пурăнакан ял.

80. Ку юрă сăввине Гете Веймар герцогĕ çывăхĕнчи пĕр ырă мар çынна тăрăхласа çырнă.

81. М а н а п ă р а п а р с а м ă р... Гете куна сĕтелтен Фауст эрех пăраласа кăларни çинчен калакан кивĕ калавран илнĕ. Легендăра ку фокуса Фауст хăй тунă тесе каланă, анчах героя ырăлатас шутпа Гете ăна Мефистофельпе çыхăнтарнă.

82. Т а с а т а к а н в у т — тасалмалли вырăн вучĕ; католик чиркĕвĕ вĕрентнĕ тăрăх вилнисен чунĕсем рая кĕриччен çак вырăнта çылăхĕсенчен вутпа тасалаççĕ имĕш.

83. Ку сценăна та Гете Фауст çинчен калакан легендăран илнĕ.

84. Ауэрбах хупахĕнче икĕ картина, 1525 çулсенче ӳкернĕскерсем, ку таранччене сыхланса юлнă, нумаях пулмасть çĕнетнĕскерсем. Пĕрин çине асамçă Фауст студентсемпе ĕçнине ӳкернĕ, теприн çине Фауст пичке çине утланса хупахран тухса кайнине ӳкернĕ.

## 6-мĕш сцена. Тухатмăш карчăк кухни

Ку сценăра Фауст мĕнле улшăнса кайнине ăнлантарса панă, вăл мĕнле йăпаннисене кăтартнă. Малалли сценăсенче те Гете вăхăтĕнчи пурнăçа кăтартакан тĕрлĕ аллегорисем, ытарлăн каланисем нумай. Гете шухăшĕпе çаксем пурте тухатмăш карчăк кухнинче пулса иртекен асар-писер урăм-сурăма кăтартса памалла.

85. Упăтесене авалхи вăхăтранах таса мар чĕрчунсем тесе шутланă, çавăнпа Гете маймăлсене тухатмăш карчăк тарçисем пек кăтартнă.

86. Вăтам ĕмĕрсенче нимĕçсем хушшинче кĕпер тума йывăр вырăнсенче кĕперсене шуйттан тунă текен тĕшмĕш халап çӳренĕ.

87. Ы й т к а л а к а н  ш ӳ р п и  в ĕ р е т  к ĕ р п е с ĕ р... Больницăсемпе монастырьсенче чухăнсем валли пит шĕвĕ шӳрпе пĕçернĕ: пит тăсса çырнă начар литература произведенийĕсене те çапла каланă. Гете 1797 çулта Шиллер патне янă çырăвĕнче III Густав çинчен çырнă тăватă томлă сочинени çинчен çапла çырнă: «Ку чăнах та нимĕç публики юратакан ыйткалакан шӳрпи».

88. Кунта илсе кăтартнă ирсĕр персонажсен сăмахĕсенче тарăн шухăш тупма çук, çапах та вĕсенче сатирăллă тăрăхлавсем пур пулас (Соколовский, 312 стр.).

89. Нимĕçсен тĕшмĕшĕ тăрăх — пăта çине çакнă ала патне вăрра илсе пырсан, ала хăех çаврăнма тытăнать имĕш. Ку ытарлă сăмаха кушак аçи Мефистофель çине кăтартса калать, анчах хăйĕн пуçлăхĕнчен хăранипе вăл тӳрех калаймасть.

90. Асамçă куçкĕскисемпе тухатмăшсем халăха минретнĕ; вĕсен çиййĕ путăк е авăк пулнă, çавна пула оптика законĕсем тăрăх вĕсем аякри япаласене пĕр-пĕр вырăнтан кăтартма пултарнă. Мефистофель Фауста мĕнле илемлĕ хĕрарăма кăтартни паллă мар, анчах вăл пĕр-пĕр хĕрарăм çынна пит астармалла тăнине кăтартнă пулас.

91. Библи кĕнеки каланă тăрăх турă тĕнчене ултă кун хушшинче пултарнă имĕш.

92. Пĕрисем ăнлантарни тăрăх патшасен корони халăхсен юнĕпе тарĕ çинче тытăнса тăнине пĕлтерет.

93. Формалист поэтсенчен тăрăхлани: вĕсем рифмăшăн тăрăшса поэзин ăшлăхне маннă.

94. Тĕшмĕшле ĕненӳ тăрăх шуйттан çын пулса курăннă чух хĕрлĕ пархат тумтир тăхăннă имĕш.

95. Шуйттанăн пĕр ури лаша чĕрнеллĕ пулнă имĕш; унăн чуптар (рассыльнăй) вырăнне икĕ çăхан пулнă.

96. Гете кунта тĕрлĕ тĕн вĕрентĕвĕсенче хисепсемпе арăш-пирĕш хăтланса усă курнинчен тăрăхланă.

97. Кунта чиркӳ виç ипостаçлă пĕр турă тесе вĕрентнинчен тăрăхланă.

98. С и в и л л а — авалхи юмăç карчăк. Христос чиркĕвĕ ăна Христос килессине каласа пĕлтерекенĕ тесе шутлать.

99. Кунта Мефистофель Фауст ученăй пуласшăн тĕрлĕ нуша чăтса ирттернинчен тăрăхлать.

100. Купидон — авалхи Рим çыннисен юрату турри.

## 7-мĕш сцена. Урам

Фауст халĕ, тухатмăш карчăкăн асамлă имçамне ĕçнĕ хыççăн, çамрăкланса, юрату тамашисемпе йăпанма тухать. Фауст валли шыравсем тума, ӳт-пĕвне йăпантармалли тата йăнăшмалли çул уçăлать.

101. П и к е т е м а р, ч и п е р т е м а р!.. Фауст Гретхена «пике» (Fräulein) тесе чĕнет, анчах Гретхен, мещен çемйинчен тухнăскер, капла каланипе килĕшмест. Вăл вăхăтра кĕçĕн сословирен тухнă хĕрсене апла каламан.

102. У н т ĕ л ĕ ш п е э п х а л с ă р п ĕ т ĕ м п е х...— Мефистофель Фауст асăхне ытларах хăпартас шутпа тĕрлĕ чăрмавсем туртса кăлартаь.

103. Э с Д о н-Ж у а н п е к к а л а ç а т ă н... Кунта Холодковский «Дон-Жуан порочный» тенĕ, нимĕçле текстра Hans Liederlich тенĕ, чăвашла каласан вăл— «Аскăнчăк Иван».

104. П ĕ р в ы р ă н т а п ы т а р н ă в ы й к а т а— шуйттана çĕр айне чавса хунă япаласен хуçи тесе шутланă.

## 8-мĕш сцена. Қаçпа

105. Қун умĕнхи сценăра Фауст намăс шухăшсем шухăшлать, халь вăл Маргарита çинчен ыррăн шухăшлать, ӳкĕнет.

106. Қ у н т а п и т ш ă р ш л ă, п ă ч ă!..— Нимĕç тĕшмĕшĕ тăрăх, шуйттан хăй пырса çӳренĕ çурта пăчă сывлăш, тăвăллă çумăр çăвас умĕнхи пек йывăр сывлăш хăварать имĕш.

107. Ф у л ă — юмахри çĕршыв; Рим çыннисен легенди тăрăх вăл Аякри Çурçĕрте имĕш. Қу балладăна Гете 1774-мĕш çулта хăй çырнă.

## 9-мĕш сцена. Уçăлса çӳрени

108. П а р н е п а р а н а л л и х у х м а с т ь... У н х ы р ă м ĕ ĕ ç л е т х ă в а т л ă...— Гете кунта пуп таврашĕсем выçă куçлинчен тăрăхланă.

109. Фауст, Гретхен амăшĕ çĕнĕ парнене каллех туртса илесрен хăраса, Гретхен кӳрши Марта урлă пама хушать.

## 10-мĕш сцена. Кӳршĕ арăмĕн çурчĕ

Пит илемлĕ жанр сцени. Марта — вăрттăн сăмахсене сарма, арçынпа хĕрарăма явăçтарма, хăйĕн юрату ĕçĕсене майлаштарма юрататакан пит чаплă сăнар. Марта патне Мефистофель пырса кайнине Гете пит ăста ӳкернĕ. Мефистофель Мартăн вăрттăн шухăшĕсене пaçăмăллăнах ăнкарса илчĕ. Унăн упăшки вилнĕ пек туса каласа панипе вăл Марта укçа-тенкĕ юратнине, арçынпа хĕрарăма явăçтарма ăста пĕлнине ăнланса илет те шухăшне тĕрлĕ майлă вылянтарать.

110. П а д у я — Çурçĕр Италири авалхи хула. Унта святой Антоний соборĕ (чиркĕвĕ) пур.

111. Қатолик тĕнĕ вĕрентнĕ тăрăх, вилнĕ çыннăн чунĕшĕн тутарнă кашни панихида тасату вутĕнче çунас вăхăта кĕскетсе пырать.

112. Марта упăшки укçи-тенкине мĕнле тыткалани çинчен пĕлтернĕ май Мефистофель чăн-чăн шуйттан пекех калаçать: «...Сирĕн

мăшăр чăннипе укçа тăккалакан çын пулман», тет; кайран Мартăна тарăхтарас шутпа ун çинчен темĕн те каласа тăкать: вăл ку тĕлĕшрен те, хăйне тыткалас енчен те тирпейсĕр пулнă тесе элеклет.

113. Фауст çинчен легенда çÿренĕ тапхăрта Мальта утравĕ Грецирен хуса янă ионистсен аллинче пулнă. Вĕсем ку вăхăтра грекçемпе çапăçнă. Çавăнпа Мефистофель Марта упăшки вилни çинчен шухăшласа тунă калава илемлетсе каласа парать.

114. Неаполь хули вăтам ĕмĕрте чи аскăн хула шутланнă.

## 11-мĕш сцена. Урам

115. Чехсен реформаторĕ Ян Гус (1369—1415) хăйне инквизиторсем çунтарнă чухне пĕр карчăк, турра тивĕçлĕ ĕç тăвас тесе, кăвайт çине пĕр çĕклем вутă пырса пăрахсан, çапла каланă: Sancta simplicitas (лат.) — «Таса айванлăх».

116. Мефистофель кунта Фауст студентсене лекцисем вуланине аса илтерет, университетри наукăсен çитменлĕхĕсене кăтартать.

117. Софист (грек.) — кунти пĕлтерĕшĕ — тÿрĕ çул çинчен пăрса яракан, мĕн те пулин тĕрĕссине кăтартма юри тĕрĕс мар положенисемпе усă куракан.

118. Мефистофель Фауст Маргаритăна чĕререн юратнине курать, анчах вăл Фаустăн «ĕмĕрлĕх юратăвĕ» мĕнле вĕçленес тĕлĕшпе иккĕленет.

## 14-мĕш сцена. Вăрманти çĕр хăвăлĕ

Фауст ку сценăра пирĕн ума хăйĕн пит кăткăс шухăш-туйăмĕсемпе тухса тăрать. Мефистофельпе союз туни тата Маргарита туйăмпа ытла хытă юратни унра философипе интересленессине пĕтерсе хурайман. Фауст халĕ, кулленхи пурнăçа туйса курнă хыççăн, тата ытларах ăсланать. Фауст малтанхи пуш пĕлÿсенчен, шанчăк пĕтнинчен, этеме курайми пулнинчен хăтăлать. Вăл çутçанталăкăн чăн чĕрине кĕрсе курать, сывлăшра та, шывра та, сĕм вăрманта та тăванĕсене тупать. Фаустăн этемпе çутçанталăк тăванлă çинчен калакан чаплă монологĕнче Спиноза вĕрентĕвĕ этеме «турăлатнă» çутçанталăк тесе вĕрентекенскер, Гетене витĕмлетни палăрать.

119. Кунта католик чиркĕвĕнчи (православи чиркĕвĕнче те çавах) тур юнĕ сыпас йăла çинчен каланă.

## 16-мĕш сцена. Марта сачĕ

Фауст Маргаритăпа турра ĕненни çинчен калаçнинче те, «Вăрманти çĕр хăвăлĕ» сценăри пекех, Спиноза вĕрентĕвĕ витĕмлĕн курăнать. Фауст турра ĕненсе чиркÿ йăлисене тăвассине йышăнмасть. Ку тĕлĕшпе вăл Маргаритăран маларах тăрать. Маргаритăна пуп таврашсем туса çирĕплетнĕ йĕркесем тăрăх пăхса ÿстернĕ. Паллах, Гете Фауст чĕлхи-çăварĕпе хăйĕн шухăшĕсене калаттарнă.

120. Áслă ĕçсем — таинства (Н. В. Никольский, Русско-чуваш. словарь, 1909, 553 стр.). Кунта «таса парнесене эс чысламастăн» тесен тĕрĕсрех пулать.

121. Маргарита хăйĕн таса, ултавсăр чун-чĕрипе çав ултавçă, мăшкăлавçă, этеме курайман Мефистофеле кăмăл туртманнине

туять. Маргарита ăна «сан юлташу» темест, «çав çын», «хайхи çын» тет.

122. ... *ӳ к ĕ т  п а ч ĕ ç  к у р ă н а т ь*...— тĕн йăлисене тытасси çинчен вĕрентрĕç курăнать.

## 17-мĕш сцена. Çăл патĕнче

123. Вăтам ĕмĕрти законсем тăрăх хĕрсене качча тухмасăр ача çуратнăшăн, чиркӳ йĕркипе асап кăтартса, çылăх каçарттарнă тата судпа айăпланă.

124. Качча кайиччен хĕрлĕхне çухатнă хĕре венчет тунă вăхăтра пуç кăшăлне татас, ун пӳрт алăкĕ умне туранă улăм е хылчăк сапас йăла пулнă (нимĕçсен). Туранă улăм çĕн çын чăн-чăн çĕн çын маррине кăтартать.

## 18-мĕш сцена. Хула стени патĕнче

Кĕлтăвакан Маргарита сăмахĕсем мĕн тери чун-чĕререн тухнине, вăл хуйхă-суйха пит йывăррăн тӳснине турă амăшне йăлăнакан кĕлĕ сăмахĕсем кăтартаççĕ: унăн кĕлли ансат, сăмахĕсем ахаль йышшисем, ятарласа суйласа илнĕ сăмахсем мар. Кĕллин татăклă-татăклă ритмĕ Маргарита кĕлли хăватлине, вăл йĕре-йĕре каланине кăтартать.

## 19-мĕш сцена. Çĕрле. Гретхенсен çурчĕ умĕнче

*В а л е н т и н* — трагедири художество енчен чи лайăх пулса çитнĕ сăнарсенчен пĕри. Çак сатур салтак нимрен ытла йăмăкĕ — Маргарита — «çылăха кĕнĕ» пирки тарăхса кайнă, мĕншĕн тесен халĕ юлташĕсемпе туслăн калаçнă чух хăйĕн йăмăкĕпе мухтанма çук.

125. *Т а л е р* — нимĕçсен кивĕ кĕмĕл укçи.

126. Ку Геммельн хулинчи (Германи) йĕкехӳре тытакана пĕлтерет. Вăл, легенда каланă тăрăх, шăхлич каласа йĕкехӳресене кĕртес вырăнне ачасене астарса кĕртнĕ.

127. *М а н п а  в ă р ç а т ь  ч ă н-ч ă н  ш у й т т а н*... Валентина вĕлерекенĕ тĕрĕссипе Мефистофель. Фауст çапăçава вăрçас тесе хутшăнмасть, ирĕксĕртен хутшăнать.

128. *Т у р ă  с у ч ĕ*; вăл суд «айăплă» (тесе шутлакан) çынна тĕрлĕ майпа асаплантарнă, сăмахран, вĕрекен шывлă хурантан çара алăпа пĕçерекен тимĕр татăкне тытса кăларттарнă т. ыт.

129. XV ĕмĕрте Германире тăрлавсăр пуранакан хĕрарăмсене хитре тумланма, ылтăн-кĕмĕл япаласем çакма, чиркĕве çӳреме юраман пулнă.

## 20-мĕш сцена. Соборта

Ку сценăра Маргарита икĕ виле пирки хуйхăрса макăрать: амăшне Мефистофель эмел парса вĕлерет, Валентин пиччĕшне Фауст иккĕш çапăçнă чух вĕлерет.

130. Усал сывлăш, тĕн терминĕ тăрăх, шуйттана пĕлтерет. Хăшпĕр тишкерӳçĕсем кунта таса мар совеçе усал сывлăш пек туса ӳкернĕ пулĕ тесе шутлаççĕ.

131. Усал сывлăш кунта Валентин юнĕ çинчен калать.

## 21-мĕш сцена. Вальпурги каçĕ

132. Çак каç, авалхи тĕшмĕш ĕненĕвĕ тăрăх, тухатмăш карчăксем Брокен тăвĕ çине хăйсен урăм-сурăм уявне ясар ĕçсем туса асăхма пухăннă имĕш. Мефистофель Фауста çак уява, унта Маргарита валли паха парне илме выйкăт укçи тупатпăр тесе астарса илсе кайнă.

## 22-мĕш сцена. Вальпурги каçĕнчи тĕлĕк

Трагедипе пĕртте çыхăнса тăмасть, унта ăнсăртран лекнĕ. Кунта Гете литературăри тăшманĕсенчен тăрăхлать.

Çак икĕ сцена трагеди ăшчикĕпе çыхăнса тăман пирки вĕсене чăвашла куçармасăр хăварнă.

## 23-мĕш сцена. Ăмăр кун. Хир

133. П у р  ç ĕ р т е  т е  п у р  ы р ă  с ы в л ă ш!..— Фауст çĕр ыррине чĕнсе калать. Ă н а  х ă й ĕ н  ĕ л ĕ к х и  т у м т и р н е  т ă х ă н т а р т... Фауст кунта, Мефистофель лиска йытă пулса пынине аса илсе, ăна каллех йытă тума йăлăнать.

## 24-мĕш сцена. Çĕрле. Уçă уй

134. М а  п у ç  к а с с и  п а т н е  п у ç т а р ă н н ă  в ĕ с е м?— халăхăн авалхи тĕшмĕшлĕ ĕненĕвĕ тăрăх, пуçне касса вĕлернĕ çынсен чунĕсем пуç касмалли каска таврашĕнче вĕçсе çӳренĕ имĕш.

## 25-мĕш сцена. Тĕрме

135. А н н е  м а н а  в ĕ л е р ч ĕ...— Ку юрă — нимĕçсен халăх юррин варианчĕ.

136. Вăтам ĕмĕрте ăс-кăмăлĕ усал туйăмлипе хура халăх часчасах вĕлерме суд тунă çынсен чӳречи умне пырса тăрăхлакан юрăсем юрланă.

137. Гретхен ăстăнне Валентина Фауст вĕлерни кăшт килсе кĕрет.

138. Çынна судпа вĕлерес умĕн, приговора ĕçе кĕртнине пĕлтерсе, судья хăй туйине хуçнă тата чиркӳ чанне çаптарнă.

139. Гретхен хăйне вĕлерме хупнă тĕрмене «таса вырăн» тет, мĕншĕн тесен хăй Христос тĕнĕ йĕркипе мĕскĕнленнипе ăна суд тăвассине таса ĕç тесе шутлать.

# Иккĕмĕш пайĕ

Иккĕмĕш пайĕнчен хăшпĕр паллăрах вырăнсене анчах куçарнă.

140. А р и э л ь — Çутă ырри; ăна пăхăнса тăракан ырăсем çут-

çанталăкăн ырлăх тăвакан вăйĕсене пĕлтереççĕ; вĕсен Фаустăн чунне имлесе юсамалла (сыватмалла).

141. Кунта Рим çыннисен вăхăт виçине кăтартнă. Вĕсем çур талăка тăвата пая уйăрнă. Гете çав вăхăтсене çапла палăртнă: Sérénade (каç), Notturno (çĕрле), Mattutino (шуçăм), Reveil (ир).

142. Л е т а (грек миф.) — çĕр айĕнчи тĕнчери манăçу юханшывĕ, ун шывне ĕçсен, вилнисен чунĕсем çĕр çинчи асапсене маннă имĕш.

143. О р ă с е м (грек миф.) — çулталăкри вăхăтсене пăхакан пике турăсем.

144. Ф е б (грек миф.) — хĕвел турри.

145. Ку сцена Альп тăвĕсем хушшинче пулса иртет.

## Патша керменĕ

Фауст, Гретхен телейсĕр вилнĕ пирки пулнă хăйĕн хуйхинчен çутçанталăкăн сиплĕ вăйĕсем пулăшнипе сывалсассăн, çĕнĕ туйăмсем шырама тытăнать. Вăл хăйне валли киленӳсем патша çывăхĕнче, халăх хушшинчи ĕçре тупма ĕмĕтленет. Анчах вăл кунта халăхăн пурнăçне лайăхлатасси çинчен, пурин ырлăхĕ çинчен хăпартланса каланă хушăрах пысăк вырăнта тăракансем хăйсемшĕн çеç тăрăшнине, халăх интересĕсене маннине курать. Çавăнпа Фауст пурнăç тупсăмне тупасшăн, пурне те пĕлесшĕн тăрăшни харама каять. Ку сцена пушарпа вĕçленет. Çак пушар революцие пĕлтерет тесе шутлаççĕ.

146. Астрологсемпе мыскараçăсем вăтам ĕмĕрти патшасен çуртĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнă; ку вара патшасем мĕн тери тĕшмĕшлинчен, мĕн тери ăслинчен-ухмаххинчен килнĕ. Патша хăйĕн патшалăх советĕнче чи малтанах çак çынсем çинчен ыйтни вăл хăех кунта патша тата унăн ăс-хакăлĕ мĕнле вырăн йышăнса тăнине кăтартать.

147. Мефистофель хăйĕн ĕçне тытăннă чухне шӳтлесе темиçе ыйту парать. Ку ыйтусен туппи «шуйттан» е «мыскараçă» пулĕ тесе шутлаççĕ.

148. ...к а й р ĕ п и р ĕ н х у ш ă р а н — вилнĕ.

149. ...к ă в а к т ӳ п е — астрологсем пĕлтерни тăрăх.

## Виççĕмĕш актран

150. Е л е н а — Троя вăрçи çинчен калакан авалхи грек мифĕн героини; Л и н ц е й — авалхи грек мифĕнчи «Арго» карапа ертсе пыракан аслă аргонавтăн ячĕ; вăл пит çивĕч куçлă пулнă. Çавăнпа ăна кунта, Елена килнĕ чух аякран курса, вăл килни çинчен вăхăтра пĕлтерме тăратнă.

151. Еленăн айăпĕсем ӳссе пыни çаксене пĕлтереççĕ: вăл малтан Париса илĕртнĕ, унтан вăл Египетра мĕлкен икĕ çĕрте курăнса инкек тунă, унтан Ахилл мĕлкипе илĕртсе инкеке виçĕ хут ӳстернĕ, халĕ, вилнисен тĕнчинчен чĕнсе кăларнă хыççăн, Линцее вĕлермелле тунипе инкек тăвакан хуйха тăвата хут ӳстернĕ.

152. Линцей кунта рифмăланă станссемпе каланă. Грек поэзийĕнче рифма тени пулман пирки Елена, пит çивĕч илтме пултарнăскер, капла рифмăласа калаçнинчен тĕлĕнсе кайнă. Вăл та малалла Фаустпа калаçнă чухне рифмăласа калаçма вĕренсе пырать.

153. Кунта Морей çурутравĕ (çурутти) çинчен каланă, ăна Европăпа Коринф пырĕ пĕрлештерет. Еленăн тăван çĕршывĕ — Спарта — Морей варринче.

154. Грек легенди тăрăх. Елена тата унăн йĕкĕреш тăванĕсем — Касторпа Поллукс — акăш сăнарне йышăннă Леда Юпитерпа çыхланса тунă çăмартаран çуралнă имĕш.

155. П а н (грек миф.) — вăрман турри, кĕтӳсен управçи.

156. А п о л л о н (грек миф.) — хĕвел турри, искусствăсен управçи, асамçăсен турри.

157. А р к а д и — авалхи Грецири туллă-сăртлă çĕршыв; унта кĕтӳçсем, сунарçăсем пурăннă. Аркади (поэзире) — телейлĕ çĕршыв.

158. Гете Эвфорион сăнарне акăлчансен чаплă поэчĕ Байрон ĕçĕсемпе пурнăçĕ тĕлĕшпе шухăшланипе тунă, Байрон грек халăхĕ тĕрĕк пусмăрне хирĕç кĕрешнĕ вăрçăра вăйпитти чухне вилнĕ. Эвфорион — Фаустăн вăхăтлăх телейне пĕтерекенĕ. Эвфорион ашшĕнчен канăçсăр кăмăл, унăн улăпла ĕмĕтне туяннă. Анчах вăл çутçанталăк законне пăхăнать. Ашшĕ сыхланма каланине итлемен пирки хăй пуçне пĕтернĕ.

159. Т а р н ă т ĕ л л е в н е... Кунта хыпса çунса кайнă хĕр Байрон хĕрсене юратнине ытарлăн пĕлтерет тесе шутлаççĕ.

160. П е л о п с — авалхи грексен патши; ун ячĕпе утрава Пелопоннес тесе каланă.

161. И к а р (грек миф.) — юмахри художникăн, архитекторăн тата темтепĕр шутласа тăвакан Дедалăн ывăлĕ. Ашшĕ ăна карас ăвăсĕпе тĕксене çыпăçтарса çунатсем туса панă имĕш. Икар çав çунатсем пулăшнипе пит çӳле, хĕвел патне çитиех вĕçсе хăпарнă пулать. Ăвăсĕ ирĕлсе кайнă та, Икар тинĕсе ӳксе путса вилнĕ.

162. Хор ку юрра Байрона — Эвфориона — чыслаcа юрлать.

163. П е р с е ф о н а (грек миф.) — çĕр айĕнчи патшалăх пуçлăхĕ (пике-турă).

164. Ф о р к и а д а (грек миф.) — тинĕс туррин Форкисăн хĕрĕ, горгонна. Форкиадăсем виççĕн пĕртăван, акăш-макăш илемсĕр хĕрсем пулнă. Вĕсен пурин пĕр куç та пĕр шăл пулнă, çаксемпе вĕсем черетлĕ усă курнă имĕш. Кунта Форкиада — ун сăнне йышăннă Мефистофель.

165. П а н т а л и с — Еленăна пулăшса тăракан хăрхăм хĕр.

166. Панталис Форкиадăна çапла ят парать.

167. А с ф о д е л ь (миф.) — сарана евĕрлĕ тĕксĕм сарă курăк; вăл тамăкра ӳснĕ имĕш.

168. Кунтан тата малалли текстран (ăна куçармасăр хăварнă) Гете чĕрĕ тĕнчепе чĕрĕ мар тĕнче çине мĕнле пăхни курăнать: вăл вĕсем хушшинче тачă çыхăну, уйрăлми пĕрлĕх пур тесе ăнланнă.

169. Ф и л е м о н тата Б а в к и д а — авалхи грек мифологинчи пĕр-пĕрне пит юратса пурăннă ĕçчен мăшăр — старикĕпе карчăкĕ.

170. Фауст Мефистофеле тинĕс çинчи суту-илĕве аталантарма янă. Анчах вăл, мĕнпур ыррине усал тума тăрăшаканскер, кунта та пусахласа çаратса çӳрет. Кунта Англин тинĕс политики çинчен ытарлăн пĕлтернĕ.

171. Мефистофель капла Фауст çынсене кунта куçарса лартса ырлăх тума шутланинчен тăрăхлать.

172. Библири калав çине кăтартса калани: унта Самари патши Ахав Навуфей ятлă çынран, ăна чее майпа айăпласа вĕлерттерсе, иçĕм çырли пахчине туртса илни çинчен калав пур.

173. Л е м у р с е м (римл. миф.) — вилнĕ усал çынсен мĕлкисем.

174. Вăтам ĕмĕрсенче авалхи грек туррисене шуйттансем, усалсем тесе шутланă, çавăнпа Нептуна, тинĕс туррине, кунта т и н ĕ с ш у й т т а н ĕ тесе каланă.

## ТУПМАЛЛИ

«Фауст» — Гетен пысăк та чаплă произведенийĕ . . . 5

Халал . . . . . . . . 25
Театрти пролог . . . . . . . 27
Пĕлĕт çинчи пролог . . . . . . 34

Пĕрремĕш пайĕ

1—25-мĕш сценăсем . . . . . . . 41

Иккĕмĕш пайĕ . . . . . 197

Ăнлантарусем . . . . . . . . 244

ИОГАНН ВОЛЬФГАНГ ГЕТЕ

ФАУСТ

Трагедия

*Перевод на чувашский язык*
*Переводчик Н. А. Андреев-Урхи*
*Под общей редакцией А. С. Артемьева*

Редактор П. Е. Димитриев
Художник А. А. Афиногенов
Художественный редактор Е. Е. Михайлова
Технический редактор Н. В. Васильева
Çорректор Л. А. Иванова

Сдано в набор 29/III-1979 г. Подписано к печати 1/VIII-1979 г. Формат 84×108 1/32. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 8,0. Усл. печ. л. 13,44. Учетно-изд. л. 12,55. Заказ № 2129. Тираж 2000 экз. Цена 1 р. 15 к.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР,
Чебоксары, Çанашское шоссе, 15.





р. 15 к.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ